кв. № 306
25-84

Чуман М. (Д. П. Петров).

# 1905-мӗш ҫул

## ЂӐВАШСЕН ХУШШИНЂЕ ПУЛНӐ ӖҪСЕНЕ АСӐННИ

ЂӐВАШ ОПЛӐҪӖНЂИ КӖНЕКЕ КӐЛАРАКАН УЙРӐМ.
Шупашкар. ⁕ 1925 ҫул.

Йуман М. (Д. П. Петров).

9(47)
П 30

# 1905-мӗш ҫул

## (ЂӐВАШСЕН ХУШШИНЂЕ ПУЛНӐ ӖҪСЕНЕ АСӐННИ)

14068

ЂӐВАШ ОПЛӐҪӖНЂИ КӖНЕКЕ КӐЛАРАКАН УЙРӐМ.
Шупашкар. 1925.

Чувашоблит № 736 Печ. 3.000 экз.

Г. Чебоксары. Типография Чувашиздата.

# Çыраканран.

Çак кĕнекене ҫӑвашсен хушшинҫе 1905-мĕш çулта пулнӑ пур паллӑрах ĕçсене те çыру çине ӳкерсе, малашне вĕсем ан манӑнҫӑр, тивĕçлĕрен историлĕ вырӑн йышӑнса тӑҫҫӑр тенĕ сӑлтавпа çырнӑ. Ӑна çыракан хӑй мĕн тунине, илтнине, курнине, пĕлнине асӑнса çырнӑ. Çавӑнпа çак çыру револҫутсилĕ кĕрешĕвĕн ҫӑнтан историйĕ вырӑнĕнҫе шутланма пултараймасť: çапла истори çырас пулсан ӑна урӑх йĕркепе, урӑх планпа çырмалла пулнӑ пулĕҫҫĕ, çав йĕрке тӑрӑх кĕнекере нумай вак-тĕвек пулнӑ ĕçсене асӑнмасӑр хӑварса пуринҫен ытла ҫӑваш хресҫенĕ, ĕç халӑхĕ, интеллигентсийĕ çав кĕрешӳре мĕн сӑлтавпа, мĕн халпа, йепле майпа кĕрешнине пур йенҫен те сӳтсе йавса кӑтартса çырмалла пулнӑ пулĕҫҫĕ. Анҫах çавӑн пек ҫӑнтан истори çыриҫҫен малтан пур револҫутсире пулнӑ ĕçсене вĕсем йепле пулнӑ çаплах тĕрлесе хут çине ӳкерес пулаť, вара тин историçĕ çав ĕçсене пур йенҫен те сӳтсе йавса вĕсен сӑлтавĕсене, тĕп йухӑмĕсемпе сулӑнӑçĕсене кӑтартса тĕрĕслеме пултараť. Çавӑнпа ĕнтĕ çыракан çак кĕнекене 1905-мĕш çулхи револҫутсилĕ кĕрешĕвĕн малашне çырӑнас историйĕн ҫĕрĕ хатĕрĕсен вырӑнне, историлĕ маттериалсем вырӑнне çеç хисеплет.

1905-мĕш çулхи револҫутсиренпе епир тата икĕ револҫутси куртӑмӑр: хевраҫ револҫутсийĕпе октапĕр револҫутсине куртӑмӑр. Çав револҫутсисем пурӑнӑçа тĕпĕ-йĕрĕпе кисрентерсе, пĕтĕмпех улӑштарса йаҫĕç. 1905-мĕш çултанпа çирĕм çул та иртмерĕ, анҫах çав саманара пулнӑ ĕçсем халĕ пире темиçе ĕмĕр малтан авал пулнӑ ĕçсем пек туйӑнаççĕ. Çакна пула нумай ĕлĕк пулнӑ вак-тĕвек ĕçсем çинҫен çырса асӑнмасан та йурĕҫĕ темелле пек туйӑнаť. Анҫах, çыракан шухӑшĕпе, епир çав ĕлĕк пулнӑ вак-тĕвек ĕçсене тĕплĕ пĕлсе тӑмасан 1905-мĕш çулхи револҫутсийе ҫӑнтан ӑнланаймӑпӑр. Унтан ĕлĕкхи револҫутсионерсем нумай йенĕпе хаҫхи пролеттарлӑ револҫутси çулĕпе пыман, çавӑнпа хӑш та хӑш вулакан

вĕсем çинђен тĕплĕрех пĕлессийĕн асапĕ те çук тесе тиркешме те пултарай. Çапла тиркешни, çыракан шухăшĕпе, йунăш йапала: хађхи саманана витĕр пĕлсе тăрас пулсан авалхи саманана малтан лайăх, тĕрĕсрен тĕпђесе пĕлес пулай.

Йулашкинђен, çыракан çакна асăнма кăмăл тăвай: ĕлĕкхи ђăваш револђутсионерĕсенђен çĕрĕшĕнђен тăхăр вунă тăхăрĕшĕ пĕкех револђутсишĕн пуçа хурса пурăнса вăхăтсăр вилĕмре канăçлăх тупрĕç. Вĕсем халăх ĕçĕшĕн кĕрешсе курнă асаппа вĕсен вăхăтсăр вилĕмĕ вĕсен пур йунăшĕсене, вĕсене тивекен пур айăпсене каçарса сирсе пăрахай. Çыракан ђи малтан çак çырăва пуçланă ђух çав нумай асаплă кĕрешӳçĕсен йађĕсене асра тытса, вĕсен мĕлкисен умĕнђе пуçа тайса, çак хута тĕрлеме пуçлай. Вулакан та çак васкаварлă тĕрлесе пăрахнă хута çав кăмăлпах вулассине çыракан пĕтĕмпех шанса тăрай.

Пусмăрлă ђăваш ђĕринђе авалранах револђутсилĕ хĕлхем выђанă, револђутсилĕ вут-кăвар çуннă. Çав хĕлхем малашнехи çамрăк ђăваш сыпăкĕсен кăкăрĕнђе çулăмланса хĕвел пек хăватлăланни пирĕн куç умĕнђе палăрса тăрай. Çав револђутсилĕ кăвар пĕр сыпăкран тепĕр сыпăка куçса аслăланса пыни çеç револђутсиĕçне ђăнтан шанђăклă ĕçе кăларса пырай. Çавăнпа çыракан шухăшĕпе пур авал ђăвашсен хушшинђе пулнă пăлхаварсене, хумханусене, хусканусене тĕплĕрен пĕлсе тăрас пулай, çав хумханусен нумайĕшĕн револђутсилĕ йухăмĕсемпе сулăнăçĕсем тĕксĕмрех пулсан та, вĕсен револђутсилĕ хĕлхемĕ куçа курăнми çеç хĕмленсе выртнă пулсан та, вĕсене пур йенђен те тишкерсе пăхас пулай. Йулашки ĕмĕрсен тăршшĕпе пĕтĕм ђăваш хура халăхĕн историйĕ çав пăлхавсемпе хумханусенђен çеç курăнса тăрай. Çавăнпа ђăвашсен хађхи пурăнăçне те, малашнехине те тĕплĕ пĕлес тесен, ђи малтан вĕсен хушшинђе авалран пулнă пăлхаварсене тĕплĕ пĕлсе тăрас пулай.

# I. Пĕр-ик сăмах авалхи халăх хумханăвĕсем çинҫен.

Халăх пăлханасси, вăхăҫĕпе вăл вĕçĕмсĕр тинĕс пек хумханасси, хăш ҫухне пурăнăçăн кивĕ йĕркине вăйпа çĕмĕрсе пăрахса çĕнĕ йĕрке йышăнасси—вăл тĕнҫере авалран пулса пынă йапала. Халăх хусканас пулсан вăл уйрăм çынсем илĕртнипе йе хăйне тĕктăнаçем килнĕ шухăш хыççăн кайса çеç хусканса хумханма пултараймасҭ, вăл хумханас пулсан, ытти историлĕ ĕç тăвас пулсан та ăна хăйĕн пĕрлешӳлĕ вăйĕпе çеç тăваҭ, ăна тунă ҫух пурăнăçран килсе тăракан мĕнле те пулса пысăк сăлтавпа çеç тăваҭ. Çав сăлтав ҫи малтан пурлăх сăлтавĕ пулаҭ—халăх кирек хăçан та пурлăх наҫаррипе, пурлăх йĕркипе усал курса хумханаҭ. Хура халăх кирек хыçан та ăна ун ĕнси çинҫе лаpакан çӳлти сийсен пусмăрне сиресшĕн çеç хускалса кĕрешет. Ҫăнтан револютсилĕ кĕрешӳ кирек хăçан та çӳлти сийпе айалти сий, кĕскен каласан класспа класс кĕрешнине пĕлтерет. Улпутсем хресҫене пăҫăртасшăн, кăпиталçăсем ĕçхалăхне тулласшăн, тӳресем ҫурасене пăхăнтарасшăн, тĕн çӳйеççисем тĕттĕм халăха улталаса пурăнасшăн—ак мĕншĕн кирек хăçан та халăхăн вăйлă кĕрешĕвĕсем пулаççĕ; çав кĕрешĕве таптанса пурăнакан хура халăх тапратаҭ—вăл ăна йепле те пулин çăмăллăх тупас тесе тапратаҭ. Пирĕн саманара пĕтĕм тĕнҫере вĕçĕмсĕр те, калама çук пысăк та класслă кĕрешӳ пыраҭ—çав кĕрешĕве тĕнҫе пролеттариаҫĕ çĕклесе пыраҭ. Пирĕн саманара тĕнҫе пролеттариаҫĕ пĕтĕм пурăнăçăн кăпиталăсăмлă йĕркине улăштарасшăн, пуршуаçийе пĕтерсе, мул уйрăм алăсенҫе пуçтарăнас йалана пурăнăçран тымарĕпе кăларса ывăтса, классемпе уйрăм патшалăхсене пĕтерсе тĕнҫери халăхсене пĕр йышлă, пĕр çемйелĕ пурăнмалла тăвасшăн кĕрешет. Пролеттариатпа пĕрле, ун çулĕпе пырса çав вăхăтрах пĕтĕм тĕнҫери тенĕ пекех хресҫенсем, ытла-

рах та пусмăрлă халăхсемпе колонисен хресӳенĕсем хăйсене улпутсен, кăпиталçăсен, патшалăхсен пусмăрĕнӳен кăларасшăн кĕрешеççĕ. Çапла пролеттариатпа йурлă пусмăрлă хресӳенсем револютсилĕ хусканупа хумханса тăни пирĕн саманара пĕтĕм çĕр ӳăмăрне кисрентерсе тăрат. Çак пирĕн куç умĕнӳи кĕрешӳ пире витĕр курăнса, палăрса тăрат: çав кĕрешӳре мĕнле классемпе мĕнле сийсем йавăçса кĕрешни, мĕн сăлтавпа, мĕнле усăшăн вĕсем пĕр пĕринпе çапăçни пире куçа кĕрсе палăрса тăрат. Çапла пулса тăни пуринӳен ытла пирĕн саманара халăхсем уйрăм сийсене ытларах йарăмланса уйрăлса тăнинӳен, çав йĕркене пула вĕсен класслă тăнпуç çивӳĕленнинӳен, çавна пула вĕсем пĕрлешӳлĕ вăйпа орканисатсиленсе кĕрешме пĕлнинӳен, çакна пулах каллех вĕсен парттисем, ссйуссем, тĕрлĕ ушкăнсем ĕçленинӳен килет. Уйрăм класслă сийсем мĕншĕн пĕр пĕринпе кĕрешнине епир хаçатсем, шурналсем, кĕнекесем вуласа пĕлетпĕр, ăна епир пуринӳен ытла парттисен, сойуссен, ушкăнсен уставĕсемпе прокраммисене вуласа пĕлетпĕр; пирĕн саманари класслă кĕрешĕвĕн сăлтавĕсене епир кĕрешӳçĕсен йалавĕсен çинӳе куратпăр, ахлатса çапăçакан халăх массисен кăкăрĕнӳен тухакан уйрăм сăмахсенӳен: тĕрлĕ ӳĕнӳсенӳен, ылханусенӳен ӳухлатпăр. Халăхăн авалхи пăлхавĕсем пире çапла паллă мар: вĕсем тĕксĕм саманара пулнă, вĕсене пирĕн куç умĕнӳе вĕçĕмсĕр вăрăм вăхăт шăналăкĕ хупласа тăрат. Унтан авалхи халăхсем, ытларах та натсилĕ пусмăр айĕнӳе тапаланса пурăннă, кăпиталисăм хуранĕнӳе пиçĕнсе тухайман халăхсем ĕлĕк уйрăм сийсене ытлашши ăрасна уйрăлса тăман, çавăнпа вĕсем ӳăнтан пĕрлешӳлĕ вăйпа орканисатсиленсе кĕрешме, тĕплĕ пĕрлешсе йышăннă прокраммăна çийеле кăларасшăн кĕрешме пултарайман. Револютси тесе епир кирек мĕнле йун тăкса çĕкленĕ пăлхава каламастпăр—çапла епир классем орканисатсиленсе вăйпа ирĕксĕрлесе пĕр пурăнăç йĕркине тепĕр йĕркене çавăрасшăн кĕрешнине калатпăр. Тĕп авалтан, етем историйĕ пуçланнă саманаран тытăнса çĕр çинӳе тĕнӳене шăнăçас çук нумай йун тăкăннă: авалран аптăранă ӳурасем, пусмăрпа пăвăннă хресӳенсем, хуласенӳи мул майкăçĕпе пăвăннă ĕçлекенсем, тĕрлĕ ăсгалăхпа пурăнакан етемсем йаланах пăлханнă. Анӳах çав авалхи тĕксĕм саманара пулнă хумханусене нумайĕшне ӳăнтан револютсилĕ кĕрешӳ йаӳĕ пама тивĕçлĕ мар, мĕншĕн тесен, вĕсен пурăнăç йĕркине тĕпĕйĕрĕпе

ҫӗнетсе улӑштарас прокраммӑ пулма пултарайман. Ҫавӑнпа та вӗсене нумайӗшне револютсилӗ кӗрешӳ тесе калас вырӑнне: пӑлхавсем, хумханусем, ҫӗкленӳсем, хусканусем теҫҫӗ. Ӳӑвашсен револютсилӗ сулӑнӑҫпа кӗрешнӗ хумхану вырӑнне 1905-мӗш ҫулта пулнӑ халӑх хусканӑвӗ ҫеҫ хисепленкелеме пултарать. Пур авал пулнӑ ӳӑваш хумханӑвӗсене хресӳен ҫӗкленӗвӗсем тесе каласан ҫеҫ йурӑхлӑрах пулать. Ҫапах ҫав хумханусем вӑйлӑ пулнӑ, вӗсен сӑлтавӗсем пысӑк пулнӑ. Вӗсене пӗлмесен епир ӳӑваш пурӑнӑҫне халхине те, малашнехине те пӗтӗмпех ӳухлас ҫук. Кунта вӗсем ҫинӳен калама манӑн вырӑн ҫук—вӗсем ҫинӳен уйрӑм пысӑк кӗнекесем ҫырас пулать. Анӳах ҫапах та вӗсем ҫинӳен икӗ сӑмах та пулин каламасӑр иртме пултараймастӑп—вӗсене пӗлмесен епир 1905-мӗш ҫулхи кӗрешӗве ӳӑнтан ӑнлас ҫук.

Ӳӑвашсен хӳшшинӳе авал пулнӑ хумханусем ҫаксем:

## 1. Ӳӑваш йӑхӗ хӑй ирӗклӗхӗшӗн кӗрешни.

Ҫакӑ ӳӑвашсем авал хӑйсен йӑхӗ, хӑйсен племи йут йӑхсене пӑхӑмасӑр пурӑнтӑр, йӑх ирӗклӗхӗнӳе пурӑнтӑр тесе кӗрешнине пӗлтерет. Ҫак кӗрешӳ пирӗн саманара кӑпиталисӑмлӑ патшалӑхсен пусмӑрӗнӳе, империалисӑм таптӑвӗнӳе асапланса пурӑнакан пусмӑрлӑ халӑхсем хӑйсен натсилӗ ирӗклӗхӗшӗн кӗрешни йевӗрлех пулнӑ. Пин ҫул авал ӳӑваш ӑруне ӳӑмӑртаннӑ етем ушкӑнӗсем халхи пирӗн ҫӗршыв ҫинӳех пурӑннӑ. Ӳӑваш ӑрӑвӗ-йӑхӗ Пӑлхари патшалӑхӗнӳе ӳи йышлӑ, ӳи хӑватлӑ племӑ пулнӑ: унӑн ҫӳлти сийӗсем: ҫӗр хуҫисем, ҫарпуҫлӑхсем, тӗн ӑстисем (мӑн йумҫӑсемпе асамҫӑсем) хӑйсен племи ӗҫӗсене майласа тӑнӑ, патшалӑх ирӗкне хӑйсен аллинӳе тытса тӑнӑ. Ӳӑваш племийӗн ҫӳлти сийӗсем пӗтӗм Пӑлхари патшалӑхӗнӳе те ӳи хӑватлӑ сийсем пулнӑ: вӗсем ытти нумай хвин йӑхӗсене: ҫармӑссене, мӑкшӑсене, ирҫесене, арсене (вутаксене), каратайсене, мошарсене ытти нумай халиӳӳен йаӳӗсене те ҫухатнӑ йӑхсене пусмӑрларах пурӑннӑ, вӗсене ӳӑваш йӑлисене, ӳӑваш хуҫалӑхӗпе пурӑнӑҫ йӗркисене, ӳӑваш ӳӗлхине йышӑнтарттарнӑ. Ӳӑваш хура халӑхӗ ҫак саманара кӗтӳсем усраса пурӑнас йӑлана пӑрахса пӗр вырӑнта ҫӗр ӗҫлесе пурӑнма хӑнӑхнӑ: ӗлӗкхи ӑрулӑ ушкӑнсем пӗрлеше-пӗрлеше йалсене ӳӑмӑртанса ларнӑ. Ҫак саманара ӳӑваш ӑрӑвӗ-йӑхӗнӳен пулнӑ ушкӑнсем ытти йӑхсемпе питӗ хутшӑнса пӗтнӗ: вӑл йут йӑхсемпе

пӗр вырӑнта, пӗр таврара нумай ӗмӗрсем тӑршшӗпе пурӑннинҫен килнӗ. Ҫак саманара уйрӑм таврасенҫе пурӑнакан ҫӑваш аслашшӗсем уйрӑм йӑх тураҫӗсене ҫӑмӑртанса пуҫтарӑнаҫҫӗ: ҫапла тӳрк йунӗпе хвин йунӗ нумайрах хутшӑннӑ ҫӑваш племи туратӗнҫен вирйалсем, тӳрк йунӗ тасарах йулнӑ туратран анатрисем, анат йенҫи ҫӑвашсем пулса тӑраҫҫӗ. Ҫав пӗр ҫӑваш тунинҫен йупленнӗ ҫӑвашсем тата та нумай вак туратсене туратланса тӑнӑ: ҫав вак туратсем ҫӗршыва пӗрле тытса тӑракан пӗр таврари йалсем пулнӑ, вӗсем хӑйсене уйрӑм халӑх вырӑнне хисепленӗ. Анҫах ҫапах та ҫак саманара ҫапла туратланса, сапаланса пурӑнакан ҫӑвашсене вӗсем пур те пӗр халӑх икенне ҫипер сиссе тӑнӑ. Ӑна вӗсем ӑҫтан сисме пултарнӑ? Вӗсем пур те пӗр ҫӗршыва, пӗр Атӑл таврине йышӑнса пурӑннӑ, пӗр пуйан Пӑлхари патшалӑхӗнҫе пурӑннӑ, ҫав патшалӑх ирӗкне нумай тӗлӗшӗпе ҫӑвашран пулнӑ, ҫӑваш йевӗрлӗ калаҫакан ҫӳлти сий тытса тӑнӑ. Ҫак саманара ҫӑвашсен хушшинҫе хвеоталлӑ йӗрке пуҫланма ҫеҫ тытӑннӑ, вӑл тӗрекленсе ҫитеймен, ҫавӑнпа ҫӑваш хура халӑхне, ҫӗр халӑхне вӗсен ҫӗр хуҫисем, турханӗсем, мӑрсисем, тӳрисем пӗтӗмпех пусмӑрласа илме пултарайман. Ҫавӑнпа ҫак вӑхӑтра ҫӑвашсем ҫӳлти сийсен пусмӑрӗ айӗнҫе ытла тӳсме йывӑр таптанса пурӑнман. Унтан Пӑлхарире Атӑл тӑрӑх вӑйлӑ хуласем пулнӑ, вӗсем тӗнҫепе сутилӳленӗ, ҫавна пула ҫӑваш ҫӗр халӑхӗ туса кӑларакан тавар витӗмлӗ пулнӑ, ҫителӗклӗ хакпа сутӑннӑ; епир вырӑс летӑпӗҫӗсенҫен пӗлетпӗр— нумай выҫлӑхсен вӑхӑтӗнҫе славен йӑхӗсене Пӑлхари тырри ҫеҫ выҫӑ вилӗмрен хӑтарнӑ. Ҫав тырӑ пуринҫен ытла ҫӑваш тырри ҫеҫ пулнӑ, мӗншӗн тесен, вӑл вӑхӑтра ҫӑваш племи ҫеҫ Атӑл ҫинҫен ҫӑнтан ҫӗр ӗҫлесе пурӑннӑ. Ҫакна пурне те пула ҫӑвашсем хвеоталлӑ пусмӑрлӑ йӗркепе пурӑннӑ пулсан та вӗсем пӗр халӑх икенне сиснӗ, вӗсене натси шӑрши ҫапа пуҫланӑ. Ҫав натсилӗ йе тӗрӗсрех каласан племӗлӗ-йӑхлӑ пӗрлешӳлӗх шухӑшӗ халӑх хушшинҫе пыра-киле тӗреклӗленсе пынӑ. Ӑна пуринҫен ытла ытти йӑхсемпе вӑрҫни йе кӗрешни тӗреклӗленме пулӑшнӑ: епир пӗлетпӗр, Пӑлхари ҫӗрне пур йенҫен те ытти йӑхсем йаланах пыра-пыра пусмӑрланӑ, вӗсем ҫав ҫӗрӗн пуйанлӑхне хапсӑнса пынӑ, ҫав пусмӑрлӑха хирӗҫ ҫӑвашсем ытти кӳршӗллӗ хвин йӑхӗсемпе хӗҫ-пӑшал ҫӗклесе хирӗҫ тӑмалла пунӑ: хӗвеланӑҫӗнҫен славен йӑхӗсем йаланах вӑрҫӑпа пырса Пӑлхарийе ҫаратнӑ. Ҫапла Пӑлхарсемпе

пирвайхи вырӑс кнеҫӗ Ҫветослав вӑрҫни ҫинҗенех хыпар пур, унтан летӑпӗҫсем кӑтартнӑ тӑрӑх XII-мӗш ӗмӗртех вырӑс ҫарӗ пӗр вӑхӑтра Ҫавал тӑршшӗпе ҫапӑҫса иртнӗ, унтан летӑпӗҫсенҗе нумай тӗлте вырӑссен ҫар ушкӑнӗсем Атӑл тӑрӑх анса нумай Пӑлхари хулисемпе йалӗсене, ҫаратса, пусмӑрласа кайни ҫинҗен епир вулатпӑр; ҫав вӑхӑтрах хӗвелтухӑҫӗнҗе кӑнтӑртан Пӑлхари ҫине йаланах куҫса ҫӳрекен ӳрк йӑхӗсем, тӗрлӗ монкол племисем пырапыра пусмӑрланӑ. Җӑвашсемпе Пӑлхарийӗн ытти халӑхӗсем йаланах хӗҫ-пӑшала хатӗр тытса тӑмалла пулнӑ, ҫар тытса тӑмалла пулнӑ, вӑрҫӑ кӑларса ҫапӑҫмалла пулнӑ. Кунта ҫав вӑрҫӑсем ҫинҗен калама вырӑн ҫук, ҫавӑнпа ҫакна кӑна калӑпӑр: пӑлхарсем ӗмӗрӗнҗе нумай вӑрҫӑ курса тӳснӗ: вӗсем йаланах ҫӗршыв ҫине йут йӑхсене йарасшӑн мар кӗрешнӗ; вӗсем ҫав саманара Атӑл таврашне туртӑнакан вырӑс колонисатси йухӑмӗсене йарасшӑн мар кӗрешнӗ, унтан хӗвелтухӑҫӗнҗен канӑҫсӑр йӳрӗкҫӗлӗ племӗсене хӑйсен ҫӗрӗ ҫине пустарасшӑн мар кӗрешнӗ. Ҫак йунлӑ кӗрешӳ ирӗксӗрех халӑх тӑнпуҫне йӑх хӑй ирӗкӗпе хӑй пурӑнас шухӑша кӳртнӗ, ҫав шухӑша халӑх җӗринҗе асаплӑ пурӑнӑҫ пиҫтерсе тӗреклӗлентернӗ, ӑна ҫителӗклӗ вӑйлӑ туса шӑратса хывнӑ. Анҗах җасах җӑвашсен историлӗ странитси ӳпӗне ҫавӑрӑнса ӳкнӗ. Акӑ XII-мӗш ӗмӗрӗн малтанхи ҫурринҗе Пӑлхари җиккикне сыхласа тӑракан, Урал тӑвӗ таврашӗнҗе хурал тӑракан пӑлхарсем Ҫӗпӗртен тутар йӑхӗсем ҫӗмӗрсе килнине сисеҫҫӗ. Ҫав йӑхсем тинӗс шывӗ пек тӗнҗене хупласа пусса килеҫҫӗ. Атӑл таврашӗнҗе калама ҫук хӑрушӑ вӑрҫӑ тапранаӳ: пӗтӗм ҫӗр-шыв йуна пӗвенет. Тутарсем Атӑл халӑхӗсене пӑхӑнтараҫҫӗ, патшалӑх ирӗкне вӗсен ханӗсемпе ҫарпуҫлӑхсем илеҫҫӗ, хуласене, аван вырӑнти йалсене, усӑллӑ ҫӗршывсене ирӗксӗрлесе йышӑнаҫҫӗ. Ҫакна хирӗҫ тӑмасӑр Атӑл халӑхӗсем пурӑнма пултараймаҫҫӗ: вӗсем мӗн Хусан патшалӑхӗ пӗтиҗҗенех хӑйсен авал йышӑннӑ ҫӗршывшӑн, хӑйсен йӑхлӑ ирӗклӗхшӗн кӗрешеҫҫӗ. Пӗр вӑхӑтра тутарсен ҫарӗ Мускав тавринҗе вырӑссемпе кӗрешнӗ вӑхӑтра җӑвашсем хумханса кайса пур тутарсен җӑваш ҫӗршывне сыхласа тӑракан ҫарне ҫавӑрса илсе вӗлерсе пӗтереҫҫӗ, хансен патшалӑх йӗркине вырӑнтан ӳкереҫҫӗ, хӑйсене ирӗклӗ йӗрке тума тапратаҫҫӗ. Ҫакна тавӑрса кайран тутарсем нумай хуласемпе йалсене тӗпӗйӗрӗпе ҫунтарса, етемсене аҗипӑҗипе вӗлерсе пӗтереҫҫӗ, ҫак хӑрушӑ саманара нумай җӑвашсем

ушкăнăн-ушкăнăн тутарсенђен тарса Муромпа Арсамас таврашне çитиђђен пыра-пыра ўкеççĕ, вырăссенђен çав таврара пурăнма ирĕк пама ыйтаççĕ. Хусан патшалăхĕнђе ђăвашсем уйрăм хăйсен йăхлă ирĕклĕхе çухатнă ўрк племи вырăнĕнђе пурăнни пире историрен витĕр паллă: ђи малтан ђăнтан ђăваш йађĕ хут çинђе XV-мĕш ĕмĕр ҫетухаŤ, çав хут çинђе Хусан ханĕ тунă акатуй пек праçнике ђăвашсем те пыни çинђен çырнă; çав вăхăтсенђех пĕр нимĕç çыруçи кăтартнипе тутарсен çарĕнђе ăстаухăçăсем ђăвашсем пулнă, унтан ђăвашсем çак саманара хăйсен ирĕклĕхĕпе пурăнма тивĕçлĕ халăх вырăнне хисепленни малалла пĕтĕмпех палăраŤ: тутарсем вырăссемпе çапăçнă вăхăтра Атăлăн хĕвелтухăç йенђи ђăвашсем пăлханса хĕçпăшал çĕклесе Хусана пыраççĕ те, Хусан правиттĕђствине вырăссемпе килĕшме хушаççĕ, çав вăхăтрах Атăлăн хĕвеланăçĕнђи ђăвашсем вырăс çарне пур йенђен те пулăшу парса тăраççĕ. Çакă мĕншĕн уйрăм натсионаллă политиккă мар? Ђăвашсемпе çармăссем хăйсен илемлĕ ирĕклĕхĕшĕн кĕрешнине Хайар Иван лайăх пĕлсе тăнă, вăл ак мĕншĕн Хусана илсенех ђăваш çĕршывĕ ђăвашсенех пулмалла тесе ылтăн крамоттă йатлă хут çырса панă.

Ђăваш историне пĕлес тесен, пуринђен ытла унăн малалли хумханусене пĕлес тесен, епир çакна асран çухатма пултараймаспăр, ăна пĕлмесен епир ђăваш пурăнăçне хаљхине те, малашнехине те ăнланас çук. Анђах çак саманара ђăвашсем хăйсен çĕршывĕ çинђе хăйсем хуçа пуласшăн, патшалăх йĕркине хăйсен аллинђе тытса тăрасшăн кĕрешнĕ пулаŤ, хăйсен йăхлă ирĕклĕхĕшĕн кĕрешнĕ пулаŤ. Пирĕн саманара ђăваш хура халăхĕ çав шухăша пĕтĕмпех çухатнă пек туйăнаŤ. „Ђăваш кĕнекине ĕне çинĕ", тет, авалхи сăмах. Çак сăмах халăх тăнпуçне пĕтĕмпех хупласа пăђăркаса тăраŤ. Мĕне пĕлтерет çав сăмах? Вăл ђăваш йăхĕ йут йăхсен пусмăрĕ айне кĕрсе ўксе, çав натсилĕ пусмăртан тухас шанђăка çухатма тытăннине пĕлтерет. Ĕне вăл ђăваш усал историйĕ, ĕне тĕп авал ђăвашсен йуратнă, таса выђăх вырăнĕнђе хисепленмен, авал куçса çўресе пурăнакан ђăвашсен хисеплĕ выђăх лаша пулнă, ĕнене ђўксенђе нихăçан та парнелемен—пусăс пулсан вăкăра йе тына таврашне пуснă, çавăнпа та ђăвашсен йăхлă ирĕклĕхне пĕтерекен усал историйе вĕсем пĕлнĕ пĕлмен ђĕлхипе кирек мĕнле йапалана та тиркемесĕр ђăмлакан ĕне вырăнне хисепленĕ. Çав ĕне халăхăн йăхлă ирĕклĕхне пăђăркаса хыпса

хăйĕн нихăçан тăранми хырăмне хывнă. Анҫах çимĕçе вăл çиҫĕ çĕр çул тăршшĕпе кавлесе выртсан та пĕçерсе кăларайман, вăл йаланах ăна какăрттарнă, йулашкинҫен йупа револютсинҫе хăстарса та кăларса ывăттарнă. Çав какăртусем пур малалли ҫăвашсен пăлхавĕсемпе хумханăвĕсенҫе палăрса тăнă. Пирĕн куç умĕнҫе комунисла партти тăрăшнипе ҫăваш ĕçхалăхĕ ахтономи туйанҫĕ, малашне Ҫĕмпĕр тавринҫе пысăк респупликкă тăвасшăн тăрăшаť. Çак ĕçĕн тымарĕ пĕр йенҫен кăшт та пулин сĕткене çав епир кăтартнă саманаран туртса тăраť. Кирек мĕнле халăх та тĕп авал мĕн ҫухлĕ пысăкрах историлĕ пурăнăçпа пурăннă, çавăн ҫухлех вăл халĕ нумайрах ирĕклĕхшĕн кĕрешет. Мĕншĕн халĕ ҫăвашсенҫен те йышлăрах мăкшăсемпе ирçесем ахтономи те тăваймаççĕ? Ăна вĕсем авалран йăх ирĕклĕхĕпе хăйсем тĕллĕн пурăнма хăнăхманнипе пула пултараймаççĕ. Мĕншĕн халĕ çармăссем респупликкă çинҫен шухăшлама пултараймаççĕ, халхи оплăçпа сапăр пулса пурăнаççĕ? Пĕр йенҫен вăл каллех çармăссем авал ҫăвашсенҫен те наҫар пурăннине пĕлтерет: вĕсем пурлăх йенĕпе, политиккăпа култтурă йенĕпе нумай вăхăтсен тăршшĕпе ҫăваш йăхĕ пусмăрĕ айĕнҫе пурăннă, авалхи ҫăвашсем вĕсем çине çавăнпа кăшт çӳлтенрех пăхнă—ăна авалран йулнă сăмах: „çармăса Атăл урлă каççан çеç тăн кĕнĕ" тенĕ сăмах витĕр кăтартса тăраť. Тепĕр йенҫен мĕншĕн тутарсем пирĕнтен те малтан ахтономи йышăнса, тӳрех респупликкă туса хуҫĕç? Çакă та пĕр йенҫен авал тутарсем ҫăнтан хăйсен патшалăхĕпе пурăннинҫен, çав шухăша вĕсем çухатайманнинҫен килет.

Йулашкинҫен пĕр сăмахпа çакна ыйтас пулаť: ҫăваш халăхĕ авалранах уйрăм сийсене уйрăлса тăнă: унăн çĕр ĕçлекен хура халăх пулнă, улпутсемпе тӳресем пулнă, тĕрлĕ çарпуçлăхĕсемпе тĕн ăстисем пулнă, çав сийсем пур те пĕрлешсе, пĕрле тăрса пĕр салтавпа çеç йăх ирĕклĕхĕшĕн кĕрешнĕ-ши йе вĕсем тĕрлĕ салтавсемпе, хăш ҫухне хире хирĕç те тăрса кĕрешнĕ-ши? Анҫах çак ыйтăва хирĕç каласа нумай сăмах та сайа йама кирлĕ мар: çав сийсем тĕрлĕ класслă сăлтав шыранса кĕрешнĕ, пыра-киле пĕр пĕринпе хирĕçленсе те кĕрешнĕ. Малтан ҫăваш çӳлти сийĕсем тутарсемпе вырăс патшисене хирĕç çителĕклĕ хĕрӳлĕ кĕрешнĕ, вĕсем ҫăваш хура халăхĕ çинҫе пусăрăнса выртакан влаçа хăйсен аллинҫен вĕçерес мар тесе кĕрешнĕ. Анҫах çав кĕрешӳре те йун

тăкакан, асапланса çапăçакан халăх ҫи малтан ҫăваш хура халăхĕ, çĕр халăхĕ пулнă. Пыра киле хăвăртах çав çӳлти сийсем ҫăваш йăхĕ çине натсилĕ пусмăр хуракан патшалăх йĕркине пĕтĕмпех йышăннă, хăйсем тутарланса йе вырăсланса хăйсен халăх ĕнси çинҫе пурăнма ирĕк паракан вырăна çухатман, малашне мăнтарăн ҫăваш хура халăхне классă та, натсилĕ те пусмăрпа пăҫăркаса пурăнма пулăшнă. Ҫăваш хура халăхĕ çеç ҫăнтан пĕр ҫарăнми хăй ирĕклĕхĕшĕн тĕп авалранпа кĕрешнĕ.

## 2. Ҫăвашсем колонисатси пусмăрĕпе кĕрешни.

Кунта епир пĕр-ик сăмах тутарпа вырăс йăхĕсем ҫăваш çĕршывĕ çине йепле килсе пусни çинҫен калăпăр. Тӳрех паллă, кирек кам та çĕнĕ çĕре куçас пулсан лайăхрах та, ирĕклĕрех те çĕре йышăнасшăн çеç куçаť, çав сăлтав пулмасан никам та пĕр хăнăхнă вырăнтан пуçиле куçса кайса асапланмасť. Çавăн пекех халĕ те халăхсем, племĕсем, йăхсем çĕнĕ çĕрсене колонисатсилес çĕре лайăхрах усăллăрах çĕршыва йышăнас тесе çеç тăваççĕ. Малтан тутарсем, унтан вырăссем ҫăваш çĕршывне пăхăнтараççĕ, ăна тутарсен ханĕн, кайран вырăссен Мускав патшийĕн харпăрлăхĕ теççĕ, çапла ҫăваш çĕршывĕ ҫăвашăн пулмасť, хăйаматри патшасемпе вĕсен тарçисен пулса тăраť. Çакна пула, патшасем, вĕсен тарçисем: улпутсем, çарпуçлăхсем, мулçăсем (сутилӳпе мул пуçтарнă сий Пăлхарирех пулнă), тĕн пуçлăхĕсем хăйсене ҫăваш çĕршывĕн тĕп хуçисен вырăнне хисепленĕ, çавăнпа вĕсем ăçта мĕн çĕр, вăрман-çаран, шыв кăмăла кайнă—унта вырăнаçнă, ăна йышăннă. Анҫах Атăл тавринҫи пур лайăх çĕрсене ҫăвашсемпе ытти вак халăхсем авалран йышăнса пурăннă. Апла пулсан колонисаттăрсен мĕн тумалла пулнă? Тӳрех паллă—лайăх çĕршыва вĕсем ҫăвашсене хĕссе, пусмăрласа наҫар йурăхсăр çĕрсем çине куçарсан çеç йышăнма пултарнă.

Пĕтĕм авалхи ҫăваш историйĕ ҫăвашсем вĕсен çĕршывне хапсăнса тата-тата илекен колонисатсипе çеç кĕрешсе пурăннине пĕлтерет. Ҫăваш йăхĕсем малтан тĕп Атăлран хĕвелтухĕçĕнҫе Ҫулманпа Шурă Атăл таврашĕнҫе, Çарăмсан шывĕ тăрăх йышлăрах пурăннă теççĕ. Анҫах унта пурăнăç канăçсăр пулнă: йаланах Çĕпĕрпе кăнтăр йенҫен куçса çӳрекен тĕрлĕ хайар племĕсем: нухайсем, каркăссем ытти йăхсем те киле-киле аптăратнă. Кӳршĕлĕ пурăна-

кан пушкăртсем те кĕтӳсем кĕтсе çеç тăранса пурăннă, çавăнпа вĕсем те пĕр вырăнта пусăрăнса канлĕ пурăнма пултарайман: çав кĕтӳусравлă халăхсем ытла та уйарпа выдăх апаĝĕ вĕтĕнсе пĕтнĕ уйар çулсенĝе канăçсăр пулнă, çав çулсенĝе вĕсем йе выçă вилсе пĕтмелле пулнă, йе ытти çывăхрах халăхсене туласа çаратса та пулин вилĕмрен çăлăнмалла пулнă. Авалранах çĕр ĕçĕпе çеç тăранма вĕреннĕ ĝăвашсемшĕн çавăн пек халăхсен çумĕнĝех пурăнни усăлă пулман, çавăнпа вĕсем Атăл урлă каçса хĕвеланăçнелле туртăннă, Атăлпа Сĕве йе Сăрă сĕмвăрманĕсен ăшнелле тĕкĕннĕ, çав çĕрсенĝе хăйсем те вĕсенĝен те имшеркерех хвин йăхĕсене пусмăрласа вырăн йышăннă. Çапла ĝăваш хĕвеланăçнелле сарăлса пынă йухăм Пăлхари саманинĝех питĕ вăйлă пулнă, çав саманарах Сĕве, Çавал, Енĕш шывĕсем тăрăх вăйлă ĝăваш хулисем, йышлă йалсем пулнă. Тутар, тĕрĕсрен каласан Хусан патшисен саманинĝе çак йухăм питĕ вăйлăланса кайнă, мĕншĕн тесен, ĝăвашсен вăхăĝĕ-вăхăĝĕпе ниçта пуçа ĝикме те пулман. Тутарсем ĝи малтан пур ĝăваш йалĕсемпе çыхăнса тăракан ĝăваш çĕрĕнĝи хуласене хăйсен аллине çавăрса илнĕ, вĕсене пур йенĝен те тутарлатнă. Анĝах хуласенĝе тутарсен ханĕсем, улпут таврашĕсем, сутилӳçĕсем, çар çыннисем çеç шăнăçнă, кĕтӳсем кĕтсе пурăнма хăнăхнă тутарсен хура халăхĕ йалсене шăнăçмалла пулнă, пурăнма лайăх уйсене, çарансене, шывсене йышăнмалла пулнă. Çавăнпа вĕсем ирĕклĕ-ирĕксĕрех ĝăвашсене хĕсмелле пулнă, вĕсене хăваласа та пулин айакалла ĝакармалла пулнă. Унтан çапла тăвасшăн хансемпе вĕсен тарçисем питĕ тăрăшнă: вĕсем ĝăвашсене тăшмансем вырăнне хисепленĕ, ĝăвашĕсем те вĕсем çине çаплах пăхнă, йалан вĕсене хирĕç пăлхав кăларма хатĕрленсе тăнă, çавăнпа хансем хăйсен патшалăх йĕркине тĕреклĕ тăвас тесен шанĝăклă тутар племине йепле те пулин лайăхрах çĕрсене шăнăçтармалла пулнă. Çапла майпа Хусан патшалăхĕнĝе авалран йышăннă çĕршывсенĝен хăвалас, хĕссе ĝакарас йĕрке тухса кайаĭ. Çак йĕрке авал питĕ хăватлă, ĝăваш хресĝенĕсемшĕн питĕ те йăвăр пулнă, мĕншĕн тесен, пĕр хăнăхнă, унтан усăлă çĕршыва пăрахса наĝар йут çĕре йышăнасси вăл пĕр майланă хуçалăха пăсса салатнине, ăна çĕнĕрен ĕлĕкхи пек майлас шанĝăка пĕтĕмпех çухатнине пĕлтерет. Хансем çак ĕçе питĕ витĕр, тĕплĕ пĕлсе тăрса, унтан питĕ хĕрӳлĕ тăрăшса тунă: вĕсем

хайсен влаçĕ тĕреклĕ пултăр тесе йаланах пур йенђен те Пăлхари йатне те çухатма тăрăшнă: ун хăш хулисене хирĕç тăлăшăн çунтарса тĕп тунă, ытти хулисен йађĕсене улăштарса йе çав хуласене кăшт урăх тĕлерех куçарса вĕсене хăвăртах тутарлантарса пĕтернĕ; çак йенђен Хусан историне питĕ сăнама тивĕçлĕ йапала: Пăлхари пуçхули тĕп Атăла Ђулман Атăл йухса тăракан çĕрелле пулнă: çав вырăн тĕрĕсрен пуçхула унта пулмалли вырăн пулнă, вăл ĕлĕк тавар шывпа çеç çӳренĕ саманара пĕтĕм Атăлпа Урал таврине хăй аллинђе тытса тăракан вырăн пулнă, анђах хансем çав хулана пăрахса йурăхсăр вырăнта ларакан Хусана пуç хула тунă. (Йуркка кăтартнипе, Хусан та тĕп авал ђăваш хули пулнă, ун çинђен пирĕн саманађђенех çухалман халăх йурри кăтартаЍ). Унтан ђăвашсем хăйсем те тутарсен çывăхĕнђен тарма тăрăшнă: тутар хресђенĕ халĕ те ђăваш пек çĕр ĕçĕпе пиçнĕ халăх мар, халиђђенех вĕсен çĕрĕсене нумайăшне ђăвашсем тара илсе акса пурăнађђĕç, авал вĕсем çĕр ĕçĕпе кĕрмешме тата та ытларах йуратман. Апла пулсан—тутар халăхĕ ирĕксĕрех ђăваш хресђенĕ çумĕнђен тăранса пурăяма тăрăшнă—çапла тăранма авал вĕсем пусмăрласа пурăнсан çеç пултарнă. Çапла авал çĕр ĕçлеме хăнăхса çитеймен тутарсем ђăвашсем çумнерех çыпçăнма, вĕсемпе хутшăнса ларма та тăрăшнă, çавăнпа халĕ те пирĕн ђăвашпа тутар хутшăнса пурăнакан йал нумай. Ђăвашсем хăйсем çав вăхăтрах тутарсенђен айаккарах кайма тăрăшнă, тутар хушшинђе йулнă ђăвашсем пусмăртан хăтăлас тесен ирĕксĕрех тутарланмалла пулнă, вара тин вĕсем пурăнаçра хăйсене пăхăнтарнă йăхпа тан вырăнне хисепленме пултарнă. Çапла пайтах ĕмĕрсем тăршшĕпе нумай ђăваш тутара тухса пĕтнĕ: хађхи нумай тутар йалĕсемпе вулăсĕсем, хăшĕ пĕтĕм уйесĕсем те пуринђен ытла ђăвашсенђен пулнă теççĕ, çавăнпа та халĕ Пăлхари саманинђен йулнă паметниксене ытларах тутарсен масарĕсем çинђе тупаççĕ.

Тутар колонисатсипе ђăвашсем Хусан саманинђе хытă кĕрешнĕ, ун çинђен малта каларăмăр. Пирĕн тавра Мускав патшисен пусмăрне кĕрсе ӳксен, колонисатси ĕçĕсем урăх çулпа кайаççĕ. Çапах та çав авалхи саманан сĕрĕмĕ халиђђенех пыђĕ: пирĕн куç умĕнђе 1917-мĕш çулта Ђĕмпĕр уйесĕнђе Каша ђăвашĕсемпе Сӳнтĕк тутарĕсен, Улхаш ђăвашĕсемпе Ђăнлă тутарĕсем хушшинђе ђăнтан вăрçă та пулса тăђĕ: йалпа йал çапăçу, пĕрне пĕри

вӗлерӳ, ҫуртсем ҫӗмерӳ ытти те ҫавӑн пек усал ӗҫсем; ҫав сӗрӗм ҫӑваш хресҫенӗнҫен хӑпӑнса сирӗлсе пӗтменнине 1905-мӗш ҫулта та курӑнҫӗ, ун ҫинҫен малта калӑпӑр, халӗ вырӑс колонисатси ҫинҫен, унпа ҫӑвашсем кӗрешни ҫинҫен икӗ сӑмах калӑпӑр.

Ҫапла ӗнтӗ Хайар Иван тутарсене пӑхӑнтарса ҫитернӗ ҫитерменех ҫӑвашсене ылтӑн пиҫетлӗ хут парать, ҫав хутпа вӑл ҫӑваш ҫӗршывӗ ҫӑвашӑнах тет. Ӑна вӑл ҫӑвашсем Хусан патшалӑхӗпе ҫӗршывшӑн хирӗҫленсе пурӑннине пӗлсе тӑрса ҫейе сӑлтавпа ҫеҫ тӑвать. Ҫав хутри сӑмахсем ӗмӗтсӗр усал та, ҫейе те политтиккӑ сӑмахӗсем ҫеҫ пулнӑ. Ҫав сӑмах пурӑнӑҫра шӑнӑҫакан сӑмах пулман. Вырӑс колонисатсийӗ Хайарҫҫен нумай ӗмӗрсем малтан Атӑл ҫинелле туртӑнни палӑрнӑ. Ҫав йухӑм вырӑс йахӗ ӗрҫенӗҫем вӑйлӑланса пынӑ. Йышлӑланса тӑвӑрланнӑ паттӑр вырӑс халӑхне хӗвелтухӑҫнелле сарӑлма ҫаракан вӑй малтан Пӑлхари, унтан Хусан патшалӑхӗ пулнӑ. Анҫах ҫак патшалӑхсем хӑйсем пур ҫухне те ҫав колонисатси йухӑмне пӗтӗмпех пӗвесе ҫарма пултарайман: ҫурхи шыв пек вӑйлӑ колонисатси йухӑмӗ вӗсем пӗвенӗ пӗвене йалан тӗрлӗ тӗлтен тата-ката хӗвелтухӑҫнелле сарӑлнӑ, йалан унти ирӗклӗ ҫӗрсен йенелле сулӑнса тӑнӑ. Хӑвӑртӑн ӗрҫесе хунаса пурӑнакан вырӑс племи Мускав тавринҫе ҫеҫ шӑнӑҫма пултарайман—вӑл ытти ҫӗрсене сарӑлмалла пулнӑ, ҫапла сарӑлас тесен хӗвеланӑҫнелле нумай сарӑлма пултарайман—унта халӑхсем тӑвӑрланса пурӑннӑ, тата унти халӑхсем вырӑссенҫен ҫивҫӗрех те, паттӑртарах та пулнӑ. Ҫапла вырӑс колонисатсийӗ пӗр патшасемпе улпутсенҫен ҫеҫ килекен йапала пулман—вӑл историрен тухса тӑракан хӑватлӑ сулӑнӑҫ пулнӑ. Ҫав халӑхран хӑйӗнҫен те килекен ӗҫе патшасемпе улпутсем хӑйсен майлӑ, хӑйсене усӑллӑ майлӑ ҫавӑрма тӑрӑшнӑ: ҫӗнӗ ҫӗрсем йышӑнса, гӗсене пӑхӑнтарса вӗсем хӑйсен влаҫне аслӑлатасшӑн тӑрӑшнӑ.

Малтан вырӑс колонисатсийӗ Пӑлхари саманинҫех сивӗ йенӗпе хӗвелтухӑҫнелле тӑсӑлса сыренсен ҫӗрӗ урлӑ Веткӑ таврашне пырса тухнӑ, ҫав саманарах ҫӗнӗ колонисаттӑрсен ҫаплӑ сутилӳпе пурӑнакан Хлынӑв йатлӑ хула пулнӑ (унӑн йаҫӗ халиҫенех ҫӑваш ҫӗлхинҫе йулнӑ—ҫейе етеме хӑш тӗлте ҫӑвашсем авалхи сӑмахпа хлын тесе витлеҫҫӗ). Унтан пыра киле вырӑс колонисатсийӗ Окка шывӗ тӑрӑх тӑсӑлса пырса, тӗп Атӑл ҫине Ҫулхула таврашне пырса тухнӑ. Ҫак хӗвеланӑҫӗнҫен ҫурхи пӑр пек шуса

хупласа пыракан колонисатсийӗн пулас сийенне авалхи ҫӑвашсем лайӑх сиссе тӑнӑ, ҫавӑнпа Пӑлхарсем ҫав ҫула пӳлес тесе темиҫе хут вӑрҫӑ кӑларса ҫапӑҫса та пӑхнӑ, ҫапла вӗсем Веткӑ тавраш-не илсе кайакан колонисатси ҫулне пӳлес тесе пӗрре Аслӑ Устӳк хули патне ҫитиҫҫен улӑхса вырӑссемпе хытӑ ҫапӑҫнӑ; колонисат-тӑрсем мӑкшӑсене пӑхӑнтарса Ҫулхула таврине йышӑнннӑ ҫух та пӑлхарсен ҫарӗ мӑкшӑсене пулӑшса вырӑс колонисатсине Атӑл ҫи-не пустарасшӑн мар питӗ хытӑ ҫапӑҫнӑ. Пӗр Окка шывне пуҫӗ-вӗҫӗпе ҫавӑрса илсе Атӑл ҫине тӗреклӗ пуссан—колонисатси ма-лалла хӑвӑрт утнӑ. Ҫапах та колонисатси ҫилтӑвӑл пек васкавар-лӑ шуса пынӑ теме йурамасӗ: вӑл питӗ йеррипен, вӑтамлӑхран хи-сеплесен ҫулталӑкран 5—10 ҫухрӑм малалла сарӑлса, тӑсӑлса пынӑ, мӗншӗн тесен, ӑна ҫӗр ӗҫӗпе пурӑнма хӑнӑхнӑ халӑх туса пынӑ, хӑвӑртӑн тасҭа ҫӗкленсе кайма вӑл пултарайман, кайсан та вӑл пӗтмелле пулнӑ: тӑтӑк-татӑк шала кӗрсе кайнӑ колонисаттӑрсене вырӑнти племӗсем ҫасах хупӑрласа илсе вӗлерсе те пӗтернӗ. Ҫа-вӑнпа колонисатси йухӑмӗ пӗр тӑтӑшӑн йухса ҫеҫ пымалла пулнӑ, ҫапла ҫеҫ вӑл хӑй пуснӑ ҫӗрсене пӑхӑнтарса пымалла пулнӑ.

XVI-мӗш ӗмӗрӗн пуҫламӑшӗнҫе колонисатси йухӑмӗ ҫӑваш ҫӗршывӗ ҫумнех пырса тӗкӗнет. Малтан колонисаттӑрсем Сӑрӑ Атӑ-ла йухса тухнӑ вырӑна йышӑнаҫҫӗ, унтан Ваҫҫилҫсурск хули туса лартаҫҫӗ, ҫакна тӑвиҫҫен ҫармӑссемпе ҫӑвашсем пӗрлешсе пуҫта-рӑнса вырӑс ҫарӗпе питӗ хытӑ ҫапӑҫаҫҫӗ, анҫах колонисатсийе кайала ҫакарма вӗсен вӑй ҫитмест. Пӗр Сӑрӑ вӗҫне пуссан коло-нисатси хӑвӑртах халҳи ҫӑваш оплӑҫне пӗтӗмпех таптаса, иртсе кайаӗ: колонисатси Атӑлпа Сӑрӑ тӑрӑх ҫӑваш ҫӗрне икӗ йенҫен те хупласа илсе ҫирӗм вӑтӑр ҫул хушшинҫе Сӗве ҫине пырса ту-хаӗ, унта авалхи Пӑлхар хули вырӑнӗнҫе Свийашск хули тӑваӗ. Колонисатси Сӗве ҫине ҫӑнтан пуссанах Хусан патшалӑхӗ пӗтес-си палӑрса тӑраӗ. Колонисаттӑрсем Сӗве таврине йышӑнас умӗн те малтан ҫӑвашсемпе хытӑ ҫапӑҫнӑ. Колонисатси Сӗве ҫине пус-санах икӗ-виҫӗ ҫултан Хусан патшалӑхӗ пӑнҫӑхса лараӗ. Ҫапла XVI-мӗш ӗмӗрӗн ҫурринҫе ҫӑвашӑн ҫурри ытла йӑхӗ колонисатси пусмӑрне кӗрсе ӳксе йулаӗ. Малалла пӗрер ҫӗр ҫултан Ҫӗмпӗр таврашӗ колонисатсиленсе пӗтет (Ҫӗмпӗр пуҫламӑшӗ 1648-мӗш ҫул), XVIII-мӗш ӗмӗрте Самар таври ҫӑнтан колонисатси йухӑмӗ айне йулаӗ, XIX-мӗш ӗмӗрте пушкӑртсен хушшинҫе пурӑнакан ҫӑваш-сен ҫӗршывӗ колонисатсиленсе пӗтет.

Колонисатси мӗн тӑват? Ҫи малтан вӑл ҫӗнӗ ҫӗрсене вӑйпа, хӗҫ-пӑшалпа ҫӗнтерсе, пӑхӑнтарса йышӑнат, ҫавӑнпа хӑйне вӑл вӑрҫӑ йенӗпе тӗреклӗлентерме тӑрӑшат. Ҫапла тӑвас тесен унӑн колонисатси йухӑмӗсен йухакан аслӑ шывсенҫен, ҫар ҫӳретме меллӗ шывсенҫен пӑхӑнтарнӑ халӑхсемпе йӑхсене хӑвалас пулат; ҫав сӑлтавпах пур йенҫен те меллӗ вырӑнта ларакан авалхи хуласемпе йалсене вырӑслантарас пулат, ҫав сӑлтавпах ҫав шывсемпе хуласен таврине шанҫӑклӑ вырӑс племине ирӗклӗрен те ирӗксӗр те куҫарса йышӑнтарас пулат. Ҫӑнахах та ҫакна колонисатси ҫӗнӗ ҫӗр ҫине пуснӑ пусманах туса хурат. Ҫапла ҫӑвашсен ирӗксӗрех Атӑл, Сӑрӑ, Ҫавал, Сӗве, тата ытти пысӑкрах шывсенҫен айаккарах ӑҫта та пулин ҫикӗнмелле пулат, хуласене пӑрахса, хуласен ҫывӑхӗнҫен те айаккарах кайса лармалла пулат. Ҫак вӑхӑтра ҫӑвашсемпе колонисаттӑрсем пӗр пӗрин ҫине тӑшман ҫине тӑшман пӑхнӑ пек пӑхаҫҫӗ, пӗр пӗрне сийен тӑвасшӑн ҫеҫ айкаса тӑраҫҫӗ. Ытларах та хӑрушӑ пек туйӑнат йут ҫӗрте, йӗри тавра йут халӑхсен хушшинҫе хӗсӗннӗ колонисаттӑрсене. Ҫавӑнпа вӗсем хуласене ҫи малтан пысӑк ҫул хӳмесемпе ҫавӑраҫҫӗ, хӳмесем ҫине ҫӳлӗ пашнӗсем лартаҫҫӗ, унта тупӑсем вырӑнаҫтараҫҫӗ, ҫав крепӑҫа ҫавӑрӑннӑ хуласене Мускав таврашӗнҫен ҫасрах тӗрлӗ ҫар ҫыннисене куҫараҫҫӗ. Хуласенҫе колонисаттӑрсем кунӗн-ҫӗрӗн хурал тӑрса пурӑнаҫҫӗ, хӑйсене ҫимелӗх тырӑ-тавраш хула ҫывӑхне ҫеҫ акалаҫҫӗ. Хӑйсем те вӗсем ҫӑваш ҫине тухмаҫҫӗ, ҫӑвашсене те хула ҫывӑхне те пыма хушмаҫҫӗ—ҫывӑхарсанах йе пӑшалпа, йе тупӑпа переҫҫӗ. Анҫах ҫапла ӗмӗр вӑрҫӑри пек кӳршӗпе кӳршӗ пурӑнма пултараймаст. Колонисатси те хӑй ӗҫне пӗр хӗҫ-пӑшалпа ҫеҫ тӗреклӗ тума пултараймаст. Ӑна вӑл ҫӗнӗ ҫӗре пӑхӑнтарнӑ пӑхӑнтарманах мул мӑйкӑҫӗпе пур йенҫен те муталаса пума тытӑнат. Тӗрӗссипе каласан—колонисатсийе малтан мулҫӑсем туса пыраҫҫӗ, ӑна вӗсем ҫавӑтса пыраҫҫӗ. Пӑлхари хулисенҫе тӗп авалранах нумай сутилӳҫӗсем пурӑннӑ, ҫавӑнпа вӗсем пур тӗлте те унта ҫар пыриҫҫенех пулнӑ. Ҫӑваш ҫӗршывӗ колонисатси айне Мускав таврашӗнҫе сутилӳ мулӗ хӑватланнӑ саманара лекнӗ. Мускав патшалӑхӗ хӑй ҫиккисене пуринҫен ытла ҫав мул уссишӗн сарӑлтарасшӑн тӑрӑшнӑ. Ҫавӑнпа колонисатси пуҫӗнҫе ҫарпуҫлӑхсемпе тӳресем, улпутсемпе пӗрле сутилӳҫӗсем те тӑнӑ. Сутилӳ ӗҫне вӑрҫӑ



14068

ҫӑрмантарса тӑрат̆. Ҫавӑнпа колонисаттӑрсем вӑрҫӑсем иртсе кайсан ҫасах ҫӑвашсемпе килӗшӳллӗ пурӑнма май шыраҫҫӗ. Анҫах ҫав майа йепле тупмалла? Ҫӑвашлӑха ҫухатман ҫӑвашсем пур те хресҫенсем, вӗсем хӑйсене кирлине хӑйсемех тӑваҫҫӗ, ҫавӑнпа вӗсем хӑйсене хуласене йаманнишӗн пӗртте пӑшӑрханмаҫҫӗ—вӗсемшӗн хуласем ҫеҫ мар, патшалӑхӗн те шӑрши те ан пултӑр, анҫах вӗсене ҫеҫ никам та ан тивтӗр. Ҫакна кура—колонисаттӑрсен кӑпиталӗ ҫӑваш хресҫенне мул пусмӑрӗпе пусмӑрлас тесе, ҫӗр тӗслӗ усал та, ҫейе те мел тупат̆. Ҫав мелсенҫен паллӑраххисем: колонисаттӑрсем ҫӑвашсене хӑйсене ҫунӗпе парӑнтарас тесе вырӑс тӗнне кӳртсе пӗтерме пикенеҫҫӗ, тупӑсем ларакан пашнӗсем ҫине хӗрессем лартаҫҫӗ, хула ҫывӑхӗсенҫи ҫар хурал тӑракан тӗмесем ҫине ҫасавнисем тӑваҫҫӗ, авалхи ҫаплӑ киреметсен вырӑнӗсене ҫуркӳсем туса хураҫҫӗ, ҫӑвашсене пур йенҫен те хуласемпе ҫыхӑнса пурӑнмалла тӑваҫҫӗ: вӗсене йалсенҫе хресҫен хӑй тунӑ йапалапа сутилӳ тума хушмаҫҫӗ, йалти пасарсене хупаҫҫӗ, пур тавара та хулари сутилӳҫӗсенҫен ҫеҫ илме хушаҫҫӗ, пыра-киле ҫӑвашсен хушшинҫи ӑстасене те пӗтереҫҫӗ, йалсенҫи тимӗрҫӗ лаҫҫисене те пурне те хупса лартаҫҫӗ—ҫапла майпа ҫӑваш хресҫенӗ кирек мӗнле пӗҫӗкҫӗ ӗҫпе те хулана каймалла пулат̆, ҫук йапалана та унта туйанмалла пулат̆; унтан ҫӗлхе те, саккун та пӗлмен ҫӑваш хресҫенӗсене йалӗ-йалӗпе улталаса колонисаттӑрсем вӗсен ҫӗршывӗсене тата-тата илеҫҫӗ, вӗсене колонисаттӑрсенҫен тара илсе ҫеҫ усӑ курмалла тӑваҫҫӗ; унтан тата армансем, ытти тупӑшлӑ тӗрлӗ меслетсем пур те тенӗ пекех, колонисаттӑрсен аллине куҫаҫҫӗ; колонисатси пӗрер ҫӗр ҫултан ҫӑваш хура халӑхне ерешмен карти пек карталаса илет: ҫав халӑхӑн йышӑннӑ ҫӗршывра ирӗклӗ ӗҫ ӗҫлесе пурӑнасси пӗтет, вӑл ҫука йерет, ӗмӗр пӗтми парӑма кӗрсе пӗтсе пӗтӗмпех улпутсен, сутилӳҫӗсен, усламҫӑсен аллине кӗрсе ӳкет.

Асаплӑ хресҫен, пусмӑрлӑ хура халӑх ҫак йӗркене хирӗҫ кӗрешмесӗр пултараймаст̆. Ҫӑваш ҫӗршывӗнҫе аслӑ кӗрешӳ тапранат̆. Ҫав кӗрешӳ йунлӑ пулат̆, ҫав кӗрешӳ питӗ йывӑр пулат̆—вӑл пӗр-ик ҫӗр ҫул тӑршшӗпе ҫапӑҫсан ҫеҫ, хура халӑх вӑйран пӗтӗмпех сулӑнсан ҫеҫ лӑпланат̆. Вӑл XIX-мӗш ӗмӗрте лӑпланни те малашне пулас револютсилӗ аслатисене ҫеҫ пӗлтерет.

Ҫӑваш хресҫенӗ ҫак саманара кашни пӗр утӑм ҫӗрне, кашни пӗр шит анине шӑлпа ҫыртса тӑрат̆, ӑна пуҫ хурса ҫапӑҫмасӑр

памасӗ. Анҫах ҫапла кӗрешни сайа пулаӗ: колонисатси хӑй ӗҫне ҫийеле кӑларса пыраӗ, ӑна хирӗҫ пыракан пусмӑрлӑ йӑх хресҫенӗсене айала хӑварса таптаса пыраӗ. Анҫах ҫав саманара пулнӑ ӗҫсем ҫинҫен халӑх ӗмӗрне те манмасӗ—ҫав ӗҫсене халиҫҫенех асра тытаӗ. Револутси пуҫланиҫҫенех кашни йал: авал пирӗн мӑнасаттесем ҫавӑнта пурӑннӑ, пирӗн ҫӗр ҫикки ҫавӑнта ҫитиҫен тӑсӑлнӑ, ҫав хысна, утил йе улпут вӑрманӗ пирӗн пулнӑ, ҫав айлӑмри ҫаранра пирӗн кӗтӳсем ҫӳренӗ тенӗ сӑмахсемпе сӗмленсе пурӑнаҫҫӗҫ. Хӑш йалсем тӳрех вӗсем авал Атӑл йе урӑх аслӑрах шывсен хӗрринҫе пулнине, унтан вӗсене колонисаттӑрсем хӑваласа йанине асран ҫухатмасҫӗҫ. Кашни таврара ҫӗрсен авалхи планӗсем, ҫӗр ҫиккисене кӑтартакан хутсем, тӗрлӗ, ҫӑвашсем панӑ шалӑпӑсем йе ҫав шалӑпӑсене хирӗҫ йанӑ патшасен ҫырӑвӗсем пытанса сыхланса вырҭаҫҫӗҫ—ҫавӑн пек хутсене авалран йулнӑ йӑлапа ҫӑвашсем хӑвӑл туйа ӑшӗнҫе пытарса сыхланӑ. Ҫав хутсене халӑх ҫӗрсене хӑҫан та пулин улпутсенҫен, хыснаран, тӗрлӗ хуҫасенҫен кайалла илӗпӗр тесе усранӑ. Ҫав хутсене пухас пулаӗ, вӗсене сыхлас пулаӗ, вӗсем тӑрӑх колонисатси историне тӗплесе пӗлес пулаӗ. Ҫав хутсем нумай йапалана пӗлтереҫҫӗ. Ҫи малтан вӗсем ҫӑвашсем хӑйсен ҫӗршывне йывӑр кӗрешсе вӑйран кайсан ҫеҫ алӑран ӗҫерниие пӗлтереҫҫӗ. Ҫак сӑмаха тӗрӗслес пиркипе епӗ хам пӗлекен пӗр хут историне ҫеҫ кӗскен каласа парам: пирӗн йалта, Пӳркеленҫе XVI-мӗш ӗмӗрӗн пирвайхи ҫурринҫех ҫырӑннӑ хут, сыхланса тӑнӑ, ӑна 250 ҫул тӑршшӗпе йалти пӗр шанҫӑклӑ ватӑ вилес умӗн тепӗр шанҫӑклӑ ватӑ ҫынна парса хӑварнӑ, ҫав хут Мускав патши Михайла Елекҫейӗ пирӗн таврари ҫӑвашсем хӑйсен ҫӗршывне хӑйсен аллинҫе тытса тӑма ирӗк панине пӗлтернӗ. Ҫав хута, ик-виҫ ҫӗр ҫул вырҭакан хута вулама канҫӗр пулнӑ, ҫавӑнпа ӑна ҫӑваш ҫыруҫи-историҫи Йурка Питӗре илсе кайса, унта ӑстасене вулаттарса, ӑна уйрӑм кӗнеке туса пиҫетлеттернӗ. Ҫав кӗнеке кӑтартнӑ тӑрӑх—пирӗн таврана, Сӗве тӑршшӗнҫи Пӑрӑнтӑк вулӑсӗ таврине колонисаттӑрсем XVI-мӗш ӗмӗрӗн пуҫламӑшӗнҫе пырса ҫитеҫҫӗ, унҫҫен пирӗн таврара вырӑс пулмасӗ. Малтан пирӗн таврана Климов хушаматлӑ виҫӗ пӗр тӑван колонисаттӑрсем пыраҫҫӗте, пӗр саккунлӑ сӑлтавсӑр Сӗве тӑрӑх вырҭакан лайӑх ҫӗрсене хӑйсене ҫавӑрса илсе усӑ курса пурӑнма тытӑнаҫҫӗ. Паллӑ—вӗсем улпутсем пулнӑ, ҫав туртса илнӗ ҫӗрсем ҫине вӗсем вӑтам Раҫҫейрен

пусмăрлă вырăс хресӗенӗсене куçараççӗ. Ӗăвашсем çак ӗçе пӗтӗм вăйпа пӗрлешсе хирӗç тăраççӗ, тырă акма вӗсене ӗăрмантараççӗ, пур вырса хунă тырăсене хиртен ирӗксӗр хăйсем патне туртараççӗ. Колонисаттăрсем Ӗӗмпӗре кайса илӗртеççӗ те унтан ӗăвашсене пусарма çар камантипе пристăв килет: вăл тырра кайалла тавăртарттарат̆, унтан паллăрах çынсене тытса Ӗӗмпӗре илсе кайса тӗрмене хупат̆. Тӗрмере çак ӗăвашсене пӗр тӗпрем çăкăр, пӗр тумлам шыв памаççӗ те вӗсем выçă аптăраса асапланса вилеççӗ. Анӗах ӗăвашсем çапах та парăнмаççӗ, вӗсен суйланă çынисем лашапа Мускава кайаççӗ те, унта Климовсем саккунсăр ӗç тунине кăтартса тӗрӗслеççӗ, вара вӗсене патша вӗсен çӗрне тивмелле мар тесе уйрăм хут парса йарат̆. Анӗах çак хутăн усси сахал пулат̆: ӗасах вăл колонисаттăрсен умӗнӗе йурăхсăра тухат̆: ăна алă пусакан патши те вилет, вак халăхсенӗен çӗре ирӗксӗр илмелле маррине кăтартакан саккунсем те çухалаççӗ. Ӗасах колонисаттăрсем пирӗн тăхăр йала Сӗве хӗрринӗен пăраççӗ, пур аван çӗрсене улпутсем пырса лараççӗ, çапла тăхăр йал çӗрне Сӗве шывӗ тăрăх йӗри тавра улпутлă вырăс йалӗсем: Пурӗав, Киштек, Хăйат, Саркамăш, Кӳрен, Йăвашав, Куславка, Кукаӗна йалӗсем ларса тулаççӗ. Унтан çав улпутсемпе пӗрле тăхăр йал çӗрӗ варрине ирӗклӗ вырăс хресӗенӗсемпе тӗрлӗ хусахсем йышăнса пысăк вырăс йалӗ Пăрăнтăк йатлă йал туса лараççӗ. Çак йалсем пур те авалхи ӗăваш йалӗсене Сӗве таврашӗнӗен çеçенхирелле хăваласа йарса лараççӗ, хăйсен йатне те вӗсем авалхи ӗăваш йалӗсен йатне çеç йышăнаççӗ. Тăхăр йал çак вăхăтӗенхи саманана асăнса тăхăр çултан пӗрре пӗрлешсе ӗаплă уӗӳк тăваӗӗӗç (йулашки уӗӳк 1906-мӗш çулта пулӗӗ), çав уӗӳк Сӗве таврашӗнӗе утил (удел) аллинӗе выртакан вăрман ăшӗнӗе авалхи Ӗапăрйалӗ вырăнӗнӗе пулаӗӗӗ; çав йал таврари пуç-йалӗ пулнă, вăл кайран тӗп пулнă; çав уӗӳкра кӗлтăвакан кӗлӗсенӗе Ашмарин кăтартнипе авалхи Пăлхари патшисем асăнаççӗ; çав уӗӳке тăхăр йал таврара çӗршыва авал хăй пӗрлешсе тытса тăнине асăнса тунă, çав уӗӳкра ӗăваш „ӗапăр хуçи" йатлă етеме асăваӗӗç—вăл тăхăр йал çӗршывӗн ӗиккисене пăхса тухнă ӗух Ӗăнлă шывӗнӗе путса вăхăтсăр вилнӗ пулат̆. Ӗăнлă шывӗ вăл Ӗӗмпӗр тавринӗи ӗăвашсене вырăссенӗен уйăрса тăракан ӗикӗ, çавăнпа çав етем çав шывра путса вилнӗ тени тен вăл колонисаттăрсемпе кӗрешсе вилнине

пӗлтерет пулӗ. Ҫав тӑхӑр ҫулта пӗрре пулакан уҫӳкра кӑвак лаша пусса парнелеҫҫӗҫ, ӗмӗрхи йӑлапа ҫав лашана Хайат улпуҫӗ Теренин пиллесе парса тӑнӑ. Улпут ҫейе пулнӑ: вӑл ҫунӗпе уҫӳкран хӑй ӑшӗнҫе мӑшкӑласа кулнӑ, анҫах вӑл ҫав уҫӳкра тӑхӑр йал авал пӗрлешӳлӗ вӑйпа ҫӗршыва хӑй аллинҫе ҫеҫ тытса тӑнине асӑннине пӗлнӗ, ҫавӑнпа вӑл уҫӳка лаша парса халӑх кӑмӑлне тупасшӑн пулнӑ.

## 3. Ҫӑвашсем патшасенпе улпутсен крепӑҫлӑ пусмӑрӗпе кӗрешни.

Колонисатси пусмӑрӗпе пӗрле патшасемпе улпутсен пусмӑрӗ пӗр вӗҫрен ҫыхӑнса тӑраҭ. Колонисатсийе ҫи малтан кам ҫавӑтса пынӑ? Ӑна Мускав патшалӑхӗ хӑйӗн ҫарлӑ вӑйӗпе ҫул уҫса пынӑ. Кама кирлӗ пулнӑ тӗкех пурӑнакан хӗвелтухӑҫ халӑхӗсене пӑхӑнтарса вӗсен пусмӑр тапҫӑкӗ айне пӑрахасси? Вӑл ҫи малтан улпутсене, сутилӳҫӗсене, ҫарпуҫлӑхӗсене, тӗрлӗ тӳресене кирлӗ пулнӑ. Унтан Мускав патшалӑхӗн ҫиккисем сарӑлса пынӑ мӗн ҫухлӗ, ҫавӑн ҫухлӗ унӑн патшисем хӑватлӑланса пынӑ ҫавӑн ҫухлех вырӑс хресҫенӗ, вырӑс хура халӑхӗ хӑй те пусмӑра ытларан ытла кӗрсе ӳксе пынӑ. Пур ҫӗнӗрен йышӑннӑ ҫӗрсене патшасем хӑйсен харпӑрлӑхӗ вырӑнне хисепленӗ, нумай ҫав ҫӗрсене вӗсем револютсиҫҫенех хӑйсен аллинҫе тытса, хӑйсем усӑ курса пурӑнаҫҫӗҫ; унтан ҫав ҫӑрсене вӗсем нумайӗшне улпутсемпе тӗрлӗ ытти хӑйсене сутӑннӑ тарҫӗсене пиллесе панӑ. Ҫав ҫӗрсем ҫине куҫакан вырӑс хресҫенӗ ирӗклӗ-ирӗксӗрех улпутсен аллине ҫуралӑха кӗрсе ӳкмелле пулнӑ.

Ҫӑвашсем улпут хресҫенӗ пулман, проф. Никольски кӑтартнипе—ҫӑвашсене те улпутсем хӑйсен аллине илме пӗртех тиркемен, пӗр пысӑк улпут Орлов-Тавытӑв икӗ пин ҫун ҫӑваша ултавпа хӑй аллине ҫавӑрса илнӗ, анҫах вӑл вӑхӑтлӑха кӑна пулнӑ.

Ҫӑвашсем, ытти Атӑл тавринҫи халӑхсем те мӗншӗн, унтан йепле майпа улпут хресҫенне ҫавӑрӑнаймасӑр йулнӑ-ши? Ҫак нумай историлӗ пиркесене пула пулнӑ, ҫав пиркӗсенҫен паллӑраххисем: пӗр йенҫен ҫав халӑхсем колонисатсийӗн малтанхи ӗмӗрӗсем тӑршшӗпе йаланах мӗн вӑй ҫитнӗ таран хумханса пурӑннӑ, унтан улпутсен пусмӑрлӑ йӗрки ҫав пӑхӑнтарнӑ халӑхсене уйрӑм сослови вырӑнне хисеплесен ҫеҫ, вӗсене хирӗҫ вырӑс хресҫенне йе

ҫейе мелпе вӗскӗртсе пурӑнсан, тӗрлӗ йӑхран пулнӑ хресҫенсене пӗр пӗрипле йӳҫӗнкӗлӗ пурӑнмалла тусан ҫеҫ тӗреклӗленме пултарнӑ; унтан йулашкинҫен Мускав патшисем Хайар Иванран пуҫласа улпутсене влаҫ ытла пама хӑраса тӑра пуҫланӑ, ҫав влаҫа вӗсем ытларах хӑйсем илесшӗн пулнӑ. Йепле пулсан та ҫӑвашсем те ытти хресҫенпе пӗрлех крепӑҫлӑ пусмӑр айне кӗрсе ӳкнӗ: Хусан ҫӑвашӗсем хысна аллинҫе, ытти ҫӑвашсем ытларах утил аллинҫе пулнӑ. Ҫак саманара ҫӑваш хресҫенӗ калама ҫук йывӑр пурӑнӑҫпа пурӑннӑ: вӑл пӗтӗмпех патшасен тарҫисен, тӗрлӗ улпутсен, тийексен аллинҫе пурӑннӑ, вӗсем ҫине ҫӗр ӗҫӗ, вӑрман ӗҫӗ ӗҫлесе, ӑлав турттарса, ытти тӗрлӗ хысна ӗҫӗ ӗҫлесе пурӑннӑ. Куланай та ҫӑвашсем йаланах ытла тӳлесе пурӑннӑ—улпутсем хӑйсем нумайрах тупӑш илес тенӗ сӑлтавпа хӑйсен хресҫенӗ ҫинҫен куланайа сирсе ытти вак халӑхсен хресҫенӗ ҫине тийеме тӑрӑшнӑ. Унтан ҫав ҫӑвашсене алӑра тытса тӑракан тийексем ытла та усал, ҫӑткан пулнӑ: ултавпа, пусмӑрласа саккун хушмасан та пур йенҫен те халӑха тулама тӑрӑшнӑ. Патшалӑх та пур йенҫен те йывӑра вак халӑхсен ӗнси ҫине тийеме тӑрӑшнӑ: ҫакна пӗлес тесен Петӗр патша саманине кӑна асӑнас пулаҭ: унҫухне ҫӑвашсене Атӑл ҫинҫе карапсем тунӑ ӗҫре ӗҫлеттерсе, вӑрмансем кастарса турттартарса тарӑхтарнӑ, нумайӗшне Асӑв тинӗсӗпе Тон шывӗ ҫине ҫав ӗҫех ӗҫлеме хӑваласа кайнӑ, тата нумайӗшне Питӗр хулине тунӑ ҫӗре ӗҫлеме пуҫиле хӑваласа кайнӑ. Унтан ҫӑвашсене хӑш савӑтсенҫе, мӑнастырсенҫе, хуласенҫе хысна ӗҫӗ ӗҫлеттерсе тарӑхтарса пӗтернӗ. Ҫав вӑхӑтрах килте те пурӑнӑҫ пӗтӗмпе йурӑхсӑр пулнӑ: патшалӑх вырӑнӗсенҫе тӑракан ҫынсем пур йенҫен те ҫӑвашсен хуҫисем пулнӑ, вӗсем тӗлӗшӗнҫен хӑйсен ҫарусӑр кӑмӑлӗ мӗн тума хушаҭ—ҫавна тума пултарнӑ: ҫӑвашсемшӗн сут йӗрки пулман, саккун йӗркине вӗсем шырама пултарман. Ҫав вӑхӑтрах вӗсен пурӑнӑҫне хупласа илнӗ миҫҫионерсен кӗтӗвӗсем пӗтӗмпех пӑтратса тӑнӑ.

Ак мӗншӗн ҫак йӗркене пула ҫӑваш хресҫенӗсем темиҫе хут тинӗс пек хумханса кайса пӑлханаҫҫӗ, ҫав йӗркене пӗтересшӗн кӗрешеҫҫӗ. Ҫав пӑлханусем темиҫе хут пулаҫҫӗ, ытла та вӑйлӑ вӗсем Раҫин пӑлхавӗ, унтан Пукаҫҫов пӑлхавӗ вӑхӑтӗнҫе пулаҫҫӗ. Раҫин та, Пукаҫҫов та тӳрех ҫӑваш ҫӗршырӗ ҫине улӑхса пыраҫҫӗ, ҫав ҫӑваш тавринҫе вырӑс ҫарӗсемпе ҫапӑҫаҫҫӗ. Вӗсем ҫӑвашсем

пулӑшу парассине пӗлсе тӑваҫҫӗ. Ҭӑваш ҫӗршывӗнҭе темиҫе хӑрушӑ ҫапӑҫу пулаҡ: ҫав ҫапӑҫусенҭе ҭӑвашсем хӑйсен полкисем туса, хӗҫ-пӑшал ҫӗклесе, хӑйсем тупӑсем те туса Мускав патши ҫарне хирӗҫ ҫапӑҫаҫҫӗ. Раҫина ҭӑвашсем ҫӑкӑр-тӑварпа хирӗҫ тухса илеҫҫӗ, ӑна вӑрҫӑра кирлӗ хатӗрсем туйантараҫҫӗ, хӑйсем хӗҫ-пӑшал ҫӗклесе унпа пӗрле ҫапӑҫса пуҫӗсене ҫухатаҫҫӗ. Кунта ҫак самана ҫинҭен тӗплӗ калама вырӑн ҫук—ун ҫинҭен тӗплӗ калас тесен уйрӑм кӗнеке ҫырас пулаҡ. Нехекрен мар ҫав ҭӑваш ӗҫхалӑхӗ ахтономи йышӑнсанах Шупашкарта Раҫина асӑнса паметник лартса хунӑ. Кайарахпа та ҭӑвашсем пушкӑртсем пӑлханнӑ вӑхӑтра нумайӗшӗ вӗсемпе пӗрлешсе ирӗклӗхшӗн кӗрешеҫҫӗ. Ҫав пӑлханусем мӗн крепӑҫлӑ самана пӗтиҭҭенех пулаҫҫӗ. Йулашки вӑхӑтсенҭе крепӑҫлӑ йӗрке тӗреклӗленсе ҫитет, ҫавӑнпа пӑлханусем уйрӑм вырӑнсенҭе ҫеҫ пулаҫҫӗ. Пур те илтнӗ пулӗ—1840-мӗш ҫулсенҭе Шурҭа таврашӗнҭе пулнӑ ҫӗрулми пӑлхавӗ ҫинҭен. Ун ҫинҭен ҫыруҫӑсем хӑшӗ суйса ҭӑвашсем ҫӗрулми акасшӑн пулман, мӗншӗн тесен, ӑна шуйтан улми тесе каланӑ теҫҫӗ; ҫак пӗтӗмпех суйа сӑмах: ӑна тӳресем хӑйсен ирсӗр ӗҫӗсене ҫӳлӗрех тӑракан наҭаҭниксем ан сисейҭҭӗр тесе, елеклесе кӑтартнӑ; ҫав пӑлхава ҭӑвашсем хысна ӗҫӗпе тарӑхнипе унтан ирсӗр йӗркелӗ пурӑнӑҫпа тарӑхнине тӳсеймесӗр кӑларнӑ. Ҫавӑн пек хӗҫ-пӑшал, тупмӑр, пуртӑ-сенӗк ҫӗклесе кӑларнӑ пӑлхавсем кайарах та ҭӑвашсен хушшинҭе йаланах пулнӑ, ҫав пӑлхавсем йаланах ҫӗршыв таврашне виҫнӗкаснӑ ҭух, халӑха улталаса унӑн ҫӗршывне туртса илнӗ ҭух тухса пынӑ. Пирӗн таврари сутсен архивӗнҭи хутсене вуласан—йаланах ҭӑваш хресҭенӗсем тӗрлӗ тӗлте пӑлхав кӑларса пуҫа ҫухатаҭҭен ҫапӑҫни паллӑ.

Хӑшӗ ҫак авалхи хумханусене асӑнсан вӗсем йӗркесӗр пулнӑ, ун ҭух халӑх хӑйне мӗн кирлине хӑй те пӗлмен теме пултараҫҫӗ. Ҫапла калама йурамасҡ: паллӑ—ҫак тӗттӗм саманара халӑх хаҭхи пек пулман, анҭах ҫапах та вӑл ҫителӗклӗ ҫивҭӗ тӑнлӑ пулнӑ. Ҫакна ҭухлас тесен, Кӗтерине патша Питӗре пухнӑ пухури ҭӑвашсем ҫырса панӑ хута ҫеҫ вулас пулаҡ; ҫав хута вуласан—XVII-пе XVIII-мӗш ӗмӗрсенҭе пӑлханнӑ ҭӑвашсен хӑйсене кура прокраммӑ та пулни палӑ. Ҫав хутра вӗсем мӗн ыйтаҫҫӗ? Вӗсем ҭӑваш ҫӗршывне: ана-ҫарана, вӑрмана ан илӗр теҫҫӗ, ҭӑваш ирӗклӗ ӗҫлесе хӑй тунӑ йапалана йӳнеҫтерсе пурӑнма ирӗк памалла теҫҫӗ,

ҫăвашсен хушшинҫи вырăнсенҫе, сутра ҫăвашсем пулмалла, вĕсем ĕҫе ҫăваш ҫĕлхипе калаҫса тумалла теҫҫĕ; унтан вĕсем хресҫен халăхне тĕрлĕ мулҫăсем питĕ аптăратаҫҫĕ, усламҫăсем халăхран 50-шар проҫҫăн илсе пурăнаҫҫĕ, ҫавăнпа хура халăх ваҫҫи уйрăм панкăсем пулмалла; ҫав ҫăвашсемех ҫăвашсемшĕн шкул уҫма ыйтаҫҫĕ, йулашкинҫен тăлăхсемпе ҫуксене усрамашкăн кашни вулăсра уйрăм халăх ҫурҫĕсем пулмалла теҫҫĕ. Ҫакна пурне те ҫăвашсем 1905-мĕш ҫулхи револ̌утсире те, 1917-мĕш ҫулхи хевраҫ револ̌утсинҫе те ыйтрĕҫ тĕрĕсрен каласан, нумайĕшне ҫакна халĕ епир пирĕн саманара ҫеҫ вырăна кӳртме тытăннине куратпăр. Ак мĕншĕн епир ҫак кĕнекере ҫав авалхи хумханусене сăмах пуҫламăшĕнҫе те пулин асăнмасăр пултараймастпăр.

## II. 1905-мӗш ҫул умӗн.

### Ҫӑваш пурӑнӑҫӗ ҫӗнӗ йӗркене йерипен йышӑнса пыни.

Крепӑҫлӑ пусмӑра хресҫен хӑй ӗнси ҫинҫен пӑрахнӑранпа пӗтӗм Раҫҫейри халӑхсен пурӑнӑҫне ҫӗнӗ сӑн ҫапаӗ. Раҫҫейре ҫӑнтанах кӑпиталисӑм аталанаӗ, хапрӑк-савӑтсем тӑвӑнаҫҫӗ, ҫукун ҫулсем хывӑнаҫҫӗ, хуласем аслӑланаҫҫӗ, ҫӗнӗ хуласем ҫӑмӑртанаҫҫӗ. Пӗтӗм пурӑнӑҫа ҫӗнӗ сӑн ҫапаӗ, ҫӗнӗ тӗс кӗрет, ҫав сӑнпа тӗс, ҫӗнӗ хӑват кӑпиталисӑм аталаннине, ҫӗнӗ пуршуаллӑ йӗрке патшалӑхра хуҫа пуласшӑн тапӑнса тӑнине кӑтартаҫҫӗ.

Ҫӑвашсем те ҫав пӗтӗм Раҫҫей аталанса ӳсекен ҫулран пӑрӑнса йулма пултараймаҫҫӗ. Вӗсем те пӗр хӗрринҫен те пулин, кӑшт та пулин ҫав ҫул ҫинех урисене пусма тапӑнаҫҫӗ. Крепӑҫлӑ саманара ҫӑваш йалӗ пӑҫах урӑх сӑнлӑ пулнӑ: вӑл ҫырма-ҫӑрма таврашӗнҫе, тӗрлӗ йӗркесӗр ҫӗрсенҫе йури пӑтранса, пытанса, ҫӑмӑртанса ларнӑ, ҫӑваш хресҫенӗ йалтан тухма та хӑранӑ; ку сахалха: вӑл хура пӳртсенҫе пурӑннӑ, пӳрҫӗсене пӗр ҫӳреҫе-кантӑк ҫеҫ лартнӑ, вӗсене те етем пуҫӗ кӗмеллӗх те пулман—вӗсем ҫав тери пӗҫӗкҫӗ пулнӑ. Ҫӑваш хресҫен халӑхӗ пӗрлешсе, пӗр натсиллӗ хупӑпа хупӑнса тӗнҫерен йутшӑнса пурӑннӑ. Ытти тӗнҫе ҫине вӑл сивӗ куҫпа пӑхса тӑнӑ, мӗншӗн тесен, ытти тӗнҫе ун куҫ умӗнҫе ҫав саманара йут халӑхсен хӑрушӑ ҫар ушкӑнӗсене, пристӑвсене, тийексене, тӗрлӗ тӳресене, вӑрӑ-хурахсене, таркӑнсене, ултавҫӑ сутилӳҫӗсене ҫеҫ пӗлтернӗ. Ҫав ытти тӗнҫе пур те ҫӑвашшӑн тӑшман пулнӑ: пур те ӑна пусмӑрланӑ, туланӑ, улталанӑ. Ҫавӑнпа ҫӑваш пӗр шӑрпӑк тавар та йутран илме тӑрӑшман, хӑй те сутлӑх тавар тума тӑрӑшман. Унӑн хуҫалӑхӗ пӗтӗмпех натураллӑ (йапалаллӑ) тенӗ хуҫалӑх йӗрки пулнӑ: вӑл ҫӑвашсем хӑйсене кирлине хӑйсемех туса хӑйсен тӗллӗн ҫеҫ пурӑнма тӑрӑшнине пӗлтерет. Ҫӑвашсем ытти йенӗпе те, тӗнҫепе нийепле те ҫыхӑнса тӑмаҫ:

хуласен çывăхне вĕсем пыма та хăранă, патшалăх вырăнĕсене вĕсене илмен, илес пулсан та вĕсене айакка хăваласа кайса вырăслантарнă, йут çĕре ĕçе çÿреме вĕсем пултарайман—вĕсем хыснапа утил аллинҫе пулнă, йут çĕрте ĕçре çÿрекенсем пулсан та (Атăл тăрăх пурлакра пайтах ҫăваш çÿренĕ)—вĕсем ҫăвашлăхран ирĕксĕр татăлнă, ҫăвашлăха пуçиле çухатнă çынсем пулнă, мĕншĕн тесен, унҫухне ĕç те ирĕк пулман çавăнпа вĕсем кайалла таврăнма та пултарайман; ҫăвашсене тĕнҫене паллашма тата салтак слушпи пулăшнă—анҫах каллех ун ҫухне салтака питĕ сахал çынва илнĕ—вĕсем те пĕр кайсан таврăнайман, таврăнсан та йе вырăсланса, йе ватăлса, йе пăсăлса таврăннă, мĕншĕн тесен, вĕсем çирĕм пилĕк çул тăршшĕпе салтак пурăнăçĕпе асапланмалла пулнă. Çавăнпа пур 1860-мĕш çулсенҫен малтан пиҫетленнĕ кĕнекесенҫе çыракансем ҫăваш халăхĕ ытла тĕксĕм, тĕнҫе çине тухман, хăйне хăй çеç пурăнма тăрăшакан халăх теççĕ: çав саманара йал çыннисем хула çыннине курсан тарса пытаннă, аҫасене вырăс килет тесе хăратнă Вырăс кайсан вырăн йулҫĕ тенĕ авалхи сăмах—вĕсем авал вырăс сенҫен пĕтĕмпех йутшăнса пурăнма тăрăшнине пĕлтерет.

Анҫах пирĕн телейе май, ҫасах тĕнҫе улăшăнса кайат̆. Расçейре техниккăпа промăшлĕнăç тапранат̆, ăна пула пурăнăç çĕнелсе кайат̆. Çав йĕркене пулах ҫăваш пурăнăçĕ те йеррипен те пулин улăшăнса кайат̆. Атăл тăрăх пăспа çÿрекен пăрахутсемпе паршăсем çухăрса ҫи малтан пĕрре иртсе кайнийех ҫăваш çĕрĕ те çĕнĕ историлĕ урапа çине ларассине пĕлтерет: çак ĕç пулса тăрсанах ҫăвашăн питĕрĕнсе ларакан пăҫă пÿртне тĕнĕ витĕр кăна пулин те таса сывлăш кĕме тытăнат̆. Ҫасах çак вăхăтра Атăл тăрăх вăрман промăшлĕнăçĕ тапранса кайат̆, Атăл тавринҫе тĕрлĕ савăтсемпе хапрăксем пулса тăраççĕ, сутилÿ вăйлăланса кайат̆, ҫăваш хресҫенне тара кĕрĕшсе ĕçлемелли ĕç йышлăланса кайат̆. Унтан нумай та вăхăт иртмест—ҫăваш тавринҫе ҫукун çулсем хывăнаççĕ Мускавран Хусана, Самара, Ҫĕмпĕре, Самартан Слаттоуста, унтан Çĕпĕре. Çак ҫукун çулсене ĕçленĕ ҫух пур хура ĕçе ҫăвашсем вулăсĕ-вулăсĕпе ĕçлеççĕ, уйесĕ-уйесĕпе хăйсем ирĕкĕпе кĕрĕшсе ĕçлеççĕ, халĕ вĕсем ĕлĕкхи пек патак çисе çеç хысна ĕçне ĕçлемеççĕ, йÿн хака та пулин çапах ирĕклĕрен тенĕ пек кĕрĕшсе çĕнĕ хуçан кăпатал йатлă хуçăн ĕçне ĕçлеççĕ. Çав хуçа вĕсене пурне те йалсенҫен хуласене, хапрăксене, савăтсене илĕртсе тăрат̆, вĕсен

вăй-хăватне сутăн илсе усă курма тăрăшат̆. Ҫав хуҫа ђăваш тавринђе пристăңсемпе стантсасен ҫывăхĕнђе тĕрлĕ савăтсемпе хапрăксем тăват̆, унта ђăваш тунă ђĕрĕ хатĕрсене йусаҫҫĕ, ҫакна пула ђăваш йалхуҫалăхĕ таварлă хуҫалăх шăрши йышăнат̆; ҫав хуҫана пула ђăваш таварĕ: тырă-пулă, аш-пăш, ҫăм, шăрт, ҫĕтĕк-ҫурăк, хăмла, пыл, ҫăмарта ытти йапаласем те пĕтĕм тĕнђене кайса тăма тытăнаҫҫĕ. Ҫав хуҫана пулах ђăвашсем йышлăран йышлăн килте ирĕк вăхăтра аласти ĕҫĕпе кĕрмешме: ђăпта ҫапма ытти йапала та тума тăрăшаҫҫĕ, ăна пулах вĕсем Раҫҫей тăрăх ĕҫе ҫӳреме тапратаҫҫĕ [1]).

Ҫав вăхăтра ђăвашсен пурлăх йĕрки те улăшăнат̆, пĕтĕм пурăнăҫĕ те улăшăнат̆: вĕсем куланай сослови вырăнĕнђе ҫеҫ хисепленнĕ пулсан та йалсемпе вулăссенђе патшалăх ĕҫне хăйсем туса тăма тăрăшаҫҫĕ, ҫемствăпа паллашаҫҫĕ, шкулсенђе вĕренме тытăнаҫҫĕ, кĕнекесемпе сахал та пулин паллашаҫҫĕ, хуласенђен йутшăнми пулаҫҫĕ, хапрăк-савăт таварне сутăн илме тытăнаҫҫĕ; вĕсем пур те тенĕ пекех салтака та пулин кайса килсе тĕнђепе паллашаҫҫĕ; ҫакна пурне те пула ђăваш тĕнђи ҫирĕм-вăтăр ҫул хушшинђех калама ҫук нумай улăшăнса кайат̆. Ҫав улăшăнусенђен паллăраххисем ҫинђен малалла тата кăшт уйрăм калар.

---

[1]) Нехекрен ҫак историлĕ момент вырăс илемлĕ литтераттурĕнђе те тĕрленсе йулнă. Вырăс паллă классикĕ Карин-Михайловски „Сарпике“ (Зора) йатлă трамă ҫырнă, унăн хайхи ђукун ҫул тунă ҫĕрте ĕҫлекен акăлђан иншенер Сарпике йатлă ђăваш хĕрне йуратса савнине пĕлтерет, анђах унăн тĕп смыслĕ ђукун ҫула, техникка пула ђăвашсен авалхи ҫеҫенхирсен кулђтурĕ, ҫĕр ђавалакансемпе кĕтӳҫĕсен кулђтурĕ Европпă кулђтурĕпе перĕнсе, ун ҫумне ҫыпҫăнассине пĕлтерет. Карин-Михайловски хăй те ђукун ҫул тăвакан иншенер пулнă, вăл трамăра пулнă ĕҫ ҫинђен ҫырнă. Вăл ђăвашсенђен таҫта айакри вырăс интеликенђĕ пулсан та ђăваш историнђен ҫĕнĕ самана тапранассине пророк пек кăтартрĕ: ђукун ҫулсем хывсан 20—30 ҫул та иртмерĕ—Лонтонра ђăвашсен ҫăмартапа хăмла сутакан кантур уҫăлђĕ, ђăвашсем Парижра, Прӳҫҫĕлре, Шеневăра, Перлинра пĕрертен пĕрер ҫынсем те пулин вĕренкелеме те пуҫларĕҫ, унтан Европпăра ђăвашсен политтĕккă емикранђĕсем те курăна пуҫларĕҫ. Ҫакна асăннă ђух тата тепĕр йапала ман аса килет: Толстой „Ђĕрĕлӳ“ тенĕ романĕнђе ђăваш типне тĕксĕм, тĕрме хураллакан туса сăрлат̆: ҫав хуралҫă „ӳкĕнекен улпутсене“ (кающиеся дворяне), патшасемпе кĕрешсе асап куракан вырăс интеликентсине ирĕке кăлармасăр хураллат̆; Толстой ҫакна тĕрĕс сăнаса тĕрĕсрен тĕрленĕ (вăл Хусанта универҫитетра вĕреннĕ ђух ђăвашсемпе паллашнă, кайарахпа вилес умĕн 1908 мĕш ҫулта та вăл ђăвашсем мĕнле пурăнаҫҫĕ тесе мана ҫыру йарса ыйтсађђĕ), вăл 30—40 ҫул маларах пулнă саманана кăтартнă, ҫав саманара ђăвашсем ђурасем пулнă, вырăс кулђтурĕ, вĕсен опђĕствăллă пурăнаҫĕ ҫывăхне те йавăҫаймасăр пурăннă.

## 2. Çӗр ӗçӗ кăпиталисăма пула йепле улшăнса кайни.

Кăпиталисăм саманинҫе пурăнăç тытки—укçа. Укçа тăвас тесен тавар туса сутсан çеç тума пулаť—укçана йурланăшăн памаççӗ, теççӗ ҫăвашсем. Хресҫен мӗнле тавар сутма пултараť? Тӳрех паллă: унăн сутлăх таварӗ—тырă-пулă, выҫăх-ҫӗрлӗх, сат-пахҫа çимӗçӗсем. Çавăнпа хресҫен мӗн вăй çитнӗ таран çӗр ӗçне маларах йама тăрăшаť: вăл çӗре тирӗспе çирӗплеме (вирйалсем), лайăхрах ӗçлеме тапратаť, çавна пула вăтамлăхран шутланă тырă тухăçӗ ҫăвашсен 40 çул хушшинҫе 60—70 проҫҫăн ытла ӳсет. Çак вăхăтра виçӗпусăллă йӗрке тирпейленсе çитет, ҫăваш çӗршывӗнҫе ахаҫ выртакан уй йулмасť, нумай çарансем, лаҫака йе вăрман вырăнӗсем анана çавăрăнаççӗ. Ҫăваш хресҫенӗн мӗн кирлӗ тăкаксене саплама тырă сутни ҫи малтан пулăшаť—çавăнпа вăл сутăнма йурăхлă рынăкра витекен тырă çеç акма тытăнаť, çавăн пек тырăсем ырашпа сӗлӗ; тата вӗсем наҫартарах çӗрсенҫе, наҫартарах ӗçлесен те пулаççӗ.

Çапла майпа тырă таврашне килти кирлӗхшӗн çеç акас йăла ҫакса пӗтсе пыраť: çакă ҫăвашсем çак вăхăтра урпапа пăри акма писнинҫен питӗ витӗр паллă (анатри ҫăвашсем пирӗн вăхăтра урпан тӗсне те пӗлмеççӗ, нумайах та пулмасť пирӗн çурхи пусăсен çурри йахăн урпапа витӗнсе тăнă). Ҫăвашсем пӗтӗмпех ырашпа сӗлӗ çине тирӗнсе пурăнма тытăнаççӗ—вӗсене çуллен нумай мӗҫйуншар пăт туса калараççӗ—çав тырра сутилӳçӗсем Атăл, Çавал, Сăрă шывӗсем тăрăх, ҫукун çулсем тăрăх Питӗрпе Мускав таврашне ăсатса тăраççӗ. Анҫах ытти хаклăрах пӗрҫӗ тырă акса тума ҫăвашсем хăнăхса çитеймеççӗ: тулă, кантăр, йӗтӗн, хӗвелçавнăш, мăкăҫ тавраш акса курма вӗсен çӗрӗ те наҫар, çав çӗре çирӗплеме мул та çитмест, пӗлни те çитмест. Çапах уйрăм хастарлă çынсем çӗртен нумайрах усă курас тесе çав тырă-пулăсене те акалама тытăнаççӗ. Унтан уйрăм тӗлсенҫе рынăкра сат-пахҫа çимӗçӗ йӳнеçӳллӗ сутăннине кура ҫăвашсем сатсем ӗрҫетме тытăнаççӗ, тупăшшăн пахҫасене аслăлатма тытăнаççӗ (Куснарпа Нурăс таври); нумай тӗлте тата сутлăхшăн хăмла тăвас тесе хăмла пахҫисене вăйлă ӗрҫетме тытăнаççӗ. Унтан ҫăвашсем сутлăхшăн вак та пулин çапах йышлă выҫăх-ҫӗрлӗх усрама тапратаççӗ, ҫăх-ҫӗпӗ усраса

ҫӑмарта сутса усӑ курма хӑнӑхаҫҫӗ, ҫав ҭӑваш ҭӑх-ҭӗппи, ҫӑмарти, хур-кӑвакалӗ ытти патшалӑхсене те кайса тӑма тытӑнаҭ. Ҫапла ҭӑваш йалхуҫалӑхне те таварлӑ тенӗ хуҫалӑх ҫӑнӗ кӗни пӗтӗмпех палӑраҭ. Нумай тӗлте ҭӑвашсем ҫӗре машшинпа ӗҫлес йӑлана та йышӑнса ҫитеҫҫӗ: XIX-мӗш ӗмӗрӗн вӗҫӗнҭе анатри ҭӑвашсен хушшинҭе йӑвӑҫ сухапуҫӗн тӗсӗ те ҫухалаҭ—вӗсем тырра тимӗр акапуҫӗпе ҫеҫ ӗҫлеме тытӑнаҫҫӗ, унтан тырра ҫапакан та, выракан та машшинӑсемпе ӗҫлеме хӑнӑхса ҫитеҫҫӗ. Уйрӑм хастарлӑ хресҭенсем, вӗрентекенсем, хӑшӗ пупсем ҭапла хурт пахҭисем усрама, лайӑх усӑллӑ сатсем ӗрҭетме тытӑнаҫҫӗ, ҫавсенҭен хастарлӑхӗпе те, пӗлнӗлӗхпе те Шумилов тавраш ӗ пӗтӗм Атӑл таврине паллӑ вырӑн йышӑнса тӑраҭ, ун ҫинҭен пур хаҫатсемпе шурналсенҭе ҫыраҭҭӗҫ. Ҫапла револутси умӗн ҭӑваш хуҫалӑхӗ те тӗнҭе ҫулӗ ҫинелле тухасшӑн туртӑнса тӑни витӗр палӑраҭ.

Анҭах ҫав туртӑма кӑпиталисӑм пусмӑрӗ ҭӑнтан вӑй илме ҭарса тӑраҭ: хуҫалӑх лайӑхланнӑҫем хресҭен пурӑнӑҫӗ наҭарланса пыраҭ, мӗншӗн тесен, пур хресҭен туйаннӑ тупӑша та хысна кулана урлӑ, хапрӑк-савӑт таварӗ ҫине хунӑ аксис урлӑ тӗпӗпе хырса тӑраҭ. Унтан хресҭен пӗтӗмпех сутилӳлӗ кӑпиталӑн мӑйкӑҫӗнҭе пулаҭ: вӑл тырра ҫур хака ҫеҫ сутса пурӑнаҭ, пур тырӑ тупӑшне тырӑ купсисен аллине ҫеҫ парса пурӑнмалла пулаҭ. Ҫапла патшалӑхпа кӑпитал пусмӑрласа туланипе, ҫаратнипе хресҭен ҫука йерет, авалхинҭен те наҭар пурӑнма тытӑнаҭ: вӑл ҫитменнипе тырра пӗрҭӗ таранҭҭен кӗркуннех сутса пӗтерет, пур йапалана та сутса хӑй пӗр типӗ ҫӑкӑрпа, тӑварпа, ҫӗрулмипе ҫеҫ тӑранса пурӑнма тытӑнаҭ: ашпӑша, ҫӑмартана, сӗттурӑха вӑл пурне те сутаҭ, анҭах ҫав сутса туйаннӑ укҫапа шӑрпӑкран пуҫне нимӗн те туйанма пултараймасҭ. Ҫавӑнпа халӑх йаланах авал пурӑнӑҫ ҫӑмӑлтарах пулнӑ тесе шухӑшлама тытӑнаҭ. Анҭах ҭасах ҫак йунӑш шухӑша револутси пӗтӗмпех сирсе йараҭ.

Пурӑнӑҫ наҭарланнӑҫем хресҭен унӑн ӗҫлеме ҫӗр ҫитменнине ҫивҭӗрен ҫивҭӗ сиссе илет. Авал ҭӑвашсен нумай ҫӗр пушӑ выртнӑ, крепӑҫлӑ пусмӑр пӗтсен те нумайӗшӗ ҭӑвашсем йышлӑ ҫӗр йышӑнасшӑнах пулман — куланайран хӑранӑ, хысна хӑй те ҫӗре алӑра тытнин усси ҫуккине кура салтаксене ҫӗр паман — ҫӗрсӗр салтаксем куланайран хӑтӑлнӑ, тӑранма вӗсем ҫултаӑкне иквиҫ тенкӗлӗ пенҫи илсе пурӑннӑ. Анҭах ҫӗнӗ саманара

ҫак ӗҫ урӑх йенне ҫаварӑнса ӳкет: хресҫеншӗн ҫӗр пӗртен пӗр тӑрантарса пурӑнакан ырлӑх пулса тӑраӗ. „Пире ҫӗр ирӗклӗ кирлӗ вара епир кирек йепле те пурӑнатпӑр“, тет ҫитменнипе пур йенҫен те касӑлнӑ хура халӑх. Анҫах ӑҫта вӑл ҫӗр? Вӑл улпутсен, хысна, утил, хуҫасен, пупсен аллинҫе. Халӑх тахҫан револютсиҫҫен малтанах „ҫӗр касӑлаӗ, унсӑрӑн пулмасӗ“, тет. Ҫӑвашсем пухусенҫе пухӑнса лараҫҫӗ-и ӗҫкӗҫикӗре пӗрлешеҫҫӗ-и, тырӑ сутма йе вӑрман касма пӗрлешсе кайаҫҫӗ-и—килте те, ҫул ҫинҫе те вӗсем йалан ҫав ҫӗр ҫинҫен тарӑхса калаҫаҫҫӗ. Унтан халӑх хушшинҫе ҫӗнӗ ҫӗре куҫасси ҫинҫен пӗр ҫарӑнми сӑмах пыраӗ. Ҫӑнахах та ҫӑвашсем нумайӗшӗ йалӗ-йалӗпе хӑпса Ҫӗпӗре кайаҫҫӗ, анҫах унта ҫурри ҫеҫ вырӑнаҫаӗ, ҫурри пурлӑха салатса, тустарса кайалла таврӑнмалла пулаӗ. Унтан, ҫӗнӗ ҫӗре куҫас тӗлӗшӗпе ҫӑвашсем ытти паттӑртарах халӑхсен хресҫенӗнҫен кайарах тӑнӑ: статистикӑ кӑтартнипе—ҫӗнӗ ҫӗре куҫас тӗлӗшӗпе Хусан кӗпӗрни Раҫҫейри пур кӗпӗрнесенҫен те кайарах пынӑ. Вӑл мӗне пӗлтерет? Вӑл пусмӑрлӑ халӑхсем йурлӑрах пурӑннине, тӗксӗмрех пурӑннине, вӗсен хастарлӑх пусӑрӑнса тӑнине, вӗсем йут ҫӗрсенҫен писсе пурӑннине пӗлтерет. Ҫӑвашсен халӗ те ҫӗр ытла хӗсӗкки пӗр йенҫен вӗсем ӗлӗкренех Раҫҫей варринҫен Ҫӗпӗрелле, Турккестана, Капкаса йухакан колонисатси йухӑмӗ ҫумне ҫыпҫӑнайманнинҫен килнӗ, ҫапла ҫав йухӑм ҫумне ҫыпҫӑнайманни вӗсем хӑйсем ун айӗнҫе ытла хытӑ таптаннинҫен килнӗ. Ҫапла ӗнтӗ ҫак саманара халӑх пурлӑхӗ пӗр йенҫен ҫӗнелсе, прокресланса пыраӗ, тепӗр йенҫен кӑпиталисӑмпа патшалӑх тыллани-пе халӑх йурлӑланнӑҫем йурлӑланса пыраӗ. Ҫак саманара халӑх пуринҫен ытла ҫӗр ҫитменнипе тарӑхаӗ, улпутсен, хысна, утил, хуҫасен ҫӗрне илсе йышӑнасшӑн пӑшӑрханма тытӑнаӗ. Револютси йенне пӗтӗм вӑтам йе йурлӑ хресҫен те шавласа сулӑнса кайни пуринҫен ытла халӑх ҫӗр касӑлассине ӗмӗтленнине пӗлтерет, ун ҫинҫен малалла уйрӑм калӑпӑр.

## 3. Ҫӑваш ҫӗршывӗнҫе промышлӗнӑҫ пӗрҫисем шӑтса тухни.

Крепӑҫлӑ пусмӑр сирпӗнсен Раҫҫейре интустри ҫасах аслӑланса хӑватлӑланса кайаӗ. Интустри аслӑланнӑҫем йурлӑ ҫӑваш ҫӗршывне те хӑй хыҫҫӑн сӗтӗрет. Пирӗн ҫӗрте ҫӗр пурлӑхӗ

сахал, çавăнпа ҫăнтан промышлĕнăç ҫăмăртанса ураланса çитеймест. Унтан ҫăваш çĕршывĕ çиве кăпитал авалхи йăлапа колоҫи çине пăхнă пек пăхма тăрăшат: вăл унта хапрăк-савăт тума тăрăшмаст, пур йапалана та унтан ҫĕрĕ халлĕн хăвалама тăрăшат. Çапах та ҫăваш çĕрĕнҫе те промышлĕнăçăн уйрăм пĕрҫисем те пулин шăтса тухаççĕ. Ҫасах тĕрлĕ тĕлте йăвăç çуракан, çу çаптаракан савăтсем, пăспа авăракан армансем, тир, супăҫ, ерех савăҫĕсем пулса тăраççĕ. Ҫăваш çĕршывне те хапрăк-савăт тĕлĕшĕн шăрши сарăлат—çав шăршă кăшт çеç сисĕнет, çапах вăл пур. Çав вăхăтрах ҫăваш çĕрĕнҫе ăсталăх, алăстилĕх хăвăртах хăватлăланса кайат: 80-мĕш çулсенҫех ҫăваш çĕрĕнҫе ҫăпта çапас ĕç питĕ аслăланса кайат: унпа ҫăвашсем вулăсĕ-вулăсĕпе кĕрмешсе пурăнма тытăнаççĕ, çав вăхăтрах вĕсем копператтив йевĕрлĕ ушкăна ҫăмăртанма тытăнаççĕ. Унтан ҫăвашсем хăйсемех каскалама, çĕвĕ çĕлеме, атă çĕлеме, савăт-сапа, сĕтел-тенкел тума, тĕрлĕ спруй таврашне, çуна-урапа таврашне, çĕр ĕçĕнҫе кирлĕ хатĕрсене тума хăнăхаççĕ. Нумайах та мар малтан ҫăвашсен хушшинҫе пĕр ҫăваш çĕвĕçĕ, атăçă, тимĕрçĕ пулман—çав ĕçсем пур те хула ремеслаçисен, хула мешҫенĕсен алливҫе пулнă. Пыра киле нумай тĕлте ҫăвашсен хушшинҫе ҫăнтан ăстасем: сĕтелçĕсем, пăхăрçăсем, кĕмĕлçĕсем, слессăрсем ыттисем те палăраççĕ, ҫăвашсен хушшинҫе йалсенҫех купăссем, кĕслесем, ройаљсем, пианинăсем питĕ ăста тăвакансем, фотокрафсем, тĕрлĕ йалхуçалăх машшинисене тăвакансем те тĕл пулкалама тытăнаççĕ. Çакă пур ҫăваш хура халăхĕ, ҫăваш хресҫен халăхĕ çĕр çумĕнҫен хăпма тытăннипе, çĕр ĕçĕ çине çеç тирĕнсе пурăнас йăларан писме тапратнине пĕлтерет.

Промышлĕнăç ҫăваш çĕрĕнҫе çукпа пĕрех, вăл çĕртен тин пуçне кăларакан курăк пек имшерке, çапах та пурăнăçра унăн шăрши кашни утăмра сисĕнет.

Унăн шăршине тата йутран килекен промышлĕнăç шăрши хăватлăлантарса касса палăртса тăрат. Хусан, Ҫĕмпĕр, Самар таврашĕнҫе, ытти те нумай тĕлсенҫе акăш-макăш хапрăксемпе савăтсем пулса тăраççĕ, тавраpи хуласем аслăланса, хăватлăланса кайаççĕ—ҫăвашсем унта ĕçе çӳреме тытăнаççĕ. Пĕр йутри ĕçе ĕçлесе пурăнма хăнăхнă ҫăвашсем ҫасах пĕтĕм Атăл тăрăх ĕçлесе çӳреме хăнăхаççĕ, унтан пĕтĕм Раççей тăрăх: Питĕрпе Мускавран тытăнса Украина, Капкас, Турккестан, Çĕпĕр вĕçне

çитиђђен хура ĕç ĕçлесе çӳреме тытăнаççĕ. Çапла хура пӳртĕнђен аран йăраланса тухнă, хĕвел çине куçне уçайман ђăваш 20—30 çул хушшинђех тĕнђене касса çӳремелĕх çителĕклĕ çивђĕленет.

## 4. Ђăваш халăхĕ йепле уйрăм классемпе сийсене уйрăлса пыни.

Çапла пурăнăç улăшăннăçем ĕлĕк пĕр тикĕс ђăмăртанса пурăннă ђăваш халăхĕ уйрăм тĕрлĕ классемпе сийсене пайракаланса уйăрăлса пырать. Çапла ђăваш халăхĕ сийленсе пыни—пирĕн ђи пысăк, ђи малтанах та, пуринђен те малтан сăнама тивĕçлĕ ĕç. Çакна пула çеç ђăвашсен хушшинђе те класлă кĕрешӳ палăрать, ђăваш ĕç халăхĕн класлă тăн çивђĕленет. Çав пулмасан ђăвашсем револютси çумне те сыпçăнаймĕђђĕç, револютси ăшне кĕрсе пĕртте те кĕрешеймĕђђĕç, çавăнпа ун çинђен тĕплĕрех калама кирлĕ.

Ђăваш халăхĕн тĕп сийĕ хресђен. Нумайĕшĕ ђăвашсем çĕр ĕçĕпе çеç пурăнакан халăх та теççĕ. Анђах çак тĕрĕсех мар. Револютсиђђен 7—8 çул малтан 1897-мĕш çулта пĕтĕм Раççейри халăха çырса тухнă, çав çыру кăтартнă тăрăх çав вăхăтра ђăвашсен хушшинђе 100 çынран 93 çын çĕр ĕçĕпе йалта пурăннă, 7 çын йут ĕçре, слушпăра, тĕрлĕ вырăнта тăрса, тĕрлĕ ăсталăх ĕçĕпе кĕрмешсе пурăннă. Çапла çак вăхăтра вунтăватă ђăвашран вунвиççĕшĕ йалта çĕр ђаваласа, çĕртен ырă курса тăранса пурăннă, пĕри урăх ĕçпе пурăннă. Анђах çак та пĕтĕмпех тĕрĕс мар, мĕншĕн тесен, çакна çырнă ђухне нумайĕшĕ çĕртен хăпса айакка кайнă ђăвашсем йалхуçалăхĕпе пурăнакансен вырăнне çырăннă, унтан нумайĕшĕ пĕр вăхăтрах тырă акса та, унтан вăхăтлăха йута кайса ĕçлесе çӳрекенсем йе килтех пулнă вăхăтра урăх ĕçпе, кĕрмешсе пурăнакансем пур те ç р ĕçлесе пурăнакан хресђен вырăнĕнђе хисепленнĕ; йулашкинђен тата йутра ĕçре çӳрекен ђăвашсем авалхи йăлапа çырнă ђух хăйсен ђăвашлăхне кăтартман, хăйсене вырăс тесе çыртарттарнă. Йепле пулсан та епир куратпăр: револютси умĕн ђăваш халăхĕ пĕр тăтăш, пĕр ĕçпе çеç кĕрмешсе пурăнакан халăх мар, вăл икĕ сийе уйăрăлса тăракан халăх: пĕр сийĕ çĕр ђаваласа тăранса пурăнать, тепри урăх ĕçпе пурăнать. Анђах çак сийсем хăйсем те тата темиçе уйрăм сийсене уйăрăлса тăраççĕ.

Илер малтан йалта çĕр ĕçлесе пурӑнакан хресҫен халӑхне. Вӑл айакран пӑхсан çеç пĕр тӑтӑш, тикĕс, пĕр пек халӑх пек туйӑнаҭ. Тĕплĕрех пӑхсан революци умĕн ҫӑваш хресҫенĕ виçĕ пайа питĕ витĕр паллӑ уйӑрӑлса тӑраҭ: çав сийсем—пуйансем, вӑтам хресҫенсем, ҫухӑн хресҫенсем.

Илер малтан пуйансене. Мĕн ҫухлĕ йышлӑ пулнӑ вĕсем, мĕн ҫухлĕ вĕсем ытти хресҫенсенҫен уйрӑм пулнӑ. Ҫи малтан пуйан тесе кама калатпӑр епир? Çапла епир нумай выҫӑх-ҫĕрлĕх усраса нумай тырӑ тӑвакана, çав тырра тарçӑсене ĕçлеттерсе йе ытти хресҫенсене тара парса ĕçлеттерсе тӑвакан çынна калатпӑр. Çавӑн пек çынсем ҫӑваш йалĕнҫе революци умĕн çĕр киле 4—5 килĕ пулнӑ: кашни çавӑн пек пуйанӑн хаҫхи Ҫӑваш оплӑçĕнҫе 2—3 лаша йе ытларах пулнӑ, вӑл 10 теçеттин йе ытларах акнӑ. Анатри ҫӑвашсен хушшинҫе икĕ лашаллӑ, 10 теçеттина тырӑ акакан хресҫен вӑтам хресҫен вырӑнĕнҫе çеç хисепленнĕ, унта пуйан шутĕнҫе тӑракан çыннӑн 4—5 лашаран кайа пулман, тырӑ акма та вӑл 20 теçеттинран кайа акман. Йепле пулсан та ҫӑвашсен хушшинҫе пур тĕлте те вӑтамлӑхран ҫухласа каласан çирĕм килĕрен пĕри пуйан шутĕнҫе тӑнӑ. Çав пуйансем мĕн ҫухлĕ хӑватлӑ, ытти халӑхран мĕн ҫухлĕ уйрӑм пулнӑ? Çав пуйансем нумайĕшĕ авалхи çĕрми пуйансем пулнӑ, вĕсен хушшинҫе йулашки саманара сутилӳпе йе ытти урӑх мелпе мул туйаннӑ пуйансем те пулнӑ, вĕсене çĕнĕ пуйансем тенĕ. Кирек мĕнле пуйансем те, ытларах та тĕксĕм ҫӑваш пуйанĕсем мула пытарса усранӑ—пуйан мулне никам та шутламан. Çапах та пуйан кĕтĕвĕ-кĕтĕвĕпе усракан выҫӑх-ҫĕрлĕхе, унӑн тырри-пуллине, килçуртне ҫухласа хакласа илсен, вӑл çуллен илекен тупӑша хисеплесен—калас пулаҭ: наҫар ҫӑваш пуйаннин те пурлӑхĕ 20 пин тенкĕрен кайа пулман. Тĕлĕ-тĕлĕпе çав пуйансем питĕ хӑватлӑ пулнӑ: вĕсен çĕршер теçеттина ытла çĕрсем пулнӑ, вĕсен уйрӑм кутӑрсем, пĕҫĕкçĕименисем пулнӑ, вĕсем 15—20 шер ĕçлекен лаша кӑна усранӑ, вĕсем кĕçĕн улпутсемпе кĕçĕн çĕр хуçисен йевĕрлех пулнӑ. Пуйансен сийĕ çӳхе пулсан та вӑл пĕтĕм хресҫене хӑй аллинҫе тытса тӑраҫҫĕ: пуйана пур те парӑмлӑ, пур те йалта ун куçĕнҫен çеç пӑхса тӑраççĕ, ун çине пур те тара ĕçлесе пурӑнаççĕ. Пĕтĕм йал пуйансен аллинҫе, вĕсен мулĕ йала ерешмен карти пек карталанӑ,

çавăнпа пухусенҫе, урăх йенĕпе халăх ĕçне тунă ҫух пур ĕçе те пуйансем тăваççĕ.

Малалла илер çуксене. Кашни йалта лăк тулли ҫухăн хресҫен. Кам вăл ҫухăн хресҫен? Ҫи малтан вăл лашасăр, ытти выҙăх-ҫĕрлĕхсĕр, тырă-пулă хăйне çимелĕх те тăвайман хресҫен. Статистиккă кăтартнипе ревоҙутси умĕн ҫăвашсен хушшинҫе лашасăр хресҫенсем вăтамлăхпа ҫухласан 25 проҫҫăн пулнă, çапла ĕлĕкех пирĕн хушăмăрта тăвата килĕрен пĕри лашасăр тарăхса пурăннă. Лашасăр хресҫен вăл алурасăр çынпа пĕрех, лаша пулмасан çĕр ĕçлесси çинҫен калаçма та çук. Çакăн пек хресҫенсем йĕркеллĕ килçуртсăр мунҫа пек пӳртсенҫе пурăнаҫҫĕç, анисене вĕсенне пуйансем нумай çула çук хакпа тара илсе й… вăтам лашалă хресҫенсем çурмалла акса пурăнаҫҫĕç. Ҫухăн хресҫен нихăçан та тутă мар, вăл йалан выçă, вăл çăкăрпа çĕрулми ирĕккĕн пулсан хăйне телейлĕ вырăнне хурать, ун çинҫе тумтир вырăнне çĕтĕкçурăк, ун аллинҫе шăрпăк илмелĕх те нихăçан та пĕр пус укçа çук, унăн мĕн пур пурлăхне сутсан та вăл вилсен хăйне тирпейлесе ҫикме çеç çитет. Çак халпа ревоҙутси умĕн хресҫенрен ҫĕрĕкĕ ытлашшипех пурăнать. Çав ҫухăнсен хушшинҫе хăшĕ пĕр пĕрҫĕ тырă та акмаççĕ, нумайĕшĕ йалта килçуртсăрах пурăнаççĕ, вĕсем тарçăра тăрса, хурал тăрса, кĕтӳсем кĕтсе тăранса пурăнаççĕ, статистиккă кăтартнипе çавăн пек çĕрсĕр хресҫен ҫăваш халăхĕ хушшинҫе виçĕ проҫҫăн пулнă.

Çуксемпе пуйансен хушшинҫе вăтам хресҫен пурăнать, çак сий ҫи йышлă сий, вăл йал халăхĕ хушшинҫе 70 проҫҫăнран ытла, çак сий ҫăваш халăхĕн тĕп сийĕ, никĕсĕ. Кам вăл вăтам ҫăваш хресҫенĕ? Вăл пĕр лашаллă, анатрисен хушшинҫе сайра пĕрре икĕ лашаллă хресҫен, вăл хăй анисене хăй çеç акать, хăш ҫухне вăл ҫухăнсен анине çурмалла ĕçлет, сайра пĕрре вăл пĕр теçеттина йахăн тара илсе те акать.

Вăтам хресҫен çĕршер пăт тырă тăвать, анҫах унăн та нихăçан та çитмест, тĕмĕнле хĕсĕнсе пурăнсан та вăл йалан парăмлă: вăл наҫар килçуртра пурăнать, типĕ çăкăр-тăварпа пурăнать, апăш таврашне вăл уйăхра çын пуçне пĕр кĕрепенкерен ытла çимест, ун урине сăран атă кĕмест, ун çине пасарта туйаннă çитсă, сукна таврăш çакланмасть. Ăçта хурать вăл хăй тунă тырă-пулла, выҙăх-ҫĕрлĕхе? Ăна пурне те вăл сутать. Çапла сутса туйаннă

укҫапа вӑл куланай тӳлет: революци умӗн ҫав куланай чӑвашсен хушшинче нумай тӗлте йата 5—7 тенке ҫитиччен тиветчӗ, тырӑ ун чухне 30—40 пус пӑтӗ пулнӑ, ҫапла куланай хресченрен пӗр йатран 20 пӑта йахӑн тырӑ хыраччӗ. Унтан кил таврашӗнче тата та нумай тӑкак таврашӗ—ӑна пурне те саппамалла. Ҫакна пула вӑтам хресчен пур асапланса тунӑ тыррине кӗркуннех сутса пӗтереччӗ, ҫуркунне пуйансенчен тырӑ кивҫен парӑма кӗрсе илсе асапланса ҫӗнӗ тырӑччен пурӑначчӗ. Чӑваш вӑтам хресченӗ ҫинче ӗмӗр пӗтми парӑм: куланай нетоимккисене, ҫемствӑ хырҫисене, выҫлӑх ҫулсенче йе нехекрен телейсӗр пулнӑ вӑхӑтсенче: ӗне-лаша ӳксе вилсен, ҫурт ҫунса кайсан, унтан ывӑл-хӗре авлантарнӑ ҫулсенче кӗнӗ парӑмсене вӑл нихӑҫан та тӳлесе пӗтерейместь. Парӑмсӑр вӑтам хресчен чӑваш хушшинче питӗ сайра пулнӑ, ун пек ҫынна вӑл пӗр-ик лашапа хӑй ҫӗрне ҫеҫ акса пурӑнсан та ӑна халӑх пуйан вырӑнне картнӑ.

Ҫак виҫӗ сий кӑпиталисӑм саманине пула пӗр пӗринчен уйӑрӑлнӑҫем уйӑрӑлса пыраҫ. Пурӑнӑҫ тытки, унӑн хуҫи укҫа, ҫак ҫӗнӗ хуҫа чӑваш халӑхне кантӑра тыллана пек тыллаҫ, тӗвет, сӳсе силленӗ пек силлесе уйрӑм пайӑркасене уйӑраҫ. Йал пуйанӗсем ҫӗре хуласенче, чулхула йармӑнкине кайса илнӗ машшинӑсемпе, хӑш чухне тӳрех Америккӑран ҫыру урлӑ укҫа йарса туйаннӑ машшинӑсемпе ӗҫлеҫҫӗ, ҫӗре вӗсем хӑвӑртӑн аккаласа пӑрахаҫҫӗ, анана икшер-виҫшер хут сухалаҫҫӗ, йышлӑ вычӑх-чӗрлӗхрен пулнӑ тирӗспе ҫирӗплеҫҫӗ, ҫавӑнпа пуйансен тырри те кирек хӑҫан та лайӑхрах пулаҫ. Йал тырӑ пуссин ҫуррине ытла пуйансем акаҫҫӗ, ҫын анисене вӗсем вуникшер ҫула тара илсе акса пурӑнаҫҫӗ. Ҫав вӑхӑтрах чухӑн хресченсемпе вӑтам хресченсем вӑйсӑрланнӑҫем вӑйсӑрланса, парӑмланнӑҫем парӑмланса пыраҫҫӗ. Ҫукпа пуйан тӗп авал та пулнӑ, анчах унчух вӗсен уйрӑмӗ ытла паллӑ пулман вӑл вӑхӑтра тырӑпулӑпа ытла нумай мул, укҫа пухма май пулман. Кӑпиталисӑма пула ҫеҫ чӑваш хресченӗ хушшинче пӗрисем пурлӑхпа тийенсе хӑмпӑ пек хӑпараҫҫӗ, теприсем ерешмен картине лекнӗ шӑна пек нӑйӑлтатса тапаланса пурӑнаҫҫӗ, унтан нумайӗшӗ ерешмен картинче пӑнчӑхнӑ шӑна пек пӗр чӗнеймесӗр хӑйсен йунне мула ерешмене ӗмтерсе пурӑнаҫҫӗ.

Унтан ҫак саманара чӑвашсен хушшинче чӑваш пуршуаҫи ҫуралса упаленсе те пулин ӳсме тӑрӑшаҫ. Чи малтан чӑвашсен

хушшинҫе вак пуршуаҫи ҫителĕклĕ йышлăланаҫ: кашни йалта лавкаҫăсем, сутилӳҫĕсем пур, мула кивҫен парса услам илсе пурăнакансем пур. Ҫак сий пĕтĕмпех хула мулĕпе сыхăнса тăраҫ: вăл хăй ҫĕр ĕҫĕпе кĕрмешме йуратмаҫ, вăл авалхи йал пуйанĕсем ҫине те хăррăн пăхаҫ, вĕсене тĕттĕм пуйансем тет, ҫак сий пурăнма та хула сыннисем пек пурăнма тăрăшаҫ: хула тумĕ тумланаҫ, хĕрарăмсене те майралла ҫӳретме тăрăшаҫ, аҫисене аслăрах шкулсенҫе вĕрентме тăрăшаҫ. Ҫак сийе пула, ҫак вак йал пуршуаҫине пула ҫăваш йалне пĕтĕмпех урăх сăн ҫапаҫ: йалсенҫе вырăс тумĕ, тĕрĕсрех каласан хула тумĕ курăна пуҫлаҫ, йалсенҫе кармуҥ, крамохвон сассисем илтĕнеҫҫĕ, пĕр пĕринпе ҫăвашсемех вырăсла калаҫни илтĕнет. Ҫак сий ҫумĕнҫе тата интеликентси, ҫăваш интеликентсийĕ тăни палăраҫ: кашни йалта ҫăваш вĕрентекенсем, пупсем, хуласенҫе аслăрах шкулсенҫе вĕренекенсем йышлăланса пыраҫҫĕ. Ҫакна пула ҫăваш йалĕ 30—40 ҫул хушшинҫе палламалла мар урăхланса кайаҫ.

Унтан ҫак вак ҫăваш пуршуаҫирен ҫăнтан хăватлă пуршуаҫин уйрăм тымарĕсем шăтса тухаҫҫĕ. Ҫăваш тавринҫи хуласенҫе ҫăнтан ҫăн ҫăваш кăпиталисҫĕсем курăна пуҫлаҫҫĕ, хăшĕ вĕсенҫен Шупашкарти Йехремов пеккисем алăра мĕҫйун ытла тенкĕлĕх кăпитал тытса тăраҫҫĕ. Унтан йалсен хушшинҫех сутилӳпе хăшĕ ҫăвашсем хисепсĕр пуйса кайаҫҫĕ: ҫăмартапа, хăмлапа, тырăпа, ҫăптапа, вăрманпа кĕрешекен хуҫасем: Ҫеливан таврашсем, Осиповсем, Пайталовсем хула пуйанĕсенҫен пĕртех кайа йулмаҫҫĕ: вырăсла пĕлмен, ҫăвашлах тумланакан Ҫеливан пуйан Лонтонра ҫăмарта кантурĕ тытса тăраҫ, пĕтĕм ҫăваш тавринҫи хуласенҫе, пристăҥсенҫе, стантсăсенҫе ҫăваш хуҫисем ҫăмарта склаҫĕсем тытса тăма тытăнаҫҫĕ, ҫав склатсенҫе ҫăвашсемех тара кĕрĕшсе ĕҫлесе пурăнаҫҫĕ. Ҫак ҫăваш хуҫисем хăйсем сăнаса йышăннă ĕҫ тĕлĕшĕпе пĕтĕм ҫăваш халăхне сырса хăйсен аллине илме тăраҫҫĕ: ҫăмарта, хăмла, хур-кăвакал, ҫăх-ҫĕпĕ, ашпăш, ҫăпта тавраш вĕсен алли урлă ҫеҫ сутăнма тытăнаҫ: ҫак ĕҫе тума кашни йалта хуҫасен уйрăм акентсем вак сутилӳҫĕсем пур, вĕсем ҫав хуҫасен кăпиталĕпе ĕҫлесе пурăнаҫҫĕ. Хуҫасем хăйсем те ĕҫе аслăлатнăҫем ытти Раҫҫей кăпиталĕпе, тĕнҫе кăпиталĕпе те ҫыхăннăҫем сыхăнаҫҫĕ: революҫутси умĕн ҫăваш хуҫисем нумайĕшĕ акăлҫансен, нимĕҫсен хрантсуссен кăпиталҫĕсене тавар леҫсе пурăнма тытăнаҫҫĕ,

ыгларах та йут патшалăх мулĕпе çăмартапа, хăмлапа, хуркăвакалпа, клопкăпа сут тăвакан ђăваш хуçисем çыхăнса тăраççĕ.

Çапла 1905-мĕш çул умĕн ђăваш халăхĕ те кăпиталисăм хуранне ђăма пуçлани витĕр курăнса тăраť. Ђăваш халăхĕ кăпиталисăм урапине кўлĕнмен пулсан уйрăм классене пайракалайман пулĕђђĕ, çавăнпа ун хушшинђе револютсилĕ кĕрешў пулма пултарайман пулĕђђĕ, апла пулсан ђăваш халăхĕ 1905-мĕш çулта револютси çумне те çыпçăнайман пулĕђђĕ. Унтан ђăваш йăхĕ кăпиталисăм тыллинђе тылланман пулсан унăн натсилĕ ирĕклĕхшĕн, натсилĕ пусмăра сирессишĕн кĕрешесси пулма пултараймĕђђĕ. Мĕншĕн-ши? Мĕншĕн тесен пур тĕнђери халăхсен те историре натсилĕ хуçалăх, йатсилĕ патшалăх, натсилĕ куђтурă тăвас тесе тăрăшни кăпиталисăм урапи çине ларсан çеç палăрнă, çавăнпа ăслăлăх тĕрĕсрен натси йађĕпе кăпиталисăм хуранĕнђе пиçсе тухнă халăхсене çеç ђĕнет, ыттисене вăл йăхсем племĕсем, наротнăçсем тесе çеç ђĕнет. Нумайĕшĕ халĕ те ђăвашсене натси тесе ђĕнме ђаранса тăраççĕ, вĕсене ытларах вырăс сăмахĕпе наротнăç теççĕ. Ђанахах та епир натси пулса çитĕнеймен, çапах та пире те натси шăрши кĕнĕ, вăл пур малта каланинђен те курăнаť, ытларах та тата вăл малалла револютсилĕ кĕрешў çинђен каланă ђух курăнĕ. Çапла кăпиталисăм силленине пула ђăваш халăхĕ пĕр йенђен тĕрлĕ классемпе сийсене уйăрăлса класлă тăн туйанаť, тепĕр йенђен ĕмĕрхи ыйхăран вăранса натсилĕ тăн туйанаť. Çакна пула ђăваш халăхĕ пĕр йенђен класлă пусмăрпа, тепĕр йенђен натсилĕ пусмăрпа тытăнса кĕрешме хатĕр те, çителĕклĕ хастарлă та пулаť.

## 5. Ђăвашсен хушшинђе мĕнле револютсилĕ сулăнăçсемпе йухăмсем палăрни.

Ђăваш халăхĕ мĕнле классемпе сийсене уйăрăлаť, çавăн пекех ун хушшинђе ĕлĕкренех тĕрлĕ политтикă сулăнăçĕсемпе йухăмĕсем палăраççĕ. Çав кашни сулăнăçпа йухăм мĕнле те пулин уйрăм сий сунавне—ĕмĕтне пĕлтерсе тăраť. Малтах каларăмăр—ђăваш йăхĕн никĕсĕ хресђен, йал халăхĕ, çавăнпа çав сулăнăçсем ђи малтан хресђен хушшинђе палăрмалла пек туйăнаť. Унтан çапла пуласси тата пур малтаб асăннă ытти сийсен тымарĕсем те хресђен тăпри çинђе çеç шăтса тухнинђен, хресђенрен çеç уйăрăлса пулнинђен килет. Анђах хресђен пурăнăçĕ кĕрхи каç пек тĕттĕм, унăн кăмăлĕ

тĕксĕм, унăн шухăшĕ сирĕлми тĕтрепе хупланса тăрат̆. Хресҫен хăй те сисмест—ун кăкăрĕнҫе револ̧утси кăварĕ тахçантанпа хĕмленсе çулăмланма тытăнат̆—вăл çĕре улпутсенҫен илĕпĕрех, пысăк патшалăх йĕркинҫен хăтăлăпăрах тет. Çакна хресҫен пĕр иккĕленмесĕр ĕмĕтленет, анҫах çав вăхăтрах çак ĕçе йепле тумаллине вăл ҫухласа çавăрса илеймест. Анҫах хресҫене револ̧утси аслатисем авăтиҫҫенех тĕрлĕ халапсемпе ултавлă шухăшсем аташтарса тăраççĕ: çапла вăл пĕр йенҫен çĕр улпутсенҫен илес, улпутсене сирпĕтес, патшасен патшалăх йĕркине пĕтерес тет, тепĕр йенҫен пупсем вĕрентнине итлесе вăл патшашăн ҫунне пама хатĕр тăрат̆. Çаплах ҫăваш хресҫенĕ çеç мар, пĕтĕм Раççейри хресҫен пулнă. Çавăнпа револ̧утсилĕ сулăнăçсемпе йухăмсене витĕртерех курас тесен пирĕн ҫăваш интеликентсине пур йенҫен те çавăрса ҫипер пăхас пулат̆. Интеликентси вăл уйрăм клас мар вăл пур сийсемпе те çыхăнса тăрат̆, ун хушшинҫе пур классемпе сийсен мĕлкисем те курăнаççĕ. Интеликентси ĕлĕк ытти сийсенҫен çивҫĕрех тăнлă пулнă, унтан пурăнăçа çĕнетес тĕлĕшĕпе вăл ĕлĕк пуринҫен ытла хĕрӳлĕ кĕрешнĕ, çавăнпа вăл ҫăйĕн револ̧утси майлă йе ăна хирĕç пыракан йухăмсене уйрăм витĕр кăтартса тăнă. Çавăнпа кунта ҫăваш интеликентсийĕ çинҫен уйрăм пĕр ик сăмах каласан та йурат̆.

Çуралса аталанас ҫăваш интеликентсийĕн паллисем крепăçлă саманарах палăраççĕ: хыснапа утиле хресҫенсене алăра тытса тăма нумай тĕрлĕ тӳресен вырăнĕнҫе тăракан етемсем кирлĕ пулат̆, çав ҫинавниксене хыснапа утил вак халăхсенҫен те хатĕрлеме тытăнаççĕ. Крепăçлă самана пĕтес уммĕн ҫăвашсен хушшинҫе кашни вулăсра тенĕ пек шкул пулат̆, çав шкулсенҫе лайăхрах вĕренекен аҫасене хыснапа утил ирĕксĕрлесе хулана илсе кайса аслăрах шкулсенҫе вĕрентеççĕ. Çапла сайра пĕрре тĕрлĕ тĕлте ҫăваш вĕреннĕ çыннисем, ҫăваш ҫинавникĕсем курăна пуçлаççĕ. 1850-мĕш çулсен пуçламăшĕнҫех çапла крепăçлă ҫураран ҫинавнике тухнă С. Михайлăв ҫăвашсем çинҫен нумай пиҫетленĕ çырусем те çырса хăварат̆. Кайарахпа Ҫĕмпĕрте утил шкулĕнҫе Иван Йаккăлҫă çемлемера вĕренсе тухат̆, унпа пĕрле тата тăхăр ҫăваш аҫи вĕренет (çавсенҫен пĕри Акимăв Ҫĕмпĕрте халĕ те пурăнат̆ *). Çапла ҫăваш интеликентсине пуçласа йаракан çынсем

*) С. Акимов, 1924 çулăн раштав 23-мĕшĕнҫе вилҫĕ. Корректăр.

хӑшӗ халӗ те пурӑнаҫҫӗ—вӑл ҫӑваш интеликентсийӗн ӗмӗрӗ те пӗр етемӗн вӑрӑмрах ӗмӗрӗнҫен вӑрӑм маррине пӗлтерет. Интеликентси ҫӑнтан ҫӑмӑртанма 70-мӗш ҫулсенҫе ӗҫлет: малтан интеликентсийе ҫӗпӗлентерсе кӑларакан тӗп йӑва Ҫӗмпӗр шкулӗ пулаӗ, кайарахпа ҫӑвашсем пӗр вӗренме хӑнӑхсан пур тӗле те ҫикӗнсе те пулин кӗреҫҫӗ: пур таврари шкулсенҫе—вӗрентекенсемпе пупсене хатӗрлекен ҫеминарисенҫе, хула шкулӗсенҫе кимнаҫисемпе реаллӑ шкулсенҫе, тӗрлӗ спетсиаллӑ шкулсенҫе пур тӗлте те ҫӑвашсем вӗренеҫҫӗ. Вӗренес тӗлӗшӗпе ҫӑвашсем пур ытти вак халӑхсенҫен хастарлӑрах пулаҫҫӗ, ҫакна кивӗ йӗрке йенне туртакан вырӑс ҫинавникӗсем питӗ йуратмаҫҫӗ: интеликентсийӗ ҫуралса аталансан вӑл натсилӗ пусмӑрпа кӗрешмесӗр пултараймассине вӗсем таса пӗлсе тӑраҫҫӗ. Ҫавӑнпа ҫӑвашсене нумай шкулсене илми пулаҫҫӗ, вӗсем ҫинҫен хӑш хаҫатсемпе шурналсем ҫинҫе вӗсем йеврейсем йевӗрлех тесе елеклесе ҫыраҫҫӗ. Йепле пулсан та ҫапах ҫӑваш интеликентсийӗ йеррипен аталанса пыраӗ: револҫутси умӗн пӗр Ҫӗмпӗр шкулӗнҫен ҫеҫ мӗнпурӗ пин ҫынна йахӑн вӗренсе тухаӗ. Ытти шкулсенҫе вӗренсе тухнӑ ҫӑвашсен хисепне ҫухлама майӗ ҫук, анҫах ҫав хисеп Ҫӗмпӗр шкулӗнҫе вӗренкӗ ҫынсен шутӗнҫен нумай ытларах: XIX-мӗш ӗмӗрӗн вӗҫӗнҫе пӗтӗм хресҫен аҫасене уйесри шкулсенҫе те пулин, икӗ класслӑ шкулсенҫе те пулин вӗрентме тӑрӑшнӑ, унтан ҫитӗне пуҫланӑ ҫӑваш вак пуршуаҫийӗпе ҫӑваш интеликентсийӗ аҫисене ҫеминарисемпе кимнаҫисенҫе вӗрентме тӑрӑшнӑ. Револҫутси умӗн ҫӑваш интеликентсийӗ йышлӑланса, ҫӑмӑртанса ҫитет. Вӑл вырӑс интеликентсипе танлаштарсан нимӗн те мар пек имшерке пулаӗ: вӑл питӗ ҫӳхе сийӗ, вӑл наҫар вӗреннӗ, анҫах ҫапах та вӑл интеликентси йатне тӗрӗсрен йышӑнма пултараӗ. 90-мӗш ӗмӗрсенҫен пуҫласа ҫӑвашсем аслӑ шкулсене кӗме тапӑнаҫҫӗ: малтан вӗсем ерхерейсене хатӗрлекен аккатемисенҫе вӗренеҫҫӗ, унтан уйрӑм хастарлӑ ҫӑвашсем хӑйсем тӑрӑшнипе университетсене кӗме тытӑнаҫҫӗ: малтан Н. М. Охотникӑв хӑй тарӑхса тӑрӑшса ексамӗн тытса университета 90-мӗш ҫулсен пуҫламӑшӗнҫех кӗрет те анҫах сывлӑхне ҫухатса ҫасах вилсе кайаӗ, кайарах университета вӗренме хресҫен аҫисем А. Е. Ехремов, Алҫун Кевӗрли, Т. Н. Николаев ыттисем те кӗреҫҫӗ. Револҫутси умӗн ҫӑвашран С. А. Акимӑв Париша кайса та аслӑ шкулра вӗренсе тухаӗ. Ҫапла ҫӑваш интеликентсийӗ

вумай пин çына çитиђђен йышлăланаť, ун хушшинђе ђăнтанах вĕренсе çитĕннĕ çынсем те палăраççĕ, çавăнпа ăна ђăвахах та интеликентси сăнĕ кĕрет.

Ун хушшинђе ревођутсиђђен мĕнле йухăмсемпе мĕнле сулăнăçсем палăраççĕ-ши? Епир пĕлетпĕр—70-мĕш çулсенђен пуçласа вырăс интеликентсийĕ патшасемпе калама çук хĕрӳлĕ кĕрешет. Анђах çак саманара ђăваш интеликентсийĕ çав кĕрешӳ çумне сыпçăнаймасť. Мĕншĕн? Мĕншĕн тесен, вăл имшерке, тин çуралнă, ура çине тăрайман, унтан халăх класлă сийсене уйăрăлса çитеймен, çавăнпа ăна хыçалтан тĕртсе пыракан ревођутси йенне сулăнакан сий çук. Ђăваш интеликентсине пĕр вăтăр çул тăрăшшĕпе Иван Йаккăлђă хăй хыççăн çавăтса пыраť. Унăн прокрамми çапла пулаť: ђăваш халăхĕн çăлăнăçĕ ђи малтан вĕренессинђен килет, çапла вĕренсен çеç ђăвашсем вырăс куђтурне йышăнма пултараççĕ, вырăс халăхĕ çумне сыпçăнма пултараççĕ, çапла ун çумне çыпçăнсан çеç вĕсем натсилĕ пусмăртан хăтăлаççĕ; патшасемпе унăн тарçисем вак халăхсем çине ăшă куçпа пăхаççĕ, вĕренме вĕсене ђармаççĕ, пулăшаççĕ те, çавăнпа йăваш кăмăлпа лăпкă пурăнса, патшалăх йĕркипе килĕштерсе пурăнса ђăвашсен шухăша унта-кунта выђатмасăр вĕренме çеç тăрăшас пулаť. Анђах патшалăх йĕркипе килĕштерсе пурăнас пулсан ђăваш халăхĕ патшасене килĕшӳлĕ çулпа, ђи малтан вырăс ђиркĕвĕ кăтартакан çулпа утас пулаť. Çапла пурăнăçра çак çул ђăвашсенђен нумайрах вĕрентекенсемпе пупсене хатĕрлессине, ђăвашсен хушшинђе нумайрах шкулсемпе ђиркӳсем тăвассине, çав шкулсемпе ђиркӳсенђе ђăвашла вĕрентме, кĕлтума, ӳкĕтлеме тăрăшассине, çак ĕç вађђи ђăвашла кĕнекесем кăларассине пĕлтерет. Иван Йаккăлђă турра ĕненни, çуки—ăна никам та калаймасť: унпа пĕрле ĕмĕр иртернĕ çынсемех икĕ тĕрлĕ калаççĕ, хăшĕ вăл ђунĕпе ĕненнĕ теççĕ, хăшĕ вăл тĕн тирне ђейеленсе çеç çакса çӳренĕ, хăй вăл ђунĕпе тĕне хирĕç пынă, нимĕне те ĕненмен теççĕ. Йепле пулсан та тĕрĕсрен çакна калас пулаť: Иван Йаккăлђă ђунĕпе ђăвашсене çутта кăларас тесе тарăхнă. Çак йенђен епĕ Иван Йаккăлђăн çак сăмахĕсене асран çухатаймастăп: «60-мĕш ĕмĕрсенђе ђăвашсем пĕтĕмпех тĕттĕм ђурасемђĕ, епĕ кимнаçийе вĕренме кĕнĕђђĕ, пĕр çула Кăнла Кушкине ваката таврăнсан хăнана Ђăваш Киштекне кайрăм, каçхине хĕр вăйине тухрăм, çав вăйăсене курса, йурăсене

итлесе вӗсем илемлине, унтан хурлӑхлине епӗ ҫи малтан сисрӗм; епӗ шухӑшла пуҫларӑм: епир улпутсен аҫисемпе тӗрлӗ ҫӗлхесем пӗлсе крексен, римҫансен куҫтурне тӗплесе пӗлетпӗр, анҫах ҫӑвашсен те куҫтурӑ пур вӗт, мӗскӗн ҫӑваш халӑхӗ те халӑхах вӗт; ҫапла шухӑшланипе манӑн 18 ҫулхи ҫамрӑкӑн кӑмӑл пӗтӗмпех хуҫӑлҫӗ, епӗ тӳсеймесӗр арман ҫумне тӑтӑм та вӑрттӑн ӗсӗклесе йӗрсе илтӗм—ҫавӑн ҫухне ӗмӗре ҫӑваш ӗҫӗпе ҫеҫ кӗрешсе иртерӗп тесе тупа турӑм». Ҫӑнахах та Иван Йаккӑлҫӑ ҫак тупӑна хӑй пурӑнӑҫӗпе тӗрӗслерӗ—ун ҫинҫен тӳрех калас пулаҫ. Иван Йаккӑлҫӑ тунӑ ӗҫсен хушшинҫе нумай йунӑш та, йурӑхсӑр та ӗҫсем пур, анҫах вӗсене те вӑл хӑй шухӑшӗпе, хӑй ҫунӗпе ҫӑвашсене усӑ кӳрес тесе тунӑ. Ҫапла нумай ҫулсем тӑршӗпе вӑл ҫӑвашсене самотершави хыҫҫӑн, миҫҫионерсен хыҫҫӑн йертсе пыраҫ, мӗншӗн тесен, ун шухӑшӗпе вӑл вӑхӑтра ҫӑвашсемшӗн урӑх ҫул ҫук пулаҫ.

Анҫах ҫасах вӑл ӳстернӗ интеликентси ун прокрамминҫен иртсе кайса, ун туртинҫен тухса урӑх ҫулсем шырама тытӑнаҫ. Ҫав интеликентси хушшинҫе тӗрлӗ туртӑмсем курӑна пуҫлаҫҫӗ: ҫав туртӑмсем икӗ тӗслӗ пулаҫҫӗ—пӗрисем revoҫутси йенелле сулӑнаҫҫӗ, теприсем натсилӗ куҫтурӑ тӑвас ӗҫ ҫине ҫеҫ тӗренсе унтан иртеймеҫҫӗ.

Ҫӑнтан револютсионерсем пирӗн XIX-мӗш ӗмӗрӗн вӗҫӗнҫе ҫеҫ палӑраҫҫӗ. Анҫах револютси шӑрши кӗнӗ ҫынсем 70—80-мӗш ҫулсенҫех палӑраҫҫӗ. Вӗсем ҫунӗпе патшасемпе пуҫ хурса кӗрешекен вырӑс интеликентси майлӑ пулаҫҫӗ. Вӗсем Иван Йаккӑлҫӑ тӑвакан ӗҫ ҫине хӑррӑн пӑхаҫҫӗ, ӑна вӗсем вӑл ҫӑваш халӑхне мӑйне ҫиркӳ хӑмӑҫӗ тӑхӑнтарса, ӑна малалла та ҫуралӑха хӑвараҫ теҫҫӗ. Пуринҫен ытла ҫавӑн пек ҫӑвашсем тӗне хирӗҫ пыраҫҫӗ. Иван Йаккӑлҫӑ ун пек ҫынсене хӑй таврашӗнҫе тытма пултараймасҫ, вӗсене вӑл есир турӑсӑр, есир сийенлӗ ҫынсем тесе хӑй патӗнҫен хӑвалаҫ, ҫапла ӗлӗкрен пирӗн ирӗклӗ шухӑшлакан паллӑ вӗрентекенсем П. М. Мироновпа С. А. Акимов Ӗренпур окрукӗнҫе ҫӑвашсенҫен айакра пурӑнӑҫа иртермелле пулаҫ. (Миронов шкулсенҫе вӗренмелли кӗнекесем ниҫетленӗ, вӑл Раҫҫейре паллӑ петакок пулнӑ, анҫах ун валли ҫӑвашсен хушшинҫе вырӑн пулман). Хӑшӗ ҫапла сулӑнаҫлӑ вӗрентекенсем хасгарланса хӑйсен шухӑшӗсене тӗрӗслесшӗн кӗрешсе те пӑхаҫҫӗ, ҫапла 80-мӗш ҫулсен пуҫламӑшӗнҫех Пимӗрсел (Пӑва у.) вӗрентекенӗ Йехим Кевӗрли

Иван Йаккӑлҫа вӗрентекен Паратынски йатлӑ Пӑрӑнтӑк пупӗпе тавлашса вырӑнтан тухса ӳкет: ҫав пуп аккатемире вӗренсе тухнӑ пуп пулаҭ, вӑл шурналсенҫе, хаҫатсенҫе йалан ҫыраҭ, вӑл пӗтӗм Пӑва уйесне хӑй аллинҫе тытса тӑраҭ, пуп пуҫӗпе уйесри шкулсен пуҫлӑхӗ пулаҭ, вӑл ҫӑвашсем ҫӑвашла вӗреннине хирӗҫ пыраҭ, ҫавӑншӑн вӑл хӑй вӗрентнӗ Иван Йаккӑлҫа та йалан ӳпкелет; Йехим Кевӗрли пупсем шкул ҫумне те пымалла мар тесе тавлашма тытӑнаҭ, Паратынски шкула пырсан ӑна унта кӳртмест; ҫак хастарлӑ вӗрентекене ҫавӑншӑн вырӑнтан кӑлараҫҫӗ, ӑна ӗмӗр шкулра вӗрентмелле мар туса хураҫҫӗ, вара вӑл ӗмӗрне хресҫен ӗҫӗпе иртерет. Малта асӑннӑ Н. М. Охотников та Иван Йаккӑлҫӑ ӗҫӗ ҫине сиввӗн пӑхаҭ, унпа тавлашаҭ, вӑл револютсиллӗ ӗҫсемпе те лайӑх паллашнӑ пулас, мӗншӗн тесен, вӑл 87—88-мӗш ҫулсенҫе В. И. Ленинпа та паллашнӑ пулнӑ, Ленин ӑна аттестат срелоҫти тенӗ ексамена хатӗрленме пулӑшнӑ. Револютсиллӗ йухӑмсем ҫӑваш интеликентси хушшинҫе XIX-мӗш ӗмӗрӗн вӗҫӗнҫе палӑраҫҫӗ. Раҫҫейре маркҫистсемпе наротниксем хӑватлӑланса вӑй илнӗ вӑхӑтра ҫӑвашсен хушшинҫе те уйрӑм маркҫистсемпе наротниксем палӑраҫҫӗ, Раҫҫейре сотсиалислӑ парттисем ҫӑмӑртанса тӗреклӗленсен ҫӑвашсен хушшинҫе ҫав парттисенҫе тӑракан ҫынсем сиксе тухаҫҫӗ. Ҫак сотсиалиссем ҫӑваш интеликентсийӗн сулахай ҫунаҫӗ пулаҫҫӗ—вӗсем ҫӑваш халӑхӗн малашнехи пӗтӗм ӗмӗтне револютси ҫине ҫеҫ хураҫҫӗ, ҫавӑнпа вӗсем пӗтӗм авалхи пурӑнӑҫа хирӗҫ пыраҫҫӗ, пуринҫен ытла вӗсем патшасен патшалӑх йӗркине вӑйпа сирпӗтесщӗн тарӑхса ӗҫлеме тапратаҫҫӗ. Ҫапла Иван Йаккӑлҫӑ ҫавӑрнӑ йӑваранах йеррипен сотсиалиссем сиксе тухаҫҫӗ. Малта епир ҫӑваш пуршуаҫийӗ аталанса ҫӑмӑртаннине кӑтартсаттӑмӑр апла пулсан ҫӑвашсен пуршуаллӑ интеликентси те пулмалла пулаҭ: ҫӑнахах та ҫав интеликентси те пирӗн палӑраҭ: аслӑ шкулсенҫе вӗренсе тухнӑ ҫӑвашсем, ҫемствӑсенҫе, аслӑ вырӑнсенҫе тӑракан ҫӑвашсем, пуйан ҫемйерен пулнӑ интеликентсем пӗтӗмпех хула пурӑнӑҫӗпе, пӗтӗмпех вырӑс пуршуаҫипе ҫыхӑнса тӑраҫҫӗ, ҫав пуршуаҫийӗн липералисӑм тенӗ йухӑмӗ ҫумне ҫыпҫӑнаҫҫӗ, хӑшӗ пуршуаллӑ парттисенҫе те тӑма тытӑнаҫҫӗ, катетсен парттине те кӗреҫҫӗ. Ҫак ҫӑвашсен хушшинҫе пулнӑ питӗ ҫӳхе сий те ҫӑваш халӑхне хӑйне уйрӑм ҫул ҫине, липераллӑ пуршуаҫи пыракан ҫул ҫине туртса тӑраҭ, револютси пуҫлансан вӑл пӗр вӑхӑта

ђăваш халăхне хăй çавăтса пыма та тапăнса пăхаť — (ђи малтан «Хыпара», унтан ђи пирвайхи политтиккă тěлěшěпе çырнă кěнекесене çак сий кăларма тапратаť); револђутси умěн, револђутси вăхăтěнђе те çак политтиккă туртăмěпе ěçлекенсенђен ытларах палăраççě Н. В. Николђски, О. Г. Романов, В. И. Кривов; çак йухăм урапи çинђех нумай вěрентекенсем, хăшě сайра пěрре пупсем те лараççě, çак сулăнăçпах çемствăра ěçлесе пурăнакан ђăвашсем: И. Т. Лешђов (Пăва у.) А. И. Коренков (Шупашкар у.) ыттисем те ěçлеççě, çак сулăнăçа хуласенђе патшалăх вырăнěсенђе тăракан ђăвашсем те нумайěшě палăртаççě. Çак пуршуаллă темократти йенне туртăнакан йухăм та Иван Йаккăлђă кăтартса панă çула пěтěмпех пăрахаť: вăл хăй шанђăкне патшапа улпутсем çине унтан ђиркў çине хумасť, вăл хăй ěмěтленнě пур ěмěте пуршуаçи çине хурса тăраť, çавăнпа вăл пуршуаçи йе самотершавипе кěрешнě ђухне вăй çитнě таран пулăшу парса тăраť.

Çак сотсиалисăмпа пуршуаллă темократти йенелле туртса тăракан икě çителěклě вăйлă йухăмран пуçне ђăвашсен хушшинђе тěрлě натсионаллă йухăмсем палăраççě. Çак йухăмсем мěн ђăваш интеликентси çуралнăранпах вăйлă пулаççě. Пирěн натсионаллă ыйтусем пирěншěн халиђђенех питě пуçа пăтратакан йапаласен вырăнěнђе тăраççě: нумайěшне вěсене епир халиђђенех тěпě-йěрěпе ăнласа илсе татса йышăнман, халиђђенех епир пирěн тěп ыйту çине, ђăвашла ђěлхе куђтурě тăвасси йе тăвасмарри çине икě тěслě пăхатпăр: пěрисем ђăвашлă ђěлхе куђтурě ђăнтан пулмасан ђăваш халăхě нихăçан та тěнђе куђтурě çумне çыпçăнаймě теççě, теприсем ђăвашсем ђěлхе куђтурне туса та çитереймěç, вěсен литтераттурă тавраш пулса та çитеймěç—вěсем вырăсланса пěтěç, çавăнпа халех тўрех вырăсланма тăрăшмалла мар-ши теççě. Çак тěлěшпе мěн ђăваш интеликентсийě палăрнăранпа ун хушшинђе тěрлě туртăмсем палăраççě. 60-мěш çулсен пуçламăшěнђех ђăвашсемпе ытти вак халăхсене вěрентес тěлěшěпе хытă тавлашу тытăнаť, çав тавлашу вырăс интеликентси хушшинђе пыраť çавăн ђух ђăвашсене ђăвашла вěрентмелле-и йе тўрех вырăсла вěрентмелле-и, ђăвашсен уйрăм алхвавит пулмалла-и йе пулмалла мар-и тесе тавлашаççě. Çак тавлашăва Иван Йаккăлђă та хутшăнаť: малтан вăл çамрăк ђухне ђăвашсене ђăваш шкулě, алхвавиђě кирлě мар, вěсене тўрех вырăсла вěрентмелле тесе хаçатсенђе те

çыраť. Пыра киле 70-мĕш çулсенђе çеç вăл Н. И. Иљминскипе паллашсан, унăн прокраммине ăнласа илсен ђăвашсене шкулра малтанхи çул ђăвашла вĕрентмеллине, çавăнпа çапла вĕрентме ђăвашла кĕнекесем пулмаллине, ђăваш шкулĕсенђе ђăваш вĕрентекенсем пулмаллине йышăнаť. Анђах вăл çамрăкла йышăннă шухăшсем ђăвашсем хушшинђе малалла та пĕтмеççĕ: çав шухăшсене палăртма пуринђен ытла вырăс руссификкатăрĕсем хĕтĕртсе пурăнаççĕ: Иван Йаккăлђă çинђен мĕн унăн ĕмĕрĕ иртиђђенех хаçатсемпе шурналсем çинђе ăна ђăваш кĕнекисем кăларнăшăн, шкулра ђăвашла малтанхи çул вĕрентнĕшĕн тĕртсе çыраççĕ. Хăшĕ ђăвашсем те руссификкатăрсен хыççăн кайса ĕлĕкрен майлашнă ђăваш шкулĕн ĕçне хирĕç çыраççĕ, çапла револ̆утси çывăхарнă саманара вĕрентекен Раман Иванĕ Хусан çемстви кăларакан шурналра ђăваш алхвавитне, ђăваш кĕнекисене мăшкăласа, Иван Йаккăлђă çиçтемине хурласа нумай статйасем çыраť. Анђах çакăн пек çынсем интеликентси хушшинђе сайра пĕрре çеç тĕлпулкалаççĕ—вĕсем те вырăс хура реаксионерсене парăннă çынсем çеç пулаççĕ. Çапах та çапла шухăшлакансем интеликентси хушшинђе уйрăм йухăм вырăнне хисепленме пултараççĕ; çак йухăм ђăвашсене ђăвашлăхран тарăхса тунма, халех ђăваш ђĕлхине пăрахса вырăс ђĕлхине йышăнма, ђăваш тирне сӳсе ывăтса, вырăс тирĕ тăхăнма сунаť. Çак натсионаллă йухăм Иван Йаккăлђăран сылтăмра тăракан йухăм пулаť.

Ђасах Иван Йаккăлђă йăвинђен тепĕр йухăм сиксе тухаť, вăл ђăнахах та натсионаллă йухăм пулаť. 70-мĕш çулсен пуçламăшĕнђен XIX-мĕш ĕмĕрĕн вĕçне çитиђђен Иван Йаккăлђă тавраšĕнђе нумай ђăваш интеликенђĕ шкул ĕçне, кĕнеке кăларас ĕçе малалла йарас тесе питĕ çанна тавăрса ĕçлет. Çапла Тимрес Çеркейĕ, Петĕр Ентрийĕ, Реккей Елекçейĕ, Хĕлимун Танили, Макар Кĕлименђĕ, Ваçили Ваçилийĕ, Йехрем Ваçилийĕ, Микихвĕр Ваçилийĕ, Микихвĕр Хветĕрĕ, Иван Антунĕ, Таниле Хветĕрĕ, Йурка Иванĕ, Пӳркелсем Илйе, Ваçилин Петĕрĕ—ытти те нумайĕшĕ ђăвашла кĕнеке кăларас ĕçе ђуна парса ĕçлеççĕ. Çĕнĕлĕхе çав ĕçпе вĕсем питĕ вĕриленсе кĕрмешсе пурăнаççĕ, вĕсем хăйсем çине апостолсем çине пăхнă пек пăхаççĕ, хăшĕ вĕсенђен ђăнахах та апостолсем йевĕрлĕ ĕçлесшĕн те тапăнса пăхаççĕ: çапла ђĕлхе ăсти Таниле Ананийĕ тийаккăн пуçĕпе ђăваш йалĕсем тăрăх ӳкĕтсем

каласа, ҫӑвашла кӗнекесем салатса пайтах ҫӳрет. Ҫак вӗриленсе ӗҫлекен ҫӑваш вӗрентекенӗсемпе ҫӑваш миҫҫионерӗсен, унтан ҫӑваш ҫыруҫисен хушшинҫе ҫасах ҫӗнӗ сулӑнӑҫ сиксе тухаҭ. Ҫав сулӑнӑҫ ҫӑвашсемшӗн пуквар ҫеҫ ыйтмасҭ—ытти тӗрлӗ кӗнекесем те кӑларма ыйтаҭ, ҫӑвашсене шкулра ҫӑвашла пӗр ҫул ҫеҫ мар—тӑтӑш ҫӑвашла вӗренме ыйтаҭ, 80-мӗш ҫулсенҫех Йурка Иванӗ ҫӑвашла хаҫат кӑларма шухӑш тытаҭ. Иван Йаккӑлҫӑ ҫак ӗҫе пӗтӗмпех хирӗҫ пыраҭ, мӗншӗн тесен, вӑл правиттеҫствӑ панӑ прокраммӑран иртме пултараймасҭ. Йурка хаҫат кӑларас тесе сайавлени парсан—правиттӗҫствӑ Иван Йаккӑлҫӑран ҫӑвашсене хаҫат кирлӗ-и йе ҫук-и? тесе ыйтаҭ. Иван Йаккӑлҫӑ ҫӑвашсене хаҫат тавраш кирлӗ мар, тет. Ҫакӑнтан вара ҫӑваш натсионаллӑ интеликентсийӗн пӗр пайӗ Иван Йаккӑлҫӑран пӗтӗмпех сивӗнет: Охотников, Йурка хӑшӗ ыттисем те Иван Йаккӑлҫӑ вӑл руссихвикаттӑр, вӑл ҫӑваш ӗҫне ҫӑрмантарса ҫарса пурӑнаҭ, вӑл ҫинавник ҫеҫ, вӑл хӑй ӗмӗрӗнҫе ҫӑваш ҫӗлхипе пӗр йӗр ҫырман, вырӑсларан ҫӑвашла пӗр йӗр куҫарман, вӑл ҫын ӗҫӗпе ҫеҫ пурӑнаҭ тесе айӑплама тытӑнаҫҫӗ (ҫӑнахах та вӑл ҫӑвашла куҫарман, ҫырман, анҫах вӑл пур ҫӑвашла кӗнекесене те хӑй ретаксиленӗ). Малалла ҫӑваш натсионалисҫӗсем ҫӑваш историне тӗплесе пӗлме тӑрӑшаҫҫӗ, ҫӑвашсене вӗсем историллӗ халӑх, вӗсем авал скиф, пӑртас йе пӑлхар халӑхӗ пулнӑ тесе тӗрӗслеме тӑрӑшаҫҫӗ, ҫавӑнпа тӗрлӗ авалхи хутсене пухса вӗсене пиҫетлеҫҫӗ, вӗсем ҫинҫен ӑслӑлӑх ушкӑнӗсем умӗнҫе токлатсем тӑваҫҫӗ, ҫав вӑхӑтрах вӗсем ҫӑваш йуррисене, халлапӗ-такмакӗсене, ҫанталӑк ҫинҫен сӑнанисене пухаҫҫӗ, ҫав вӑхӑтрах вӗсем тӗрлӗ орикиналлӑ йапаласем ҫӑвашла ҫыраҫҫӗ: Хветӗр Михайли „Арҫури" ҫыраҭ, Йурка Иванӗ нумай калавсем ҫыраҭ. Ҫӑваш натсионалистсен хушшинҫе ҫӑваш натсионаллӑ куҫтурӑ тӑвасси ҫинҫен сӑмах тапранаҭ. Н. И. Ашмарин ӗҫлеме тапратсан, ытларах та унӑн пысӑк историллӗ „Ҫӑвашсемпе пӑлхарсем" тенӗ кӗнеки ҫапӑнса тухсан (1902 ҫ.) натсионалистсен шухӑшӗ пӗтӗмпех ҫунатланса кайаҭ—вӗсем тӳрех ҫӑваш натсионаллӑ куҫтурне тӑватпӑрах теме пуҫлаҫҫӗ—пиҫетре ун ҫинҫен кайарахпа ҫи малтан Комиссар Курийӗ ҫырма тытӑнаҭ.

Ҫак натсионаллӑ йухӑм интеликентси хушшинҫе тӗреклӗленнӗҫем тӗреклӗленсе пыраҭ: ӑна тӗреклӗлентерме влаҫ хӑйех пулӑшса пыраҭ; вӑл ҫӑвашсене куҫтурӑ тӗлӗшӗпе хӗснӗҫем хӗссе

пыраҫ, революци умӗн Иван Йаккӑлҫа та шанмасӑр пӗтӗм ҫӑваш шкулӗсене пӑхса тӑмалли инспектӑр вырӑнӗнҫен кӑлараҫ, мӗшӗн тӗсен, ҫав йӗркерен ҫӑвашсем культурлӑ ахтономи патне ҫывӑхарассийӗн шӑрши кӗнӗ, унтан вырӑнсенҫе ҫӑваш интеликентсипе вырӑс интеликентси хушшинҫе хыту тавлашу тытӑнаҫ: ҫӑвашсен йалӗсенҫе пурӑнакан вырӑс пупӗсемпе вӗрентекенсем ҫӑвашсене вырӑна парасшӑн мар—ҫак тӗлӗшӗпе пур тӗлте йалан кӗрешӳ пулаҫ. Авалран хӑнӑхнӑ вырӑнсене вырӑс пупӗсемпе вӗрентекенсем питӗ хытӑ тытсӑ тӑраҫҫӗ, ҫавӑнпа революциҫҫен ҫӑваш йалӗсенҫе 40 проҫҫӑна йахӑн вырӑс пупӗсемпе вырӑс вӗрентекенсем пулаҫҫӗ. Ҫакна пула ҫӑваш вӗрентекенсем шкул ӗҫне ҫӑвашсем аллине ҫеҫ илес, ҫӑваш пупӗсем ҫӑваш еппархи тӑвас, ҫӑваш ерхерейне туйавас теме тытӑнаҫҫӗ. Ҫав вӑхӑтрах ҫемствӑсенҫе ӗҫлекен ҫӑвашсем те вӗсене руссихвикаттӑрсем уйрӑм ҫул паманнине кураҫҫӗ. Ҫапла майпа ҫӑвашсен хушшинҫе ахтономи шухӑшӗсен мӗлкисем палӑра пуҫлаҫҫӗ.

Анҫах революциллӗ парттисемпе паллашман, вӗсенҫен йутшӑнса тӑнӑ натсионалистсемпе парттисӗр ҫӑваш интеликентсийӗ хӑйсен тӗллевӗсемпе сунавӗсемшӗн ҫӑнтан кӗрешӳ тапратма пултараймаҫҫӗ, мӗншӗн тесен, вӗсем ҫӑваш ӗҫне пӗтӗм Раҫҫейре ӗҫ халӑхӗпе хресҫен халӑхӗн ӗҫӗпе ҫыхма хӑраса тӑраҫҫӗ, пӗтӗм Раҫҫейри халӑхсен политтиккинҫен йутшӑнса тӑраҫҫӗ, вӗсем хӑйсем тӗллӗн ҫеҫ ҫӑваш ӗҫне тума, ӑна пӗҫӗкҫӗн те пулин хӑйсем ҫеҫ тума тӑрӑшаҫҫӗ. Патшасен пусмӑрлӑ патшалӑх йӗркине ҫӗмӗрсе ывӑттмасӑр, улпутсене пӑнҫӑхтармасӑр, пуршуаҫийе кӑшт та пулин кайалла ҫакармасӑр (революциҫҫенхи шухӑшсене калатӑп, мӗншӗн тесен, унҫухне пролеттарлӑ революци ҫинҫен ҫӑваш хушшинҫе нихҫам та тӗлленмен те) ҫӑваш ӗҫӗ пӗр шит те малалла кайаймассине вӗсем ҫисеймеҫҫӗ, ӑна ҫавӑрса ӑнланаймаҫҫӗ.

Ҫапла ӗнтӗ ӗлӗк пӗр шухӑшпа, пӗр сулӑнӑҫпа пурӑнакан ҫӑваш интеликенсийӗ, пӗр кӗтӳҫе Иван Йаккӑлҫа итлесе пӗрлешсе ҫӑмӑртанса тӑракан ҫӑваш интеликентси революци умӗн уйрӑм ушкӑнлӑ-пайлӑ сийсене уйрӑлса кайаҫ, ҫав кашни уйрӑм сийӗн хӑйне уйрӑм политтиккӑ сулӑнӑҫӗ пулаҫ. Ҫав тӗрлӗ йухӑмсем виҫӗ тӗп ҫыран тӑрӑх йухаҫҫӗ: пӗр ҫыранӗ революци ҫыранӗ пулаҫ, тепӗр ҫыранӗ самотершавипе ҫиркӳ йӗркинҫен тухман ҫыран, виҫҫӗмӗш ҫырана натсионаллӑ оппоҫитси ҫыранӗ теме йураҫ;

йулашки йухăм патшасен пусмăрлă йĕркипе те килĕшеймест, вĕсене хирĕç вăйпа кĕрешӳ тапратма та ҫаранса тăрса самотершави вăхăтĕнҫе те ҫăваш куҫтурне йепле те пулса малалла йамалла мелсем шыранаҫ. Револутси йенне сулăнакан йухăм икĕ тĕп йӳпе йӳпленет—пĕри сотсиалисăм çулĕ çине туртăнаҫ, тепри липералисăмпа пуршуаллă темократти çулĕ çине туртăнаҫ.

Нумай каласа сăмаха сайа йама та кирлĕ мар: кашни малта асăннă йухăм ҫăваш халăхĕн мĕнле те пулин класлă сийĕн сӳнавĕсене паллăртнă: çапла сотсиалисăм йенне туртăнакан йухăм хыçĕнҫе ҫухăнпа вăтам хресҫенсем, пурлакланнă йал çыннисем, унтан пурăнăçĕпе пролеттариата çывăх ҫăваш интеликенҫĕсем тăнă, липералисăмпа пуршуаллă темократти йенне пирĕн аталанакан вак пуршуаçи сулăннă, Иван Йаккăлҫă çулĕпе натсионалистсен çулĕ çине йалти пуйансем, пупсем, нумайăшĕ вĕрентекенсем, нумайăшĕ тĕттĕм хресҫенсем пусса тăнă.

# III. Револютси пуҫламӑшӗ.

## 1. Раҫҫейре пулас револютси чӑвашсене те малтанах сисӗнни.

Раҫҫейре ӗмӗр тӑрӑшшӗпе йунлӑ асаплӑ кӗрешӳ пырать. Ҫав кӗрешӗвӗн сӑлтавӗсем ҫинчен вӗреннӗ чӑвашсем чипер пӗлеҫҫӗ. Анчах халӑх хушшинче нумайччен револютси ҫинчен пуҫа ҫавӑракан, пӑтратакан сӑмахсем ҫӳреҫҫӗ. Револютсионерсем Иккӗмӗш Елексантӑра вӗлернӗ, чӑваш хресченӗсем ӑна улпутсем вӗсен ҫӗрне хресчене парас тенӗшӗн вӗлернӗ теҫҫӗ. Унта кунта ҫав вӗренекене, ҫав хуҫа ывӑлне-хӗрне тӗрмене хупни, таҫта хӑйамата пуҫиле йани илтӗнет. Ӑна чӑвашсем ҫав улпутпа йе ҫав та ҫав чинавникпа тавлашнӑшӑн пуҫиле йанӑ теҫҫӗ—патша вӗсен шухӑшӗпе тӗнчере чи ырӑ кӑмӑллӑ ҫын, ӑна хирӗҫ хӗҫпӑшал ҫӗклессине вӗсем шанмаҫҫӗ. Унтан халӑх хушшинче йалан кашкӑр пилечӗпе ҫӳрекен етемсем ҫинчен хыпар ҫӳрет: ҫав ҫынсем йалран йала ҫӳреҫҫӗ, халӑха ҫӗр касӑлать тесе йӑпатаҫҫӗ, улпутсемпе правиттӗльствӑ ҫинчен вӑрттӑн та пулин йӗкӗлтесе калаҫаҫҫӗ, патшине те сӑмах хушшинче пӗрте мухтамасӑр тӗртсе хураҫҫӗ. Ҫавӑн пек хыпара епӗ ача чухнех илтсе аттерен „кашкӑр пилечӗпе ҫӳрекен ҫынсем мӗнле ҫынсем вӗсем“ тесе ыйтатӑп, атте мана: „Кӗҫтук тетӳ пек усал осорниксем пулӗ“ тет. (Кӗҫтук крепӑҫлӑ саманара 1-мӗш Микулай салтакӗ пулнӑ, ӑна ахвитсер пичӗнчен ҫапнӑ, вӑл хирӗҫ тӑрса ун сӑмсине ҫыртса татнӑ, вара ӑна тӗрмере нумайчен асаплантарнӑ, слушпӑран кӑларса тӗнче тӑрӑх сӗтӗрӗнсе ҫӳресе пурӑнӑҫне иртермелле тунӑ). Ҫапла халӑх нумайчен ҫӗр касӑласса ҫывӑрмасӑр кӗтсе тӑрсан та, ҫемски начальниксемпе пристӑвсен пусмӑрӗ сирӗлессе чунӗпе ӗмӗтленсе пурӑнсан та, револютси сисӗмӗсене чӑнтан та, тӗрӗсрен те ӑнласа ҫитерейместчӗ. Хуласенче сотсиалислӑ парттисем чӑмӑртанаҫҫӗ, Раҫҫейре чӑваш ҫӗрӗнчен айакра ӗҫ халӑхӗ ҫӗкленет, анчах чӑваш хресченӗ нимӗн

те ђӑнтан пӗлмен пек пурӑнаҭ. Анђах пурӑнӑҫ хӑйех ђӑваш хресђенне авалхи ыйхӑран вӑратнӑҫем вӑратса пыраҭ. Акӑ 1891-мӗш ҫулта хӑрушӑ выҫлӑх пулаҭ: халӑх мӑйан, ытти кирлӗ-кирлӗмар йапала ҫисе ҫул иртерет. Тӗлӗкри пек астӑватӑп: хула пек пысӑк, ђаплӑ, пуйан Пӳркел йалӗ сӑнран кайнӑ: ҫынсем пур те арпус пек кӑвакарса шыҫӑннӑ, темӗн ђухлӗ вилеҫҫӗ, ҫуртсен тӑрринђе пӗр пӗрђӗ ҫӗрнӗ улӑм йулман—ӑна выђӑха ҫитерсе пӗтернӗ. Ҫулла хӑрушӑ халер ђирӗ тапранаҭ, етем ҫулнӑ курӑк пек йӑванаҭ; ҫав вӑхӑтрах хӑлӑх хушшинђе улпутсем, тӗрлӗ вырӑнта тӑракансем выҫӑсене тӑрантармалли хатӗрсене вӑрлани ҫинђен, ӗҫкӗ-ҫикӗ туни ҫинђен илтӗнет; ҫав вӑхӑтрах тухтӑрсем халера йури сарма тӑрӑшаҫҫӗ тенӗ тӗттӗм хыпарсем илтӗне пуҫлаҫҫӗ. Йат тӑрӑх страшниксем ҫӳре пуҫлаҫҫӗ, акӑ унђен те пулмасҭ—халӑх ђӗрине страшниксем Куҫма йатлӑ ҫынна ытлашши калаҫнӑшӑн хӗнесе вӗлерсе пӑрахнӑ тенӗ хыпар ҫурса йараҭ. Ҫак асаплӑ вӑхӑтра халӑх туррине те, патшине те ылханма тытӑнаҭ. Ҫак выҫлӑх хыҫҫӑн халӑх питӗ нумаҭ улӑшӑнса кайаҭ: вӑл пурӑнӑҫа ҫӑмӑллатас йенӗпе йывӑр шухӑша йерет, ытларах ҫӗнӗ ҫӗре шырама, унта куҫма тытӑнаҭ, йут ҫӗрсене ӗҫе ҫӳреме ытларах тапратаҭ. Ҫак выҫлӑхран халӑх урӑлса ҫитиђђенех 1898 -мӗш ҫулта, унтан 1901-мӗш ҫулсенђе каллех тырӑ пулмасҭ. Ҫак курнӑ асапсем асран каймаҫҫӗ—вӗсем халӑх ђӗрине шала кӗрсе выртаҫҫӗ. Унтан вӑрҫӑсем тапранаҫҫӗ: малтан 1900-мӗш ҫулта Киттай пӑлхавӗ ҫӗкленет, ӑна пусарма пайтах ђӑваш салтакӗсем кайса килеҫҫӗ. Ҫав вӑрҫа правиттӗљствӑ Киттай вӑрӑ-хурахӗсем тапратнӑ тесе йалан елеклет, анђах ӑна халӑх ҫапах та хӑй урӑхла анланаҭ, ӑна вӑл Киттайра пӗр ушкӑн етемсем пуйансене пӗтересшӗн ҫапӑҫнӑ тет. Ҫак вӑрҫӑран ик-виҫ ҫул ҫеҫ иртет—тепӗр хӑрушӑ вӑрҫӑ—Йаппун вӑрҫи тапранаҭ. Ђӑваш салтакӗсене йалсенђе мопилисатсилеҫҫӗ, вӗсем пӗри те тӗнђе шӑтӑкне хӑйамата вӑрҫа кайасшӑн мар, вӗсем пӑлханаҫҫӗ, шавлаҫҫӗ, каҫонкӑсене ҫӗмӗреҫҫӗ, ҫапах та вӗсене пурне те Киттай ҫӗрне хӑваласа кайаҫҫӗ. Йаппунсем вырӑссене ҫӗнтерсе пынӑҫем халӑх хытӑран хытӑ мӑкӑртатма тытӑнаҭ: пур тӗлте те вӑрҫӑ усал уйрӑм улпутсемшӗн ҫеҫ кӑларни ҫинђен, вӑрҫӑра нумаҭ ултав пулни ҫинђен, пуҫлӑхсен хушшинђе укҫалла тӑшмана нумаҭ сутӑннӑ ҫынсем ҫинђен сӑмах ҫӳрет. Хаҫатсем

çинҫе правиттӗљствӑна тарӑхса йалан вӑрçни ҫӑваш хресҫенне те сисӗнет: ку вӑхӑтра кашни йалта тенӗ пекех кам та пулин пӗр хаçат илсе тӑраҫ. Ытларах та вӑрçӑран правиттӗљства хирӗç салтаксем авӑрланса таврӑнаççӗ: вӗсем Çӗпӗр тӑрӑх пур тӗлте те пӑлхав кӑларса, стантсасенҫе шӑв-шав туса таврӑнаççӗ. Йалсене таврӑнсан çак салтаксем мӗн курнине, илтнине, пӗлнине каласа кӑтартса халӑх кӑмӑлне пӗтӗмпех правиттӗљствӑран таварӑççӗ. Çитменнине салтаксем нумайӗшӗ алӑсӑр-урасӑр аманса таврӑнаççӗ. Ак Киштексем, ман Йехимка тете: вӑл Ҫӗмпӗрте слушпӑраҫҫӗ, питӗ таса çынҫӗ, вӑл теншикра тӑраҫҫӗ, епӗ Ҫӗмпӗртех шкулра вӗренекенскер ӑна вӑрçа ӑсатрӑм. Нумай та вӑхӑт иртмерӗ—вӑл аманса хӑрах алӑпа çеç таврӑнҫӗ; таврӑнсан вӑл Питӗрте тӳрленсе шпиталра (хоспитӑљра) выртрӑм, унта патша арӑмӗпе амӑшӗ пырса кайрӗç, мана 3 тенкӗ укçа парса хӑварҫӗç тесе каласа кӑтартаҫ. Сакна итлекенсем тӗртсе хураççӗ: „сывлӑха нимӗнле хакпа та илме çукçке, алурана виç-тӑват тенке туйанма пулмасҫ çав“, теççӗ. Унтан çак сӑмахсен хушшинҫе пӗри çивҫӗрехххи каласа хураҫ: „çук ӗнтӗ, вӑрçӑра асапланни пӗтӗмпех сайа кайрӗ: ӑна йытӑсем улпутсем çеç кӑларнӑ, вӗсемех йаппуна сутӑнса вӑрçӑра епир çӗнтерессине те пӑнҫӑхтарнӑ“, тет.

Вӑрçӑран пуçне ҫӑваш хресҫенӗн кӑмӑлне пуринҫен ытла хытӑрах Раççейре пур йенҫен тапранакан тӗрлӗ пӑлхавсем çӗклеççӗ. Йалсенҫе пур тӗлте те Ҫӗмпӗрте, Хусанта, Самарта пулнӑ вӗренекенсен йе ӗçлекенсен пӑлхавӗсем çинҫен калаçаççӗ, ҫӑваш тавринҫи хӑш хапрӑксем йе савӑтсем вӑхӑтлӑха ӗçлеме ҫарӑнни çинҫен калаçаççӗ. вӗсене хуçасем йе йури пӑлханакан ӗçлекенсене ӗççӗр аптӑратасшӑн йе ирӗксӗр ӗçлекенсем ӗçлеме пӑрахнипе вӗсене хупмалла пулни çинҫен халӑх йаланах калаçаҫ. Çав вӑхӑтрах кашни ҫӑваш йалне пӗтӗм Раççейрен: Паккуран, Питӗртен, Мускавран, Йусовран. Уралпа тӗрлӗ Çӗпӗр хулисенҫен çыру килет—çав çырусене унта ӗçлесе пурӑнакансем çыраççӗ, çав çырусенҫе пуринҫе те ӗçхалӑхӗ пӑлханни çинҫен çеç çыраççӗ. Хӑш тӗлтен сапастовкӑсен майӗпе ӗçлеме ҫарӑннӑ савӑтсенҫен унта ӗçлесе пурӑннӑ ҫӑвашсем киле пӑрахса таврӑнаççӗ, хӑйсем мӗн курнине, пӗлнине каласа кӑтартаççӗ. Унтан анатри ҫӑвашсем хушшинҫе Атӑл тӑрӑх Самарпа Саратту таврашӗнҫе улпут хресҫенӗсем, вырӑс хресҫенӗ пӑлханма тытӑнни çинҫен тӗрлӗ хыпарсем çӳреççӗ.

Ҫапла революци шевли ҫӑваш халӑхӗн куҫӗ умӗнҫе хытӑран хытӑ выҫаӗ, вӑл пулас ҫилтӑвӑлпа пулас аслатисене пӗлтерет. Вӑхӑҫӗпе ҫав ҫывӑхаракан революци пӗлӗҫӗсен хушшинҫе революцийӗн хайар та, ҫивҫӗ те хӗҫӗ йӑлтӑртатса илет: 1902-мӗш ҫултан пуҫласа сотсиалист-революционерсем пӗр министр хыҫҫӑн тепӗр министра вӗлереҫҫӗ, йулашкинҫен патша пиҫӗшне Серкей Алексантӑрҫа вӗлереҫҫӗ. Кашни ҫак вӗлерӳ ҫинҫен илтсенех халӑх хӑлхине йалт тӑратаӗ: пупсем ӑна ӳкӗтсенҫе патша тарҫисене усал етемсем вӗлереҫҫӗ тесе ӑнлантараҫҫӗ, ҫав вӑхӑтрах шкулсенҫе вӗренекенсем, хуласенҫе вӗренекенсем, хаҫат вулакан хресҫенсем, ӗҫре ҫӳренӗ етемсем вӑртӑнрах та пулин ҫав ӗҫ мӗншӗн пулнине тӗрӗсрен ӑнлантарма тӑрӑшаҫҫӗ. Халӑх ӑна хӑй те сиссе тӑраӗ: ҫын хайар кайӑк—ҫакак мар, вӑл мӗнле усал пулсан тепӗр ҫын ҫине тӗктӑнӑ ҫӗртех алӑ ҫӗклемест. Ҫапла хресҫен халӑхне революциллӗ тӑн кӗрсе пыраӗ, халӑх революци тӑвӑлӗпе хумханса кайма хатӗр пулса тӑраӗ.

## 2. Ҫӑваш революционерсем ҫитӗнни, революциллӗ ушкӑнсем ҫӑмӑртанни.

Ҫӑнтан революционерсем, революциллӗ теориле авӑрланнӑ революционерсем ҫӑвашсен хушшинҫе 90-мӗш ҫулсен вӗҫӗнҫе палӑраҫҫӗ. Ҫав революционерсем: Аҫун Кевӗрлипе Микулай Тимахвийӗ пулаҫҫӗ. Вӗсем малтан Ҫӗмпӗрпе Хусанта наротниксен ушкӑнӗсенҫе вӗренеҫҫӗ те, ӗҫлеҫҫӗ те. 1900-мӗш малтанхи ҫулсенҫе вӗсем Ҫӗмпӗрте пупсене хатӗрлекен ҫеминарире вӗреннӗ ҫух вӗсем уйрӑм политиккӑ ушкӑнӗсенҫе Карл Марксӑн „Капиталне“ ытти ҫавӑн пекрех политтиккӑ-сотсиаллӑ кӗнекесене тишкерсе вӗренсе тухаҫҫӗ. Ҫав вӗренӳре вӗсене ҫавӑтса пыракан ҫеминарире вӗрентекен В. Г. Архангелҫски пулаӗ (ессерсен тӗп комиттеҫҫӗн ҫленӗ, пирвайхи Тумӑн ессерсен храксийӗн пуҫлӑхӗ, Керенски ҫухне халӑха ҫутта кӑларас ӗҫпе министр пулнӑ). 1903-мӗш ҫулта Аҫун Кевӗрлипе Микулай Тимахвийӗ ессерсен парттине кӗреҫҫӗ. Иван Йаккӑлҫӑ пире ун патӗнҫе вӗренекен ҫамрӑк аҫасене ҫапла каласа параӗ: „ҫамрӑк ҫын усал хыҫҫӑн кайсан пӑсӑлаӗ, ав Аҫун Кевӗрли ӑслахҫӗ, Архангелҫски хыҫҫӑн кайса йурӑхсӑра тухрӗ, вӑл ӗнтӗ ҫӑвашсене те усӑ кӳрес ҫук, хӑй пуҫне те таках ҫийӗ,“ тет. 1904-мӗш ҫулта Ҫӗмпӗрте ҫӑваш вӗренекенсен уйрӑм политтиккӑ йӗркине вӗренмелли

ушкӑн ҫӑмӑртанаҫ̆. Ҫав ушкӑн пуҫӗнҫе Микулай Тимахвийӗ тӑраҫ̆, ушкӑнра ытларах тӑрӑшса Микулай Ҫемйунӗ, Уркалкин Мӗтрийӗ, Хветут Василийӗ ӗҫлет. Вӗсем ессерсен парттийӗпе ҫыхӑнса тӑрса ҫав партти ӗҫӗсене те ӗҫлеме тытӑнаҫҫӗ. Ҫак ушкӑнах Ҫӑваш шкулне политтиккӑ йенӗпе ҫутӑлантарма тӑрӑшаҫ̆: епир ушкӑнран тӗрлӗ револютсиллӗ кӗнекесем, прокламатсисем туйанса вӑртӑн вулатпӑр. Ҫав вӑртӑн пиҫетленнӗ хутсене епир ҫӑваш ҫеминарисҫӗсем патне вӑртӑн кайса вӑхӑтлӑха илетпӗр, ҫапла йалан пирӗн хушшӑмӑрта кӗнеке ҫӳретекен Микулай Михайли пулаҫ̆ (малта асӑннӑ револютсионер Ҫемйун шӑлнӗ).

Анҫах епир, револютси вӑхӑтне тин ҫитӗнсе ҫитекен ҫамрӑксем револютси тӗллевӗсене ӑнласа илме, револютсиллӗ шухӑшсене ҫавӑрса шухӑшлама хатӗр пулнӑ-ши йе ҫук-ши? Епир ӑна тахҫанах хатӗр, епир револютси прокраммине ӑнлама такҫанах ҫитӗннӗ. Епир политтиккӑ тӗлешӗпе хамӑр наҫальства айван вырӑнне хисеплетпӗр, хамӑра вӗрентекенсене хамӑртан та наҫар пӗлекенсен вырӑнне картатпӑр. Пирӗн пуҫра ҫеҫ револютси шухӑшӗ выҫамасҫ̆, пирӗн ҫӗрере те револютси кӑварӗ ҫунаҫ̆. Ҫак йепле пулса кайнине сӑмӑха вӑрӑмрах тӑсса калам, мӗшен тесен, револютсийе ӑнлавас пулсан уншӑн ӗҫленӗ ҫынсен ҫун-хавалне те пӗлес пулаҫ̆. Ҫӑваш револютсионерӗсенҫен 90 проҫҫӗнӗ Ҫӑваш шкулӗнҫен тухнӑ, ҫавӑнпа ҫав шкулра револютсиллӗ йухӑмсем ӑҫтан пырса кӗрсе вӗсем йепле аслӑланса тӗреклӗленнине кӑтартас пулаҫ̆.

Ҫӑваш шкулӗнҫе 90-мӗш ҫулсенҫен пуҫласах пурӑнӑҫ канлӗ пулман. Ҫӑваш шкулӗ ытти ун пек шкулсем йевӗрлӗ марҫҫӗ: вӑл мӑнастыр йевӗрлӗҫҫӗ. Ҫӑваш шкулӗ аҫасене питӗрсе усраҫҫӗ хулана кӑлармасҫӗ, хула ҫыннисемпе паллашма памасҫӗ, вӗрентме те вӑл кивӗ йӗркепе ҫеҫ вӗрентеҫҫӗ: ҫапла Иван Йаккӑлҫӑ петакокиккӑ тене ӑслӑлӑха 50-мӗш ҫулсенҫе пиҫетленнӗ Йуркевиҫ кӗнекисем тӑрӑх ҫеҫ вӗрентеҫҫӗ. Иван Йаккӑлҫӑ шкулра пур йенҫен те хӑй ҫамрӑк ҫухне крепӑҫлӑ саманара пулнӑ йӗрке тытма тӑрӑшаҫҫӗ: вӑл вӗренекенсене ҫапкаласа та, хӑш ҫухне ҫӑптан туйапа вӗтсе те илеҫҫӗ. Иван Йаккӑлҫӑ вӗренекенсем ҫӑпатапа, сӑкман-кӗрӗкпе ҫӳренине йуратаҫҫӗ, этӑ, пиншак таврӑш тахӑннине курайммасҫӗ, калуш таврашне курсан тӳрех кӑларса ываттараҫҫӗ. Унтан Иван Йаккӑлҫӑ аҫасене йалан ӗҫ ӗҫлеттереҫҫӗ: урайсем шӑлтараҫҫӗ-ҫутараҫҫӗ, тула тухмалли вырӑнсене тасаттараҫҫӗ,

тыра́ актараҫҫӗ, выртараҫҫӗ, ҫаптараҫҫӗ, сат, пахҫа вӗллехурҫӗ ӗҫӗпе кӗрмештереҫҫӗ. Ҫакна пула Ҫӑваш шкулӗнҫен пӗр йенҫен ҫӑвашсемшӗн ҫи лайӑх вӗрентекенсем вӗренсе тухаҫҫӗҫ: вӗсем йала, хресҫене ҫывӑх интеликентсем пулаҫҫӗҫ, вӗсем ӗҫҫен, пусӑраннӑ кӑмӑллӑ, вӗҫкӗн мар пулаҫҫӗҫ, вӗсем тӗспе, пурӑнӑҫпа, ӗҫпе, ҫун сулӑнӑҫӗсемпе ытти хуласенҫе вӗренсе тухнӑ ҫӑвашсенҫен нумай уйрӑмҫӗ; вӗсен хушшинҫе натсионаллӑ шухӑшсемпе туртӑмсем вӑйлӑрахҫӗ—вӗсем йаланах ҫӑваш ӗҫӗпе ҫеҫ кӗрмешсе пурнӑҫа иртерме тӑрӑшаҫҫӗҫ. Анҫах Ҫӑваш шкулӗнҫи пурӑнӑҫ ытти йӗритаврари пурӑнӑҫа пӗтӗмпех хирӗҫ пыраҫҫӗ: йӗритавра хула пурӑнӑҫӗ вӗресе тӑрать, хуласенҫе промышлӗнӑҫпа пӗрле ӗҫхалӑхӗпе интеликентси аслӑланнӑ, хуласенҫе хаҫатсем, шурналсем, пиплиотеккӑсем, театӑрсем, хула хыҫҫӑн йалта кӑшт та пулин сикме тытӑнать, анҫах Ҫӑваш шкулӗ ҫеҫ аллӑ ҫул кайа пулнӑ йӗркепе пурӑнать: ҫӑваш йалӗсенҫе пур каҫҫа кайас хӗрсем та вӑйа ҫутӑ калушсем тӑхӑнса тухаҫҫӗ, Иван Йаккӑлҫӑ ыран-пайан уҫитӗле тухмалли ҫитӗннӗ ҫынсене калуш туйаннӑшӑн туйапа тӑскаласа илет. Ҫӑваш шкулӗнҫе пурӑнӑҫ вырӑс пупӗсемпе тийеҫукӗсене хатӗрлекен шкулсемпе ҫеминарисенҫен те пусмӑрлӑрах: типӗсем тытас тӗлӗшӗпе, кӗлле ҫӳрес тӗлӗшӗпе шкул мӑнастыр таврашӗнҫен пӗртех уйрӑм мар. Вӗрентекенсем те шкулра сахал вӗреннӗ, наҫар пӗлекен, кивӗ йенне вӗрентекенсем: аслӑ шкулра вӗренсе тухнӑ ӗҫҫен, ҫивҫӗ вӗрентекен пырса кӗрсен те шкулран Иван Йаккӑлҫӑпа килӗштерейместӗр пӑрахса кайать. Ҫакна пурне те вӗренекенсем пӗлсе-сиссе тӑраҫҫӗ, анҫах Иван Йаккӑлҫӑпа вӗрентекенсем ҫеҫ ӑна сисмеҫҫӗ: вӗсем вӗренекенсене йалан тӗн ҫинҫен ӳкӗтлеҫҫӗ, ҫиркӳсемпе мӑнастырсем тӑрӑх сӗтӗрсе, аслӑ улпутсен хӑваттерӗсене ҫӑваш йуррисем йурлама сӗтӗрсе ҫӳреҫҫӗ; 1897-мӗш ҫулта тӗктӑмалӑк вӗренекенсене Ҫулхулана илсе Микулай патшана кӑтартса ун умӗнҫе „ей ҫӳлти патша“ йурлаттарса таврӑнаҫҫӗ. Ҫак вӑхӑтра аслӑрах классенҫе вӗренекенсен хушшинҫе ҫурри ытла тӗнрен пӗтӗмпех писнӗ, хӑйсене вӗсене тӳрех епир аттепстсем теҫҫӗ, ытти ҫурри те иккӗленкелесе кӑна ӗненнӗ пек тӑвать. Вӗренекенсен хушшинҫе йалан йӳҫӗнкӗлӗ сӑмах пырать: вӗсем пӗр пӗринпе шкул йӗркине хурлаҫҫӗ, вӗрентекенсене вӑрҫаҫҫӗ, вӗсене мӑшкӑллаҫҫӗ, вӗсене тӳрех вӗсем нимӗн те пӗлмеҫҫӗ, Иван Йаккӑлҫӑ хӑй те ӑслӑлӑх йӗркинҫен тухнӑ, авал крепӑҫлӑ саманара пулнӑ ӑслӑлӑхпа

çеç аташаҫ теççӗ. Иван Йаккӑлҫӑ çапла вӗренекенсен хушшинҫе проттест аталаннине сиснӗ-сисменех тата ытларах хайарланма тытӑнаҫ: вӑл классенҫен ушкӑнӗ-ушкӑнӗпе хӑваласа кӑларма тытӑнаҫ, вӗренсе тухакансемшӗн малый выпуск тенӗ йӗркепе кӑларассине туса хураҫ: шанҫӑксӑртарах вӗренекенсене вӑл пӗр çул малтан кӑларса вӗсене наҫар вырӑн параҫ, шкулра вӗренсе тухнӑ тесе хут памасҫ, вӗсене Хусанра уйрӑм ексамен партарса уҫитӗле кӑлараҫ. Анҫах çапла туни те вӗренекенсен йӳçӗнкӗлӗ кӑмӑлне хӑратса пусараймасҫ: çав кӑмӑл ӳснӗçем ӳсет, проттест çийеле тухнӑçем çийелелле тухаҫ, XX-мӗш ӗмӗрӗн ҫи пуçламӑшӗнҫе вӗренекенсем шкулри йӗркепе, унӑн решимӗпе тытӑнса кӗрешни пӗтӗмпех палӑрса çитет. Акӑ 1901-мӗш çулта шкулран тӗрлӗ классенҫен 5—6 çын пӗрлешсе хӑйсен ирӗкӗпе тухса кайаççӗ, вӗсем „шкулра ҫӑнтан вӗрентмеççӗ, тӗнпе çеç аташтараççӗ“ тесе тухса кайаççӗ. Иван Йаккӑлҫӑ аптӑраса йулаҫ: ӗлӗк вӑл аҫасене киле ӑсатап тесе хӑратаҫҫӗ, халӗ аҫасем хӑйсем шкула тиркесе ушкӑнӗ-ушкӑнӗпе пӑрахса кайа пуçларӗç. Çитменнине кӗркунне çав аҫасем Хусана йункерсен шкулне ахвитсере вӗренме кӗреççӗ, çитменнине вӗсем çинҫен хаçатсем çинҫе çыраççӗ, вӗсен кӗлеткисене шурналсем çинҫе пиҫетлеççӗ: вӗсем ексамена çӑпатапа пынӑ, унтан унҫен ҫӑвашсенҫен никам та ахвитсере вӗренмен—çавӑнпа çак ӗç вырӑс интеликентсишӗн тӗлӗнмелле туйӑннӑ (çав тӑватӑ аҫаран пӗри йункер халӗпе вилҫӗ, пӗри Прохор Трахвинӗ йаппун вӑрçи вӑхӑтӗнҫе ахвитсер пуçӗпе йут патшалӑха тарҫӗ, ыттисем револютси вӑхӑтӗнҫе ахвитсертен тухса ӳкрӗç: Аниçим Ентрийӗ револютси майлӑ пулнӑшӑн, Йермалай Ахванеçӗ касармӑ йӗрки тӗлешӗпе тавлашнӑ ҫух полковника питрен çупса йанӑшӑн). Калама та кирлӗ мар—çак истори пирӗн шкулра вӗренекен аҫасен çунатне пӗтӗмпех çӗклет: епир шкулран пуçне, пупсене хатӗрлекен çеминарисенҫен пуçне урӑх шкулсенҫе вӗренме майӗ пуррине куратпӑр, хамӑр пуçа çӳлӗрех çӗклеме тытӑнатпӑр. Пур те епир аслӑрах шкулсенҫе вӗренес тетпӗр, ҫӑнтан интеликентсем пулас тетпӗр. Унтан епир пупа хатӗрлекен çеминарисемпе акетемисем çине хӑррӑн пӑхма тытӑнатпӑр, универçитет çинҫен пӑшӑрханма тытӑнатпӑр. Пирӗн пуçран Аҫун Кевӗрли сӑмахӗсем асран каймаççӗ, вӑл калаҫ: „çеминарисемпе акатемисене ан кайӑр, универçитетсене, тӗрлӗ техниккӑ шкулӗсене кӗме тӑршӑр, çитӗ пире миççионерсен хӳрине тытса

ҫӳреме—вӗсем ҫӑвашсене тата та пусмӑрлӑрах ҫул ҫине ҫеҫ илсе кӗреҫҫӗ тет. Ҫав вӑхӑтра ҫӑвашсем йалхуҫалӑх шкулне, ҫемлемерсен шкулне кӗме, аттестат срелоҫти тенӗ ексамена хатӗрленме тытӑнаҫҫӗ. Акӑ епир 1902-мӗш ҫулта иккӗмӗш класра ҫеҫ вӗренекен нӑрӑсем, ҫапах пирӗн класра Иван Павӑлӗ (П. И. Иванов) пушӑ вӑхӑтра хӑй тӗллӗн пӗҫҫен йалан вуласа лараҫ—вӑл Туссен кӗнеки тӑрӑх хрантсус ҫӗлхине вӗренет, епир виҫҫӗмӗр: Микуш Петӗрӗ, Паймек Иванӗ, епӗ латтин ҫӗлхине вӗренетпӗр, пур те епир пӗр пӗрне универҫитетра вӗренсе тухмасан пурӑнмастпӑр та тесе тупа тунӑ. Епир, арҫынаҫасем ҫеҫ мар, хӗрсем те ҫавӑншӑнах пӑшӑрханма тытӑнаҫҫӗ: Иван Настаҫӗ, Насар Вери, Шӑнкӑрҫ Марйи, Шампрут Йехроҫинийӗ ҫавӑншӑнах пӑшӑрханаҫҫӗ (ҫӑнахах та вӗсем пур те ҫӑваш хӗрарӑмӗсенҫен ҫи малтан тӗрлӗ аслӑ шкулсенҫе вӗренсе тухаҫҫӗ). Ҫак малалла вӗренес тенӗ шухӑшсем —ӗмӗтсем пире вут пек ҫунтараҫҫӗҫ. Епир ҫапла вӗреннипе ҫеҫ тӗнҫе ҫине тухма, вырӑс кулҫтурӗ ҫумне ҫыпҫӑнма, ҫуралӑхран хӑтӑлма пултарӑпӑр теттӗмӗр. Ҫак пирӗн шухӑшсене—ӗмӗтсене пӗтӗм пурӑнӑҫ хӗтӗртсе вӗрилентерсе тӑраҫҫӗ: урамра пире пӑрахҫӑ аҫа-пӑҫа та ҫӑваш тесе мӑшкӑламасӑр иртмест, кӗнекесенҫе, хаҫатсенҫе пур тӗлте ҫӑваш халӑхне мӑшкӑласа ҫыраҫҫӗ, пирӗн ҫӑвашлӑх пӗтӗм тӗнҫене тӑвӑрланӑ, кансӗрленӗ пек туйӑнаҫ. Ҫапла пирӗн ҫӑвашлӑха йалан тӗртсе мӑшкӑлани пирӗн ҫӳҫе вирӗлле тӑратаҫҫӗ, ҫуна хурлӑхлӑ ҫилӗпе ҫӗтӗретсе тӑратаҫҫӗ. Акӑ епӗ астӑватӑп: 1902-мӗш ҫулта ҫайнине хулана хаҫат вулама кайатӑп та „По Волге“ тенӗ Немировиҫ-Танҫенко ҫырнӑ кӗнекене вуласа пӑхатӑп, унта ҫав ҫыруҫӑ хӑй мӗн курнине ҫыраҫ, анҫах ҫӑвашсем ҫинҫен вӑл пӗтӗмпех хурласа ҫеҫ ҫыраҫ. Унтан сисетӗп—ҫав сӑмахсене вӑл пурне те 50-мӗш ҫулсенҫе Спойев ҫырнӑ кӗнекерен вӑрласа илсе ҫырнӑ. Ҫакӑ пире калама ҫук хытӑ хурлантараҫ: Немировиҫ-Танҫенко паллӑ писаттӗл, ун ҫине епир вырӑс интеликентсийӗн пысӑк мӗлки ҫине пӑхнӑ пек пӑхатпӑр, вӑл та пулин ҫӑвашсем ҫинҫен суйса, сӑмаха урмӑштарса ҫыраҫ. Епир вӗриленсе „Русское Слово“ тенӗ хаҫата ҫыру ҫыратпӑр, ҫырура Немировиҫ-Танҫенка тӳрех плакиатор (литературӑ вӑрри) тесе кӑтартатпӑр. Хаҫат пирӗн ҫырӑва пиҫетлемест. Хаҫатсемпе ахаҫ кӗнекесенҫе ҫеҫ мар—пире вӗрентекен уҫепниксенҫе те, ытларах кеокрафи уҫепникӗсенҫе ҫӑвашсене мӑшкӑласа ҫырнисене епир курса

хурланатпăр—çилĕпе çав ҫăваша хурлакан вырăнсене епир хуратат-пăр,кранташпа хамăр майлă çыратпăр, хăш ҫухне çавăн пек странит-сасене кĕнекерен çурса ывăтатпăр. Хамăр шкулра та çак хурлăха пусарма пултаракан йапала епир сахал куратпăр: Иван Йаккăлҫă хăй те пурăнăçĕнҫе ҫăвашлăхран уйрăлнине епир витĕр куратпăр: пирĕнпе вăл ĕмĕрĕнҫе ҫăвашла пĕр сăмах калаçмасť, çырмасť, ҫăвашла вăл йалран пынă хресҫенсемпе çеç калаçаť, ун аҫисем кимнаçире, асли университетра та ылтăн металсемпе вĕренсе тух-нă, вĕсем профессăрсем пулаççĕ теççĕ, унăн хĕрĕ Римра сăрлама вĕренет, ăна пысăк улпута Иловайскийе каҫҫа параççĕ: пире вен-ҫен тунă ҫух йурлаттараççĕ, вăрăм Хветĕр (Çеркей Хветĕрĕ) паспа апостол мĕкĕрет, çав вăхăтрах аслăрах вĕренекенсен хушшинҫе пăшăлтату пыраť: „çак çĕнĕ кĕрӳ паллă историçĕн аҫийĕп аҫи, çав историçĕ пăсăк çын, ҫăвашсен тăшманĕ, вăл Атăл пăлхарсене те славенсем пулнă тесе суйаť" тенĕ пăшăлтату пыраť. Иван Йаккăл-ҫă çемйе хăйне уйрăм тытаť, вăл улпутсемпе аристократсен çемйи вырăнне хураť, пире уйрăм хура халăх ҫĕпписен вырăнне çеç кар-таť. Çакна епир витĕр сиссе тăратпăр, çакна хирĕç епир шăлсене шатăртаттарса тăма тытăнатпăр.

Анҫах Иван Йаккăлҫă ватăлнăскер çакна пĕрте сисмест: вăл класра пире авалхи пекех тĕрлĕ халлапсемпе йăпатаť; ак вăл пире Попетоностсев çинҫен калаť: вăл пирĕн атте вырăнĕнҫи çын тет, вăл ҫи малтан турăшсене хисеплеме, унтан тин ăслăлăха вĕренме хушрĕ тет; çакна каланă ҫух Иван Йаккăлҫă пиҫĕ тăрăх куççулли шăпăртатса йухса анаť, анҫах унҫен те пулмасť– „ах шуйтан катăршни" тенĕ сăмахсем илтĕнеççĕ, çав сăмахсене Паймек Иванĕ тӳсеймесĕр ĕçерсе йараť, епир пур те савăнса йăл кулатпăр, Иван Йаккăлҫă ҫăр пăхаť те илтми пулса сăмаха урăх йапала çине çавăрса йараť. Епир пур пире „çутта кăларакансене" Попето-ностсевсене, Саплерсене, Исносковсене лайăх ҫухлатпăр, вĕсем пăсăк реаксионерсем иккене таса пĕлетпĕр, вĕсене кураймастăпăр (епир Н. И. Иљминскийе çеç çителĕклĕ ăшă кăмăлпа асăнатпăр). Епĕ астăватăп: шкула Питĕртен ҫаплă професcăр Пуťťиловиҫ пы-ҫĕ, Иван Йаккăлҫă мана ун умĕнҫе урок пама хушрĕ, çав урока епĕ ҫун хавалĕпе çеç патăм,—мĕшнĕн тесен, епĕ Пуťťиловиҫ çине хамăн тĕп тăшман çине пăхнă пек пăхатăп—Пуťťиловиҫ шкулсен попеҫиттĕлĕ пулса ĕмĕрне паљаксене, пелоруссене, латышсене

туласа пурăнни çинђен епир таса пĕлетпĕр; кайран мана Иван Иаккăлђă хăйĕн пиђетленĕ отђотĕнђе сана та мухтаса çырнă тет, епĕ хам ăшăмра „усал мухтиђђен мухтаманни лайăхрах“ тесе шухăшлатăп. Иван Йаккăлђă çĕнĕ самана çитĕннине сисмесĕр йалан миççионерсен ĕçĕпе аппаланаť: ак вăл Питĕртен килнĕ ĕçсĕр аптăранă Ђиђеринапа (хаљхи халăх Комиссарĕн тăванĕ) ђăваш тĕнђи тăрăх ђăвашсем тутара тухнине шыраса çÿрет, анђах çав йапала 30—40 çул кайа çеç пулкаланă ăна вĕсем сисмеççĕ. Епир таса пĕлетпĕр: çапла пирĕн миççионерсем йалан исламра кĕрешесси çинђен калаçни вырăс правиттĕљстви пĕр пусмăрлă халăха тепĕр пусмăрлă халăхпа хирĕçтерме тăрăшнине çеç пĕлтерет. Çапла епир Иван Йаккăлђă çистемин картишĕнђен пуçпа та, ђĕрепе те тахçан тухса кайнă.

Çав вăхăтрах Иван Йаккăлђă калама çук хăватлă, ун пур ĕçĕсем те шултăра, вăл нимĕне те тиркемест, хайар: вăл çитĕннĕ, ăслă, ђи маттур вĕренекен, ыран-пайан уђитĕл пулас Иван Павăлне хулари пиплиотеккăран кĕнеке илнĕшĕн питсене шыçăнтариђђен хĕнесе илет, кайран хăйех йăлăнса каçару ыйтаť, пирĕн вĕрентекен Иљйе Петĕрне вĕренекенсен умĕнђех епĕ сана хăлхаран туртăп тет. Хăш ђухне вăл хăй те тĕнђе улăшăннине кăшт сисет: ак çула пире ик-виç вĕренсе тухнă çынсене ирĕксĕр масар çине илсе кайса пĕр хăйĕн тусĕ вилнĕ йăнăрал шăтăкĕ çинђе панихитă тăваť, пире йурлама хушаť; епир тутасене тăсса утатпăр, старике çилентерес килмест, анђах масар çине пырсан епĕ хурланнипе нимĕн те ђĕнместĕп, йурламастăп, кайалла таврăннă ђух Иван Йаккăлђă уçă кăмăллă калаçса таврăнаť, вăл калаť: епĕ есĕ мĕншĕн йурламаннине пĕлетĕп, есĕ турра ĕненместĕн, пуп Љепашйев тахçанах ун çинђен мана каларĕ; ĕненни ĕненменни маншăн ђи пысăк ĕç мар, халĕ самани çавăн пек; анђах ђăвашсене ан ман—çакă пирĕн ђи пысăк ĕç тет. Ђăнахах та Иван Йаккăлђа ăнлама кансĕрђĕ: вăхăђĕпе епир унăн ђĕринђе хăватлă вут кăвар çуннине кураттăмăр, вăхăђĕпе вăл ђăваш хресђенĕ йурлă пурăнни çинђен, ăна çĕр кирли çинђен, ăсталăх кирли çинђен, вăл пурлакра асапланни çинђен тарăхса калађђĕ, вăхăђĕпе улпутсене, правиттĕљства, пупсене йатласа илеђђĕ, патшисене та систерсе тĕртсе илеђђĕ. Çав вăхăтрах вăл хăйне кăмăллă, унтан вак кăмăллă икенне кăтартађђĕ: вăл хăй пек ђăвашсем университета вĕренме кĕнине

кураймасҫӗ, унта вӗренекен Йехрем Елекҫейӗпе Аҫун Кевӗрлине йалан пирӗн умра хурлаҫҫӗ (сӑмах хушшинҫе ҫакна асӑнас: Йехрем Елекҫейӗ тухтӑра вӗренсе тухса таврӑннӑ ҫух ӑна Тӗрлемес халӑхӗ хирӗҫ тухса илсе стантсаран йала алӑпа ҫӗклесе таврӑннӑ, —мӗншӗн тесӗн, халӑх ҫак йапала ҫӑваш пусмӑрлӑ хресҫене тӗнҫе ҫулӗ тухнине пӗлтернине сисвӗ), пур ҫӑвашла пиҫетленекен кӗнекесене хӑй йаҫӗпе кӑлараҫҫӗ, ыттисем кӗнеке кӑларсан кӗвӗҫеҫҫӗ; епӗ астӑватӑп—1902-мӗш ҫулта шкулра вӗреннӗ ҫух натсионалист Михаил Петровиҫ урлӑ Никоҫскипа ҫыхӑнса епӗ ҫӑвашла икӗ кӗнеке ҫаптартӑм, ҫакна пӗлсен мана Иван Йаккӑлҫӑ кӑшт кӑна пӗҫертсе илмерӗ: есир малашне ман урлӑ, манран пуҫне нимӗн те тума ан пултарайӑр, тесе шакка-шакка каларӗ. Ҫав вӑхӑтрах кӗнеке куҫарнӑшӑн вӑл пӗр пус та тӳлеместҫӗ, ваккатсенҫе, канмалли вӑхӑтсенҫе ирӗксӗрлесе пире кӗнекесем куҫарттарса тарӑхтараҫҫӗ. Астӑватӑп 1905-мӗш ҫул, ҫу вӑхӑҫӗ, хулара миттинкӑсем пыраҫҫӗ, епир шкулра ерттелпе кӗнекесем куҫарса аппаланатпӑр: Ҫеркей Хветӗрӗ апостӑл Павел куҫарать, епӗ псалтир тӳрлетеп; хулара Аҫун Кевӗрлине тӗлпултӑм та вӑл калать: „ку пӗтӗмпех мӑшкӑл, мӗн ӗҫлетӗр есир: халӗ Пипли мар, Марксӑн капиталне ҫӑвашла куҫармалла“ тет. Епӗ нимӗн те хирӗҫ калаймастӑп, „ӑна епир хамӑр та пӗлетпӗрҫке ҫав“ тесе епӗ пуҫа ҫеҫ пусаратӑп. Епӗ пӗлетӗп: ак Ҫеркей Хветӗрӗ, Пимӗрсел ҫынни Пӳккер, вӑл аҫаранах нимӗне ӗненмест, вӑл 1902-мӗш ҫултах Сарату кӗпӗрнинҫе уҫитӗлте пӗр ҫул пурӑнса пайтах револютсиллӗ ӗҫсем туса тӗрмерен кӑшт ҫеҫ тарса хӑтӑлса таврӑнать. Кайарахпа та Ҫӗмпӗрпе Хусан кӗпӗрнисенҫе вӑл пӗр вырӑнтан пӗтӗмпех сирпӗнсе тухиҫҫен револютси ӗҫӗшӗн кӗрешет: вӑл револютсиллӗ теорисемпе тахҫанах палӑшнӑ, вӑл йурӑхсӑр йурлӑ ҫын аҫи (1903-мӗш ҫулта вӑл ҫеминарийе вӗренме кӗрсе пӑхрӗ, вӗренме тытӑнаймарӗ—ашшӗ Ҫӗмпӗре пыҫӗ те „есӗ вӗренес пулсан епир выҫах вилетпӗр“ тесе ӳкӗтле пуҫларӗ, пирӗн маҫҫа ҫӳлӗш вӑрӑм Хветӗр итлесе тӑҫӗ-тӑҫӗ те шинелне хывса сирпӗтрӗ те, ӗсӗклесе йӗрсе илҫӗ—унӑн аслӑ шкулра вӗренӳ ҫавӑ пулҫӗ). Апла пулсан вӑл мӗншӗн револютсиллӗ кӗрешӗве ҫӑнтанах ҫӑтайман-ши? Мӗншӗн тесен, ҫак вӑхӑтра ҫӑваш халӑхӗ кӗрешӗве хатӗрленсе авӑрланса ҫитеймен, ҫӑвашсен револютсиллӗ орканисатсисем ҫӑмӑртанса тӗреклӗленеймен.

Çак вăхăтра малта асăннă Ђĕмпĕрте ђăмăртанакан вĕренекенсен ушкăнĕнђен пуçне урăх ушкăн пулман вăл та револђутсийе хатĕрленекенсен ушкăнĕ çеç пулнă. Унтан çак вăхăтра уйрăм çынсем ессерсемпе сотсиал-темократсен парттисенђе ĕçленĕ, анђах ђăваш хушшинђе вĕсем сахал ĕçленĕ, хăшĕ пĕтĕмпех те ĕçлемен, çапла çак вăхăтра ессерсен парттинђе Ађун Кевĕрлипе Микулай Тимахвийĕ ĕçленнинђен пуçне Хусанта Анисим Василийĕ сотсиал-темократсен парттинђе ĕçленĕ, анђах вăл хăйне ĕмĕрĕнђе ђăваш ĕçĕпе çыхмарĕ, вăл 2-мĕш Тумăра сотсиал-темократсен храксийĕн ђĕленĕ пулђĕ, Тсеретгеллипе пĕрле каторка кайрĕ. Малтанхи уйрăм марксистсенђен епĕр Тимйан Михайлине астăватăп—вăл хăйне 1901-мĕш çултах марксист теђђĕ, марксистсен „Образование" [1]) тенĕ шурналне илсе тăрађђĕ, марксистсен кĕнекисене вулађђĕ, ун çумĕнђен епĕ те ађаранах маркисăмпа кăшт паллашрăм, ун ђухне мана ытларах Лунађђарски христианлă тĕне хирĕç çырнă йапаласем, унтан марксистсем çĕрпе хресђен çине мĕнле пăхнине кăтартакан йапаласем питĕ тĕлĕнтеређђĕç.

Анђах çак асăннă уйрăм çынсенђен пуçне çак вăхăтра револђутсиллĕ теорипе ђăнтан авăрланнă, парттисен прокраммине йышăннă çынсем урăх пулман та. Ытти интеликентси самотершавипе ђиркĕве пуççапас йĕркерен тухса револђутси çинђен кăшт çеç сĕмленни çителĕклĕ вăйлă пулнă пулас: епĕ астăватăп—1903-мĕш çулта Мускавран акатемирен тин вĕренсе тухнă вĕрентекен Аниçим Петĕрĕ (Раççейре хађхи паллă петакок) пыђĕ, вăл пирĕнпе уçă кăмăлпа Мускавра марксистсемпе наротниксем кĕрешни çинђен кала пуçларĕ, епир те ун çинђен сĕмленнине пĕлсен вăл пĕтĕмпех тĕлĕнђĕ: вăл шкул паллама çук улăшăннă иккен, прĕн вăхăтра епир политтикпа çинђен пĕртех те шăхăрман терĕ.

Ђăваш интеликентсийĕн мĕн ђухлĕ тăнĕ-пуçĕ револђутси йенне пăтранкаласа çеç сулăнса тăнă—çавăн ђухлĕ унăн ĕçĕсем те пăтранăçлă пулнă: çав ĕçсем уйрăм вĕрентекенсем йалсенђе вактĕвăк сăлтавпа пупсемпе, старшинасемпе, йал куштанĕсемпе кĕрешнине çеç пĕлтернĕ, вĕренекенсем шкулсен пусмăрлă йĕркипе мĕн пĕлнĕ таран çеç кĕрешнине пĕлтернĕ. Çапах çав кĕрешӳрен

---

[1]) Асăрхаттарни: Маркçиссен çав вăхăтра тă. кайарахпа та „Образование" ĕлтлă шурнал пулман. „Образование" шурнал 1892-мĕш çултанпа туха пуçланă, анђах унта маркçиссем ĕçлемен. Ретактăр.

пĕтĕмпех револютсиллĕ йухăм шăрши кĕрет: астăватăп—1903-мĕш çулта Ђăваш шкулĕнђе вĕренсе тухакансене „Шкул пире мĕн пађĕ“ тесе сођђинени çырма хушаççĕ, Карапăл Иванĕ, шкул нимĕн те кирлине памарĕ, унăн пăсăк йĕрке, унта турăпа патшана çеç пуççапма вĕрентеççĕ, унта йурăхсăр историçĕ Микихвĕр Василийĕ патшасемпе çарпуçлăхсем, унтан митрополитсен çинђен çеç аташат тесе çырат. Çак Иван Йаккăлђăпа вĕрентекенсене уйар çанталăкри аслати пек тĕлĕнтерет. Анђах вĕренекенсем тĕлĕнмеççĕ —вĕсем пур те Карапăл шухăшне йышăнаççĕ. Карапăла çакăншăн вырăнсăр кăларса йараççĕ. Йаппун вăрçи вăхăтĕнђе пире Иван Йаккăлђă патриотсем тăвасшăн: вăл пире 17 çынна вăрçа йама та тăрат, правиттĕлъствă йышăнманнипе çеç епир каймасăр йулатпăр. Çак вăхăтра пире „вăрçăн мĕнле усси пур“ тенĕ сођђинени çырма хушаççĕ, пирĕн йулташ Çеркей Иванĕ вăрçă хура халăхшăн кирлĕ мар, вăл пуйансемшĕн çеç усăлă тесе çырат. Çакна вуласан пирĕн вĕрентекенсем каллех аптăра йулаççĕ. Унтан пире Петĕр патша халăха усă кўни çинђен çырма хушаççĕ, епĕ пур историçĕсен кĕнекисене, Клюђевскийĕн литокрахвипе çеç пиђетленнĕ лексисене вуласа пысăк тĕплĕ сођђинени тарăхса çыратăп, унта епĕ çав патша кўнĕ сийенсене кăтартса çыратăп: вăл самотершавийе тĕреклĕлентернине, крепăçлă пусмăра тĕреклĕлентернине кăтартса çыратăп; çырса парсан мана вĕрентекен Микихвĕр Василийĕ пĕђђене ђĕнсе илет те „çырма есĕ аван çырнă, анђах сан шухăшăсем пăсăк, сан сођђиненине ревисорсене кăтаргма йурамаст, çавăнпа ăна епĕ сана кайалла памастăп“ тет. Çапла çак вăхăтра епир политтиккă йенĕпе сахал ăнланнă пулсаң та, пирĕн тăн çителĕклĕ çивђĕленнĕ, пире револютси шăрши витĕр çапнă.

Çапла ĕнтĕ револютси умĕн хура халăх, унтан ђăваш интеликентсийĕ мĕн халпа пурăннине пĕлсе тăрса малалла вĕсем револютсишĕн йепле кĕрешни çинђен калăпăр.

## IV. 1905—1907-мӗш ҫулсем.

### 1. Хуласенҫе ҫӗкленӗ револютси хумӗсем ҫӑваш йалне ҫитсе перӗне пуҫланни.

Ҫак 1905-мӗш ҫулта ҫу вӑхӑтӗнҫе пулаҥ. 1905-мӗш ҫулхи револютсийе нумайӑшӗ кӑрлаҫӑн 9-мӗшӗнҫе пуҫланнӑ теҫҫӗ. Ҫӑнах ҫак кун питӗ паллӑ кун: ҫак кун Питӗрте патша ӑна тарӑхса асаплӑ пурӑнӑҫа ҫӑмӑллаҥ тесе йӑлӑнма пынӑ ӗҫхалӑхне пӑшалпа персе салатаҥ, нумайӑшне вӗлерсе пӗтерет. Ҫакӑ пӗр-ик кун хушшинҫе пӗтӗм Раҫҫейе паллӑ пулҫӗ. Ҫак кун пӗтӗм Раҫҫейре револютси ҫиҫӗмӗ ҫиҫрӗ, револютси аслатийӗ авӑтса ҫапрӗ. Ҫакӑнтан малалла ӗҫхалӑхӗпе револютсиллӗ парттисем патшапа мӗн хал ҫитнӗ таран кӗрешме тытӑнаҫҫӗ. Ҫак хыпар ҫи пӗтӗм ҫӑваш йалне те ҫитет—пур те ун ҫинҫен калаҫаҫҫӗ: йалти интеликентси, йалти наҫалыствӑ йалан ҫак ӗҫ ҫинҫен калаҫаҥ, пупсем те ҫиркӳре ӳкӗтсенҫе ҫакнах йалан асӑнаҫҫӗ. Пӗрисем патшана айӑпласҫӗ, теприсем халӑха пӑтратакан йеврейсене, стутентсене вӑрҫаҫҫӗ. Анҫах мӗнле ултавлӑ сӑмах ҫӳресен те, кирек кам тӑнлӑ-пуҫлӑ хресҫен те патшан ҫак ӗҫӗ ирсӗр ӗҫ икенне пӗтӗмпех ҫухлаҥ. „Ахалех министӑрсене йалан вӗлермеҫҫӗ пулӗ ҫав, ахалех ӗлӗкрен патшасене вӗлересшӗн айкамаҫҫӗ пулӗ ҫав“ тенӗ сӑмахсем хресҫен хушшинҫех илтӗнет. Унтан ҫасах хуласенҫе хапрӑк-савӑтсем ӗҫлеме ҫарӑнни, унта сапастовкӑсем, тӗрлӗ стаҫкӑсем пыни илтӗнет. Унтан ҫасах Атӑл тӑршшӗпӗ Сарӑту таврашӗнҫе хресҫенсем хумханни ҫинҫен, вӗсем вӑрҫӑри пек хӗҫпӑшаллӑ ҫарпа хире-хирӗҫ кӗрешни ҫинҫен хыпарсем ҫитеҫҫӗ, кайарахпа унта ҫар министӑрне йӑнӑрал Сахарава вӗлерни ҫинҫен хыпар ҫитет. Хресҫенсем пӗрле ҫул ҫине тухсан, пухӑва пухӑнсан, пӗрлешсе ӗҫ ӗҫлеме йе ӗҫкӗҫикӗ тума пуҫтарӑнсан—йалан ҫав илтӗнекен-сисӗнекен револютсиллӗ хусканусем ҫинҫен сӑмах ҫӳретеҫҫӗ. Анҫах Вӑтам Атӑл тавринҫи йалсем кӗркуннеҫҫенех ҫӗкленеймесӗр лӑпкӑ тӑраҫҫӗ. Таврари хуласенҫе ҫеҫ ҫителӗклӗ вӑйлӑ кӗрешӳ пыраҥ. Унта ӗҫлекенсем, вӗренекен ҫамрӑксем

йалан миттинксем тăваççĕ, политси таврашпе çапăçкаласа илеççĕ; патшана хирĕç пыракан пуршуаçи те çемствă пухăвĕсене йе хула туми пухăвĕсене пухăнса йалан самотершавийе хирĕç калаçаҭ. Пур тĕлте те петтитси тенĕ сăмах çеç илтĕнет, çепла ӳкĕтлесе мĕн те пулса ыйтса çырнă хута калаççĕ. Çавăн пек хутсене çемствăсем, хула тумисем, тĕрлĕ ушкăнсем, миттинк йĕркине пуçтарăннă пухусем правиттĕљствăран конститутси ыйтса, Патшалăх Туми ыйтса тĕрлĕ краштанлă ирĕклĕхсем ыйтса йараççĕ. Епир йалта пурăнакансем çакăн çинђен пĕлсе тăрăшатпăр, анђах вăхăтлăха хамăр нимĕн тума аптăраса тăратпăр: халăх ĕçре, вăл лăпкă, епир вăрттăн салатакан прокламатсисене те вăл хăракаласа çеç илет. Анђах револђутсишĕн ĕçлемесĕр мĕнле пурăнас—епир те уншăн çамрăк ђĕрепе тӳсме çук çунатпăр. Акă çурла уйăхĕнђе Пăва уйесĕнђе епир ђăваш вĕрентекенсем те петтитси çырма шухăш тытатпăр: ăна пирĕн малта асăннă марксист Тимйан Михайли çыраҭ: çак петитсийе епир çемски сопранийĕ йађĕпе паратпăр, петтитсире шкул ĕçне вĕрентекен аллине пама, шкул ĕçĕнђен исправниксене, çемски нађаљниксене, пупсене, инспекторсене пĕтĕмпех пăрса йама хушатпăр. Çак пирĕн хут татăкĕ уйесе нехекрен çурăлакан помпă пек тĕлĕнтерет: улпутсем пур нађаљствă тăнран кайаҭ, петтитси çинђен калаçнă ђух нимĕн калама аптăранипе улпутсен пуçлăхĕ Хусан проккурорĕ пулнă Коловински „çакăн пек хута ађа-пăђа çеç алă пусма пултараҭ—вĕрентекенсем ађасем вĕсем“ тет. Çакна илтсен епир „кăтартăпăрха епир сана ађасем, ват супнă кăрка“ тетпĕр пĕр пĕрипе кулăшкаласа. Хăш ытти урăх ђăваш уйесĕнђе те вĕрентекенсем пирĕн пекех малтан револђутсиллĕ кĕрешĕве çапла петтитси таврашçырса çыхланса кайнă. Епир çырса панă хут татăкĕ пирĕн уйес хуçисене улпутсене пĕтĕмпех шухăша йертет—çав хутран вĕсене револђутси сасси илтĕнет, çавăнпа вĕсем çемски управ пуçлăхĕ вырăнне хăйсен ĕлĕкхи тăшманне катетсен парттинђе тăракан Понђ-Осмоловские суйласа лартаççĕ. Пирĕн уйесра шкулсен инспекторĕ те ђăваш çынни Роман Уçăпĕ пулаҭ, вăл та катетсен парттинђе тăраҭ. Çак катетсем ђи малтан пире йал револђутсионерсене хăйсен серетипе çыхлантарса хăйсене пăхăнтарма тăраççĕ: ак пире старшинасем урлă Пăвана пухаççĕ, унта пысăк пуху пухăннă, унта пур те пынă, исправник çеç çук, унтан улпутсем-реаксионерсем çук; пухура катетсен прокраммине йышăнаççĕ,

партти комиттеҫӗ суйлаҫҫӗ, пире те унта кӗме ҫӗнеҫҫӗ. Епир сайавлени паратпӑр: епир сотсиалистсем—хӑшӗ ессерсем, хӑшӗ сотсиалтемократсем, ҫавӑнпа катетсемпе пӗрлешме пултараймастпӑр" теттпӗр те тухса киле таврӑнатпӑр. Таврӑнсан Пимӗрҫелӗнҫе епир канашлатпӑр: хулара липералсем, пуршуаҫи, интеликентси орканисатсиленет, вӑл револютси шӑтӑрнакне хӑй аллине илесшӗн тӑрӑшать, ҫавӑнпа ҫасрах хресҫенсене орканисатсилеме тӑрӑшас тетпӗр.

## 2 Хресҫен пухӑвӗсемпе хресҫен приковорсен кампанийӗ.

Пӗтӗм Раҫҫей ҫак вӑхӑтра самотершавийе хӑйнех хӑй йӗркинҫен тунма хушать: мӗнле пуху ан пухӑнтӑр—унта правиттӗлствӑран тӗрмесенҫе ларакан револютсионерсемшӗн амнисти, халӑхшӑн краштанлӑ ирӗклӗхсем ыйтакан ресолутси йышӑнаҫҫӗ. Ҫав пухусем ӗҫлекенсен пухӑвӗсем пулсан, унта сотсиалистсем пулсан—краштанлӑ ирӗклӗхрен пуҫне ҫавӑнта йышӑннӑ ресолутси Раҫҫейре респупликкӑ йӗрки тума сунать. унтан тӗрлӗ сотсиаллӑ сунавсене кӑтартать: пӗтӗм ҫӗре хресҫене парассине, тӗп пысӑк ҫӗр пурлӑхӗсене, нетрӑсене патшалӑх аллине илессине, хапрӑк-савӑтсенҫе 8 сехетрен ытла ӗҫлемелле маррине. ытти ҫавӑн пек сунавсене те кӑтартса тӑрать. Епир те хресҫен пухӑвӗсене ҫав йӗркепех туса иртерме шухӑш тӑватпӑр. Малтан пухӑва епӗ Кӑнла Кушкинҫе тухатӑп (епӗ унта аҫасем вӗрентсе пурӑнаттӑм, ҫав йал Иван Йаккӑлҫӑн тӑван йалӗ). Пухӑва старӑстӑ пухать. Пухӑва епӗ ҫӗр ҫинҫен, унтан револютси ҫинҫен каласа кӑтартассине илтсен пӗтӗм йал пухӑнать: пуху пӳрте шӑнӑҫмасть, йӗпе пулсан та тулта калаҫмалла пулать, куратӑп—пухӑва тӑват-пилӗк хӗрарӑм та пынӑ, вӗсем вӑрҫӑри салтаксен арӑмӗсем пулнӑ иккен. Пур каланӑ сӑмаха халӑх калама ҫук хавасланса итлет: пуринте пиҫӗ-куҫӗ савӑнӑҫлӑ йалтӑртатса выҫаса тӑрать. Хам каласа пӗтерсен халӑха хӑйне калаҫма сунатӑп, анҫах халӑх харӑс шавласа кайать: „мӗн калаҫмалли пур кунта, ҫырас приковор" тет. Ҫав шӑвшав хушшинҫе пӗр ватӑ мана калать: „сан сӑмахусем пур те аван, анҫах есӗ мӗншӗн патшана ӳкермелле терӗн, патшасӑр йӗрке пулӗши вара" тет. Епӗ каллех патшасем пур тунӑ усалсене ӑнлантарса паратӑп. Калаҫса пӗтерсен ресолутси вырӑнне епӗ приковор ҫырма, ҫав приковора уйрӑм хут ҫине мар

—приковор кĕнеки çине çырма, ăна пур те алă пусма, ун çине йал пиҫеҫĕ пусма сунатăп, хама приковор коппине ыйтатăп, ăна хаçатсенҫе пиҫетлеме шухăшлатăп, теп. Унтан епĕ халăха ăнлантаратăп: „çак приковоршăн страшниксемпе политси таврашĕ килес пулсан, кама та пулин халăхран тытса кайас пулсан мана ан ўпкелĕр—халăх ĕçĕ асаплă кĕрешўсĕр çийелле тухас çук“ тетĕп. Çакна илтсен халăх тата та хытăрах шавласа кайаҭ: „мĕн ўпкелешмелли, мĕн хăрамалли пур—пĕтĕм халăха наҫалстă мĕн тăвайаҭ—приковора тўрех Питĕре йарас, ăна патши те пĕлтĕр, министрĕ те пĕлтĕр“ тенĕ шав илтĕнет. Кăна епĕ кĕтменҫĕ, хавасланса епĕ приковор коппине тытăм йĕрки пуçĕнҫе тăракан министра йама сунатăп· Халăх та çакна хавасланса йышăнаҭ. Çак пуху çинҫен тепĕр кунех пĕтĕм таврари йалсем илтеççĕ: вĕсем пур те пухăва пыма ҫĕнсе суйланă телекатсене йараççĕ, мана сывлама памаççĕ, çывăрма та вăхăт çук: шкул умĕнҫе мана илсе кайма ҫеретпе темиçе лаша тăраҭ: çак ҫеретре хамăр Пăва уйесĕн, унтан Ҫĕмпĕр уйесĕн, Тетĕш уйесĕн телекаҫĕсем кĕтсе тăраççĕ, çав телекатсен хушшинҫе ҫăвашĕ те, вырăсĕ те, тутарĕ те, мăкши те пур. Илтетĕп—çак вăхăтрах ытти çывăх ҫăваш таврисенҫе Тимйан Михайлипе Контрати Петĕрĕ çаплах ĕçлеççĕ. Йалсем йышăнакан приковорсем пур те пĕр тĕслех, вĕсем пур те „çак та çак ҫисларе епир, çав йал крахштăнĕсем (хресҫен сăмахне пăрахçа кăларма сунатпăр, вăл авалхи ҫуралăха, епир куланай сослови пулнине пĕлтерет) пухура патшалăх ĕçĕсем çинҫен канашласа çакна йышăнтăмăр“... Малалла çĕре выкуп тўлемесĕр хресҫен аллине пĕтĕмпех илесси çинҫен, куланайсемпе налуксене ҫакарасси çинҫен, респупликкă йĕрки тăвасси çинҫен, ăна уҫретитĕлнĕ сопраҫи урлă тăвасси çинҫен, ĕçхалăхне 8 сехетрен ытла ĕçлемелле мар тăвасси, унăн шалупа ĕç тўлевне ўстересси çинҫен, унтан тĕрлĕ крашганлă ирĕклĕхсем çинҫен çырнă. Анҫах мĕншĕн епир патшана ўкерес тийекен приковорсене патшан тĕп тарçи тытăм министăрĕ патне йанă-ши? Ăна епир пĕтĕм хресҫене правиттĕҫствăпа кĕрешес ĕçпе çыхланса кайтăр тесе тунă. Малта епĕ приковорсене пĕтĕм халăх хавасланса турĕ терĕм. Анҫах çапах çакна калас пулаҭ: çак малтанхи пухусенҫех уйрăм револютси йенне сулхăн пăхакан çынсене епир сисеттĕмĕр: вĕсем халăх кĕтмен çĕртен çĕкленнипе малтан тăнрап кайнăҫҫĕ, хирĕç ҫĕнеймесҫĕç, анҫах вĕсем хирĕççи паллăҫĕ. Акă епĕ астăватăп:

Елшел йалĕнҫе пысăк пухă, епир унта 4 револютсионер пынă: Ăмăрткайăк Петĕрĕ, (П. И. Орлов) Тимйаҥ Михайли, Контрати Петĕрĕ, епĕ; пухура Елшел пуйанĕсем сулхăн тăнине куратăп, вĕсен умĕнҫе шурă сухаллă пуйан Ахванеç тăрат, вăл ман йысна пулат, ун пуйанлăхĕ мĕн ҫухлине епĕ аҫаран пĕлетĕп: унăн килçурҫĕ улпутсеннĕ пекех, вăл вунçиҫĕ лаша кӳлет, унăн 150 теçеттине йахăн çĕр пур, унăн ĕмĕрлĕхе илнĕ именисем—куттăрсем пур: пĕри Пăва уйесĕнҫе, тепри Ҫĕмпĕр уйесĕнҫе; вăл мана ҫĕнсе илет те çапла калат: „çапла ĕнтĕ есир, Мĕтри, улпутсене пĕтеретпĕр тетĕр, апла пулсан епир те пĕтетпĕр пулĕ, пирĕн те çĕр ĕçерĕнет пулĕ" тет. Епĕ йăпатса „револютси сире тимĕ, вăл аслă улпутсен йăхне—тĕсне хăртласа тăкасшăн çеç" тесе епĕ суйса йăпататăп çак вăтă йыснана. Анҫах вăл мана шанса ĕненменнине хамах пĕлетĕп. Унтан кайарахпа пĕлетĕп—çак вăхăтрах хамăр йалта Пӳркелĕнҫе пуйансем Каври патĕнҫе уйрăм вăртăн пухăнса канашлаççĕ те ман çинҫен епĕ мĕн вĕрентнине кăтартса Пăвана шалăп параççĕ. Мĕншĕн ҫасах çак пуйансем револютсийе хирĕç пулнă-ши? Çав пуйансен пурин те (йалта çирĕм килле йахăн) ĕмĕрлĕхе илнĕ çĕрсем пурҫĕ, вĕсем улпут именисене илнĕҫҫĕ, хăшĕ вĕсенҫен çĕршер теçеттине тырă акаҫҫĕç, хăшĕн виçшер тĕлте Ҫĕмпĕр уйесне çитиҫҫен куттăрсем пурҫĕ. Çапла хресҫен револютсийе çыхланнă çыхланманах ун хушшинҫе револютсийе хирĕç пыракан сий палăрҫĕ.

### 3. Ҫăваш хресҫенне пусаракан асатте.

Çапла канлă пуçтарăнса, йăвашшăн ларса çырнă приковорсем таврари наҫалства пĕтĕмпех хăратса пăрахаççĕ: çемски наҫалниксем, приставсем, вĕсем хыççăн уратникĕсем те тарса пытанаççĕ, исправникпе улпутсен пуçлăхĕ Ҫĕмпĕре ҫăвашсем акăшмакăп пăлханаççĕ тесе кĕпĕрнатăра телекрам хыççăн телекрам йапараççĕ. Çав вăхăтрах пирĕн приковорсем Питĕре çитсен унтан министăртан кĕпĕрнатăра телекрамсем пыраççĕ: министăр çыракансене тĕплесе пĕлсе саккун тăрăх айăпласа, вĕсене тивĕçлĕрен тавăрса пама хушат. Анҫах çак вăхăтра Ҫĕмпĕрте йăваш кăмăллă кĕпĕрнатăр кнеç Йашвиҫ (кайран ăна йăвашлăхшăн правиттĕлҫства вырăнтан кăларса пăрахрĕ, ун вырăнне хайар Старинкевиҫа хуҫĕ, кăна револютсионерсем помпă пăрахса таткаласа ывăтрĕç): вăл

ҫăвашсем патне страшниксемпе ҫар тавраш йариҫҫен Иван Йаккăлҫа вĕсем патне кайса, вĕсене пусарса таврăнма хушат̆. Иван Йаккăлҫă ăна сапăр пулат̆. Акă халăх асатте килет тесе шавлама тытăнат̆. Ăна пур те питĕ кĕтеҫҫĕ. Иван Йаккăлҫă пĕтĕм ҫăваш тĕнҫинҫе калама ҫук ҫаплă, анҫах пирĕн таврара вăл тата та ытла ҫаплă: вăл хамăр тавра ҫынни, унтан вăл таврари халăха, хисепсĕр нумай ырă ĕҫ тунă: аҫасене вĕрентсе ҫын тăвассинҫен пуҫне вăл нумай йалсене ҫĕр, ҫаран, вăрман туйанма пулăшнă. Ҫапл вăл Кăнла Кушкине пĕтĕм йалне Атăл тăрăх лайăх ҫĕр илсе панă, Пӳркел ҫăвашсене тутарсенҫен, Пăрăнтăк ҫăвашсене вырăссенҫен ҫĕре уйрăм касма пулăшнă (вырăссемпе тутарсем хăвăртрах ĕрҫенипе ҫăвашсене вĕсемпе ҫĕр пĕрле тытма усăлă пулман), унтан Иван Йаккăлҫă кашни йала, нумай уйрăм ҫынсене сут ĕҫĕнҫе, атминистративлă вырăнсенҫе хута кĕрсе пулăшнă. „Асаттене" халăхпа пĕрле епир те хумханма тытăннă хресҫене мĕн каласа лăплантарĕ тесе кĕтетпĕр. Старик ҫейе: хăйпе пĕрле халăхпа калаҫма револ̆утси йенне сулăннă вĕрентекене В. И. Кривов илет (унҫух вăл Ҫăваш шкулĕн вĕрентекенĕ, кайарахпа ăна Иван Йаккăлҫă вырăнтан кăларса пăрахрĕ, вăл вара „Хыпар" ретактăрĕ пулҫĕ). Иван Йаккăлҫă ҫи малтан пирĕнпе курăнăҫса йатлаҫса илет, вăл калат̆: „револ̆утси нихăҫан та ҫĕнтерейместʼ — ҫавăнпа есир ӳлĕмрен ӳкĕнĕҫе ҫеҫ йулăр, унтан револ̆утси пулсан та ҫăвашсене нимĕн усси те пулмаст̆: ҫĕр вĕсене лекес ҫук, вăл улпут хресҫенне ҫеҫ лекет, пуршуаҫи хуҫа пулсан вăл мулсăр ҫăваш халăхне самотершавирен кайа туламĕ" тет. Епир ăна хирĕҫ калатпăр: „револ̆утси ҫĕнтеретех, вăл пĕр вăхăта пăнҫăхсан та каллех ҫĕкленсе ҫийеле тухатех; ак ҫулталăк та тулаймарĕ—ирĕклĕх мăнахвистне патшаран туртса илтĕмĕр (Йупа уйăхĕн 27-мĕш ҫислара тухрĕ), ҫаплах ҫĕре те илĕпĕр, хăйне те ӳкерĕпĕр: револ̆утси ҫăвашсене ҫĕр сахал парассине епир те пĕлетпĕр, анҫах ҫапах ăна пула йурлă хресҫенсемпе вăтам хресҫенсен ҫĕр кăшт та пулин ӳсессине епир шанатпăр; влаҫа епир пуршуаҫи аллине пама шухăшламастăпăр—ăна пĕтĕм халăх темократти аллине пама сунатпăр" тетпĕр. Йулашкинҫен Иван Йаккăлҫă уйрăлнă ҫух калат̆: „ĕҫлĕр хăвăр пĕлнĕ пек, анҫах есир йунăш ҫулпа пыратăр: самотершави тĕреклĕ, револ̆утси ҫасах сӳнет, есир хăвăра та, халăха та илĕртсе пăлхатса ӳкĕнĕҫе хăвaратăр" тет. Малалла Иван

Йаккăлђă пухусем тăрăх йалран йала çӳрет. Пухусенђе вăл йалан çĕр çинђен калаçаť, йалан „револђутсионерсем сире ăçтан çĕр илсе парĕç, йе вĕсем сирĕн çĕршывра аслăк туса, иккĕмĕш етташ туса сире тырă акма мел кăтартĕç“ тесе вăл халăха ӳкĕтлет. Анђах кашни пухура çивђĕрех хресђенсем хăйне те „есĕ мĕншĕн улпутсен çĕрне илмелле мар тетĕн, мĕншĕн илес пулсан укçалла илмелле тетĕн, çĕршыва улпут туман вĕт, унтан çĕр илме пирĕн ăçтан мул илес?“ тесе ыйтса аптăратаççĕ. Старик çапла ыйтнине хирĕç нимĕн те татăклă калаймасť. Хăш йалсенђе Иван Йаккăлђа тӳрех калаççĕ: „есĕ ху та ђăваш, есĕ ху та кĕтӳçĕрен кăна çын пулнă, мĕншĕн есĕ улпутсен майлă çӳретĕн“ теççĕ. Халăхăн çапла кăмăлне сиссен пирĕн „асатте“ ђасах Ђĕмпĕре пăрахса кайаť. Унтан пĕр-ик куна ђарăнса йулнă В. И. Кривов пире калаť: „кăна пĕлнĕ пулсан Ђĕмпĕртен те тухман пулăттăм“ тет. Ăна епĕ калатăп: „йепле намăс мар сана çапла çӳреме—есир халăха пусарса мар, пăтратса çӳрерĕр, çапах ху хăна епĕ халăх сотсиалисђĕ (народный социалист) тетĕн, ак епĕ сана çакăншăн хаçатра питĕ хытă йатласа илемха“ тетĕп (ђăнахах та кайран çак йапала çинђен сырнă корреспотентсире сотсиалист Кривов контр-револђутсионерăн атйутанђĕ пулма та тиркемест тесе çырт ăм).

## 4. Хресђен орканисатсиленме тытăнни.

Раççейре револђутси хумĕсем хăпарнăçем çӳлелле хăпараççĕ. Хуласенђе пĕтĕм хапрăк-савăтсем ĕçлеме ђарăнаççĕ, тĕрлĕ тĕлте ђукун çулсем те çӳреме ђарăнаççĕ, пур шкулсем те хупăнаççĕ. Хуласенђе влаç çук: политсирен хĕçпăшала туртса илнĕ, коротовойсен вырăнне стутентсем хурал тăраççĕ. Хула вĕрекен хуран пек çаврăнаť: пур тĕлте те пуху, миттинк, револђутсиллĕ йурăсем. Хулана кайса килнĕ ђăвашсем тĕлĕнмеллерен тĕлĕнмелле ĕçсем çинђен каласа кăтартаççĕ. Пур хуласенђе вĕренекен ађасем йала таврăнаççĕ, вĕсем пур те сăпастовккă турăмăр теççĕ. Пур ĕçре çӳрекен ђăвашсем те йала пăрахса таврăнаççĕ. Çакна пула халăхăн револђутси йенне туртакан кăмăлĕ аслăланнăçем аслăланса пыраť. Патша краштанлă ирĕклĕхсем çинђен кăларнă мăнахвис револђутсийе пусарас вырăнне тата ытларах çĕклесе йараť. Епир илтетпĕр—Мускавра револђутсионерсем хĕçпăшал çĕклесе правиттĕлђствăпа çапăçса ăна ӳкерешĕн тăрăшаççĕ, вĕсем çав çапăçăва хатĕрленеççĕ. Ђăваш

йалĕсене те тĕрлĕ тĕлтен прокламатсисем, ҫĕнӳсем ҫитеҫҫĕ: ҫав хутсенҫе пуринҫе те хресҫене пĕрлешсе ҫăмăртанма, ушкăнланма, хĕҫпăшал туйанма, правиттĕљствăпа кĕрешме хатĕрленсе тăма хушаҫҫĕ. Мускава хресҫен сойусĕ пуҫтарăнаť. Ҫасах унăн прокрамми, унăн уставĕсем пирĕн пата та ҫитеҫҫĕ. Ку рăхăтра епир хамăр та прокламатсисем пиҫетлетпĕр: вĕсене Ăмăрткайăк Петĕрĕпе кектокрăх ҫинҫе пиҫетлетпĕр, кектокрăха епир хамăрах турăмăр: унăн ҫатмине шăвăҫран турăмăр, унăн хатĕрĕсене Хусантан револютсионерсем леҫсе паҫĕҫ. Ҫăвашла ҫырнă прокламатсисенҫе епир хресҫене йалсемпе вулăссенҫе хресҫен сойусĕн йаҫҫейккисене ҫăмăртанма, ҫав йаҫҫейккăсене пĕр пĕринпе ҫыхса уйеспа кĕпĕрнесен хресҫен ушкăнĕсем тума хушатпăр. Хресҫен орканисатсиленме пултарнине, пултарайманнине епир питĕ тишкерсе сăнаса тăратпăр: епир хамăра хумханакан револютсийĕн ҫийелти хăмписен вырăнне ҫеҫ хуратпăр, револютси ҫĕнтересси пиртен сахал килет, вăл халăхран хăйĕнҫен килет тетпĕр. Анҫан хресҫен ҫăнтан орканисатсиленме пултараймарĕ, ҫавăнпа та пĕр йенҫен контр-револютси ҫасах пуҫне ҫĕкле пуҫларĕ. Ҫапах та пысăкрах, ҫивҫĕрех йалсенҫе ҫăнтан револютсиллĕ ушкăнсем ҫăмăртанҫĕҫ: вĕсен ĕҫе туса тăма суйланă ĕҫтăвкомсем пур, вĕсем пухусем тăваҫҫĕ, уйра ҫырмара, йе вăрманта миттинксем тăваҫҫĕ, вĕсен вăрттăн пиплиоттĕксем пур: вĕсем кĕпĕрнесенҫи револютсиллĕ парттисен кăмиттеҫĕсемпе ҫыхăнса тăраҫҫĕ: вĕсенҫен хыпар, тĕрлĕ наккас, хаҫатсем, кĕнекесем, прокламатсисем илсе тăраҫҫĕ. Унтан тĕрлĕ йалсенҫи йаҫҫейккăсем (ушкăнсене ҫаплах ҫĕнеҫҫĕҫ) пĕр пĕринпе ҫыхăнса тăрса пĕрлешсе вăрттăн сйессем тăваҫҫĕ, ҫавăн пек ҫăваш хресҫенсен сйесĕсем пирĕн таврара Елшелĕнҫе пулаҫҫĕ. Унтан таврари ҫăваш йаҫҫейккисем вырăс йаҫҫейккисемпе ҫыхăнса тăраҫҫĕ: пысăкрах, унтан улпутлă йалсенҫе хресҫен тата та ытларах хĕрӳллĕ, ҫавăнпа унта хресҫен йаҫҫейккисем тата та хастарлăрах. Таврари ҫăваш йаҫҫейккисем Ăнтăрăски, Шумăвккă йаҫҫейккисемпе ҫыхăнса тăрса унта ҫасах пулакан пухусене 30—40 ҫухрăма айакка ҫӳреҫҫĕ. Ҫапла хресҫен мĕнле ĕҫлеме тытăнсан пирĕн професҫиллĕ револютсионерсен ҫун савăнса тăраť: епир калатпăр—астăвăрха, хресҫене никам та ҫавăтса пымасť, вĕсен ушкăнĕсенҫе пĕр интеликент та ĕҫлемест, ҫапах вĕсен ушкăнĕсем йепле лайăх ҫăмăртанаҫҫĕ тетпĕр. Епир асăнатпăр—ик-виҫ

уйӑх кайа епир халӑх ҫине тухма тытӑннӑ вӑхӑтра вӑл ҫӑвара карса тӑнӑ пек итлесе тӑраҫҫӗ, анҫах халӗ халӑх хушшинҫе ҫӑнтан револ̧утсионерсем пур. Хамӑр таврари хресҫен револ̧утсионерсене: Пӳркелсем Шалти Елексантӑрне, Кашасем Вӑкӑр Матвипе Раман Иванне, Такаварсем Никканур Павӑлне курсан епир ытараймасӑр уйӑрӑлаймастпӑр: вӗсем теори тӗлӗшӗпе йалшӑн пӗтӗмпех ҫителӗклӗ ҫитӗннӗ, вӑртӑн орканисатсиленсе ӗҫлеме питӗ ӑсталаннӑ: вӗсем пӗр пӗринпе йавккӑ атрӗсӗсем тӑрӑх ҫыхӑнса тӑраҫӗӗ, сиессенҫе, пухусенҫе револ̧утсионерсене йӗрлекен политси йыттисем ан пулҫҫӑр тесе вӗсем сиессене ,,пароҫ пӗлекен сынсене ҫеҫ кӳртеҫҫӗ.

## 5. Хресҫен револ̧утсишӗн вӑйпа ҫапӑҫни.

Хӗл пулаӗ, 1906-мӗш ҫул ҫывӑхараӗ. Мускавра раштав уйӑхӗнҫе пысӑк востани пулаӗ, анҫах вӑл ҫӗнеймест. Правиттӗл̧ствӑ ӑна ҫарпа пусарсан питӗ нумай ҫынна вӗлерсе пӗтерет. Унтан хаҫатсенҫе Ҫӗпӗрте, Палти тинӗсӗ таврашӗнҫи кӗпӗрнесенҫе правиттӗл̧ствӑ нумай етеме вӗлерсе пӗтерни ҫинҫен илтӗнет. Ҫӗҫҫе хирӗҫ ҫӗҫӗ тытас пулаӗ—правиттӗл̧ствӑ хайарланнӑҫем револ̧утси те хайарланса пыраӗ: хуласенҫе террор каллех вӑйлӑланаӗ, унтан йунлӑ кӗрешӳ пыраӗ. Хӑй кӑларнӑ ирӗклӗх мӑнахвисне правиттӗл̧ствӑ хӑйех таптаӗ, хӑйех нимӗн вырӑнне хумасӗ. Ҫапла вӑл халӑха ирӗккӗн нимӗн те парасшӑн маррине тӳрех кӑтартаӗ. Пур те сисеҫҫӗ: самотершавирен вӑйпа туртса илмесен вӑл нимӗн те памасӗ. Ҫакна тӗттӗмрех хресҫенсем те сиссе тӑраҫҫӗ. Унтан йалсенҫи хресҫен револ̧утсионерсем терророрлӑ кӗрешӳсӗр револ̧утсийе револ̧утси вырӑнне те хумаҫҫӗ. Малта асӑннӑ Роман Иванӗ, Шалти Елексантӑрӗ, ыттисем те нумайӗшӗ пиртен хӗҫпӑшал, помпӑсем ыйтаҫҫӗ. ,,Мӗн тӑвас тетӗр вӗсемпе" тесен ҫав та ҫав старшинана, ҫемски наҫал̧нике йе йалти куштанах вӗлерес тетпӗр теҫҫӗ. Епир апла тума йурамасӗ, апла тусан епир пӗр пӗрин йунӗпе пӗвенсе анархи ҫеҫ тӑвӑпӑр, револ̧утсийе ҫеҫ пӑнҫӑхтарӑпӑр, ҫавӑнпа пуринҫен ытла орканисатсиленес пулаӗ тесе ӳкӗтлетпӗр. Ҫак—сӑмахсене хирӗҫ хресҫен револ̧утсионерсем мана калаҫҫӗ: ,,апла пулсан мӗншӗн ессерсем анархистсем патша тарҫисене кайӑк-кӑвакала пӗтернӗ пек пӗтереҫҫӗ? Мӗншӗн Мускавра пур револ̧утсионерсем, пур сотсиалистсем те хӗҫпӑшалпа правиттӗл̧ствӑпа ҫапӑҫнӑ? Унтан есӗ ху та мӗншӗн старшинана Акким Ваҫплине

„сана йӗкӗлтесе ҫӳренӗшӗн Мертлай вӑрманӗнҫе ӑвӑс тураҫӗ ҫумне ҫакатпӑр“ тенӗ? теҫҫӗ (ҫӑнах та епӗ ҫапла шуӳ туса каланӑҫҫӗ, анҫах старшина ӑна тӗрӗсе хурса Пӑвана шалӑп панӑҫҫӗ). Унтан йалти ҫамрӑкрах револютсионерсен хушшинҫе тӑшмансене вӗлерес тенинҫен пуҫне йалсенҫи патшалӑх выҫӑх вырӑнӗсене ҫаратасси ҫинҫен, унтан пуйантарах ҫынсене ҫаратасси ҫинҫен, усал тӑшмансене вут ҫӗртсе те пулин хӑртласа пӗтересси ҫинҫен те сӑмах илтӗнеҫҫӗ. Ҫапла йалта анархилӗ террор шӑрши сисӗне пуҫларӗ. Тӳрех паллӑ—ҫавӑн пек террор таса хресҫенрен ҫеҫ тенӗ пек пулнӑ ҫӑваш халӑхӗ хушшинҫе вӑйлах пулма пултарайман, вӑл кӑшт ҫеҫ сисӗнҫӗ. Халӑх пӗрлешсе пусмӑрласа тунӑ ӗҫсенҫен ҫӑвашсем хысна, утил, улпут вӑрманӗсене каснине асӑнас пулаӳ. Акӑ пӗрле ҫӗрле ман патма Кӑнла Кушки хресҫенӗсем пыраҫҫӗ, вӗсем „епир халӑхпа ыран Киштек улпуҫӗн вӑрменне касма кайас тетпӗр, анҫах малтан ес мӗн калӑнши тесе пӗлме шут турӑмӑр“ теҫҫӗ. Епӗ калатӑп: „нумайӗшӗ ман йулташсем ҫавӑн пек ӗҫсене питех мухтамаҫҫӗ, анҫах ман шухӑшпа халӑх мӗн тӑвас тенине тӑвасах пулаӳ, анҫах ӑна пӗрлешсе тӑвас пулаӳ, страшниксем мӗнсем килес пулсан пӗр пӗриншӗн питӗ хытӑ тӑрас пулаӳ“ тетӗп. Тепӗр кунне ҫӑнахах та хресҫенсем улпут вӑрманне шавласа хиреҫҫӗ. Ҫакӑн пек вӑрман касусем Хусан кӗпӗрнинҫе пайтах ҫӗрте, Самарпа Ҫӗмпӗр кӗпӗрнинҫе те нумай ҫӗрте пулнӑ, ҫак вӑхӑтрах Стерлтамак уйесӗнҫе Карапӑл Иванӗ ҫак тӗлӗшӗпе ҫителӗклӗ пӑлхав кӑларнӑ, унтан унӑн арӗсленес мар тесе тармалла пулнӑ тенӗ хыпар пире ҫитрӗ. Ҫӑвашсен хушшинҫе улпут именисем ҫуккипе урӑх йенӗпе пусмӑрласа тунӑ ӗҫсем пулнӑ пулман теме йураӳ: именисене ҫарату, улпутсен тыррине кӗлетсенҫен турттару, выҫӑхҫӗрлӗхне тустару, улпутсене хӑваласа йару улпут хресҫенӗсен хушшинҫе, вырӑс хресҫенӗ хушшинҫе пулҫӗ. Ҫак тӗлӗшӗпе хресҫенсем политсипе, тӗрлӗ наҫалствӑпа, унтан пупсемпе вӑйпа кӗрешнине асӑнас пулаӳ. Ҫакӑн пек кӗрешӳ пӗтӗм ҫӑваш ҫӗршывӗнҫе мӗн револютси сӳниҫҫенех пыҫӗ. Ҫак йенӗпе 1906-мӗш ҫулхи кӑрлаҫра Кӗнерпуҫӗнҫе (Пиҫурино) пулнӑ истори питӗ паллӑ вырӑн йышӑнса тӑраӳ, вӑл ҫапла пулаӳ: Ҫак таврара ӗлӗкренпех Микулай Тимахвийӗ питӗ вирлӗ ӗҫлет (вӑл ҫак таврари ҫын пулнӑ); Хусантан кӗпӗрнатӑр ӑна арестлеме хушаӳ, ӑна арестлеме Шупашкартан исправник, пристӑв, ҫемски наҫалник страшниксен командипе

пыраççĕ; вĕсем йури çын сисмен ҫух çĕрле пыраççĕ те пирĕн тĕп хайар револютсионера тытса Шупашкар тĕрмиве ăсатаççĕ; хăйсем слетстви тăвас тесе тепĕр куна йулаççĕ; пирĕн телейе çавăн ҫух тепĕр питĕ вирлĕ ҫăваш револютсионерĕ Ваççили Ваççилҫ пулаŭ; вăл халăха пухăнма çикнал параŭ, пĕрик сехет те иртмест—пĕтĕм таçти таврари халăх хăвăртах пуçтарăнnă та страшниксемпе ытти патшан аслăрах йыттисене çавăрса тыткăна илет; нумайĕшĕ çапла çакланнă усал тăшмансене персе вĕлерсе пĕтерес теççĕ, анҫах апла тусан Шупашкарта Микулай Тимахвине те вĕлерĕç тесе ҫарăнаççĕ, вара халăх страшниксене йараŭ, исправнике, çемски наҫалнике, пристăва перкелесе илсе куттуска хупаŭ те вĕсене Микулай Тимахвине Шупашкартан кайалла кӳртерме хушаŭ; сехри хăпнă исправник темиçе телекрам парса Шупашкартан Микулай Тимахвине ирĕке кăларттарса пĕрик сехет хушшинҫе Шупашкартан утмăл çухрăмран пар лашапа кӳртерет; Микулай Тимахвине халăх „ура“ кăшкăрса çуна çинҫен çĕклесе илет; тыткăнра ларакан наҫалства тĕлĕшĕпе „ку йытăсене мĕн тăвас“ тесе халăх ыйтсассăн, Микулай Тимахвийĕ „йарăр вĕсене, çӳреҫҫĕр хăйсен çулĕпе, вĕсене хупса тытма вăхăт çитмен халĕ“ тет. Çакăн хыççăн икĕ кунтан таврана пулккипе тенĕ пекех салтак пыраŭ те нумайĕшне хресҫенсенҫен ареслеççĕ. Çакă хĕлле пулаŭ: ку вăхăтра халăх лăпкăрах пурăнаŭ, вăл халăх пухăвĕ—Тумă пухăнасса, вăл пурăнăçа çĕнĕ йĕркепе кĕртессе шанарах пурăнаŭ. Çула пулсан çак шанҫăк пĕтет: Тумăна хăваласа йараççĕ, Тумă Выпорк хулине кайса халăх правиттĕлствăпа кĕрешмелле, ăна итлемелле мар, куланай тӳлемелле мар тесе постановлени йышăнаŭ. Çакăнтан вара хресҫен тата ытларах çĕкленме тапратаŭ. Çак вăхăтра ҫăваш уйесĕсенҫен Шупашкар уйесĕ ытларах хумханаŭ, мĕншĕн тесен, унта халăх çивҫĕрех, унта йĕçе çӳрекен халăх пурăнаŭ, çав халăх хушшинҫе револютсионерсем те йышлăрах та вирлĕрех те. Çавĕпе уйесре миттинксемпе темонстратсисем пыраççĕ. Çимĕк вăхăтĕнҫе уйсенҫе, масарсем таврашĕнҫе, утă çулнă ҫух Атăл айлăмĕсенҫе, пасар кунĕ пасарлă йалсенҫе халăх хисепсĕр нумайăн пухăнаŭ те миттинксем йе хĕрлĕ йалавсем çĕклесе, револютсиллĕ йурăсем йурласа темонстратсисем тăваŭ. Çав миттинксенҫе Микулай Тимахвипе ытти револютсионерсенҫен пуçне ахаҫ хресҫенсем те тухса калаçма тытăнаççĕ. Ытла та пысăк та, ҫаплă та миттинксемпе темонстратсисем Исмел пасарĕнҫе пулаççĕ.

Пӗр ҫавӑн пек темонстратси вӑхӑтӗнҫе ҫурла уйӑхӗн 11-мӗшӗнҫе (кивӗ шутпа) Исмеле страшниксен каманти вырӑнти Скворцов уратникпе пырса ҫитет: страшниксемпе халӑх хушшинҫе перӗшӳ тапранаҫ: халӑх ҫулсемпе, ытти кирлӗ-кирлӗ мар йапалапа ҫеҫ хирӗҫ тӑма пултараҫ, страшниксем пӑшал переҫҫӗ, пӗр ҫынна вӗлереҫҫӗ, пилӗк ҫынна суранлатса амантаҫҫӗ. Ҫак кунах каҫ кӳлӗм Исмеле Хусантан кӗпӗрнатӑр пумушникӗ Копеко Тон хусахӗсемпе пырса ҫитет: ҫак хусахсем пӗтӗм таврара хисепсӗр нумай ирсӗр ӗҫ туса пӗтереҫҫӗ, темӗн ҫухлӗ ҫынна аресленҫҫӗ, хӗнесе пӗтереҫҫӗ. Ҫакӑн ҫух аресленнӗ революцсионерсем: Ваҫҫилйӗв Ваҫҫили Ваҫҫилҫ, Павлов Йемелйан Павлӑҫ, Тӳмер Виктор Ваҫҫилйиҫ, Ваҫуш Семен Ситорӑҫ, Крикорйӗв Михайла Крикорйиҫ, Римов Никита Екорӑҫ, Спиритонов Филип Спиритонӑҫ, Крикорйӗв Иван Икнаҫйиҫ; вӗсене пурне те Хусана илсе кайса тӗрмене хупаҫҫӗ, унтан Питӗрти министӑрсен совеҫӗ вӗсене 2—3 ҫула пуҫиле йама йышӑнаҫ. Ҫак революцсионерсенҫен Ваҫҫилйевпа Крикорийева вӗсем уратник Скворцова вӗлерме тапӑнсан нехекрен ҫеҫ тытнӑ: арестлесен вӗсене полицси кӑшт ҫеҫ вӗлермен, тӑнран кайиҫҫен хӗнесе пӗтернӗ, унтан тӗрмене хупса тытса кайарахпа вӗсене Ҫӗпӗре пуҫиле йаҫӗҫ. Унтан ҫак вӑхӑталлах Куславккара вырӑс хресҫенӗсемпе ҫӑвашсем Сапротинпа Волҫков, унтан парон Шеллин улпутсен именине ватма тытӑнаҫҫӗ; хресҫенсене пусарма Хусантан кӗпӗрнатӑр Хомуттӑв пыраҫ; хресҫенсем ӑна кӑшт ҫеҫ Атӑла ывӑтаймаҫҫӗ вӑл пӑрахутпа тарса ӗлкӗрет. Ҫак уйӑхрах Свиник саттунӗнҫе ҫармӑссемпе ҫӑвашсем Сункурӑв йатлӑ ҫемски наҫалник канселерне ҫӗмӗрсе салатса ывӑтаҫҫӗ, хӑйне перкелесе илеҫҫӗ, вӑл вара пуҫиле пӑрахса тараҫ. Ҫак ӗҫшӗн Ҫӗпӗре 25 ҫынна йараҫҫӗ. Ҫак таврарах тата Караҫра каҫункка вут хыпаҫ—те ӑна йури вут тивертнӗ, йе вӑл нехекрен ҫунма тытӑннӑ—ӑна пӗлейместпӗр, анҫах астӑватӑп: халӑх вута сӳнтерме памасҫ, сӳнтерме хушакан уратнике хӗнесе пӗтерет; ҫак ӗҫпе И. С. Серкейева, М. Ф. Феторова, С. И. Иванова страшниксем тытса кайаҫҫӗ, ҫул ҫинҫе вӗсене хӗнесе минкетеҫҫӗ; ҫак ӗҫпе И. С. Серкейев нумай тӗрмере ларҫӗ, йулашкинҫен ӑна сут пур краштанлӑ правасенҫен те кӑларса арестансен рутне ҫул ҫурра хупрӗ. Шупашкар уйесӗнҫе тата та ҫавӑн пек йапала нумай пулнӑ. Малта асӑннӑ революцсионерсенҫен пуҫне уйесра тата та пайтах ҫын ӗҫленӗ, ҫавсенҫен: И. В. Влатимирова

(тӗрмере пайтах ларҭӗ), М. Е. Ефимова, салтак-инвалит Апрамова, акраном Пеђайева, тухтăр Кушниккова (пӗрремӗш Тумăн ҭленӗ) асăнас пулаѓ. Ҫакăн пекех кӗрешӳ ытти уйессенҭе те пыраѓ, ҫапла Пăвара Пукрав йармăнккинҭе пысăк темонстратси пулаѓ, ҫав темонстратсийе салатнă ҭух страшниксемултă сынна вӗлереҫҫӗ, нумайӗшне сураналҫҫӗ. Ҫак вăхăтра ҭăваш тавринҭе пур хуласенҭе страшниксен камантисем, пур улпутименисенҭе хусахсем, ҭерккес таврашсем пурăнаҫҫӗ, вӗсен хӗҫпăшал, пулеметсем пур, ҫапах хресҭен тӳсеймесӗр ҫара алăпа та пулин вӗсемпе кӗрешме тапăнаѓ. Револ̧утси вӗресе тăнă вăхăтра ҫак хайар утлă ҫар та халăхран хăраса кăна ҫӳрет, анҭах револ̧утси пусăрăна пуҫласанах вăл пуҫне ҫӗклет, хресҭене темӗн ҭухлӗ асап кăтартаѓ. Ак Пăва исправникӗ страшниксемпе Елшелне ҭăвашсене унта вăртăн пухусемпе пысăк сиестсем тунăшăн тытма пыраѓ, вăл страшниксене вăртăн ҫулпа йалсене кӳртмесӗр илсе пыраѓ, Елшелне ҫитнӗпе вăл ҫӗлӗкне илсе сăхсăхаѓ, страшниксене те кӗлтума хушаѓ: „те сывă кайалла таврăнайăпăр, те ҫук“ тет. Ҫакă наҭал̧ствă револ̧утси пуҫламăшӗнҭе хресҭенрен йепле хăраса тăнине, ун хушшинҭе мӗнле паниккă пулнине кăтартаѓ. Анҭах пăлханакан халăхпа хире хирӗҫ тăркаласа илсен хресҭен аллинҭе ҭукмарпа сенӗкрен пуҫне нимӗнле хатӗр ҫуккине сиссен—политси питӗ усалланса кайаѓ. Ҫав йал патне сăхсăхса ҫывăхаракан исправникех ҫара алăпа хирӗҫ тăма пултарайман хресҭенсене курсан—вӗсене хӗнеттерсе пӗтерет; 30—40 ҫынна Ҭӗмпӗре тӗрмене ăсатаѓ. Кайарахпа револ̧утси ҫӗнтерейменни палăрсан политси хресҭен хушшинҭе йут, вăрҫăра пăхăнтарнă халăх хушшинҭе ҫӳренӗ пек ҫӳрет: ак Пăва уйесӗнҭе пристăв Пек пур: вăл ӗҫсе ӳсӗрӗлмессерен страшниксемпе хресҭен хушшине ухутăна тухнă пек тухаѓ, уйрăм сăнанă ҭăвашсене пухса вӗсене нухайккапа ҫаптараѓ, ҫапла вăл Ҭураҭăк таврашӗнҭе питӗ нумай ҭăваша хӗнесе амантаѓ. Ҫакăн ҫинҭен епӗ хаҫатсенҭех ҫыратăп, Пека сута пама ыйтатăп. Анҭах Пек хăй ӗҫӗсемшӗн правиттӗл̧ствăран накратăсем илсе тăраѓ. Вăл ӳсӗрпе страшниксемпе ман патма та пырса перӗнет (епӗ пӗр вăхăтра Ипреҫре аҭасене вӗрентсе тăтăм), вăл мана „есӗ мӗншӗн мана хаҫатсенҭе мăшкăлатăн, ак епӗ сана лаша хӳри ҫумне кăкарăп та хӗрӗх сухрăм сӗтӗрсе кайса Ҭураҭăк ҫырмине ывăтăп“ тет; епӗ ăна „есӗ мана ҫапла тусан маншăн партти

сана çеç мар, пӗтӗм ăруна-йăхна çав çырманах ҭикӗ“ тетӗп те патша йытти ман патăмран йатлаçкала çеç тухса кайат[1]). Тата астăватăп: малта асăннă Пӳркел револҭутсионере Шалти Елексантăра Политси питӗ кураймаст, анҭах ăна нимӗнле йӗрлесен те тӗрмене хупмалли сăлтав вăл тупаймаст; аптăранă йенне пристăв (хушаматне маннă) Пăваран страшниксемпе пырат те Шалти Елексантăра тытса пӗтӗм халăх куçӗ умӗнҭе кăнтăр варринҭе амантса ăнтан йариҭҭен хӗнет; хӗнесе тăрансан политси килне кайат. Шалти Елексантăрне халăх пуҭнитсана леçет; çак ӗç çинҭен те темӗн ҭухлӗ тарăхса хаçатсенҭе çыратпăр, Шалтийе хамăр майлă тухтăрсене пăхтаратпăр, вӗсенҭен хӗненине кăтартакан çвитеттӗлствăсем илетпӗр, кӗпӗрнатăртан слетсви тума ыйтатпăр, анҭах нимӗн те тухмаст: пристăва пӗр вăхăта вырăнтан пăраççӗ, слетстви тунă пек кăтартаççӗ, унтан çавнах лайăхрах вырăн параççӗ. Çавăн пек политсийӗн пур ирсӗр ӗçӗсем çинҭен, хресҭен çав ирсӗр ӗçсемпе йепле кӗрешни çинҭен тӗплӗ калас пулсан сăмах вӗçӗмсӗр вăрăма кайма пултарат, мӗншӗн тесен, çавăн пек кӗрешӳ кашни йалпа кашни вулăсра пулнă. Çав кӗрешӳ ҭасах политсийе халăх çине пыма старшинасемпе уратниксем, револҭутсийе хирӗç пыракан пуйансем, унтан пупсем елеклесе илӗртнипе тухса кайнă. Унтан хресҭен хушшинҭе уйрăм ҭăнтан террористсемпе терростăвакан ушкăнсем те палăрнă, анҭах ун çинҭен уйрăм калăпăр.

## 6. Ҭăваш вӗрентекенсем прохвеççиллӗ ушкăнсене ҭăмăртанни.

Вӗрентекенсем ҭăвашсен хушшинҭе пуринҭен малтан оркнисатсиленеççӗ. Малтан Пăва уйесӗнҭе вӗрентекенсем 1905-мӗш çул кӗркуннех сойус тăваççӗ: çав сойуса тăвиҭҭен инитсиаттивлă ушкăн тӗрлӗ районсемпе вулăссенҭе вӗрентекенсен пуххине пухат. çав пухусенҭе Тимйан Михайлипе епӗ çырнă уставпа палаштарат,

[1]) Епӗ çак сăмахсене пурне те тӗрлесе Ҭӗмпӗр хаçатӗнҭе пиҭетлетӗп, унтан пурăпӗр ман уйесрен каймаллине пӗлсе Пăван шкулсен советне мăшкăласа хут çыратăп: çав хутра пристăвпа страшниксем мана аҭасене вӗрентсе пурăнма кансĕх памаççӗ, çавăнпа мана халăха хӗçпăшал салатса шкула политсирен сыхлаyмалли трушинă тума ирӗк парăр тесе çыратăп, унтан хут вӗçӗнҭе калатăп:, ман шухăшпа халăх шкулӗ улпут имениеҭен патшалăха кирлӗрех йапала, именисене страшниксемпе ҭерккессем сыхлаççӗ пулсан, мӗншӗн шкулсене вăрăхурах пек усал политсирен сыхлас мар, тетӗп.

Çак хутăн коппине Ҭӗмпӗре йаратăп, ăна хаçатра пиҭетлеççӗ.

унтан уйес пуххине телекатсем суйлаттарса, ҫав телекатсен пуххине политси сиситтен Упи йалёнте пухаҫ. Ҫак пуху устава йышӑнаҫ, сойусӑн ӗҫтӑвкомне суйлаҫ, тӗленсем уйӑхсерен тӳлесе тӑмалли шута татса каласа хураҫ (шалуран 2 проттӑн тӳлемелле йышӑнаҫ). Ҫак сойусра пуринтен ытла ӗҫтӑвком пуҫлӑхӗ Тимйан Михайли ӗҫлет, епӗ те ҫекреттар вырӑнӗнте ӗҫлекелетӗп. Сойус тасах пӗтӗм Раҫҫейри вӗренекенсен сойусӗпе ҫыхӑнса тӑраҫ; ҫак сойус пирӗн ушкӑна уйесри филиал вырӑнне йышӑнаҫ. Пирӗн сойусра пур вӗрентекенсем тенӗ пекех шутланаҫҫӗ, вӗсем пур те тӗлен укҫи тӳлесе тӑраҫҫӗ, сойус ӗҫӗсем ҫинтен ӗҫтӑвкомран хыпар илсе тӑраҫҫӗ Сойус йалан пухусемпе сйестсем тӑваҫ: ҫав пухусемпе сйестсене вӑртӑн пухатпӑр, ӗҫкӗҫикӗ йе ташлама пухӑннӑ сӑлтавпа пуҫтарӑннӑ тесе хайласа кӑтаратпӑр, мӗншӗн тесен, политси сиссен пирӗн сойус пӑнтӑхаҫ тетпӗр. Сойус хутӗсене пытарса усратпӑр, ҫыру тавраш ҫӳретес пулсан пуштӑпа ҫӳретместпӗр, пӗр пӗрин урлӑ ҫеҫ ҫӳрететпӗр. Сойус ӗҫне пӗтӗмпех тӑваш вӗрентекенсем ҫеҫ туса тӑраҫҫӗ. Епир хӗлле Тӗмпӗре кайса пӗтӗм кӗпӗрнери вӗрентекенсене те кӗпӗрне сойусне орканисатсилес тесе те ӗҫлесе пӑхатпӑр, антах ытти вырӑс уйесӗсенте вӗрентекенсем прохвеҫҫиллӗ ушкӑнсене тӑмӑртанайманнипе пирӗн ӗҫ тухмасҫ. Ҫапла револютси вӑхӑтӗнте тӑваш вӗрентекенсем вирлӗрех ӗҫлени пӗтӗм таврана витӗр палӑртӗ, ҫавӑнпа револютси хыҫҫӑн унӑн тӑшманӗсем йаланах пур тӑваш вӗрентекенсем те шантӑксӑр ҫынсем, вӗсем пур те револютсионерсем тесе калаттӗҫ те. ҫыраттӗҫ те. Револютси вӑхӑтӗнте тӑваш пупӗсен хушшинте те сайра пӗрре ун ҫине ӑшӑ кӑмӑлпа пӑхакансем, револютсионерсемпе килӗшӳллӗ пурӑнакан ҫынсем пуртӗ, вӗсем те пирӗн сойуса ҫырӑнасшӑн пултӗҫ. Антах сйес пупсене сойуса кӳртме йурамасҫ, мӗншӗн тесен, кирек мӗнле пуп та турӑ саккунӗнтен тунма пултараймасҫ, ҫав вӑхӑтрах сойус ҫав саккуна шкулран кӑларса ыватаҫ терӗ. Сойусӑн шкул прокрамми халхи прокраммӑ йевӗрлехтӗ, сойус вӗрентекенсене пур йентен те хӑйсен интересӗсемшӗн пӗрлешсе кӗрешме пулӑшаттӗ. Антах сойусӑн прохвеҫҫиллӗ трепованисем хыҫалта ҫеҫ вырӑн йышӑнса тӑраттӗҫ: унӑн тӗп ӗҫӗ политтиккӑ ӗҫӗ, револютсиллӗ кӗрешӳттӗ. Сойусӑн уставӗ те тӳрех малтан утретиттӗлни сопрани ҫинтен, хрестенпе ӗҫ халӑхне вӑл ыйтнине парасси ҫинтен калаттӗ унтан кайран тин шкул ӗҫӗ

мӗнле пулмалла, вӗрентекенсем йепле пӗр пӗриншӗн пӗрлешсе кӗрешмеллине кӑтартаҭҭӗ. Малтан вӑртӑн пытарӑнкаласа ҭӑмӑртаннӑ сойус пыра киле уйесра ҫителӗклӗ хӑват илҭӗ: ҫемски управ пуҫлӑхӗ катет Понҭ-Осмоловски пулсан вӑл сойус телекаҭӗсен сйесне пухма пиртен ыйтрӗ, хӑй сйеса политси ҫыхланасран хам хӱтӗлӗп терӗ; сйесра шкул ӗҫӗ ҫинҭен пур йенҭен те канашласан управ пӗтӗм шкул ӗҫне сойус аллине пама пулҭӗ. Анҭах репреҫсисем пуҫланнипе ҫак ҫемствӑ йышӑннӑ постановлени вырӑна кӗреймерӗ. Сойус пӗр вӑхӑтра шкулсен пуҫлӑхне малта асӑннӑ Роман Усӑпне те пӑркаларӗ: акӑ инспектӑр Пӱркел вӗрентекенӗнҭен П. П. Петровран 300 тенкӗ укҫа пусмӑрласа ыйтни ҫинҭен хыпар сарӑлаҭ; инспектӑрӑн тӱрленме Крыма каймалла пулаҭ иккен те анҭах мул ҫитеймест пулаҭ—ҫав мула памасан вырӑнтан кӑларӑп тесе унӑн ҫынран пусмӑрласа туйанасшӑн пулаҭ. Ҫакӑн ҫинҭен малтан пӗлсе тӑрса епир инспектӑра йала укҫа илме пырсан тытатпӑр та пӗтӗм халӑх умӗнҭе йатлатпӑр, унтан ӑна ҫак пӑсӑк ӗҫе пӑрахма хушатпӑр, П. П. Петровран каҫару ыйтма хушатпӑр, ҫапла тумасан епир сойус йаҭӗпе пойкот тума тытӑнатпӑр, унтан ҫав пойкота пӗтӗм Раҫҫейри вӗрентекенсен сойусӗ урлӑ тумалла тӑватпӑр тетпӗр. Инспектӑрӑн ирӗксӗрех пӑхӑнмалла пулаҭ, кайарахпа вӑл ҫак историйе пулах уйесрен те пӑрахса каймалла пулҭӗ. 1906-мӗш ҫулта ҫурла уйӑхӗнҭе сойус пӗтӗм Раҫҫейри вӗрентекенсен Финҭаьтире пулнӑ виҫҫӗмӗш сйесне телекат та суйласа йаҭӗ: ҫав сйеса Тимйан Михайли кайса илҭӗ. Ҫапла ҭиперех ӗҫлекен сойус 1907-мӗш ҫулӑн пуҫламӑшӗнҭе нехекрен пӗтсе ларҭӗ: 1906-мӗш ҫулта Раштав уйӑхӗнҭе ман патӑмра опыск пулҭӗ, ку вӑхӑтра епӗ сойус пуҫлӑхӗҭҭӗ, опыск тунӑ ҭух политси сойуса Питӗртен йанӑ пиплиоттекка, унтан мӗнпур сойус хуҭӗсене шыраса тупса илҭӗ. Ҫав ӗҫ ҫапла пулса тӑҭӗ: Тимйан Михайли Финҭантири сйесран таврӑннӑ ҭух Питӗрте „Вольное Экономическое Общество" тенӗ ушкӑнран сойус ваҭҭи унтан хресҭен ваҭҭи револютсиллӗ пиплиоттеккӑ ыйтса ӑна йама атрӗс Ипреҫ шкулне кӑтартса хӑвараҭ. Ҫак кӗнекесем ҭукун ҫулпа килеҫҫӗ, вӗсене епӗ шкула илетӗп, анҭах шантарм епӗ вӗсене илиҭҭен пӑхса тухаҭ, списсӑк тӑваҭ те Улатӑрти шантармери полковникне хыпар тӑваҭ. Ҫак сӑлтавпа шантармери пристӑв Пекпа страшниксене ҭӗнсе ҫӗрле ҫывӑрнӑ вӑхӑтра ман хваттере ҫавӑрса илеҫҫӗ. Ӗлӗк епӗ

пĕр политси аллине лекмелле мар йапаласене хам патăмра усрамастăмђĕ: вĕсене Хăмпуç Патăр йалĕнђе Н. Е. Ђернов патĕнђе усраттăм, хам стантсара управ çуртĕнђе пурăнаттăм. Страшниксем мана вĕлересшĕн айканнине сиссен епĕ йала халăх хушшине хваттере куçма турăм, çав хваттерех Н. Е. Ђернов куçма турĕ, нехекрен опыск епир куçнă каç пулђĕ: пĕр йапалана та епĕр пытарманђĕ, тепĕр кун пытарăпăр тесе çывăрма выртнăђђĕ: çак опыскра сойус хуђĕсенђен пуçне политси суйа паспăртсем, унтан паспорт планккисем тупаť (ман хваттер Хусанпа Пенсă хушшинђе çӳрекен ессерсен йавккă хваттерĕђђĕ, унтан ман патма тарса çӳрекен револђутсионерсем пытанса пурăнма пырађђĕç). Опыск хыççăн пристăв полковник патне Улатăра кайаť, мана ирĕке хăвараť. Тыгассине пĕлсе епĕ тарма хатĕрленетĕп. Анђах пристăв çав кунах кайалла таврăнаť, епĕ çапла çав кунах таврăнĕ тесе шухăшламанђђĕ, çавăнпа тепĕр кунĕ пассашир пойĕсĕпе Хусана кайма тунăђђĕ. Пристăв малтан правленийе кĕрет те унта сыпса хĕрĕнкĕленсен „кĕçĕр револђутси хурђăкине Петрова тытса Улатăра полковник патне леçетĕп“ тет. Çакна илтекен ђăваш старшина В. А. Акеев (Ентрийалсем пулас) мана пристăв каланине систерет. Епĕ çутăлнăпа стантсана таратăп, унта мана ђукун çул çинђе ĕçлекенсем тавар пойĕсĕ килиђђен пытарса усраççĕ, унтан вăл килсен вăртăн лартса ăсатаççĕ. Çав полковнике, унтан икĕ шантарма Улатăр стантсинђе кайарахпа Микулай Тимахви çумĕнђе ĕçлекен П. Н. Мошкин пăшалпа персе вĕлерђĕ. Вăл Раççейре ђи паллă террорист пулђĕ: ăна патша суђĕ виçĕ хутђен çакмалла турĕ, çапах та тарса мăнахвисе лексе сывă йулђĕ (унпа епир вăл катăркăран таврăнсан 1917-мĕш çулга Ђĕмпĕр кĕпĕрнинђен Уђретиттĕлни Сопранийе суйланса кайрăмăр, халĕ вăл комунист).

Сойуса çĕнĕрен ђăмăртама пирĕн вăй çитеймерĕ: нумайĕшĕ епир уйесрен тармалла пултăмăр, хăшĕ сойусра ĕçлекенсем тĕрмене те кĕрсе ӳкрĕç. Сойус ĕçĕпе вунă вĕретекене йахăн вырăнтан тухса ӳкрĕç, ӳлĕмрен шкулра ĕçлеме правиттĕљствă вĕсене ирĕк памарĕ. çапла Тимйан Михайли (ăна Питĕртен министр хăй телекрам парса кăларттарђĕ), Тит Йăрмушĕ, Кавăрле Укахвийĕ, Ентри Йевленĕ, Йăкăнат Мехвотийĕ, Контратти Петĕрĕ, Ăмăрткайăк Петĕрĕ (икĕ çула ссылкка кайрĕ) вырăнсăр пурăнса иртермелле пулђĕç. Сойус ĕçĕпех тĕрмере Слессарев ларђĕ. Унтан нумай вĕрентекенсем

çак сойус ĕçĕпе уйесе пăрахса урăх уйессене вырăна куçмалла пулţĕç. Малта асăннă çынсенţен пуçне сойусра ĕçлекенсенţен астăватăп: хаţхи паллă петакока Матви Тимахвине, Пĕлĕм Елекçейне, Ţернов Наумне. Сойусăн пур хуţĕсене, алăпа çырнă уставне 1917-мĕш çулта революци пулсан Ţĕмпĕрте шантармăсен архивĕнţе шыраса тупрăм. Çав хутсене курсан ţунăм питĕ савăнţĕ: вунă-вуник çул çеç иртрĕ, çав хутсенţе тарăхса çырнă йапаласем пулса тăţĕç, çийеле тухрĕç.

Пăва уйесĕнţен пуçне ытти уйессенţе те ţăваш вĕрентекенсем сойусла ушкăнсем тума тытăнкаласа пăхнă, çапла Йетĕрне уйесĕнţе сойус ţăмăртансах çитнĕţĕ: çав ţăваш вĕрентекенсен сойусĕ çинţен Раççейри Вĕрентекенсен Сойусĕн пӳллеттенĕсемпе шурналĕсенţе асăннине астăватăп. Унтан вĕрентекенсене органисатсилес тĕлĕшĕпе Йăкăнат Çитăрĕ Ţистай уйесĕнţе вирлĕ ĕçленĕ, вăл Ţистай хулинţе вĕрентсе пурăннă, политси хĕсĕрлеме тытăнсан вăл Хусана тарса ӳкрĕ, унта сотсиалист-револютсионерсен парттинţе ĕçлерĕ, унтан „Хыпар“ регактăрĕ пулса тăţĕ. Анţах ţасах вăл тĕрмене лекрĕ, правиттĕльствă ăна йут патшалăхсене пуçиле хăваласа йаţĕ; сылккăра вăл Швейтсарире, унтан Паришра пурăнса иртерţĕ; ăна сылккăра пурăннă ţух пĕтĕм Раççейри вĕрентекенсен сойусĕ кашни уйăха вуникĕ тенкĕ укçа парса пулăшса тăţĕ.

## 7. Халăх ушкăнĕ (натсионаллă сойус) пулса тăни.

Çапла малтан хресţенпе интеликентси те йалсенţе, вулăссенţе, уйессенţе органисатсиленет. Унтан кайарахпа пĕтĕм ţăваш халăхне пĕрлештерекен ушкăнсем пулса тăраççĕ. Çав ушкăнсенţен ţи паллă вырăн ţăваш сойусĕ йышăнса тăрать. Çак сойус 1906-мĕш çулта çула ţăмăртанать. Сойуса пуçтарас ĕçпе Микулай Тимахвипе Аţун Кевĕрли ĕçлеççĕ: вĕсем пур ţăваш таврине те Ţĕмпĕре сйеса телекатсем йама хыпар тăваççĕ, çав телекатсене çурла уйăхĕн пуçламăшĕнţе çитме хушаççĕ, сйес ăçта пулассине пĕлме вăрттăн атрĕссем кăтартса параççĕ. Çапла сйеса пур йенţен те ţипер сыхланса хатĕрленсе тăнипе политсипе шантармери сисеймерĕ те—епир пысăк сйес туса илтĕмĕр. Çак сйеса пухас,

орканисатсилес тӗлӗшӗпе тата Пӗлӗм Елексҫейӗпе Матви Тимахвийӗ ӗҫленӗ. Сиес ҫурла уйӑхӗн иккӗмӗшӗнҗе Ҫӗмпӗртен вуник ҫухрӑм ҫӳлерех Атӑл улӑхӗн сӗмвӑрман җӑтлӑхӗнҗе пулҗӗ. Сиеса аллӑ ҫынна йахӑн пухӑнҗӗ, сиесра пур паллӑрах җӑваш револютсионерӗсем тенӗ пек пур, сиесра Хусан, Ҫӗмпӗр, Самар, Ӗпхӳ җӑвашӗсем пур. Сиес пулмалли малтан сӑнаса хунӑ вырӑна кимӗсемпе пӗҗик-пӗҗик ерттелпе кайатпӑр: пур тӗлте шӑршласа ҫӳрекен шантармери йыттисем ан сисейҗҗӗр тесе хамӑра уҫӑлма тухнӑ мешҗенсем пек кӑтартатпӑр, кирлӗ-кирлӗ мар йурӑсем йурлатпӑр. Пуху пуҫтарӑнса ҫитет, пуҫлӑх суйлама тытӑнатпӑр, унҗен те пулмасӑ виҫӗ вӑрман страшникӗ пӑшалсемпе пырса тухаҫҫӗ. Пуху тӗрлӗ тӗле вӑрман йенелле саланма тытӑнаӑ. Микулай Тимахвийӗ: ан саланӑр, канлӗ пулӑр, ҫак йытӑсене епӗ майлатӑп, тет. Вӑл страшниксене айаккарах илсе кайса пӑшӑлтатса калаҫаӑ, унган вӗсене алӑпа парса уйӑрӑлса пирӗн пата кулса таврӑнаӑ. Епӗ вӗсене майларӑм: пӗр сехетрен саланатпӑр, пирӗн ҫумма ан ҫыхланӑр, ҫыхлансан пире те лайӑх пулмӗ те, анҗах ҫыхлансан сире тата та пысӑк сийен пулӗ, мӗншӗн тесен, епир хатӗрсӗр мар терӗм, тет. Унтан хӑшӗ ытларах сыхланакансем калама тытӑнаҫҫӗ: Атӑлӑн тӑвайккинҗе утлӑ ҫар камантисем миттинксемпе пухусене айкаса ҫӳреҫҫӗ, ҫавӑнпа пирӗн пайан кайалла таврӑнмалла марши? теҫҫӗ. Микулай Тимахвийӗ кулса вӗсене пусараӑ: вӑрман җӑтлӑхӗнҗе политси аллине лекме епир кӑрккасем мар вӗт, вӑрман җӑтлӑхӗнҗе епӗ пӗр рут салтака парӑнмастӑп, пире ҫавӑрса илес пулсан вӗсене хӑйсене җӑлпар салатма ман помпӑ та пур, тет. Ҫапла пухӑва пуҫлатпӑр. Инитсиатгивлӑ ушкӑн пуху пуҫлӑхне Алун Кевӗрлине суйлама сунаӑ, епир йалта ӗҫлекенсем Тимйан Михайлине суйлама сунатпӑр. Пуху пуҫлӑхӗ нумай сасӑ илекен Алун Кевӗрли пулаӑ. Җи малтан пуху пӗтӗм җӑваш хушшинҗе ӗҫлекенсем револютсийӗн пӗрлешсе ӗҫлеме пӗр ушкӑна җӑмӑртамалла тесе йышӑнаӑ. Ҫак постановленишӗн пур те сасӑ параҫҫӗ. Анҗах малалла вӑл мӗнле ушкӑн пулмалла тесе канашлама тытӑнсан, ушкӑн уставӗ мӗнле пулмалла тесе канашлама тытӑнсан питӗ хытӑ тавлашу тытӑнаӑ. Микулай Тимахвийӗ ҫак җӑваш ушкӑнӗ ессерсен парттипе ҫыхӑнса тӑмалла, вӑл ҫав парттийӗн җӑваш орканисатсийӗ пулмалла, ҫавӑнпа вӑл тӳрех ҫав парттийӗн прокраммине йышӑнмалла тет. Алун Кевӗрли урӑхла

рах пăхаť: вăл натсионаллă ушкăн, пĕтĕм халăха пĕрлештерекен ушкăн пĕр партти орканисатсийĕ çеç пулма пултараймасť, çавăнпа ушкăн парттисемпе çыхăнса тăмалла мар, хăйне уйрăм ушкăн пулмалла тет, анђах унăн политтиккă тĕлĕшĕпе йышăннă прокрамминђе ессерсем пек çĕре сотсиалисатсилесси çинђен кăтартмалла, мĕншĕ тесен, пĕтĕм ђăваш халăхĕ хресђен халăхĕ, тет. Çак сунавсене питĕ хирĕç сотсиал-темократ Тимйан Михайли калаť, вăл калаť: епĕ те сирĕн пекех ђăваш хушшинђе ĕçлетĕп, епĕ марксист, есир наротниксем, çапах та епĕ те револђутсишĕн пирĕн пĕрлешсе ĕçлемелли куç умĕнђе курăнса тăраť тетĕп, анђах есир ђăваш ушкăнне ессерсен парттине кўртсе йарсан йе вĕсен прокраммине кăшт та пулин йышăнсан епĕ ушкăнра пулма пултараймастăп, çавăнпа çак ушкăн ђăваш хушшинђе ĕçлекенсен прохвеççилĕ ушкăн çеç пултăр, унăн прокрамми револђутсийе çийеле кăларма пулăшассине çеç пĕлтертĕр, анђах уйрăм парттисенђен йышăннă тĕплĕ прокраммă унăн ан пултăр, тет. Епир ыттисем ессерсен парттинђе тăракан йе çав партти йенне суйлăннисем те хăшĕ иккĕленкелесе калаçатпăр: епир сйеса ессерсен орканисатсине ђăмăртас сăлтавпа пухман, ăна тăвас пулсан тепĕр уйрăм сйес пухас пулаť, унтан пире револђутсишĕн кĕрешме пĕр револђутсиллĕ фронт кирлĕ тетпĕр. Унтан Микулай Тимахвипе Ађун Кевĕрлине хирĕç парттисенђе тăман йулташсем хытă калаçаççĕ. Вара сйес ђăваш ушкăнĕ тĕрлĕ парттисенђе тăракан ђăваш револђутсионерĕсен, пур ђăваш вĕрентекенĕсене, унтан пур ђăваш хушшинђе ђăваш халăхне малалла прокрес çулĕпе илсе пырас тесе ĕçлекенсене пĕрлештерекен ушкăн пулмалла тесе йышăнаť. Унтан вĕрентекенсем хытă тăнипе сйес çав ушкăн Раççейри пĕтĕм вĕрентекенсемпе халăх хушшинђе ĕçлекенсен сойусĕн уйрăм натсионаллă филиал пумалла тесе йышăнаť. Çакна йышăнсан пирĕн хĕрў ђĕреллĕ Микулай Тимахвийĕ аллине сулласа илет те тўсеймесĕр калаť: мĕнле револђутсиллĕ орканисатси пулђĕ ĕнтĕ ку, кулђтурнĕксен ушкăнĕ, интеликентсен ушкăнĕ халăх массисенђен пуçне, револђутсиллĕ хресђенрен пуçне нимĕн те револђутси тума пултараймасť, вăл револђутсиллĕ хăмпăсене çеç вĕрсе кăларма пултараť, тет. Çак постановленисене йышăнсан пуху Ађун Кевĕрлипе Микулай Тимахвине сйес калаңă йевĕрлĕ устав çырса пиђетлеме, унтан çав устава алă пусса, ĕçтăвком суйлама

тепӗр пуху пухма хушса саланаҫ. Ђӑнахах та ҫав ушкӑнӑн уставӗ уйрӑм пӗђӗкҫӗ кӗнеке ҫинђе ҫапӑнса тухрӗ, ӑна вырӑсла ҫырнӑђђӗ. Анђах ҫав ушкӑн урӑх сиес пухаймарӗ: ӑна пухма вӑхӑт та пулмарӗ, вӑй та ђакрӗ (нумай йулташ тӗрмене лекрӗ), унтан малта курӑпӑр—ђӑваш революцутсионерсен кӗрешӗвӗ те урӑхрах ҫулпа кайрӗ.

## 8. Ђӑваш ессерсем органисатсиленни.

Ђӑваш ессерсем 1903-мӗш ҫултах органисатсиленме тытӑннӑ. Ҫак партти ушкӑнне ђӑмӑртакан Микулай Тимахвийӗ вӑл парттире йалан питӗ вирлӗ ӗҫлесе пурӑннӑ, анђах ҫав вӑхӑтрах вӑл йалан ђӑваш ӗҫӗпе те кӗрмешнӗ. Ун ҫумӗнђе йаланах ђӑваш ҫамрӑкӗсем ђӑмӑртанса, ун ҫумӗнђен револђутси ӗҫне вӗренсе пурӑннӑ. Револђутси пуҫлансан вӑл парттире пигӗ паллӑ ҫынђђӗ: вӑл Атӑл тавринђе партти кӑмиттеђӗн ђленӗђђӗ, вӑхӑђӗпе Атӑл тавринђи ҫапакан (боевая) органисатсийӗн пуҫлӑхӗ те пулнӑ. Вӑл пӗтӗм Раҫҫейри ессерсен пухӑвӗсенђе пулнӑ, ӑна партти пуҫлӑхӗсем пур те пӗлнӗ. Ӑна вӗсем вӑл калаҫнӑ ђух йалан ђӑвашсене асӑннӑшӑн „ђӑваш респупликкин преҫитенђӗ“ тесе ђӗннӗ. Вӑл ђунӗпе макҫималисђӗ, ӑна пур ессерсем те ҫаплах калаҫа ђӗнеђђӗҫ, вӑл хӑй те унтан тунмасђӗ; ессерсемпе вӑл макҫималистсен вӑйлӑ органисатсисем пулманнипе ҫеҫ ӗҫленӗ. Вӑл 1905-мӗш ҫултах ђӑваш ессерсен ушкӑнне ђӑмӑртама тытӑнаҫ: вӑл Ђӗмпӗрти кӗпӗрне кӑмиттетне йалан пӗр вырӑн ђӑвашсене памалла, ҫав вырӑна йышӑнакан ҫына ђӑвашсем хӑйсем суйламалла тесе постановлени йышӑнтараҫ. Кайарахпа ҫав кӑмиттет ђӗленӗ пулса Микуш Петӗрӗ тӑђӗ. 1906-мӗш ҫулта ђӑваш ушкӑнне органисатсилесе ҫитернӗ вӑхӑтра вирлӗ ӗҫлекен Йӑкӑнат Ҫитӑрне тӗрмене хупаҫҫӗ, Микулай Тимахвийӗ ӑна тӗрмерен тартасшӑн ӗҫлесе ахаљ вӑхӑта иртермелле пулаҫ, мӗншӗн тесен, епир сисмен ҫӗртен Йӑкӑнат Ҫитӑрне правиттӗлствӑ ытти патшалӑхсене кӑларса ывӑтаҫ. Унђен те пулмасҫ Хусанта ессерсен „Атӑл хыпарӗ“ тенӗ вырӑсла хаҫат ҫекретарӗ вырӑнӗнђе ларакан Аљун Кевӗрлине тытса тӗрмене хупаҫҫӗ, унтан Ҫӗпӗре хӑваласа кайаҫҫӗ, ӑна епир вунӑ-вунпилӗк ђӑваш ваксала ӑсататпӑр, конвой унпа калаҫма пире ирӗк памасҫ, епир хамӑр шухӑшсене алӑсемпе суллакаласа ҫеҫ кӑтартатпӑр. Аљун

Кевĕрлине Патшалăх Тумин пуçлăхĕ ун хутне кĕнипе, унтан Йараслав литсейĕн профессăрсен совеҫĕ: вăл профессăра хатĕрленес стутен, çавăнпа ăна Европпа йарсан усăллăрах пулĕ тесе ун хутне кĕнипе—политси теппартамĕнҫĕ ăна ытти патшалăсене хăваласа кăларса ыватаĭ.

Çапла есерсен йăви саланнăçем саланса пыраĭ. Çапах та Микулай Тимахвийĕ пĕртте шухăша йерсе, алăсене усса лармасĭ: вăл хăй йĕритаврa çамрăксене пухаĭ, парттийе ҫăвашсен уйрăм автономлă ушкăн пур тет, парттирен ҫăвашла хаçат „Хыпар" кăларма укçа илсе тăраĭ. Анҫах çав ушкăн тĕрĕсрен 1907-мĕш çулта мункун каç çеç ҫăмăртанҫĕ: çак каç пур ҫăваш ессерĕсен Хусанта вăртăн сĭест пулҫĕ. Çав сĭестра 46 телекат пулҫĕ, çав телекатсен хушшинҫе пур кĕпĕрнесенҫен пынă револютсионерсем те пурҫĕ. Çав сĭест çапла пулҫĕ: астăвап, мункун çитес ерне кун епĕ Ҫĕмпĕрте хаçат ретаксинҫе Хусантан телекрам илетĕп, телекрам çинҫе „мункунра авланатăп, Микушпа туйа килĕр" тесе çырнă, телекрама Хури йанă тесе çырнă; авланни пирĕн хушăмăрта кирлĕ ĕçе, туй пуху йе сĭест таврашне пĕлтереҫĕ, Хури тесе ҫăваш ессерсем Микулай Тимахвине ҫĕнеҫĕç. Телекрам илсенех Ҫĕмпĕр кăмиттеҫĕн ҫĕленĕпе Микуш Петерĕпе епир васкаса пăрахутпа Хусана кайатпăр. Унта «Хыпар» ретаксине пырса сĭест ăçта пулмаллине пĕлетпĕр. Ку вăхăтра политси, шантармери, шпиксем кашни утăмра—вĕсем йалан револютсионерсене йĕрлеççĕ, çавăнпа питĕ ҫейе пулас пулаĭ. Пирĕн Микулай Тимахвийĕ пек политси куçĕ умĕнҫех вăртăн ĕççем туса илекен çынсем вырăс револютсионерсен хушшинҫе те сахал; ун çинҫен тĕрĕсрен вутпа та çунмасĭ, шывра та путмасĭ теме кирлĕҫҫĕ: ăна тытасшăн вунă-вуншилĕк шпик йĕрлет, анҫах вăл çавсен хушшинҫех йалан çаврăнса çӳрет, ăна паллама çук: йе вăл улпут, йе ват супнă мишҫен, йе шурумпурăм илекен-сутакан тутар. Сĭеста йури мункун каç пухмалла вăлах тăваĭ: çак каç политси ĕçкĕ ĕçет, питех асăрхаса сыхламасĭ, унтан пире çавăрса илсен те епир мункуна хирĕç илсе ĕçкĕ-çикĕ тума пухăнтăмăр теме пултаратпăр. Сĭест Александровăн сăра склатĕнҫе уçăлаĭ. Пуху умĕн Микулай Тимахвийĕ калаĭ: йулташсем, камăн та камăн алăра йе кăсĭара политсийе кăтартмалли хутсем пулсан вĕсене йе çурса ыватăр йе пытарăр, мĕншĕн тесен, епир кĕçĕр аресленме пултаратпăр, тет. Унтан аресленес пулсан епир мĕн тумалли çинҫен

канашласа илсе ҫапла тума йышӑнатпӑр: шантармери пире хуплас пулсан епир „Христос вилӗмӗнҭен ҭӗрӗлнӗ" йе ытти ҫавӑн пек йурӑсем йурлама тытӑнатпӑр, хӑшӗ ӳсӗре хыватпӑр, сӑра кӗленҭисене ватма тытӑнатпӑр епир. Ҫавӑнпа малтанах пирӗн пӳлӗме ҫимелли йапаласем, пӗр карҫинкӑ сӑра лартаҫҫӗ. Ҫакна склатра ӗҫлекен вырӑс рапоҭисем, тӑваҫҫӗ, вӗсемех урамра хурал тӑраҫҫӗ. Епӗ: пуху ӗҫлеме тытӑниҭҭен сӑрана пуҫлас пулаӗ, ӑна пуҫламасан ӗҫ ӑнмасӗ, тетӗп. Микулай Тимахвийе кулса калаӗ: сӑра патне Ҫимун (С. Н. Николаев) есӗ лар, пӑантсӑ Мӗтрийе унтан хӑвала, вӑл ҭӑнах та кӳпме тытӑнӗ, тет. Малалла сӗест ӗҫлеме тытӑнаӗ, вӑл ҫӗрӗпе ӗҫлесе ҫутӑлнӑпа саланаӗ. Сӗест ҭӑваш сотсиалист-революҭутсионерсен уйрӑм ушкӑн пулмалла тесе йышӑнаӗ, ҫав ушкӑн ҫинҭен полошени йышӑнаӗ, унтан ушкӑн ӗҫӗсене туса тӑма сапискӑсемпе вӑртӑн сасӑсем парса виҫӗ ҫынран пӳро суйлаӗ: ҫав пӳрона Микулай Тимахвийӗнҭен пуҫне 1901—1903-мӗш ҫулсенҭех революҭутсипе кӗрмешсе пурӑнма тытӑннӑ Микулай Ҫимунӗпе Ҫеркей Хветӗрӗ суйланаҫҫӗ. Унтан сӗест пӳрона хӑй кӑмӑлӗпе кооптатси йӗркипе тата икӗ ҫынна кӳртме хушаӗ, пӳро, мана, унтан Н. Ф. Пеӆайева кӳртмелле тесе йышӑнаӗ. Ҫапла ҭӑвашсен хушшинҭе ҭи малтан партти ушкӑнӗ ҭӑмӑртанаӗ. Анҭах ҫак ушкӑн нумайах ӗҫлеймест, мӗншӗн тесен, вӑл ҭӑмӑртанни кайран пулаӗ: ку вӑхӑтра реакси питӗ вӑйлӑланаӗ, патшалӑх тилкепине хайар Столыппин алла илсе революҭутсийе пур йенҭен те пӗтерме тӑраӗ. Ҭасах Микулай Тимахвийӗ хӑй те аресленет, вӑл тӗрмерен тарса тухаӗ, ӑна пӗтӗм политси ҭи пысӑк тӑшмана шыранӑ пек шыраӗ, ҫавӑнпа унӑн та вӑхӑта нумайӗшне шпиксенҭен сыхланнипе ирттермелле пулаӗ. Унтан Хусана ӗҫлеме куҫнӑ студент Микуш Петӗрӗ кӗтмен ҫӗртен ҭирлесе хӑвӑртах килне ҫитеймесӗр Нурӑс пуӆнитсинҭе вилсе кайаӗ (вӑл Кӑрмӑш ҭӑвашӗҭҭӗ). Аӆун Кевӗрлине Керманирен вӑртӑн илсе килме тӑрӑшатпӑр, вӑл хӑй те таврӑнасшӑн ҫунса тараӗ: епӗ ӑна Ҭӗмпӗртен Перлина паспорт йаратӑп, паспорта ессерсен кӗпӗрне кӑмиттеҭӗнҭен илетӗп, мана Карсуп уйесӗнҭе Аслӑ Пересник вулӑсӗнҭен ҫапса илнӗ паспорт таса планки параҫҫӗ, планкӑ ҫинҭе старшина пиҭеҭӗ те пур, епӗ планкӑ ҫине ҫав паспорт хуҫи Пересник хресҭенӗ Софрон Йакӑлҭӑ Соколов тесе ҫыратӑп, ҫак паспортпа, ҫак йатпа Аӆун Кевӗрли Раҫҫейе таврӑнаӗ, анҭах вӑл пирӗн пата ҫитиҭҭен питӗ

вăрах вăхăт иртет: вăл Финђанти урлă таврăннă, ун ђухне кранитсă урлă каçма питĕ хĕн пулнă. Пирĕн хушшăмăрта пытанса пурăнма унтан ĕçлеме те çуккине кура вăл Саратту хулине кайса унта пурăнма тытăнаť. Çак вăхăтрах Микулай Тимахвийĕн партти ĕçĕпе Париша каймалла пулаť, вăл: халĕ унта каймасан та йурами? тесен мана калаť: Париша кайса епĕ тӳрех виçĕ кайăка тытатăп: ђăваш орканисатси вађђи укçа туйанатăп, Парижран Йăкăнат Çитăрĕпе Прохор Трахвинне кунта ĕçлеме илсе килетĕп, унтан хам тĕнђене куратăп, Шореса итлесе пăхатăп, тет. Çапла Ђĕмпĕртен Микулай Тимахвине епĕ Хрантсийе ăсататăп. Унта кайнă ђух вăл ушкăн пиђетне пире парса хăвараť, çав пиђете пилĕк пус пăхăр укçаран тунăђђĕ, ун çинђе ђăвашла çапла касса çырнăђђĕ: „сотсиалист-револютсионерсен Хусан орукĕнђи ђăваш организацийĕ“, унтан партти лосункĕ „вăйпа кĕрешсе хăна тивĕçлине туйанăн“ тенĕ сăмахсем пурђĕ пулас. Париша çитсенех Микулай Тимахвийĕ Прохор Трахвинне Раççейе ĕçлеме хăвалаť, вăл кайарахпа Ђĕмпĕре ман патма пыраť, Микулай Тимахвийĕ: вăл ĕçлеме таврăнаť тесе çыраť; çырура тĕрлĕ ĕçсем хушшинђе Микулай Тимахвийĕ: ђас таврăнас тетĕп, Парижра милкĕпе çапăнма мунђа çук, тесе çыраť. Прохор Трахвинне епĕ паллаймастăп: Ђĕмпĕр шкулĕнђе ăна çăпатапа çӳрекен ађа пек астăватăп, халĕ вăл пĕтĕмпех хрантсус пулса кайнă. Вăл Парижра 4 çулђен рапођђи пулса пурăннă, вăл пахђасенђе ĕçлесе пурăннă, пĕр вăхăтра вăл Париж тавринђе йалхуçалăхпе кĕрмешсе пурăнакан ĕççынниесен прохвеççилĕ сойусĕн секреттарĕ пулса пурăннă, унта вăл синтикалист вырăнне шутланнă. Анђах таврăнсанах пирĕн емикравт револютси ĕçĕпе ĕçлеме ман халĕ вăй çук, епĕ йала кайса ахаљ çеç пурăнасшăн, тет. Унтан вăл килме те, киле тунсăхласа, ђăвашсене тунсăхласа çеç килтĕм тет. Вăл киле питĕ тунсăхланине епĕ ĕлĕкех илтнĕђђĕ: Париша малта асăннă ђăваш ахвитсерĕ Йермулай Ахванеçĕ кайса килсеђђĕ, вăл Прохор Трахвинĕпе курăнăçнă, çак ăна ăсатнă ђух: манăн та киле пырас килет, тесе ваксалра ĕсĕклесе йĕрсе йулђĕ, тет. Çапла вара вăл Самара кайаť те хăй ирĕкĕпех политси аллине парăнаť: сут ăна арестансен рутне хупаť, унта вăл икĕ çул ларса тухаť. Çапла ушкăна çĕклес шанђăк пĕтнĕçем пĕтсе пыраť. Ытти ушкăна кĕнĕ йулташсенђен нумайĕшĕ çамрăк, ушкăна йертсе пыма пултараймаççĕ,

нумайӗшӗ тӗрмесенҫе лараҫҫӗ, политсирен тарса ҫӳреҫҫӗ. Микулай Тимахвийӗ Паришран Хусана таврӑнаҭ, анҫах таварӑннӑ-таврӑнманах ӑна тӗрмене хупаҫҫӗ. Ҫакна илтсен епир ушкӑн пӑнҫӑхрӗ тетпӗр, ӑна ликвитатсилеме шут тӑватпӑр. Ушкӑн пиҫетне пытарса сыхлама епӗ Паймек Иванӗпе В. И. Кривова паратӑп—вӗсене политси тавраш тивес ҫук, вӗсем тӗрӗс-тӗкел пурӑнса иртерӗҫ, ҫавӑнпа пиҫете сыхлама пултарӗҫ пек туйӑнаҭ. Малтан вӗсем ҫав пиҫете Ҫӗмпӗрти йармӑнка корпусӗн пӗр йуппи ҫумне ҫӗре шӑтӑк алтса пытараҫҫӗ пулас, унтан хамӑр пурӑнакан ҫурта куҫараҫҫӗ—ҫтенан пӗр ҫынна паллӑ мар шӑтӑкне ҫикеҫҫӗ.

Ҫак пиҫете пытарни епир хамӑра хамӑр та пытарнӑ пек туйӑннӑ пулас пире, мӗншӗн тесен, ҫак кунсенҫе епир Ҫӗмпӗрте йалан йут патшалӑхсене пӑрахса кайас тесе канашлатпӑр, йулашкинҫен епӗ, В. И. Кривов И. С. Паймеков Венкрийе Путапешт универҫитетне ҫыру ҫыратпӑр, ҫав ҫырӑва нимӗҫле пирӗн ретактӑр Миллер тӗрлесе параҭ, ҫырура пире, пусмӑрлӑ ҫӑваш халӑхӗн ҫыннисене, тӑван матйар ӑслӑлӑхҫисене вӗренме кӗме унтан вӗренсе пурӑнма пулӑшмӗҫ-ши тесе ҫыратпӑр епир (Путапешт универҫитетӗнҫе хвинпа тӳрк йӑхӗсем ваҫҫи уйрӑм стипентисем пурҫӗ). Анҫах хирӗҫ ҫыру илеймерӗмӗр, вӑл политси аллинҫе пӑнҫӑхрӗ пулӗ терӗмӗр.

1917-мӗш ҫулта Паймекпа Кривов пиҫете темӗн ҫухлӗ шырарӗҫ те анҫах тупаймарӗҫ. Ҫапла ҫӑваш халӑхӗ хушшинҫе ҫи малтан ҫӑмӑртаннӑ политтиккӑ ушкӑнӗ, партти ушкӑнӗ ҫухалаҭ, исторpopulace унӑн йаҫӗ ҫеҫ йулаҭ. Йулашкинҫен ушкӑн ҫинҫен 1908-мӗш ҫулта авӑн-уйӑхӗнҫе патша сутӗнҫе нумай калаҫу пулаҭ: Хусанта Микулай Тимахвине сут тӑваҫҫӗ, ҫав сут 12 кун тӑршшӗпе пыраҭ, Микулай Тимахвийӗ тунӑ ӗҫсене шутласа кӑларма ҫук, ҫав ӗҫсен хушшинҫе ҫӑваш орканисатсийӗн йаҫӗ те йаланах асӑнӑнаҭ, анҫах сут аллинҫе пӗр токасаттӗлствӑ та ҫук—ҫӑваш провокатӑрӗ Михайла Кирили (Йелҫӗксем, хушамаҫӗ Маҫтсев) елеклени ҫеҫ пур. Сут Микулай Тимахвине каторка йама тӑваҭ, ҫав каторка унӑн пурӑнӑҫне пӗтӗмпех ҫийет: вӑл каторкаран 1917-мӗш ҫулта ӑсран тайӑлса таврӑнаҭ. Сутра Микулай Тимахвине хӳтлекен сашитник Керенски пулаҭ, вӑл патшалӑх Тумин ҫӗленӗ пулаҭ, Микулай Тимахвине вӑл ессерсен тӗп комиттеҫӗ хушнипе сутра хӳтлет. Ҫак ӗҫе пӑхнӑ сута Микулай Ҫимунне Ҫӗмпӗртен Хусана ирӗксӗр илсе

кайрĕç, ăна айăп тенкелĕ çине лартма сутăн сăлтав пулнă, çавăнпа ăна сута свитеттĕл вырăнне кўртнĕ; анђах ăна сут умĕнђе прокурор тĕрлĕ вопроссем парса пур йенђен те пăркалаť, вăл та Микулай Тимахвийĕпе пĕр ушкăнра пулнине систерет, çапах та ăна айăп тума токасаттĕлствă çук (сут аллинђе провокатăр К. М. Мађтсев шантармерийе çырнă тоноссем пулнă, анђах çавăн пек тоносТокасаттĕлствă вырăнне хисепленмесђĕç, унтан вĕсем секретлă йапаласем пулнă, вĕсем çинђен сутра калаçма йураман). Çак орканисатсийĕн йатне хам тĕлĕшĕпе вăрçă умĕн илтмелле пулђĕ: мана кĕпĕрнатăртан хут килђĕ, çав хутра вăл: епĕ, Ђĕмпĕр кĕпĕрнатăрĕ, шантармери управленийĕн пуçлăхĕпе унтан Хусанри сут палаттин прокурорĕпе килĕшсе сана ессерсен парттинђе тăнăшăн, вĕрентекенсен профессилĕ сойусĕнђе ĕçленĕшĕн, унтан хресђен хушшинђе хресђен сойусĕн йађђейкисене ђăмăртанăшăн айăплас ĕçе пĕтертĕмĕр, çавăнпа санăн Пăвана кайса салтака илекен присыва кĕмелле, тенĕђђĕ. Çак ĕçе пула епĕ слетстви аллинђе ултă çул ытла пурăнтăм: пĕр йенђен вăл маншăн питĕ пысăк ырлăх пулђĕ—мана пуçиле Çĕпĕре йарасран хăтарђĕ (сут ĕçĕпе çыхланнă çынсене атминистративлă йĕркепе йамасђĕç), тепĕр йенђен ăна пула епĕ политсийĕн пĕлтерўлĕ (гласный) натсорĕнђе пурăнмалла пултăм, çавăнпа ссылккăра пакех ни вырăна кĕме, ни вĕренме кайма пултараймарăм, йулаштинђен 28 çула çитсен присыва кĕрсе пĕр-ик ерне тăршшĕпе салтак пулмалла пултăм (унтан ђасах шанђăксăр тесе тиркесе мана ирĕке кăларса йађĕç).

## 9. Ытти парттисемпе правиттĕлства хирĕç пыракан ушкăнсенђе ĕçлекен ђăвашсем.

Çаксенђен ђи малта маркситсем тăраççĕ. Малтах епир револ̧утсиђђенех пирĕн хушăмăрта икĕ вирлĕ сотсиал-темократ Тимйан Михайлипе Аниçим Ваçилийĕ палăрни çинђен асăнсаттăмăр. Унтан епĕ вĕренекенсемпе вĕрентекенсен хушшинђе марксисăм йенне сулăнакан çамрăксене пĕлеттĕм, анђах çапах та марксистсем револ̧утси вăхăтĕнђе ушкăнланса ђăмăртанаймарĕç. Мĕншĕн çапла пулни каламасăрах паллă: вăл пирĕн ĕçхалăхĕ аталанса çитейменнинђен килнĕ. Ал̧ун Кевĕрлине Микулай Тимахвийĕ террора хирĕç пынăшăн тўрех: есĕ ессер мар, есĕ сотсиал-темократ, тезђĕ, лешĕ ăна хирĕç: апла ђĕнсен те ўпкелеместĕп, мĕншĕн тесен, марксисăм

ӑслӑлӑх тӗлӗшӗпе тӗрӗсрех. теҫҫӗ.—Апла пулсан мӗншӗн есӗ сотсиал-темократсемпе ӗҫлеместӗн тесен вӑл калаҫҫӗ: ҫӑвашсен ӗҫхалӑхӗ ҫук, сотсиал-темократийе тӗртсе пыракан клас ҫук, ҫавӑнпа епӗ сирӗнпе ӗҫлетӗп, теҫҫӗ. Ҫакна вӑл шӳт туса каланӑ пек калаҫҫӗ, анҫах ҫак сӑмахсен тӗрӗсси те пурҫҫӗ: вӑл Алҫун Кевӗрлин калаҫусенҫе сисӗнкелеҫҫӗ, вӑлах Перлинран мана ҫырнӑ ҫырусенҫен сисӗнеҫҫӗ: вӑл вӗсенҫе нимӗҫ сотсиал-темократсене питӗ мухтаҫҫӗ (ҫав ҫырусенҫе вӑл пӗрре Летепурпа калаҫни ҫинҫен, Летепур ӑна ҫӑвашсене, ытти вак халӑхсене те таса пӗлсе тӑни ҫинҫен тӗлӗнсе ҫырҫӗ, ҫав ҫырура: Керманире пире Раҫҫейринҫен лайӑхрах пӗлеҫҫӗ, тесе ҫырнӑҫҫӗ). Ҫапла хуласенҫе пурӑнакан ҫӑваш интеликентсийӗ ӗлӗкренех уйрӑм сотсиал-темократсем пулнӑ, уншӑн нумайӗшӗ теорипе маркси сӑм йенне сулӑнвӑ сулӑнман икӗленкелесе пурӑннӑ. Кӗрешӳре вӗсем ҫӑмӑртанма пултарайман, мӗншӗн тесен, каллех калатпӑр, пирӗн ӗҫхалӑхӗ ҫитӗнеймен. Ҫапах револҫутси вӑхӑтӗнҫе ҫӑвашсен хушшинҫе те пролеттариат пӗрҫи палӑрҫӗ: епӗ астӑватӑп, ак „Хыпар" ретаксине пӗр хура кӗпелӗ ҫӑваш пынӑ та ҫӑвашла кӗнекесем ыйтаҭ: пирӗн кулҫтурӑпа политтиккӑ йенӗнҫен ҫутӑлантаракан ушкӑн пур, тет. Тӗпҫесе ыйтса пӗлетӗп: вӑл Урмарта Курпат хапрӑкӗнҫе ӗҫлекен ҫӑваш, унта тата та пайтах ҫӑваш ӗҫлет иккен, вӗсем пӗрлешсе ушкӑн тунӑ, ҫак сынна „Хыпар" ретаксине ҫӑвашла кӗнекесем илме йанӑ. Ҫакна илтсен епӗ калама ҫук хытӑ хавасланатӑп: ҫакна илтсен епӗ мӗскӗн ҫӑваш халӑхӗ те историйӗн ҫӗнӗ пусми ҫине, интустри ҫулӗ ҫине урине тӑсма тытӑннине ҫи малтан сисрӗм. Ҫакӑн хыҫҫӑн епӗ Микулай Тимахвипе Хусанта ҫӑваш творник пайтах, хура ӗҫ ӗҫлекен нумай, савӑтсенҫе ӗҫлекенсем те пур, унтан кӗпе ҫӑвакан ҫӑваш хӗрарӑмӗ нумай, вӗсене пӗрлештерес пулаҭ тесе калаҫатӑп, анҫах вӑл мана хирӗҫ тӳрех перет: Ан лӑкӑртатса ҫӳре ҫук йапала ҫинҫен—вӗсемпе нимӗн ӗҫ те тӑваймӑпӑр, тет. Епӗ ӑна хирӗҫ: пирӗн мӗн пулсан та ӗҫлекенсемпе те ҫыхӑнмалла, вӗсем пулмасан вӗсене шухӑшласа та пулин кӑларса вӗсемпе те ӗҫленӗ пек тумалла, тетӗп шӳт тукаласа. Вӑл мана: Айкашса пӑх еппин, сийенӗ пулмӗ, пӗр пӗр хура ура праҫка каҫҫа илсе йарӑн та вӑл та вырӑса илиҫҫен усаллӑ пулӗ: авланассинҫен пуҫне ҫав ӗҫре урӑх пӗрлешӳ пулмӗ, тет. Ҫӑнахах та Хусанта ҫӑваш ӗҫлекенсене орканисатсилесси пирӗн уйрӑм ҫынсене ретаксийе илсе пырса

вĕсене ҫăвашла хаҫатсемпе кĕнекесем панинҫен пуҫне урăх ĕҫ туни пулмарĕ.

Ытти тĕлсенҫе айакра ĕҫлесе пурăнакан ҫăвашсемпе ҫыхăнса тăма епир пултарайман. Вĕсем ҫинҫен епир хаҫатсемпе шурналсенҫе ҫеҫ кăшт-кашт вулакалаттăмăр: ҫапла епĕ Йусов тавраҫĕнҫи шахтăсенҫе ĕҫ питĕ йывăр, ăна вырăс ĕҫлекенсем тӳсеймеҫҫĕ, ĕҫе пăрахса кайаҫҫĕ, вĕсен вырăнне тутарсемпе ҫăвашсем ĕҫлеҫҫĕ тесе ҫыраҫҫĕҫ; унтан пирĕн ҫăвашсене мухтамасăр та ҫыраҫҫĕҫ: ҫапла пĕрре Тонпасра сапастовкă, анҫах ҫав сапастовка тĕттĕм тутарсемпе ҫăвашсем кансĕрлеҫҫĕ, вĕсем штрейпрехерсем вырăнĕнҫе ĕҫлеҫҫĕ тесе ҫырнине те астăватăп. Унтан Атăл тавринҫе Ҫĕмпĕрпе Самар кĕпĕрнисенҫе нумай ҫăваш улпутименисенҫе ĕҫлесе пурăнаҫҫĕ, вĕсене вырăс хресҫенесем ĕҫленĕшĕн питĕ ҫиленеҫҫĕҫ. Ҫапах та пыра киле ҫав ҫăваш ĕҫлекенсене те тăн кĕҫĕ: вĕсем те ĕҫ хĕрӳ вăхăтсенҫе, тырă пуҫтармалли вăхăтсенҫе ĕҫе пăрахса киле таврăна пуҫларĕҫ, ҫапла майпа улпутсене питĕ кансĕре хăварма тапратрĕҫ. Кайарахпа улпутсене кĕрешнĕ ҫынсем срук иртиҫҫен ĕҫе пăрахмалла мар тесе саккун тухрĕ, ĕҫе срукҫен пăрахакансене сут тĕрмене хупаҫҫĕ. Ҫапла ĕнтĕ 1905-мĕш ҫулта пирĕн ҫăнтан пролеттариат пулман, унăн пĕрҫи ҫеҫ палăркала пуҫланă, ҫавăнпа пирĕн хушăмăрта пролеттарлă парттисен ушкăнĕсем те орканисатсиленеймен, пролеттариат парттийĕн орканисатси те пуҫтарăнайман.

Ытти парттисенҫе ĕҫлекен уйрăм ҫăвашсем ҫинҫен малта та асăнсаттăмăр, ҫапла Николъскипе Романов катетсем ҫинҫен каласаттăмăр; катетсен парттине Иван Йаккăлҫă та пĕр вăхăта ҫырăнса пăхрĕ, анҫах правиттĕлствă катетсене хирĕҫ пыннине сиссен ҫав парттирен пуҫиле туна пуҫларĕ, ун ҫинҫен малалла калăпăр. Унтан ҫăваш интеликенҫĕсен хушшинҫе Толстой вĕренӳне ĕненекенсем, тĕрлă анархиллĕ вĕрентӳсене ĕненекенсем пурҫҫĕ. Толстой вĕрентĕвĕ пирĕн хресҫенрен пулнă ҫынсене кăмăлне питĕ кайаҫҫĕ. Епир аҫа ҫухне, Ҫĕмпĕр шкулĕнҫе вĕреннĕ ҫухне пĕр вăхăтра ҫула ваккат вăхăтĕнҫе Твер кĕпĕрнине Толстойа курма ҫуран кайас тесе те канашлаттăмăр. Толстой вĕрентĕвĕ хыҫҫăн пынă ҫынсенҫен А. К. Каврилова унтан анархискăсенҫен А. Н. Ҫиторова палăрса тăраҫҫĕҫ.

Ҫакӑн пек сулӑнаҫсем хресчен хушшинче те палӑркала пуҫларӗҫ. Ҫапла революци вӑхӑтӗнче Чӗмпӗрте килте тӗртнӗ шурӑ тумтирпе ҫӳрекен „ирӗклӗ христиансен“ ҫителӗклӗ йышлӑ ушкӑнсем палӑрчӗҫ, ҫавсен пӗр опшининче чӑваш хресченӗсем те пурччӗ (астӑватӑп—унта Шӑмӑршӑ чӑвашӗсем пурччӗ). Унтан хӑш тӗлте ытти тӗрлӗ тӗслӗ сектантсем те палӑркалама тытӑнсаччӗҫ, ҫапла Чурапанра паптиссем пурччӗ. Ҫапах хресчен хушшинче сектӑсем тытӑнни, уйрӑм хресчене ҫав сектӑсем ушкӑнӗсемпе ҫыхӑнса пурӑнма тытӑнни те революцишӗн усӑллӑ йапалахччӗ, мӗншӗн тесен, вӗсем пур те правиттӗлства хирӗҫ пыраччӗҫ. Унтан пирӗн тӗне кӗмен чӑвашсем хӑйсене уйрӑм ушкӑн вырӑнне хисеплеччӗҫ, вӗсем пур те правиттӗлства ӗмӗрхи йӑлапа хирӗҫчӗ, мӗншӗн тесен, правиттӗлствӑ вӗсене ӗмерне пусмӑрласа пурӑннӑ. Ҫапла чӑваш халӑхӗ хушшинче малта асӑннӑ революциллӗ йухӑмсенчен пуҫне, политтиккӑ йухӑмӗсенчен пуҫне урӑх тӗрлӗ йенӗпе ирӗклӗх йенне туртакан йухӑмсем пурчӗ. Ҫак йухӑмсем революци вӑхӑтӗнче ҫийеле тухрӗҫ, паллӑ пулчӗҫ.

## 10. Ҫамрӑксен революциллӗ ӗҫӗсем.

Чӑваш вӗренекен ҫамрӑксем революци вӑхӑтӗнче питӗ хӗрӳллӗ ӗҫлерӗҫ, вӗсем революципе йалан пӗрле пулчӗҫ, пӗртте кайа йулмарӗҫ. Чӑваш шкулӗнчи аслӑрах классен ачисем революци хыпарӗсем чӑнтан хӑпаричченех революцишӗн ҫунса пурӑначчӗҫ. Ун чухнехи виҫҫӗмӗш класран революци тапраниччнех Трахвин Йехимӗпе Лаврентӗ Тимахвийӗ шкула пӑрахса тухса кайаҫҫӗ, мӗншӗн тесен, вӗсен чунне ҫав шкулра пурӑнма тӑвӑр. Вӗсен ытти йулташӗсем те нумайӗшӗ шкулран тухса кайма шухӑшласа пурӑнаҫҫӗ. Вӗсем политтиккӑ тӗлӗшӗпе пайтах кӗнеке вуланӑ, унтан вӗсем Максим Коркий ытти ҫавӑн пек писаттӗлсене вуласа кӑмӑла хӑпартса, ҫунатланса пурӑнаҫҫӗ. Шкула вӗсем касарма, тӗрме пурнӑҫӗ тесе ҫеҫ чӗнеҫҫӗ. Ҫак класран 1904-мӗш ҫултах Рсай Поликарпӗ хӑйӗн вӗрентекенсем хушнипе ҫырнӑ сочиненисенче шкул атминистратсине ҫеҫ хирӗҫ мар, правитӗлствӑна та хирӗҫ пынине кӑтартатӗ, ҫавӑнпа унӑн шкулран тухса каймалла пулатӗ. Малтах Чӗмпӗрте революци умӗн чӑваш вӗренекенсен ушкӑнӗ ӗҫлени ҫинчен ҫырнӑччӗ, ҫав ушкӑна пула Чӑваш шкулӗнче вӗренекенсем те политтиккӑпа паллашма тытӑнни ҫинчен ҫырнӑччӗ. Революци

тапрансан çав ушкăнри йулташсем: Микулай Çимунĕ, Микуш Петĕрĕ, Уркалкин Мĕтрийĕ ыттисем те политтиккă кĕнекисене çеç вуласа йăпанма пултараймаççĕ—вĕсем ҫăнтан кĕрешме тытăнмалла пулаççĕ. Çав кĕрешĕве тапратма вĕсем Ҫĕмпĕр шкулĕнҫи аҫасене те ҫĕнеççĕ, вĕсене çав ĕçре пулăшу парса тăраççĕ. Ҫи малтан Ҫăваш шкулĕ револютси тăвăлĕпе 1905-мĕш çулта авăн уйăхĕнҫе кисренме тытăнат: аслă класра вĕренекенсем вĕренме пăрахаççĕ, хулана миттинксене çӳреççĕ, хăйсем те пухусемпе миттинксем тума тытăнаççĕ, револютси йуррисем йурлаççĕ. Иван Йаккăлҫă темĕнле хăтăрса çӳресен те нимĕн те тăваймаст. Унтан вĕренекенсем петтитси тĕнĕ хут çырса параççĕ: çав петтитсире шкул ĕçне тĕпĕ-йĕрĕпе урăхла çавăрса хума, шкул ĕçне майласа пурăнма вĕренекенсене те йерĕштерме ыйтаççĕ. Унтан петтитси вĕçĕнҫен шкул ĕçĕ патшалăх йĕрки çĕнелсен çеç çĕнелме пултарат; самотершави пăнҫăхсан, респупликкă пулсан, улпутсем пĕтсен, çĕр хресҫен аллине куççан, ĕçхалăхĕ лайăхрах пурăнма тытăнсан, Раççейре краштанлă прĕклĕхсем пулсан çеç шкул ĕçĕ те çĕнелме пулат тесе çыраççĕ. Петтитсийе Иван Йаккăлҫа параççĕ, унтан унăн копписене Хусана попеҫитĕл патне йараççĕ. Петтитсийĕн ҫи вĕçĕнҫи çапла сăмахсем пулнă: „çак петтитсире ыйтнă йапаласене шкул атминистратсийĕ йышăнмасан вĕренекенсем вĕренме пăрахаççĕ, сапастовкă туса шкулран пăрахса кайаççĕ“ тенĕ сăмахсем пулнă. Калама та кирлĕ мар—çак хут наҫаҫствă çӳçне пĕтĕмпех вирелле таратат: Иван Йаккăлҫă ун аҫисем çапла тунăшăн хăй вată пуçĕ çине ĕмĕр сирĕлми мăшкăл—намăс илнĕ пек çӳрет, Хусантан попеҫитĕлрен, унтан Питĕртен министерствăран та тĕрлĕ секретлă телекрамсемпе хутсем килеççĕ—вĕсенҫе наҫаҫствă вĕренекенсем мĕншĕн, унтан йепле пăлханни çинҫен тĕпҫет. Иван Йаккăлҫă аҫасене шкулран кăларатăп тесе хăратасшăн, анҫах лешсем ăна „епир хамăрах кайатпăр, шкулран тухас кăмăл пулмасан епир сапастовкă та тумастпăр“ теççĕ. Ҫăнахат та вăренекенсем (3-мĕш клас пĕтĕмпех) шкула револютсиллĕ йурăсем йурласа пăрахса саланаççĕ, ҫăваш тĕнҫи тăрăх ҫăлпăр саланса вĕсем ҫăваш йалĕсене револютси хыпарĕсене илсе пыраççĕ, ҫăваш çамрăкĕсем револютсишĕн вăй хурса кĕрешме тытăннине хресҫен куçĕ умĕнҫе палăртаççĕ. Çак класа Иван Йаккăлҫă попеҫитĕлпе пĕрлешсе малтан петĕмпех пĕтермелле тăват, унтан револютси йенне сулăннă çамрăк сыпăк хушшине

раскол кӳртес сӑлтавпа кайарахпа сапаст вкӑ тунӑ аҫасенҫен ӳкӗнсе йӑлӑнакансене кайалла илмелле тӑваҫ. Анҫах маттуртарах ҫамрӑксем ҫак ултав хыҫҫӑн каймаҫҫӗ, вӗсем пӗтӗмпех револютси тӗнӗсне ҫӑмса револютсишӗн ҫамрӑк пуҫӑсене хураҫҫӗ. Ҫак класран револютсишӗн ҫи хӗрӳллӗ ӗҫлекен ҫамрӑксем: Трахвин Йехимӗ, Аким Михайли, Хветӗр Михайли, Рсай Поликарпӗ тухнӑ, ҫак класпа тантӑш класран револютсишӗн пӗртен пӗр паллӑ ӗҫлекен ҫӑваш хӗрӗ Хветӗр Настаҫӗ тухнӑ—ҫавсем халӗ пур те вилнӗ, анҫах вӗсем хӑйсен кӗске пурӑнӑҫӗнҫе кивӗ йӗркепе кӗрешсе пайтах асапланҫӗҫ. Ҫак кӗркуннех хулари ытти шкулсем те пӑлханса салана пуҫларӗҫ, ҫапла ҫӑваш йалӗсенҫе сапастовкӑ пула киле таврӑннӑ ҫамрӑксем йышлӑланса кайрӗҫ. Ҫак ҫамрӑксене курнипе, унтан хӑш ҫух вӗсем хӗтӗртнипе йалти икӗ каслӑ шкулсенҫе вӗренекенсем те йӑшӑлтата пуҫларӗҫ: вӗсем те тӗн сакунне вӗрентекенсене йе кивӗ йӗркепе килӗштерсе пурӑнакан вӗрентекенсене хирӗҫ тӑра пуҫларӗҫ, вӗсене шкулсенҫен кӑларма ыйтса шалӑпӑсем ҫыра пуҫларӗҫ, хӑш тӗлте вӗренме те пӑрахса пӑхкаларӗҫ.

Ҫак вӑхӑтсенҫе ҫамрӑксен хушшинҫе пулнӑ ӗҫсенҫен Хусанти вак халӑхсен ҫеминаринҫе пулнӑ ӗҫсем питӗ паллӑ вырӑн йышӑнса тӑраҫҫӗ. Ҫак ҫеминарире ҫӑмрӑксем пуринҫен ытла натсилӗ сӑлтавпа ҫӗкленсе пӑлханаҫҫӗ. Ҫӗмпӗр шкулӗ таса ҫӑваш шкулӗ пулнӑ, ҫавӑнпа унта халӑхпа халӑх хушшинҫи йӳҫенкӗсем сисӗнмен. Анҫах Хусан ҫеминаринҫе пӗтӗмпех урӑхла пулнӑ: унта нумай вырӑс вӗреннӗ, вак халӑхсем кашни класра кашни халӑхран виҫтӑват ҫын ҫеҫ вӗреннӗ. Унтан Н. А. Попровникова тиректортан кӑларнӑранпа унта вӗрентекенсем ытларах вырӑссем, вӗсем те пур те тенӗ пекех питӗ хайар руссификаторсем пулнӑ. Ҫакна пула ҫеминари револютсинҫҫен нумай малтан натсилӗ кӗрешӳпе вӗресе тӑнӑ. Ҫеминарире тӗрлӗ вак халӑхсенҫен тухнӑ вӗрентекенсем те пайтах пулнӑ, вӗсем кирек мӗнле ӗҫ тунӑ ҫух та пӗрлешсе вырӑс вӗрентекенсемпе кӗрешнӗ. Унтан вак халӑхсенҫен тухнӑ вӗрентекенсем тӑван халӑхран пулнӑ вӗренекенсемпе пӗрлешсе питӗ ҫӑмӑртанса пурӑннӑ: ҫапла кашни халӑхӑн вӗрентекенсемпе вӗренекенсен тӑван ҫӗлхене, историйе тӗпҫесе пӗлекен, тӑван ҫӗлхепе кӗнекесем куҫаракан, йе ҫыракан ушкӑнсем пулнӑ. Ҫавӑнпа ҫеминари ӗлӗкрен питӗ пӑлханса пурӑнаҫ: вырӑс вӗренекенсемпе вак

халăхсен ађисем килĕштереймеççĕ, йалан тавлашаççĕ, вырăс вĕрентекенсемпе ытти халăхсен вĕрентекенсем йалан хирĕçсе пурăнаççĕ, çав кĕрешӳре тата вырăс вĕренекенсем вырăс вĕрентекенсен майлă, вак халăх ађисем вак халăхсенђен тухнă вĕрентекенсен майлă кĕрешеççĕ, унтан кашни халăх ађисем хăйсен тăван вĕрентекеншĕн пуçсене хума хатĕр: çав вĕрентекене нађаљствă йе ытти вĕрентекенсем мĕнле те пулса сийен, йе сăлтăк тусан çав ĕçе вĕсем тăван натсийе мăшкăл туни вырăнне хураççĕ. Çавăнпа револютси вăхăтĕнђе çеминари натсилĕ кĕрешӳпе кисренсе хумханса тăрат, унти револютсиллĕ кĕрешӳ натсилĕ кĕрешӳпе уйрăлми çыхăнса тăрат. Çав кĕрешӳ пуçĕнђе (револютси йенђен) ђăваш вĕренекенсем тăраççĕ. Çеминарире авалранах пур вак халăхсенђен те ђăвашсем йышлăрах та, маттуртарах та вĕреннĕ. Н.И. Ашмарин ĕçлеме пуçласан ђăваш културне тăвас ĕç те нумай йенĕпе çеминарийе куçнă: Ђĕмпĕр шкулĕнђе ђăваш ђĕлхине теори тĕлĕшĕпе унтан ђăваш историне пĕлекен пĕр çын пулман, пĕлес тесе тăрăшакан та пулман. Ђĕмпĕр шкулĕнђе ађасене ђăваш ђĕлхине мар, ђăвашла çырма та ђăнтан вĕрентмен, ăна ађасем хăйсемпе хăйсем çеç вĕренкеленĕ. Çак йенђен сăнама тивĕçлĕ йапалана асăнмасăр хăварас мар: епир ђăваш шкулĕнђе вĕренекенсем алăпа çырнă шурнал кăларма тапăнсаттăмăр: çавна епир вырăсла çыраттăмăр, ђăвашла çырасси çинђен пирĕн шухăш та çукђĕ, çеминарире кăшт çеç кайарахпа икĕ ђăвашла шурнал «Çăлтăрпа» «Шурăмпуç» тухкаласа тăнă. Хусан çеминаринђе Ашмарин ђăваша тĕпђесе пĕлекен ăслăлăха тĕнђе ăслăлăхĕн никĕсĕ çине лартса ђăвашсем пăлхарсем пулнă теорийе тĕрĕслет, ђăваш сăмах пуххи кăларма тытăнат, халăх сăмахне кунĕн-çĕрĕн хисепсĕр нумай пухат. Ашмарин ĕçлеме тытăнни пирĕн халăх шухăшĕн историнђе çĕнĕ самана тытăннине ђăваш историйĕ урăх çул çине пăрăнса кайнине пĕлтерет. Йепле 70-мĕш çулсенђе Иван Йаккăлђă ђăвашсене тăван ђĕлхепе тăван вĕрентекенсен урлă вĕрентме тапратса халăх тăнпуçне пĕтĕмпех урăх йенне çавăрса пăрахат, çавăн пекех Ашмарин ĕçĕсем ђăваш интеликентсийĕн тăнпуçне тĕпĕпе урăхлантарса улăштарса йараççĕ. Ашмарин политтиккă тĕлĕшĕпе мар, ăслăлăх йенђен çеç ĕç çине тишкерсе пăхса ђăвашсем вĕсем натсийех тет. Çапла Ашмарин ђăваш халăхĕ çине ђăвашсенђен хăйсенђен те нумайрах хисеплесе пăхат. Ак мĕншĕн XX-мĕш ĕмĕрĕн пуçламăшĕнђен пур ђăваш

хушшинҫе куҫтурă ĕçĕпе кĕрмешекенсем те Хусана кайса Ашмаринпа курăнăçса калаçасшăн çунаççĕ. Ак мĕншĕн пур ҫĕреллĕ ҫăвашсем те Ашмарин ваҫҫи йурăсем, такмаксем, халапсем пухаççĕ, хăйсем хайласа çырнă йапаласене те ун патне леçеççĕ. Унтан Ашмарин çумĕнҫен Н. В. Никоҫски питĕ вирлĕ ĕçлеме тапранаҭ. Çапла пирĕн натсионаллă туртăмăн тĕп çекли, тĕп ҫентăрĕ Хусана куçас пек те курăнса тăраҭ. Иван Йаккăлҫă çакна сиссе Ашмаринпа та, Никоҫскипе те сивĕнсе пурăнаҭ. Хусанта ĕçлесе пурăнакансене натсионаллă туртăм йенне сулăнарах тăма тата ак мĕн пулăшаҭ: Хусанта ĕмĕртен кивĕ йенне питĕ туртакан, унтан вырăс мар халăхсене питĕ йуратман атминистратси пурăннă: йут халăхсене тулас тĕлĕшпе Хусан Варшавăпа Кийĕв хыççăн виççĕмĕш вырăн йышăнса тăнă. Çеминарире те вак халăхсене курайман вĕрентекенсем йышланнăçем йышлăланса пынă, Н. А. Попровников унтан кайсан çав вак халăхсен тăшманĕсем хуçа пулнă. Вĕсем пур ҫăваш вĕрентекенсене те питĕ хĕсĕрлесе пурăннă: çапла акатемире вĕренсе тухнă О. К. Романова вĕсем тин çыру вĕренекен аҫасене çеç вĕрентме панă, Н. И. Ашмарина вăл йунĕпе вырăс пулсан та йалан хĕсĕрленĕ, ăна вĕсем ҫăвашсемшĕн ĕçленĕшĕн йуратман, Н. В. Никоҫскийе вĕсем пĕтĕмпех хăйсен хушшинҫе тӳсесшĕн пулман: ăна пур йенҫен те пăркаланă, вăхăҫĕпе пĕртте ĕçлеме паман. Çав вак халăхсен тăшманĕсем ҫăваш вĕрентекенсене вĕсем сепараттистсем, вĕсем шанҫăксăр çынсем, вĕсем ҫăваш халăхне вырăсран уйăрса хăйне уйрăм çулпа йарасшăн тенĕ. Çакна пурне те вĕренекенсем пĕлсе, курса тăнă, ҫасах çав ĕçе вĕсем çыхланмасăр та пултарайман. Ак Никоҫскийе вырăс вĕрентекенсем вăл вăрттăн ҫăваш ушкăнĕ туса аҫасене пăсаҭ тесе наҫаҫства елеклеççĕ, Никоҫскийе çеминарирен кăларма çӳреççĕ. Çапла елеклӳ ирсĕр, пăсăк ĕç иккенне аҫасем витĕр пĕлеççĕ, çав елеклӳ суйа, ултавлă политтиккă сăлтавĕпе тăвăннине вĕсем курса тăраççĕ. Никоҫски ҫăнахăх та ҫăвашсене пĕрлештерсе ҫăмăртаса пурăнаҭ, анҫах вăл вĕсене нимĕн те ытлашши вĕрентмест: вăл ҫăваш ҫĕлхине, историне, етнокрахвине çеç вĕрентет, унтан ҫăвашла кĕнекесем куçартараҭ. Аҫасем хăш ҫухне çапла ĕлĕкрен пыракан кĕрешĕве хăйсем те ирĕксĕрех çыхланса кайаççĕ: ак Никоҫски çеминарире ҫи малтан истори вĕрентме тытăнаҭ, ăна вак халăхсен аҫисем питĕ хавасланса ырă-ăшă кăмăлпа йышăнаççĕ;

малтанхи урокрах Никоҙски славенсем варек çыннисене кнеç-сене суйлани çинҙен каланă ҙух çав суйлура хвин йăхĕсем те пулнă, ун çинҙен летăпĕçсем çыраççĕ тет; çак сăмах тĕрĕс сăмах, анҙах вырăс уҙепникĕсенҙе ăна никам та, асăнмасť. Çак халĕ шухăшласан çук сăмах çеминарире шăв-шав кăларať: вак халăхсен аҙисемпе вырăссен хушшинҙе тавлашу тапранať, вак халăхсен аҙисем вырăс патшалăхне пуçланă ҙух та кайарах та вырăссемпе пĕрле вак халăхсем те ĕçленĕ, çавăнпа халĕ те çав халăхсем вырăссемпе тан пулмалла теççĕ, вырăссем вырăс патшалăхне вĕсем çеç туса тĕреклĕлентернĕ теççĕ; çак тавлашăва ытти вĕрентекенсем те хутшăнмасăр пултараймаççĕ: вырăслантаракан политтиккă йенҙе тăракан вырăс вĕрентекенсем вырăс аҙисене: Никоҙскийе ан шанăр, вăл суйа ăслăлăхçă, вăл шовинист, сепараттист тесе вăрттăн хĕтĕртеççĕ, çакна пĕлсе тăрса вак халăхсенҙен пулнă вĕрентекенсем вак халăхсен аҙисене çав та çав вырăс вĕрентекенсем вак халăхсен хайар тăшманĕсем, вĕсем Михаил арханкел йе вырăс халăхĕн тенĕ сойуссен ҙĕленĕсем, вĕсем пур вырăс мар халăхсене ҙĕрĕлле çисе йарăҙĕç тесе вăрттăн ăнлантараççĕ. Ак мĕншĕн çеминарире револютсиллĕ хумханусем ҙĕмпĕр шкулĕнҙен уйрăмрах пулаççĕ, унтан хăватлăрах та пулаççĕ. Çакă та Хусанта хумхану пур тĕлте те ҙĕмпĕртинҙен вăйлăрах пулнинҙен, унтан çеминарире Микулай Тимахвийĕ нумай ĕçленинҙен килнĕ (вăл хăй те малтан унта вĕренсе тухнă). Çеминаристсем ытти шкулсенҙи пекех малтан миттинксем тăваççĕ, петтитсисем çыраççĕ, çеминари тĕлĕшĕнҙен çеминари вак халăхсен çеç пулмалла, унта вырăс пулмалла мар тесе ыйтаççĕ. Çакна кура попеҙиттĕл çеминарийе тата та усал вырăс вĕрентекенсене йарať, çавсенҙен ҙи усалли инспектăр Похтанов пулať, вăл вак халăхсен аҙисене мăшкăласа: Епĕ хам та çурри ҙăваш, тет мĕншĕн тесен, вăл вырăс пуçĕпе ҙăваш пупĕн М. Т. Тмитрийев хĕрне каҙҙа илнĕ пулať. Похтанов хăйĕн майлă вĕрентекенсемпе çеминарире шантарсем йевĕрлĕ çўреме тытăнаççĕ: вĕсем йалан попеҙиттĕле елекleççĕ, политсипе шантармерипе те пĕрлешсе ĕçлеме тапратаççĕ. Çакна кура вĕренекенсем опструксисем тума тытăнаççĕ: йуратман вĕрентекенсене классенҙен хăваласа кăлараççĕ, вĕсем каланине итлемеççĕ. Унтан çеминарире ҙăнтан револютсишĕн ĕçлес тийекен ушкăн ҙăмăртанať: çав ушкăнра ҙăвашсем вирлĕрех ĕçлеççĕ, çав

ушкăна револютси йенне сулăнвă вырăс ačисем те кĕреççĕ, çапла револютси ĕçĕпе čăнтан кĕрмешме тытăнсан тин ĕлĕкхи натсилĕ хирĕçлĕхсем сирĕлеççĕ. Çав ушкăнра тăракансем нумайĕшĕ сотсиалислă парттисене çырăнаççĕ. Ушкăн пысăк пиплиотеккă туйанаť, čиркӳ čасавниййĕ айĕнčе вăрттăн кĕнекепе прокламатсисен склаčĕ тăваť. Унтан ушкăн хушшинčе террор йенне сулăннă çамрăксем палăраççĕ: вĕсем усал, револютсийе хирĕç пыракан вĕрентекенсене вĕлерсе пĕтерме хатĕрленеççĕ, çав сăлтавпа вĕсем хĕç-пăшал, помпăсем туйанаççĕ, вĕсене те çав вăрттăн склатра сыхласа усраççĕ. Анčах шантармери йыттисем çакна йĕрлесе сисеççĕ: шантармери çĕрле сисмен çĕртен çеминарийе çĕр çын ытла çар камантипе, пулеметсемпе пынă камавтăпа çавăрса илет те опăск туса çав склата тупаť. Çакăн čух нумай çеминариста тытса тĕрмене хупаççĕ, çавсен хушшинčе маттур čăваш çамрăк револютсионерĕ Палтай йалĕ çынни Çеркейев лекет. Çак çамрăксене тĕрмере пайтахčен асаплантарса вĕрентекен вырăнне йышăнмалла мар туса хăваласа кăларса йараççĕ (вĕсене сут туса айăплама вĕсем çамрăк пулаççĕ). Çав кĕрешӳ револютси пусăрăнсан та пĕтмест: çапла 1910-мĕш çулта čăваш çеминарисčĕ Иванов тĕрмене лекет. Унтан 1906--1907-мĕш çулта Čĕмпĕр шкулĕнčе каллех хумхану тапранаť. Çак пăлхава аслă виççĕмĕш клас мар, кĕçĕн пĕрĕмĕш клас тапратаť, аслăрах классенčен пур лайăхрах вĕренекенсем тухса кайнă йе вĕсене кăларса ывăтнă, вĕсенčе Иван Йаккăлčă сăмахĕнčен иртмен ačасем çеç вĕренеççĕ, пирĕн хушăмăрта револютси ĕçне ĕçлекен вĕсен йулташĕсем вĕсене «пăрахçă, пăсăк штрейпрехерсем, вĕсем пирĕн сапастовка сайа йартараččĕç» теççĕ. Пĕрремĕш клас 1905-мĕш çул кĕркунне Čĕмпĕр шкулĕнčе тин вĕренме тытăнаť, сапастовкă çумне çыпçăнма вăл çамрăк пулаť, анčах аслăрах классем мĕн тунине вăл курса тăраť. Çак клас шкулра пĕр çул та вĕренсе иртерейместун хушшинčе нумай шкулăри йĕркене хирĕç пыма тыттăнни палăраť. Унтан нумайĕшĕ çамрăклах политиккăпа та паллашаççĕ. Шкул çтенисен тулашĕнčе ку вăхăтра йунлă кĕрешӳ пыраť, шкул ăшĕнčе кивĕ йĕрке, самотершавипе čиркӳ йенне туртакан акитатси пыраť. Çакна пĕлсе тăрса епир, револютсионерсем, Иван Йаккăлča, шкул йĕркине хирĕç хаçатсенčе питĕ хĕрӳленсе кампани тапрататпăр, пирĕн статйасене вĕренекен ačасем вуласа пĕлсе тăраççĕ. Унтан пирĕн пата Čĕмпĕрте пирĕн

хваттире вĕренекенсен телекаҫĕсем пыраççĕ, пирĕнпе канашлаççĕ, пĕрре 1907-мĕш çул çуркунне пулас пире Микуш Петĕрпе вĕренекенсен пухуне ҫĕнеççĕ, çав пуху Сĕве кĕперĕ çинҫе пулаҭ. Паллă—епир вĕренекенсене çанăсене тавăрса кĕрешме ҫĕнетпĕр. Анҫах вĕренекенсем пур те пĕр канашлă пулмаççĕ, вĕсем икĕ сийе уйăрăлса тăраççĕ: пĕр сийĕ револютси йенне сулăннă çамрăксем пулаççĕ, вĕсем хăйсене стутентсем тесе ҫĕнеççĕ, тепĕр сийĕ кивĕ йĕрке йенне туртăнакан çамрăксем пулаççĕ, вĕсене „стутентсем“ „манахсем“ тесе ҫĕнеççĕ. Çапла вĕренекенсем пĕр пĕринпе те пăтранса пурăнма тытăнаççĕ. Çав вăхăтрах ĕмĕрне пĕр пĕринпе килешӳллĕ пурăнман вĕрентекенсем те пăтранма тапратаççĕ: пĕрне пĕри аҫасем майлă тесе айăплама тытăнаççĕ. Çак пăтранура пĕр питĕ сăнамалли йапала палăраҭ: Иван Йаккăлҫăпа ăна çывăх вĕрентекенсем „стутентсем“ вырăс вĕрентекенĕсене хирĕç, вĕсем вырăс халăхне хирĕç тесе наҫалство елеклеме тытăнаççĕ. Çапла вĕсем наҫалства йурасшăн, унтан аҫасен хумханăвĕн ҫăн сăлтавĕсене пытарасшăн ҫейепе елеклеççĕ. Ҫăнах та «стутентсем» авалран шкулра вĕрентсе пурăнакан вырăс Т. И. Коҫуров çине хытăрах тăраççĕ, анҫах çав ĕçре вăл хăйех айăплă пулаҭ, унтан çав ĕçе Иван Йаккăлҫăпа унăн хӳрисем йĕкĕлтетсе, тĕрлĕ провокатси туса йури аслăлатма тăрăшаççĕ. Çак тĕрĕсси „стутентсем“ ытти вырăс вĕрентекенĕсене хирĕç пыманнинҫен, хăшимпе (Некрасовпа ыт. те) туслă та пурăннинҫен палăраҭ. Çапла клас пăтранса пурăннине кура Иван Йаккăлҫă хăй те çак класран ăна кăмăллă çынсем тухас çуккине курса тăраҭ, „стутентсем“ хăйсем те шкул йĕркине тӳссе пурăнма пултарайманнине пĕлсе тăраççĕ. „Стутентсем“ йулашкинҫен вирлĕ политтикка темонастратси туса илеççĕ: иккĕмĕш Тумă уçăлнă кун вĕсем шкулра хĕрлĕ йалав тăратаççĕ. Ун çинҫен епĕ пĕтĕм Атăл тавринҫи хаçатсем.çинҫе çыратăп. Çакăн хыççăн Иван Йаккăлҫă попеҫиттĕлпе телекрам çӳретсе çак класа тĕтĕмпех кăлармалла, ăпа урăх пуçтармалла мар, шкулра унăн йатне те çухатмалла, пĕр тымар пĕрҫине те хăвармалла мар тăваҭ. Çапла çак клас киле саланмалла пулаҭ. Ăна ăсатма пĕр йенҫен воксала Иван Йаккăлҫă та пыраҭ: вăл сулхăн, хăй йăви саланнипе, хăй ҫĕпписем хăйне хирĕç пынипе йăвăр хуйхăллă, тепĕр йенҫен епĕ те пытанкаласа пĕр ушкăн аҫасемпе пĕр кайутта шăнăçса çамрăк ҫăваш револютсионерсене ҫукун çулпа

Инсӑ стантсине ҫитиҫҫен ӑсататӑп, епӗ пирӗн ҫамрӑк ҫар атаманаҫ тесе савӑнса ӑсататӑп. Ҫак класран Шупуҫҫынни тухнӑ, ҫак класра поет Иван Кӗҫтенӗ вӗреннӗ, ҫак класрах Елмен Таҫили вӗреннӗ (анҫах вӑл ҫаҫ самана ра «студентсенҫен» йутшӑнса пурӑннӑ).

Ҫак ҫӑваш ҫамрӑкӗсен хушшинҫе пулнӑ револютсиллӗ йухӑмсем ҫинҫен каланӑ сӑмах вӗҫӗнҫе тата ҫакна асӑнас пулаҫ: ку вӑхӑтра кашни йалта тенӗ пекех 14—15 ҫулхи ҫамрӑксен хушшинҫе револютсишӗн ҫунакансем пулнӑ, вӗсем вӑртӑн кӗнекесемпе прокламатсисем салатнӑ, вӑртӑн пухусемпе миттинксене ҫӳренӗ, вӗсем халхи комсомолӗссем йевӗрлӗ ӗҫленӗ. Вӗсем ҫамрӑклӑхпа ҫӑнтан кӗрешӗве ҫыхланайман, ҫав кӗрешӗве вӗсем кайарахпа револютси пусӑрӑнсан та пулин ҫыхланса пӑхнӑ, ҫапла халхи ҫӑваш комунисӗсенҫен Савантей Йакурӗ, Шевле Михайли, Сухарев С. В., йул. Етрухин ӗҫленӗ: вӗсем револютси вӑхӑтӗнҫе револютсионерсене хресҫен хушшинҫе ӗҫлеме пулӑшса пурӑннӑ, кайарахпа вӑрҫӑ умӗн политтиккӑ ӗҫӗпе ҫыхланса тӗрмепе те паллашса илнӗ; хӑшӗ уйрӑм ҫӑвашсем ҫак револютсиллӗ сыпӑкран пысӑк ӗҫсене те ҫыхланса кайнӑ, ҫапла Пӳркелсем ман тӑван вӗренмен хресҫен Михайла Йӑкӑнаҫӗпе Тӗрлемессем Наум Елекҫейӗ Палти тинӗсӗнҫе тӑракан флот пӑлханнӑ ҫух питӗ вирлӗ ӗҫленӗ, вӗсем хӑйсене персе вӗлересрен ытти патшалӑхсене тарса хӑтӑлнӑ: Михайла Йӑкӑнаҫӗ Австрире тарса ҫӳренӗ, Наум Елекҫейӗ нумайрах Франтсире пурӑннӑ (вӑл А. В. Лунаҫарскийӗн ҫекретарӗ пулса та пурӑннӑ).

## 11. Патшалӑх Тумисене суйланӑ кампанисем.

Ҫак кампанисем ҫӑвашсен хушшинҫе йеррипен сисӗнмесӗр иртеҫҫӗ. Мӗншӗн? Пӗрйенҫен пирӗн пуршуаслӑ парттисен ушкӑнӗсем, самотершавийе парламент урлӑ йеррипен ҫӗнӗ йӗркепе улӑштарас тийекен парттисен ушкӑнӗсем вӑйсӑр пулнӑ, тепӗр йенҫен пирӗн револютсиллӗ ушкӑнсем Тумӑсене шанман, вӗсем ҫине хӑррӑн пӑхнӑ. Малтанхи Тумӑ пӗр катетсен ҫеҫ парламенҫӗ пулнӑ теме йураҫ, ҫавӑн пек унта пӗр ҫӑваш та кайаймарӗ. Ҫак Тума Иван Йаккӑлҫӑ та питӗ кайасшӑн пулҫӗ: ҫав сӑлтавпа вӑл Ҫӗмпӗрте катетсен пуҫлӑхне кнеҫ Паратайева катетсен парттипе

çырӑнатӑп тесе те шантарнӑ, анҫах кайарахпа самотершави катетсен парттипе нийепле те килӗшессӗн маррине сиссен вӑл катетсенҫен пуçиле сивӗнсе пурӑнҫӗ, реаксионерсемпе монархистсемпе çеç килӗштерсе пурӑнҫӗ. Пӗрремӗш Тума ҫӑвашсем пурӑнакан кӗпӗрнесемпе уйессенҫен тӗрлӗ липералсем-улпутсем çеç, çемствӑсенҫе ӗçлекенсем çеç лекрӗç. Сотсиалислӑ парттисем çак Тума нумайӗшӗ пойкот турӗç. Çавӑнпа çак Тума суйланӑ кампани ҫӑвашсен хушшинҫе сисӗнмерӗ те. Анҫах çак Тума патша хӑваласа салатсан, вӑл Выпорка кайса унтан уйрӑм ҫӗнӳ халӑха правиттӗлствӑпа куланайсемпе налуксем тӳлемесӗр кӗрешма ҫӗнсен—ҫӑваш револҫутсионерсем ҫӑвашла прокламатсисем кӑларса Тума мӗншӗн салатнине кӑтартрӗç, унтан хресҫенӗн иккӗмӗш Тума катетсене йамалла мар, правиттӗлствӑпа вӑйпа çеç кӗрешесшӗн тӑракан револҫутсионерсене çеç суйламалла тесе хытӑ ӗçлеме тытӑнҫӗç. Çапла ҫӑваш револҫутсионерсем тӑрӑшнипе Хусан кӗпӗрнинҫен хресҫен Феторов суйланаӗ. Анҫах вӑл ҫӑнтан револҫутсионер пулаймасӗ, вӑл трутовиксен фраксине çырӑнаӗ, çапах та ҫӑвашсен хушшинҫе нимӗнле те паллӑ ӗç тӑваймасӗ, револҫутсишӗн вӑл нехекрен çийеле тухнӑ çын çеç пулаӗ (кайарахпа Феторов йалӗн пӗр ҫӑвашран çав Тумӑ ҫӗленӗ халӑх хушшинҫе мӗнле паллӑ ӗç турӗ тесе ыйтсан—епӗ çакӑн пек сӑмахсем илтрӗм: Тума кайнипе вӑл нимӗнех те тӑваймарӗ, анҫах унта илнӗ шалупа хӑй пӳртне тимӗрпе витрӗ пулас, тенӗ сӑмахсем илтрӗм). Маттуртарах ҫӑваш револҫутсионерсене çав Тума суйлама май пулмарӗ: вӗсем хӑшӗ çамрӑк хӑшӗ вӗренекенсем, хӑшӗ сут умӗнҫе айӑплӑ (çирӗм пилӗк çула çитеймен, вӗренекенсем, сут умӗнҫе айӑплӑ йе политтиккӑ тӗлӗшӗпе шанҫӑксӑр хисепленекен çынсем Тума суйлама та, суйланма та пултараймасҫӗç). Хусан кӗпӗрнинҫен ҫӑваш револҫутсионерсем тӑрӑшнипе тата ҫӑваш хушшинҫе хура халӑх майлӑ ӗçлекенсем Лаврскипе тухтӑр Кушников суйланҫӗç. Ҫӗмпӗр кӗпӗрнинҫен каллех Иван Йаккӑлҫӑ питӗ суйланасшӑн пулҫӗ: вӑл Кӑнла Кушкине йыхравçӑ йарса халӑхран хресҫен ӑна суйлатӑр тесе ыйтрӗ, анҫах халӑх ӑна тиркерӗ, вӑл револҫутсионера Йӑкӑнат Мехвотине выпоршҫика суйларӗ. Вара Иван Йаккӑлҫӑ Пӑва уйесӗнҫе выпоршҫика улпутсемпе çӗр хуçисем суйларӗç (вӗсем хресҫенрен уйрӑм суйлаҫҫӗç). Пӑва уйесӗнҫен тата Тумӑ выпоршҫикне Ф. Н. Серкейев лекрӗ, анҫах ӑна Пӑвара выпоршҫиксем уйес пухувӗнҫе вӑл улпутсемпе çӗр тӗлӗшӗпе

тавлашса питӗ тусӑлнӑшӑн ӑна кӗпӗрнатӑр Пӑва улпуҫӗсем хушнипе кӗпӗрне пухуне йамалла мар турӗ. Кӗпӗрне пухӑвӗнҫе Иван Йаккӑлҫӑ катетсемпе килӗшет, лешсем ӑна суйласшӑн пулаҫҫӗ, унтан Иван Йаккӑлҫ трутовик Алаҫйина та хӑй йенне ҫавӑрат̆, ҫакна пӗлсен ҫӑваш револуутсионерсем пухура Йӑкӑнат Мехвотийӗ урлӑ, Иван Йаккӑлҫа, ҫӑвашсем револуутсийе хирӗҫ пырат̆ тесе сайавлени турӗҫ. Вара Иван Йаккӑлҫӑ хӑйӗн кантитатурӗне кайалла илҫӗ. Ҫапла ҫӑвашсем пӗр пӗринпе пӑтраннипе Ҫӗмпӗр кӗпӗрнинҫен пӗр ҫӗлен те йараймарӗҫ. Малтан асӑнсаттӑмӑр—Саратту кӗпӗрнинҫен Тума сотсиал-темократ В. А. Анисимов суйланҫӗ: вӑл сотсиал-темократсен фраксийӗн паллӑ ҫӗленӗҫҫӗ, правиттӗлствӑ ӑна тӗрмене хупса сут туса катӑрка йаҫӗ.

## 12. Револуутсиллӗ хаҫатпа кӗнекесем кӑларни.

Ҫӑваш историнҫе ҫи малтан ҫӑвашла хаҫат Хусанта 1906-мӗш ҫулӑн пуҫламӗшӗнҫе тухма тытӑнат̆. Ӑна Н. В. Николуски кӑларма тапратат̆. „Хыпар“ кӑларма укҫа малтан ҫемствӑ, унтан катетсем ҫулӗпе пыракан пуйансем параҫҫӗ. Хаҫатра авалран Николускипе Ашмарин ҫумӗнҫе ӗҫленӗ ҫӑваш вӗренекенӗсемех ӗҫлеме тытӑнаҫҫӗ. Унтан ҫав хаҫат ӗҫӗ ҫумне ҫамрӑк ҫӑваш револуутсионерӗсем Аким Михайлипе Трахвин Йехимӗ ҫыпҫӑнаҫҫӗ. Хаҫат тапранас умӗн вӑл пиҫетленес типокрафийе Тайӑр Тимкипе Волков напорҫшике ӗҫлеме кӗреҫҫӗ. Хаҫат малтанах револуутси йеннерех сулӑнат̆, анҫах вӑл ҫӑнтан револуутсиллӗ хаҫат пулман: вӑл правиттӗлствӑна вӑйпа кӗрешме ҫӗнмест, унтан вӑл пӗтӗм ҫӑваш халӑхӗн револуутси вӑхӑтӗнҫе пӗрлешсе ӗҫлемелле, унӑн пӗр фронт пулмалла тет. Ҫавӑнпа хаҫата пӗтӗм ҫӑваш интеликентси малтан питӗ мухтат̆. Хресҫен те ҫӗнӗлӗхе хаҫатпа питӗ сапӑр пулат̆. Хаҫат тухма тытӑнсан пӗтӗм халӑх пуҫа тӑратат̆: вӑл ҫунӗпе уншӑн ҫӗнӗ самана ҫитнине, пусмӑрлӑ ҫӑваш халӑхӗ те политтиккӑ ҫинҫен хӑй ҫӗлхипе пиҫетленӗ ҫыру урлӑ канашлама пултарнине ҫасах сиссе илет. Револуутси ӗҫӗсем шалалла кайнӑҫем хаҫатӑн сулӑнӑҫӗ улӑшӑнмалла пулат̆: ҫӑваш йалӗнҫе класлӑ кӗрешӳ тапранат̆, халӑх тӗрлӗ сийсене уйӑрӑлат̆, ҫӑваш йалӗнҫе револуутсийе хирӗҫ пыракан сий палӑрат̆. Хаҫата уйрӑм пуйансене йе пупсене йатлакан кореспотентсем пыма тапратаҫҫӗ. Вӗсене хаҫатра ӗҫлекенсем пиҫетлеме тытӑнаҫҫӗ, ретактӑр Николуски хӑй те сиссе

ĕлкĕреймест—хаçат урăх çул çине пăрăнма тытăнаť. Ђăваш револютсионерсем ђăмăртанса çитсе вăйлăрах ĕçлеме тапрансан хаçата хăйсен аллине илмелле тăваççĕ. Н. В. Никољски çакна ђарма пултараймасť: ăна çемствă укçа пами пулаť, унтан хаçатра ĕçлекенсем те пур те ун çулĕнђен таçта сулахайа куçнă. Çапла хаçат ессерсен аллине куçаť, ăна малалла çав партти кăларса тăма тытăнаť. Хаçатра кивĕ йĕркешĕн тăракансене питĕ тулама тытăнсан—унтан ђăваш интеликентсийĕн пĕр пайĕ пĕтĕмпех сивĕнет, хаçат илсе пурăнакан пуйантарах ђăвашсем те сивĕнеççĕ. Унтан правиттĕлствă револютсийе хайарланса пусарнă вăхăрта йалсенђе „Хыпар“ илекенсене шанђăкран кăларма тытăнаççĕ, вĕсене револютсионерсем тесе вĕскĕртсе тулама тытăнаççĕ, политси „Хыпар“ номерсене прокламатсисен вырăнне хураť, „Хыпар“ вулакансене ареслет, хăш пристăвсемпе çемски нађаљниксем „Хыпара“ потписђиксене памасăр тӳрех çунтарма хушаççĕ. Çав вăхăтрах Хусан кĕпĕрнатăрĕ виç-тăват номертен пĕрне типокрахвиренех ареслет, ретактăрсене тĕрмене хупаť, хаçат çине пысăк штрафсем хураť. Çапла хаçат ĕçĕ нађартан нађартарах пулса пыраť. Çакна пула потписђиксем те ђакса пыраççĕ: укçа тӳлесе хаçат илсе тăракансем 1200-тен 300 çеç йуlаççĕ. Унтан кĕпĕрнатăр ретактăрсене тĕрмене лартнипе, пуçиле ытти патшалăхсене йанипе те хаçата пĕтерейместине сиссе—типокрафийе ђăваш хаçатне пиђетлеме ђарăнма йе пиђетлес пулсан та пысăк хакпа çеç пиђетлеме хушаť. Çав вăхăтрах ессерсен парттийĕ хаçата партти оркăнĕ йевĕрлĕ мар, унта ытти парттисенђе тăракансем те çыраççĕ, унта ытти сотсиалислă парттисен майлă статйасем те пиђетленеççĕ тесе тиркешме тытăнаť, укçа сахал пама тытăнаť, унтан пĕтĕмпех пулăшма пăрахаť. (Ђăнахах та „Хыпар“ тĕрĕсрен каласан ессерсен оркăнĕ йевĕрлĕ пулман). Пĕр вăхăта хаçата Мукулай Тимахвийĕ çеç хăй тĕрлĕ майпа тупнă укçапа кăлараť. 1907-мĕш çутта хаçат хупăнасси паллă пулаť: Епир мĕн тăвас тесе питĕ аптăраса канашлатпăр: кооперативлă истатĕлствă тума шухăшлатпăр, унăн уставне çыратпăр, ђăвашсен хушшинђи паллă çынсем патне çырусем йаратпăр. Анђах çак ĕç пулассине пĕтĕмпех шанмастăпăр, унтан вăл пулсан та вăрах вăхăтра çеç пулассине пĕлсе тăратпăр. Аптăранă йенне хаçат тĕлĕшĕпе Хусана канаша пухăнатпăр: çав канашлура хаçата йепле те пулса хупăнасран çăлас тетпĕр,

аптӑранӑ йенне Йетӗрнери ҫу савӑҫӗ хуҫинҫен С. М. Талантсевран хаҫата малалла та кӑларса пыма пулӑшу ыйтса пӑхас тетпӗр. (Талантсев катетҫӗ, вӑл Тумӑ ҫӗленӗ пулҫӗ, вӑл 1906-мӗш ҫулта политтиккӑ тӗлӗшӗпе ҫӑвашла ик-виҫ кӗнеке кӑларнӑҫҫӗ). Талантсев патне тепутатси йаратпӑр: Ф. Н. Серкейевпа С. Н. Николайев кайаҫҫӗ. Анҫах вӗсем нимӗнсӗрех таврӑнаҫҫӗ. Талантсев: ,,Хыпар" тӗрӗс ҫулпа пымасӑ, вӑл ытла сулахайа туртать, вӑл сотсиалислӑ парттисен хыҫҫӑн ҫеҫ пырать, ҫавӑнпа ӑна ҫӑнтан пулӑшса тӑма пултараймастӑп, ҫапах есир килни ахаҫ ан пултӑр тесе пӗр виҫҫӗр тенкӗ укҫа парам сире, тет. Пирӗн йулташсем ҫак укҫана илмеҫҫӗ, мӗншӗн тесен, виҫҫӗр тенкӗшӗн пирӗн мӑшкӑлланасийӗн асапӗ те пулман: виҫҫӗр тенкӗпе епир хаҫата пӗр ерне таранҫҫен те ытла кӑларма пултарман. Ҫапла ирӗксӗрех пӗртен пӗр ҫӑваш хаҫатне епир хупмалла пултӑмӑр. «Хыпарӑн» питӗ кӗске ӗмӗрӗнҫе 7—8 ретактӑр улшӑнҫӗ. «Хыпарта» ҫи ҫӑнтан ӗҫлесе пурӑнакансем: Аким Михайли, Трахвин Йехимӗ, Микулай Ҫимунӗ, Тайӑр Тимки пулҫӗҫ, вӗсем уйӑхне 12—15 тенкӗ ҫеҫ илсе выҫӑллӑ-тутӑллӑ ӗҫлесе пурӑнҫӗҫ. „Хыпар" ретаксийех револютси вӑхӑтӗнҫе 10—15 политтиккӑ кӗнеки ҫӑвашла кӑларҫӗ, ҫав кӗнекесене малтан Николски, унтан Талантсев краштӑнла ирӗклӗхсем ҫинҫен, Патшалӑх Тумине суйласси ҫинҫен кӑларҫӗҫ, кайарахпа ҫӑнтан револютсиллӗ прошӑрӑсем туха пуҫларӗҫ, ҫапла «Ерешменсемпе шӑнасем», „Ҫейе механиккӑ" тенӗ прошӑрсем тухнине астӑватӑп, унтан К. Маркспа Ф, Енкелсӑн „Комунисла Мӑнафистне" пиҫетлеме тытӑннине астӑватӑп. Ҫапла ҫулҫурӑ хушшинҫе хаҫатран пуҫне 15 йахӑн кӗнекесемпе прошӑрӑсем кӑларни ҫӑваш револютсионерсем ҫӑвашла револютсиллӗ литтераттурӑ тӑвасшӑн питӗ тӑрӑшса вирлӗ ӗҫленине пӗлтерет; ҫакна пӗлес тесен ун ҫухнехи вӑхӑта асран ҫухатас пулмасӑ: профессионаллӑ револютсионерсем ҫӑвашран сахал пулнӑ, вӗсем Хусанпа Ҫӗмпӗрте вӑрӑ-хурах пек пытанса пурӑнса ҫеҫ ӗҫленӗ, вӗсене ҫав ӗҫре никам та пулӑшакан пулман.

## 13. Вӑрттӑн ҫӑваш типокрафийӗ тума пуҫлани.

Ҫак ӗҫе пӗр йенҫен вырӑс типокрафийӗсем правиттӗлствӑ хӗснипе ҫӑвашла револютсиллӗ литтераттурӑ пиҫетлессине йалан ҫӑрмантарма тӑрӑшнине кура тума шухӑш тытнӑ, тепӗр йенҫен

малашне те пайтахҫен ҫӑваш револютсионерсен правиттӗлствӑпа вӑрттӑн пытанса пурӑнса кӗрешмеллине пӗлсе тӑра ҫак ӗҫе тума шухӑш тытнӑ. Ҫак ӗҫе тума хӑйсем ҫине Трахвин Йехимӗпе ҫӑваш напоршҫӗкӗ Тайӑр Тимкки илеҫҫӗ. Ҫулталӑк тӑршшӗпе Тайӑр Тимкки хӑй ӗҫлекен типокрафирен шрифт, ытти пиҫетлеме кирлӗ йапаласене вӑрласа тӑраҫ. Трахвин Йеххимӗ ҫав йапаласене пуҫтарса, пытарса, сыхласа тӑраҫ. Политси ун хваттерне питӗ айкама тытӑнсан—вӑл типокрафи хатӗрӗсене вӗрентекенсен ҫеминарине ҫӑваш вӗрентекен К. С. Серкейӗв патне леҫет, ӑна вӑл ун пакашӗнҫе кирлӗ-кирлӗ мар йапаласем ҫеҫ тесе шантараҫ. Анҫах ҫасах ҫав Серкейӗв патӗнҫе шантармери опыск туса ҫав йапаласене тупаҫ, К. С. Серкейӗва тӗрмене хупаҫ (кайарахпа ӑна ирӗке кӑларҫӗҫ, анҫах вырӑнтан кӑларса вырӑн памасӑр ӑна нумайҫҫен тарӑхтараҫҫӗ). Типокрафи ӗҫӗ хупланнине сиссен Е. Т. Трофимов пирӗн пата Ҫӗмпӗре тарса ӳкет, унтан епир ӑна П. Н. Рсай паспортне парса, ҫул ҫине укҫа парса Капкаса ӑсататпӑр. Тайӑр Тимкки Хусантан тарса ӗлкӗреймест: ӑна ареслеҫҫӗ, унтан пайтахҫен тӗрмере тытса Ҫӗпӗре Йаккут оплӑҫне 5 ҫула пуҫиле йараҫҫӗ. 1908-мӗш ҫулта Е. Т. Трофимова Петровск хулинҫе йут паспортпа пурӑнсан та шантармери йӗрлесе тупаҫ, ӑна тӗрмене хупаҫҫӗ, унтан 1909-мӗш ҫулта Хусана илсе килсе сут ӑна крепӑҫа хупмалла тӑваҫ. Сутра вӑл манран, унтан ҫӑваш ступентӗнҫен И. М. Мироновран ҫак ӗҫ ҫинҫен тӗпҫесе пӗлме ыйтаҫ (епир малтанах ун хутне кӗрсе мӗн хайласа суймаллине канашласа хунӑҫҫӗ, ҫак вӑхӑтра епӗ йури Хусана куҫнӑҫҫӗ, унта сотсиал-темократсен „Волшски листок“ хаҫатӗнҫе ӗҫлесе пурӑнатӑп, анҫах Хусанта пӗр ҫул та пурӑнмарӑм—мана тытрӗҫ те киле ӑсатрӗҫ. Анҫах сут пире ҫвитеттӗле кӳртмест. Е. Т. Трофимов тӗрмерен тухсан ӗҫлеме Мускава куҫрӗ, унта хӑйне хӑй пӑшалпа персе хӑй ҫамрӑк пурӑнӑҫне вӑхӑтсӑр пӗтерҫӗ. Тайӑр Тимккине Йаккут оплӑҫӗнҫен ссылккӑран таврӑннӑ ҫух Ф.Н. Серкейӗв патӗнҫе 1912-мӗш ҫулта пулас тӗл пултӑм: вӑл ссылккӑра пӗтӗмпех аталанса ҫитӗннӗ, пӗтӗмпех ҫӑнтан рапоҫҫи йеврӗлӗ пулнӑ. Мӗн халпа таврӑнтӑн ӗнтӗ, тесен вӑл:—Тата ытларах хайарланса таврӑнтӑм, тет. Унтан епӗ: Толстой вӗрентӗвӗсем, тӗрӗс анархисӑм-интивитуалистсен вӗрентӗвӗсен хыҫҫӑн сулӑнса аташнине сисрӗним ӗнтӗ? тесе ыйтатӑп, вӑл: Тӗрмепе ссылккӑра ҫав ҫул

йăнăш иккенне сасартăках систереççĕ, тет. Тата епĕ: астăватна— есĕ çакăнма тытăннăђђĕ, тесе ыйтатăп (ђăнахах та вăл пĕрре çĕрле çакăнма тытăннăђђĕ, епир ăна сиссе вилĕмрен хăтартăмăр), вăл:—ађа ђухне айван пулнă, хам çакăниђђен çынсем çакни авантарах пулаŤтăр, тет мана хирĕç кулкаласа. Çак маттур ĕçлекен револ̧утсионер вăрçă вăхăтĕнђе çухалђĕ, унтан ман шухăшпа хăватлă револ̧утсионер тухма пултарнă пулĕђђĕ.

## 14. Ђăваш террорисĕсемпə террор ушкăнĕсем.

Авалран „хĕç çĕклекен хĕçрен пĕтет“ тенĕ сăмах çӳрет. Çакă револ̧утси вăхăтĕнђе револ̧утсийе хирĕç пыракансен тĕлĕшĕпе питĕ вырнăçлă сăмах пулса тăђĕ. Револ̧утсийе хирĕç пыракансем 1905-мĕш çулхи кĕркуннере йалан покромсем тăва пуçларĕç, миттинксемпе темонстратсисене пăшал персе тектăмалăх çынсене вĕлерсе салата пуçларĕç (çапла тума Микулай патша 1905-мĕш çулта 9-мĕш кăрлађра хăй кăтартса пађĕ). Ђăвашсен хушшинђе те хресђен пухăвĕсене политси пăшалпа персе çынсене вĕлерсе, амантса салата пуçларĕ (5-мĕш клавана пăх). Çакна курса револ̧утсионерсем те нумайĕшĕ хĕçпăшал тытса правиттĕлства вăл мĕн тунă çавăнпах тавăра пуçларĕç. Сотсиалислă парттисем револ̧утсие йун тăкса, кĕрешсе, пăлханса, пăтранса пĕтесрен шикленсе террора хирĕç пырађђĕç, ессерсем çеç ăна йышăнађђĕç, вĕсем те террор тăвас пулсан партти канашласа постановлени йышăнсан çеç тума пулаŤтеђђĕç. Унтан террорпа анархистсем питĕ кĕрмешме йуратађђĕç. Çапла парттисем террора хирĕç пырсан та вăл аслăланса, сарăлса пыђĕ. Мĕншĕн? Мĕншĕнни паллă: вăл политсипе шантармери хăй револ̧утсионерсен йунне нимĕне хумасăр тăкма тытăннинђен килђĕ. Малтанах епир Шупашкар уйесĕнђе Василйевпа Крикорйев Скворт-сов уратнике вĕлерме тытăннине кăтартрăмăр. Вĕсем пурăнăçĕнђе ĕлĕк тен ђăхă та пусма йĕрĕннĕ пулĕ, анђах халĕ вĕсем уратнике вĕлерме тăраççĕ. Мĕншĕн? Мĕншĕн тесен, уратникĕн шаљçи тулнă, вăл хăй ытла нумай ирсĕр ĕç тунă. Малта политси нумай тĕлте хресђенсене таках пăшалпа персе вĕлерни çинђен, нумай тĕлте хĕнесе амантни çинђен асăнтăмăр. Çакна кура хăш револ̧утсионерсем тӳсеймесĕр револ̧утсийе хирĕç пыракансене вĕлеркелеме те тытăнђĕç. Унтан хăш револ̧утсионерсем патша правиттĕлствине вăйсăрлатас тесе, унтан револ̧утси ĕçне малалла йама мул

туйанас тесе тӗрлӗ патшалӑх вырӑнӗсене ҫарата пуҫларӗҫ, ҫавӑн пек ҫаратусене експроприатсисем теҫҫӗҫ. Ҫапла револютси тӑшманӗсене хӗҫпӑшалпа пӗрсе патшалӑх вырӑнӗсене експроприатсилесе кӗрешнине террорлӑ кӗрешӳ теме пулаӗ. Ҫавӑн йевӗрлӗ кӗрешӳ ҫӑвашсен хушшинҫе те паларҫӗ. Нумайӗшӗ револютсионерсем, сотсиалислӑ парттисем террорган писсе тӑраҫҫӗҫ, ун ҫине хӑррӑн пӑхаҫҫӗҫ, анҫах хӑшӗ ессерсен, анархистсем йе парттисенҫе тӑман револютсионерсем террора йышӑнаҫҫӗҫ. Террор тӗлӗшӗнҫен ҫӑваш револютсионерсен ушкӑнӗнҫе нумайӗшӗ иккӗленсе тӑраҫҫӗҫ, хӑшӗ пӗтӗмпех ӑна хирӗҫ тӑраҫҫӗҫ (Адун Кевӗрли), Микулай Тимахвийӗ ҫеҫ пӗрик ҫамрӑк йулташсемпе питӗ терроршӑн хытӑ тӑраҫҫӗҫ. Епир террор тӗлӗшӗнҫен иккӗленекенсем пӗр йенҫен ӑна теори йенӗпе пӑхса йӑнӑш, усӑсӑр теттӗмӗр, тепӗр йенҫен револютсиллӗ террор сӑлтавӗпе нумай вӑрӑ-хурахсем те хӑватланса ӗҫленине кура ун ҫине тиркесе пӑхаттӑмӑр: ҫӑнахах та ҫав саманара уйрӑм пуйансене вӗлерсе ҫарату та пулкаларӗ (апла тума ессерсен парттийӗ те хушмасҫӗ), унтан хӑш те хӑш йалсенҫе уйрӑм ҫынсем ерттелленсе поштӑ таврашне, каҫонккӑсене, вулӑсри правленисене, куланай пухакан спорщиксене ҫапса ҫаратса илҫӗҫ, ҫав ӗҫе вӗсем нумайӗшӗ хӑйсем тӗллӗн, пӗр орканисатси хушманнипе тунӑ, унтан хӑшӗ вӗсенҫен ҫапса илнӗ укҫана та хӑйсене ҫеҫ уйӑрнӑ, ҫапла ҫавӑн пек револютсионерсем ҫӑнтан револютсионерсем пулман вӗсем вӑрӑ-хураха ҫывӑх ҫынсем пулнӑ.

Ҫӑваш террорисӗсем ҫинҫен калас пулсан сӑмаха Микулай Тимахвийӗ ҫинҫен пуҫлас пулаӗ. Вӑл пӗтӗм Атӑл тавринҫе паллӑ террорист вырӑнне хисепленнӗ. Ҫӑвашсемшӗн унӑн ҫи паллӑ ӗҫӗ Хусан кӗпӗрнатӑрӗн пумушникӗ Копеко ҫине помпӑ пӑрахни. Ҫав Копеко Хусантан Шупашкар уйесне ҫӑвашсене хусахсемпе пусарма пырса кайсан, уйесре нумай хресҫене хӗнеттерсе, хӑшне тытса кайсан Микулай Тимахвийӗ ессерсен парттинҫен ӑна ҫав ирсӗр ӗҫсемшӗн вӗлерме ирӗк пама ыйтаӗ, партти комиттеҫӗ ӗҫпе паллашсан хирӗҫ пымасӗ. Вара Микулай Тимахвийӗ тата икӗ йулташпа ҫак ӗҫе хатӗрленме тытӑнаӗ. Террориссем Копека вӗлерме малтанах шутласа план тӑваҫҫӗ: ҫав план тӑрӑх вӗсем урамра Копеко лашасемпе иртсе кайнӑ ҫух унӑн коҫаски айне помпӑ пӑрахмалла пулаӗ. Анҫах ҫав помпа пӑрахма Копека йепле тӗл пулас, ӑна йепле хуралласа илес? Террористсем айкаса сӑнаса

илеççĕ: Копеко питĕ пысанса крепоçра çеç пурăнаť, анђах хăш ђухне вăл крепоçран пар лашапа лашисене мĕн вăй çитнĕ таран хытă ђуптарса уђрештенисене кайса килет. Çакна пĕлсен—террориссем питĕ хытă ђупакан маттур лаша илсе йараççĕ: çав лашана Копеко парĕ хыççăн йаркаласа илеççĕ: лаша партан йулма мар, ăна хăваласа иртет. Çапла хатĕрленнĕ ђух террористсем улпутсем пек, уçăлма тухнă пуйансем пек çӳреççĕ. Меллĕ вăхăта сăнаса илсен террориссем Копеко лашисен айне помпă пăрахаççĕ, ăна Воскресенски урамра Хула Туми умĕнђе пăрахаççĕ. Анђах помпă ӳксенех çурăлаймасť, вăл Копеко лашисем ĕрĕхсе айаккарах кайсан çеç çурăлаť: помпă калама çук хăрушă вăйпа шартлатса çурăлаť, пĕтĕм таврари кантăксене салатаť, трамвай ређсисене вĕрен таврашне йавса авкаланă пек йавса ывăтаť, анђах Копеко нехекрен сыв йулаť. Кайарахпа айалти Феторовски урамра пĕр хăваттертен помпăсем шартлатса çурăлаççĕ: çав хваттерте икĕ çамрăк çын вилеççĕ, вĕсем Микулай Тимахвийĕн йулташĕсем студент Сефировпа вĕрентекен Петров пулаççĕ, вĕсен виллине курсан Копеко хăй çине помпăсем пăрахакансене паллаť. Микулай Тимахвийĕ тата та ытти террор ĕçĕсенђе пулнă, анђах çав ĕçсем ђăваш ĕçĕпе çыхăнса тăман, унтан вĕсене епĕ пурне те тĕплĕрен пĕлсе те çитерейместĕп. Микулай Тимахвийĕ ђăвашсенђен пĕр тĕреклĕ террористсен ушкăнĕ тăвасшăн йалан çунађђĕ, ун шухăшĕпе çав ушкăн вăйлă ĕçлесен çеç ђăвашсен револђутсиллĕ ĕçĕ малалла кайма пултарађђĕ. Йун тăкни лайăх мар пек туйăнаť, тесен, вăл пире хирĕç: есир кăрккасем, ав вĕсем пирĕн Куçмина вĕлерђĕç, есир апла пулсан тата сылтăм питре çавăрса хума хатĕр пулас, теђђĕ. (Куçмин Ђапкас пупĕ ывăлĕ, Питĕр студенђĕ, Ђĕмпĕр кĕперни Шитловски улпут патĕнђе 1906-мĕш çула ађасем вĕрентсе пурăннă, ађасене вăл револђутси йевне сулăнтарма тăрăшнă, ун виллине Каша патĕнђе вăрманра хăмăш ăшĕнђе тупрĕç, пур те ăна улпут хушнипе йури вĕлерсе пăрахнă теђђĕç, çав ĕçпе слетстви 6—7 çул пыђĕ, анђах ĕçĕн вĕçĕ тупăнаймарĕ). Унтан: ав çав та, çав сан çулăпа пыракан йулташсем експроприатси тунă та илнĕ мула парттийе паман, тесен вăл:—Кĕтӳ таврашĕ кĕсенлĕсуранлă сурăхсăр пулмасť, теђђĕ. Унтан ђăвашсен хушшинђи террористсене асăнас пулсан Йак. Вас. Куснетсова асăнас пулаť: вăл хăй вырăсђĕ, анђах Ђăваш шкулĕнђе вĕренсе, ђăвашсемпе пĕрле

аталанса, ҫăваш таврин҆ҫе аҫасене вĕрентсе тăрса, вăл пирĕн хушă-мăрта ҫăваш вырăнне хисепленнĕ пекех хисепленеҫҫĕ. Вăл Пăва уйесĕн҆ҫе Аркай таврашĕн҆ҫе питĕ нумай террорлă ĕҫ тунă, вăл Ҫĕмпĕр кĕпĕрнатăрĕ Старинккевиҫа вĕлерекен ушкăнра пулнă. Кайран вăл Киттайпа Йаппун ҫĕрĕсен҆ҫе тарса ҫӳренĕ, анҫах 1911-мĕш ҫулта ăна Влативостокран тытса Ҫĕмпĕре илсе пыҫĕҫ. Анҫах сут нийепле те ăна айăплама пултараймарĕ: ăна паллакан пĕр ҫвитеттĕл те пулмарĕ. Ирĕке тухсан ăна салтака илҫĕҫ: епĕ ăна Туркестана ăсатса йатăм, анҫах пĕр ҫул та иртмерĕ—вăл слушпă-ра пулнă полк пăлханни ҫинҫен хаҫатсен҆ҫе ҫыра пуҫларĕҫ, унтан ăна ҫав пăлхав пуҫĕн҆ҫе тăнăшăн персе вĕлернĕ тенĕ хыпар ил-тĕн҆ҫĕ. Йалти паллă террористсенҫен А. П. Лпова, йул. Катыкова асăнма пулаӗ—вĕсем експроприатси Шупашкар уйесĕн҆ҫе тунă, ҫа-вăншăн А. П. Лпов каторка сакăр ҫула кайнă*); унтан Ĕпхӳ кĕ-пĕрнин҆ҫе Т. Ф. Тимофейев ҫавăншăнах 6 ҫула каторка кайнă. Ҫăваш йалĕсен҆ҫе уйрăм террористсем тата та пайтах пулнă, ан-ҫах епĕ вĕсене пурне те пĕлсе ҫитерейместĕп, ĕлĕк пĕлнисене те нумайĕшне йаҫĕпе асăнма пултараймастăп: манса пĕтнĕ.

## 15. Ҫăваш револютсионерсемпе револютсийе хирĕҫ пыракансем пĕр пĕринпе кĕрешни, револютсионерсен хушшинҫен провокатăр сиксе тухни.

Малта мĕн ҫырни пур те ҫак кĕрешӳ ҫинҫенех калаӗ. Анҫах револютсийе ҫăнтан ăнланас тесен ҫав кĕрешӳ ҫинҫен уйрăм ҫӳт-се каламасан йурамасӗ. Ҫи малтан револютсионерсем камсем пул-нă вĕсем? Вĕсем пур те тенĕ пек йе ҫухăн хресҫенсем, йе вăтăм хресҫенсем, йе вĕсен аҫисем. Илер малта асăннă паллă револют-сионерсене: Е. Т. Трофимова, Ф. Н. Серкейева, Тайăр Тимкине, И. С. Серкейева, М. Ф. Акимова, М. И. Икнаӗйева, ыттисене те нумайăшне—вĕсем лашасăр ҫемйесен҆ҫе, тăлăхтурат, выҫăлă-тутă-лă пурăнса иртерекен килйышсен҆ҫе ӳссе ҫитĕннĕ, унтан вĕсем хăшĕ аҫаранах пурлакра ҫӳренĕ, хуласен҆ҫе ĕҫлесе ҫӳренĕ (Трофимов, Тайăр, Акимов). Илер пур ытти ҫак кĕнекере асăннă револютсионерсене—вĕсем пур те йе вăтам пĕр лашаллă хресҫенсем,

*) А. П. Лпов каторка сакăр ҫула мар, вунă ҫула кайнă.
Ретактăр.

йе вěсен ывăлěсем пулнă. Паллă револютсионерсен хушшинче епě мěн пурě икě çăнтан пуйан çынсен ачисене астăватăп: Микуш Петěрпе Паймек Иванне, пěри çěр хуçи ывăлě, тепри хăмла сутилуçě ывăлě пулнă. Çапла ěнтě револютси йенче чухăн, хресченсемпе вăтам хресченсем тăнă, унтан револютси йенчех сайра пěррe вěреннě пуйан çын ачисем, аталанма тытăннă чăваш пуршуаçийěн чěппиcем те тăнă. Кам револютсийе хирěç пынă? Малтах кăтартрăмăр—ăна хирěç чи малтан йалсенчи тěттěм пуйансем тăнă. Анчах халăха хирěç вěсем мěн тума пултарнă? Пуйансен сийě чăваш йалěнче питě çухе пулнă, çавăнпа вěсем ытти нумай кěпěрнесенчи пек револютсийе хирěç вăйлă кěрешме пултарайман. Çавăнпа чăваш йалěнче револютсиллě кěрешў çапăçас патьe, хире хирěç тăрса вăйпа кěрешес патне, покром таврашсем тăвасси патне çитеймен. Çавăн пек йапаласем пулсан та уйрăм пухусенче çеç пулкаласа илнě. Унтан йалсенче пурăнакан револютсийе хирěç çынсем органисатсилемме, çăнтан уйрăм ушкăнсене чăмăртанма пултарайман, мěншěн тесен, йал çынни хăй тěллěн начар органисатсиленет; вěсем хуласенче чăваш сутилуçисем, чинавникěсем тěрлě мещенсем йышлă пулнă пулсан вěсен çумěнчен çеç пěрлешсе вăйлăланма пултарнă пулěччěç. Паллă—çак сий те револютсийе хирěç хăйне кура ěçленě, анчах уçăн ěçě пуринчен ытла халăх çинчен, унтан уйрăм револютсионерсем çинчен шалăпăсем пани, елеклесе кăтартни çеç пулнă. Ăна та вěсем пěлнě пěлмен чěлхепе çăнтан тăвайман: хăйсене хăйсемех пăтратнă, çыхлантарнă, хăйсем вăртăн тунине хăйсемех систернě. Анчах çапах та чăвашсен хушшинче пěр авалран органисатсиленнě вăй пулнă, çав вăй пěтěмпех револютсийе вирелле тăнă. Çав вăй—чăваш пурăнăçне 40 çул тăршшěпе хăйсен аллинче тытса тăракан миççионерсем, пупсем, вěсен хыççăн пыракан вěрентекенсем, старшинасем, ытти нумай вырăнта тăракансем. Çак вăй пěр пěринпе çыхăнса, пěрне пěри пěлсе, пěр пěрне пěтěм чăваш тěнчипе çырусем çўретсе пурăннă, çав вăй пуçěнче ăна пěрлештерсе, тěреклěлентерсе Иван Йаккăлча тăнă; çак вăй хăй аллинче шкул ěçне çеç мар, халăхăн ытти нумай ěçěсене те хăй аллинче тытса тăнă (ахалех мар—Иван Йаккăлча чăваш патши тесе чěнеччěç, чăнах та вăл чăваш ăрăвěн—йăхěн патриархě йевěрлě пулнă). Чăвашсен хушшинче йе вěсен тěлěшěпе мěнле ěç ан пултăр: шкул ěçě,

сут ĕçĕ, çĕр виçес, сутас йе илес ĕç, çемствă ĕçĕ—Иван Йаккăлђă пур тĕле те хутшăннă, пур тĕлте те унăн сăмахĕ вырăнлă пулнă. Иван Йаккăлђă патшапа, унăн ашшĕпе те аслашшĕпе те курăнăçнă, хăш министăрсемпе туслах пурăннă çын вырăнне шутланса пĕтĕм Атăл тавринђе аслă сановник вырăнĕнђе хисепленеђђĕ. Ак мĕншĕн ђăнахах та Иван Йаккăлђă хăй хыççăн пыракан пупсемпе, вĕрентекенсемпе, старшинасемпе, тĕрлĕ ђинавниксемпе, çемствăсенђе ĕçлекен ђăвашсемпе ђăваш халăхĕ хушшинђе уйрăм хăватлă вăй вырăнне palăрса, курăнса тăрађђĕ. Çав вăй кашни ђăваш йалне, шкул ђиркÿ, правлени урлă хăй аллине серетелесе илнĕђђĕ. Унтан çак вăй халăха çутта кăларакан, ăна тăван ђĕлхепе вĕрентекен, ăна ырă тăвакан вăй вырăнне хисепленсе тăрађђĕ, çавăнпа вăл питĕ тĕреклĕђђĕ, хăйне вăл тÿрех ђăваш пурăнăçĕн хуçи вырăнне хурађђĕ. Иван Йаккăлђăн халăха вĕрентес тĕнĕ çистемине йышăннă çынна револђутси йенне сулăнма йывăрђђĕ, мĕншĕн тесен, çав çистема ÿссе аталанма монархипе ђиркÿ пулăшнă; унтан ђăвашсене, ытти вак халăхсене те вĕрентес ĕçпе Раççейри ђи пысăк реаксионерсен йађĕсем: Попегоностсев, Саплер ытти револђутси тăшманĕсен йађĕсем те çыхăнса тăрађђĕç. Ак мĕншĕн çак çистемăна ђунпа парăннă интеликентсем те, хресђенсем те нумайĕшĕ револђутси çине йунăш куçпа пăхађђĕç, мĕншĕн тесен, вĕсем монархипе ђиркĕве ђăвашсемшĕн ырă йапаласен вырăнне хурађђĕç. Çавăнпа нумайĕшĕ çавăн пек çынсем револђутсипе хирĕç кĕрешнине те ђăвашсемшĕн усăллă теђђĕç. Çапла тăнлăпуçлă, ĕçе пĕлсе тăракан, çителĕклĕ орканисатсиленнĕ 1905-мĕш çулхи контр-револђутсионерсем ђиркÿпе шкул таврашĕнђе пурăнађђĕç. вĕсен пуçлăхĕ Иван Йаккăлђăђђĕ, вĕсен штапĕ Ђăваш шкулĕђђĕ. Çак револђутсийе хирĕç пыракан йăва çинђен малта та пайтах каларăмăр, анђах ун çинђен тата та каламалли пур. Ђăваш шкулĕ мĕн ђăваш тĕнђинђе пулвă ĕçсене витĕр пĕлсе тăрађђĕ, мĕншĕн тесен, пур тĕлте те унăн хăйĕн çыннисем вĕрентекенсемпе пупсем пур: вĕсем пур тĕлтен те таврара мĕн пулнине пĕлтерсе тăраççĕ. Шупашкар уйесĕнђе Кĕнер пуç таврашĕнђе халăх хумханма тытăннине шкулра пиртен, Ђĕмпĕр револђутсионерсенђен, малтан тĕплĕ пĕлсе тăраççĕ, мĕншĕн тесен, ун çинђен шкула унти 2-класлă шкул пуçлăхĕ Ф. А. Серкейев çырать. 1905-мĕш çул кĕркунне епĕ Кăнла Кушкинђе ик-виç уйăх çеç вĕрентетĕп—

Ҫӗмпӗр кӗпӗрнинҫи шкулсен тиректӑрӗ хушнипе манран инспектӑр „класра аҫасен умӗнҫе турӑ ҫинҫен каласмастӑп, калаҫас пулсан православи вӗрентнӗ пекех калаҫатӑп" тесе алӑ пусса хут пама ыйтаҫ (ҫав хута парас вырӑнне ун ҫинҫен мӑшкӑлласа хаҫатра кореспотентси пиҫетлетӗп). Кайарахпа илтетӗп: епӗ мӗн туни ҫинҫен Иван Йаккӑлҫа вырӑнти свешҫеник К. А. Алексҫейев вӑртӑн ҫырса йараҫ, ҫав ҫырура ытти айӑпсен хушшинҫе епӗ Христоса Сократран кайарах тӑраҫ тесе аҫасене ӑнлантарнӑ тесе ҫырнӑ пулаҫ. К А. Алексҫейев аванах ҫынҫӗ, манпа та лайӑх пурӑнаҫҫӗ, анҫах ҫапах вӑл ман ҫинҫен Иван Йаккӑлҫа ҫыраҫ, мӗншӗн тесен, вӑл ӑна пирӗншӗн пуриншӗн те атте вырӑнӗнҫи ҫын, вӑл пурне те пӗлсе тӑма тивӗҫлӗ ҫын тесе хӑй ҫунӗпе шутлаҫ. Ҫав ҫырӑва илсен Иван Йаккӑлҫӑ унта ҫырнӑ йапаласем ҫинҫен шкулсен тиректӑрне хыпар тӑваҫ. Ҫакӑн пек истори ытти револютсионерсемпе те нумай пулнӑ, ҫавӑнпа ҫаваш револютсионерсем револютсийе хирӗҫ пыракан ҫавашсене хирӗҫ орканисатсиленсе кӗрешме шухӑш тӑваҫҫӗ. Анҫах малтан револютсионерсем Иван Йаккӑлҫӑ политтиккӑран пӑрӑнса пурӑнма, револютсипе ҫыхланса йавӑҫмасӑр пурӑнма кӑмӑл тумӗши тесе, вӑл ҫапла тусан авантарах пулӗҫҫӗ тесе шутлаҫҫӗ. Ҫавӑнпа 1906-мӗш ҫулта Ҫӗпмӗрте пулнӑ ҫиест Иван Йаккӑлҫӑ патне тепутатси йамалла, ҫав тепутатси ӑна револютси майлӑ пулма, майлӑ пулмасан та револютсийе хирӗҫ пымалла мар тесе ӳкӗтлемелле тесе постановлени йышӑнаҫ. Ҫав тепутатси сиест хупӑнсанах Иван Йаккӑлҫӑ патне пыраҫ, анҫах тепутатсийе вӑл итлесе те пӗтермест, аллине сулса: ан каласӑр, ҫитӗ, политси аллине лекес мар тесен ҫасрах тарӑр ман патӑмран, тет. Микулай Тимахвийӗ хирӗҫ вӗриленерех калаҫма тытӑнсан вӑл ҫӑнахах та политсийе ҫӗнессине палӑртаҫ. Вара тепутатси ҫын ан куртӑр, свитеттӗл тавраш ан пултӑр тесе сат тӑрӑх хӳме урлӑ сиксе каҫса тараҫ. Ҫакӑн хыҫҫӑн епир Иван Йаккӑлҫӑ хӑйӗн ҫистемипе, хӑй хыҫҫӑн ушкӑнланса пӗрлешсе пыракан мисҫионерсемпе, вӗрентекенсемпе, ҫаваш ҫинавникӗсемпе револютсийӗн ҫаваш хушшинҫи ҫи пысӑк тӑшманӗ тесе йышӑнатпӑр, ҫавӑнпа унпа ҫанна тавӑрса кӗрешмелле тетпӗр. Ҫапла кӗрешес тесе епир вӑл ҫӗр тӗлӗшӗпе улпугсен майлине, политтиккӑ тӗлӗшӗпе кивӗ йӗркешӗн тӑнине ӑнлантарса хресҫен ваҫҫи ҫавашла прокламатси кӑларатпӑр. Ҫапла кӗрешес тесе епир Ҫаваш шкулӗнҫе

вӗренекенсене револютси йенле сулӑнтарма, вӗсене хумхантарма тӑрӑшатпӑр. Унтан ҫак кӗрешӳре вырӑс хаҫачӗсенче Иван Йаккӑлча хирӗҫ тапратнӑ кампани тӑрат, ҫав кампани пуҫӗнче Чӗмпӗрте епӗ пулатӑп, Хусанта ҫав кампани пуҫӗнче Алчун Кевӗрли тӑрат. Хаҫатсенче епир Иван Йаккӑлчӑ чӑвашсене прокрес ҫулӗнчен пӑрса йунӑш ҫулпа илсе кайат, вӑл кивӗ йӗркепе ҫеҫ пурӑнма вӗрентет тетпӗр. Ҫакна епир вырӑс халӑхӗ, вырӑс интеликентсийӗ Иван Йаккӑлчӑ ҫине тӗрӗс куҫпа пӑхма тытӑнтӑр тесе тӑватпӑр, мӗншӗн тесен, епир ҫапла ҫырма тытӑниччен вырӑс револютсионерӗсем те ӑна хура халӑхӑн чӑн тусӗ, чӑн шанчӑклӑ ҫынни вырӑнне хураччӗҫ. Ҫапла унӑн авторитечӗ пур йенчен те хӑватлӑ, ҫав унӑн авторитетне кӑшт та пулин чакармасан чӑвашсен хушшинче револютсишӗн ӗҫлеме майӗ ҫукчӗ: вӑл кирек кама та, кирек мӗне те хӑй йачӗпе хуплаччӗ. Хаҫатсенче ун ҫинчен ҫырни чӑваш интеликентсийӗн, унтан Чӑваш шкулӗнче вӗренекен ачасен кӑмӑлне ҫӗклеччӗ. Хусанта Алчунӑн „Икӗ йӑнӑрал“ тенӗ фелйеттон пичетленсен (йӑнӑралсем тесе вӑл Иван Йаккӑлчӑпа архиерей Курийе виртлесе каланӑ), унтан манӑн „Халхи пурсӑ“ (Чӑваш шкулӗ) тенӗ очерксем Чӗмпӗрте пичетленме тытӑнсан— чӑваш интеликентсийӗ икӗ йенне уйӑрӑлса кайрӗ: пӗрисем пире вӑрҫаҫҫӗ, йатлаҫҫӗ, „чӑваша сутатӑр“ теҫҫӗ, теприсем пирӗн майлӑ пулаҫҫӗ. Пире хирӗҫ Иван Йаккӑлчӑ ывӑлӗ проф. А. И. Йаковлев, вӗрентекенсем В. Н, Орлов, Т. И. Кочуров, В. И. Колпаков хаҫатсемпе шурналсенче ҫырма тытӑнаҫҫӗ. Ҫак тавлашу питӗ усӑлӑ пулчӗ: ӑна пула чӑваш кутурӗн проплемисем тин пичет ҫинче сӳтӗнсе палӑра пуҫларӗҫ. Анчах ҫак полемиккӑ, ҫак тискуҫҫи часах шалалла кӗрсе кайат. Чӑваш шкулӗнче вӗренекенсем пирӗн ретаксийе пичетлеме ыйтса саметкӑсем ҫырса параҫҫӗ: епӗ вӗсене, пичетлеме тытӑнатӑп. Иван Йаккӑлчӑ мана ҫав йапаласене епӗ хам шухӑшласа кӑларатӑп тесе ӑнлама тытӑнат. Ҫакна кура епӗ хӗрӳленсе Иван Йаккӑлчӑ ҫинчен мӗн пӗлнине пурне те ҫыратӑп: вӑл П. И. Иванова хӗненине, И. С. Паймекова туйапа вӗтнине, Волкова чирличчен хӗненине, револютсионеркӑ А. Ф. Феторова ҫӳҫӗнчен туртнине, унтан Чӑваш шкулӗн хуҫалӑхӗнче пулнӑ сӑлтӑксем ҫинчен ҫыратӑп. Ҫак йапаласем хаҫатсенче пичетленсен шкулсен министӑрӗ Иван Йаккӑлча йе сутпа тасалма йе вырӑнтан тухма хушат. Ҫакӑнтан вара епир Иван Йаккӑлчӑпа 2—3 ҫул

тӑрӑшӗпе сут ӗҫӗпе йавӑҫса йапӑхатпӑр. Ҫак ӗҫе нумайӗшӗ халиҗенех ӑнламаҫҫӗ, нумайӗшӗ ӑна епир ҫӑмӑл кӑмӑлпа йе ҫиленсе ҫеҫ тунӑ теҫҫӗ: ку тӗрӗс мар, ҫав ӗҫ тӳрех револуутси ӗҫӗпе ҫыхӑнса тӑнӑ, вӑл револуутсишӗн кӗрешнине пӗлтернӗ. Револуутсийе пусарсан җи хайар реаксионерсем Иван Йаккӑлҗӑ ҫине питӗ пыра пуҫларӗҫ, Җӑваш шкулӗ ҫинҗен пӗтӗм Раҫҫейри улпутсен пухӑвӗ те хурласа илҗӗ, вак халӑхсене вӗрентес ӗҫе улӑштармалла тесе патша патне тепутатси йаҗӗ, унтан министӑр Кассо Иван Йаккӑлҗа вырӑнтан хӑвала пуҫларӗ, ҫак кампанире реаксионерсем йаланах пирӗн стаййасене асӑнса Иван Йаккӑлҗа айӑпла айӑпла пуҫларӗҫ. Ҫакна кура ӗпе 1911-мӗш ҫулта унпа кӗрешме пӑрахрӑм, ун ҫинҗен хӑйне те пӗлтертӗм. Алуун Кевӗрли унпа кӗрешме вилиҗҗенех пӑрахмарӗ (1908-мӗш ҫулта вӑл „Лекентӑлӑ йупилей йатлӑ уйрӑм кӗнеке кӑларҗӗ, ҫав кӗнекене Алуун Кевӗрли хӑй йатне пытарса Смирнов ҫырнӑ тесе кӑтартнӑ). Унтан Иван Йаккӑлҗа хирӗҫ вырӑс хаҫаҗӗсенҗе ӗҫлекен шурналист-револуутсионер П. Н. Рсай ҫыркаларӗ (1909-мӗш ҫулта вилҗӗ). Мӗншӗн епӗ ҫак хаҫатпа сутра тавлашни ҫинҗен сӑмаха вӑрӑмарахах тӑсса kаларӑм? Мӗншӗн тесен, пирӗн револуутсипе органисатсиленсе кӗрешекен парттисемпе ушкӑнсем пулман, ҫавӑнпа органисатсиленерех кӗрешни епир Иван Йаккӑлҗӑпа йавӑҫкаласа кӗрешнинҗен ҫеҫ палӑрай.

Йалсенҗе револуутсийе хирӗҫ пыракансем политсипе шантармерийе елексем ҫырас ҫинҗен пуҫне нимӗн те тӑвайман. Анҗах Иван Йаккӑлҗӑ ун пек ӗҫпе пӗртте вараланман — вӑл кӗрешес пулсан куҫ умӗнҗе палӑртса кӗрешнӗ. 1917-мӗш ҫулта епӗ шантармери архивне тишкерсе пӑхса тухрӑм: Иван Йаккӑлҗӑ ҫырнӑ хут тавраш тупмарӑм, ҫавӑнпа ӗлӗкрен ӑна шантармерипе те вӑл пӗрлешсе ӗҫленӗ тени суйа сӑмах. Унтан Иван Йаккӑлҗӑ политтиккӑ йенӗпе айӑпласа җӑваш револуутсионерсене пӗртте сийен тӑвас тесе тӑрӑшман: вӑл җӑваш револуутсионерне хӑй ҫулӗ ҫинҗен пӑрсан, вырӑнтан — мӗнтен кӑларсан сапӑр пулнӑ, вӑл пӗр йенҗен пире хӑй ауисене шелленӗ пек шелленӗ пулас, тепӗр йенҗен вӑл ҫителӗклӗ таса кӑмӑллӑ ҫын пулнӑ, ҫавӑнпа тонос, елек таврашпе җӑваш ҫыннине вӑл ҫухатасшӑн пулман (вӑл пире Җӗмпӗрпе Хусантан кӑмӑл тусан пурсӑмӑра та пӗр тымар хӑвармиҗҗен, пӗр куҫхуппи вӑхӑтӗнҗе Ҫӗпӗрелле ӑсаттарма пултарнӑ). Хӑш револуутсионерсене Иван Йаккӑлҗӑ йывӑр вӑхӑтра пулӑшу та парса тӑҗӗ.

Çапла вăл Ф. Н. Серкейева темиçе хут тĕрмерен хăтарӡĕ. Револӡутсийе хирĕç кĕрешекенсенӡен йулашкинӡен К. М. Малӡтсева асăнас пулаť. Çак револӡутси вăхăтĕнӡе Ӡĕмпĕр шкулĕнӡен тухса кайнă пăсăк çамрăк çын Хусанта револӡутсионерсемпе ĕçлесе пурăнаť, пур пирĕн ĕçсене те пĕлсе тăраť. Епир сиссе илейместĕпĕр—вăл шантармерийе сутăнаť. Хусанти пур ĕçсене те пĕлсе çитсен вăл 1907-мĕш çулта çула Ӡĕмпĕре пыраť: вăл Ӡĕмпĕре те пирĕн ĕçсене тĕпӡесе пĕлме пыраť. Анӡах вăл таса кăмăлпа çӯременнине унпа калаçнă ӡух пирĕн револӡутсионер М. И. Икнаťйев унăн хăй сăмахĕсенӡен ӡухлаť те мана систерет. К. М. Малӡтсев ман патма пырсан: мана Микулай Тимахвийĕ йаӡĕ, вăл Ӡĕмпĕрте террорлă ушкăн, çапакан ушкăн ӡăвашсенӡен орканисатсилеме хушрĕ; сана çак ĕçе пулăшма хушрĕ, тет. Епĕ:—Террора хирĕç пыратăп, çавăнпа пулăшма пултараймастăп, ун çинӡен ман калаçассăм та килмест, тетĕп. Вăл мана:—Есĕ Иван Йаккăлӡăпа йалан çапăçатăн, епĕ террорлă ушкăн тусан ăна тӯрех вĕлеретĕп, тет вăл мана йурасшăн кăмăлпа, анӡах çапла каласан епĕ ăна пĕтĕмпех йатласа пĕтеретĕп, Хусана таврăнма хушатăп, çул çине укçа парса ăна парахут çине ăсататăп, хам Микулай Тимахвине унтан сыхланмалла тесе телекрам йаратăп, унтан тĕплĕ çыру çырса йаратăп. Анӡах Микулай Тимахвийĕ пире шанмасť, вăл: сирĕн пĕр факт та пĕр кăтартакан йапала та çук, тет. Кайарахпа куратпăр: К. М. Малӡтсев Микулай Тимахвине шантармсен аллине тытса параť, пирĕн вăртăн типокрафийе кăтартса туптараť, Тайăр Тимккине тыттарттараť. Çак ĕçе тусан шантармерирен пайтах укçа туйанса (пĕр Микулай Тимахвине тыттарнăшăн çеç пилĕк çĕр тенкĕ укçа илнĕ тесе вăл хăйех мухтаннă) вăл килне Йелӡĕке (Тетĕш уйесĕ) пăрахса кайаť; унта вăл ашшĕпе шатрун пӯрт лартни, йалта пăшалсем персе ирсĕрленсе халăха хăратса çӯрени, таврари вĕрентекенсене шантармери аллине парас тĕлĕшĕпе хăратса пурăнни çинӡен пире хыпар çитеӡӡĕ; унтан çак ирсĕр çамрăк çын, укçашăн ӡунне сутнă çын вилсе кайни çинӡен пире хыпар çитрĕ. Çапла револӡутсийе хирĕç пыракансен хушшинӡе унăн ӡи хăрушă, ӡи сийенлĕ тăшманĕ провокатăр та сиксе тухрĕ.

## V. Ђăвашсен хушшинђе револђутси мĕн шыраса çĕкленни çинђен.

Малтах асăнтăмăр—Раççейре револђутси мĕншĕн çĕкленнĕ, çавăншăнах ђăвашсен хушшинђе те револђутси хусканса хăпарнă. Раççейре 1905-мĕш çулта пулнă револђутсийе тĕрĕсрен вăл пуршуаслă-темократтиллĕ револђутси пулнă теççĕ. Унăн тĕп сăлтавĕ монархийе ÿкерессине йе патшасен влаçне ђакарассине, улпутсене патшалăх пурăнăçĕнђе пăрса пăрахассине, патшалăхра та, пурăнăçра та пуршуаслă-темократтиллĕ йĕркене çийеле кăларассине пĕлтернĕ. Аталанса çитĕнекен кăпитталисăма, ун хыççăн аталанса пыракан классене патшасемпе улпутсен пусмăрĕнђе пурăнма йурăхсăр тăвăр пулнă, çавăнпа револђутси тапраннă. Ђăвашсен хушшинђе те револђутси çак тĕп сăлтава пула хускалнă, çавăнпа ђăвашсен пур револђутсиллĕ сунавĕсем те пĕтĕм Раççейре палăрнă сунавсенђен уйрăм пулман. Ђăвашсен хушшинђе револђутси йухăмĕсем ытларах сотсиалислă парттисен çулĕпе пынă, вĕсен прокраммине йышăнса тăнă. Çав прокраммăсем политтиккă йенĕпе патшана ÿкерсе, монархийе пĕтерсе пĕтĕм халăх влаçа хăй аллине илессине, патшалăха парламентарисăм йĕркипе тытса тăрассине пĕлтернĕ. Унтан çав прокраммăсем çĕре хресђене парассине йе ăна патшалăх аллине илессине, ĕçлекенсене 8 сехетрен ытла мар ĕçлеттермеллине, вĕсем тĕрлĕ сойуссене пĕрлешме пултарнине, ĕç тÿлевне ÿстерессĕн сăпастовккăсемпе стађкăсем тума пултарнине, унтан куланайсемпе налоксене пуйантарах çынсем çине йăвантарассине, промышлĕнăçа патшалăх контроđ туса йĕркелессине пĕлтернĕ. Унтан револђутси пур пĕрпĕрине тан краштансем вађђи тĕрлĕ краштанлă ирĕклĕхсем: никама та сутсăр ареслеме йураманнине, етем кирек мĕн çинђен те калаçма пултарнине, кирек мĕнле пухăва та пуçтарăнса канашлама пултарнине, кирек мĕнле

ушкӑнсене те ҫӑмӑртанма пултарнине, пиҫетлӗ ҫырусенҫе кирек мӗн ҫинҫен те ҫырма пултарнине, етем пурӑнакан килҫуртра никам йут ҫын та кӗрсе опыск тавраш тума пултарманнине, тата та ҫавӑн пек нумай ытти прӗклӗхсем ыйтаҫҫӗ. Ҫак сунавсем пур те ҫӑвашсен хушшинҫе те: хаҫат статйисемпе кӗнекесенҫе, прокламатсисенҫе, хресҫенсен прикӑврӗсенҫе, сиессен ресоҫутсийӗсенҫе, револютсиллӗ ушкӑнсен прокламатсисемпе уставӗсенҫе йалавах палӑраҫҫӗҫ, йаланах асӑнаҫҫӗҫ, вӗсене кашни револютсийе кӑшт та пулин сулӑнна етем пӗлсе тӑраҫҫӗ. Йупа уйӑхӗнҫе пулнӑ пролеттарлӑ револютсийӗн туртӑмӗсем 1905-мӗш ҫулта сахал сисӗнеҫҫӗҫ: ҫӑвашсен хушшинҫе пӗр польшевик та ҫукҫӗ, ӗҫхалӑхӗ те ҫӑмӑртанманҫҫӗ. Епир ун ҫухне те Ленин вӗрентӳве лайӑх пӗлсе, ун пур кӗнекисемпе статйисене вуласа пурӑнаттӑмӑр, анҫах вӑл ҫӗр ӗҫне сотсиалисатси йӗркипе татассине хирӗҫ пынӑшӑн, ҫӑнтан револютсиллӗ клас вырӑнне пролоттариата ҫеҫ хисепленӗшӗн, хресҫенсен хушшинҫе револютси йенне ҫӑнтан сулӑнма ҫухӑнсем, лашасӑр хресҫенсем, патраксем ҫеҫ пултараҫҫӗ тесе вӗрентнӗшӗн ун вӗрентӗвӗнҫен сивӗнсе, йутшӑнса пурӑнаттӑмӑр.

Ҫапла пӗтӗм Раҫҫрйре 1905-мӗш ҫулта револютси пӗр тӗслӗ сунавсем, пӗр ӑшҫиклӗ прокраммӑсемпе лосунксем кӑтартса тӑрат. Анҫах кашни клас, сий, кашни уйрӑм пурӑнакан ушкӑн ҫав сунавсемпе прокраммӑсене хӑй тӗрлӗ, хӑйне манир ӑнланат, вӑл кашнийех ҫав прокраммӑсенҫен маларах хӑйне ытларах кирлӗ йапаласене хурат. Ҫапла пулнине, пулмаллине, пуласине ҫӑвашсем те кӑтартрӗҫ. Политтиккӑ ыйтӑвӗсемпе сотсиаллӑ ыйтусем тӗлӗшӗпе вӗсем ҫӗр ӗҫӗ ҫине уйрӑм куҫпа пӑхнине кӑтартрӗҫ. Хресҫенсен приковрӗсем ҫинҫе, Патшалӑх Тумисене йанӑ наккассем ҫинҫен, тӗрлӗ пухусемпе сиестсем йышӑннӑ ресоҫутсисем ҫинҫе, сотсиалист-револютсионерсен сиесӗсемпе конферентсийӗсенҫе (Т. Н. Николайев ҫӳренӗ)—пур тӗлте те ҫӑвашсем ҫӗре сотсиалисатси йӗркипе татас пулсан малтан пур колонисаттӑрсем авал туртса илнӗ ҫӗрсене, ҫарансене, вӗрмансене ҫӑвашсене кайалла тавӑрмалла, вара тин сотсиалисатси йӗркине йышӑнма пулат тенӗ. Ҫапла ҫӑвашсем ыйтни пӗтӗм Раҫҫейе палӑрнӑ, ун ҫинҫен Л. Штернперк „Формы национального движения в современных государствах“ йатлӑ 1910-мӗш ҫулта пиҫетленнӗ кӗнекере ҫапла калат: „у чуваш, при всей их солидарности с соседним русским населением был в некоторых

местах свой больной вопрос—это спорное луговые земли, которые чуть-ли не при Грозном были насильно отняты у них и переданы русским переселенцам. И вот, не смотря на популярность в их среде идеи социализации земли, ими был вдвинут в обще-русскую аграрную платформу пункт о restitutio statu duo ante с луговыми землями" (латтин ҫӗлхепе ҫырнӑ сӑмахсем йепле те пулин ӗҫ, мӗнле те пулин йапала ӗлӗк мӗнле пулнӑ—ӑна каллех ҫапла тӑвассине пӗлтереҫҫӗ: патшалӑхсен хушшинҫе тавлашу пулсан вӗсем типломатсен ҫӗлхинҫе патшалӑхсене авалхи ҫикесемпе ҫикелессине пӗлтереҫҫӗ, йуристсен ҫӗлхипе ҫав сӑмахсем йапала таврашне ӗлӗкхи хуҫана тавӑрса парассине пӗлтернӗ). Ҫӗр ӗҫӗ, ҫӗр прокрамми, акрарлӑ прокраммӑ ҫӑвашсен револҫутсиллӗ ҫекленӗвӗн тӗп шӑнӑрӗ пулҫӗ, ҫавӑнна малта асаннӑ сунав пысӑк историлӗ сунав, ҫав сунава ҫӑваш хура халӑхӗ, ӗҫлекенсем, револҫутсиллӗ интеликентси пирӗн истори малалла мӗнле кайассине ҫипер ҫухласа йышӑннӑ. Ҫак сунавӑн шӑрши йулашки револҫутсире те хытӑ палӑрҫӗ, халӗ те пирӗн пурӑнӑҫра палӑрса тӑраҫ: 1918-мӗш ҫулта Хусавра кӗпӗрне сйесӗсенҫе ҫӑваш хресҫенӗсем (Шупашкар, Ҫӗрпӳ, Йетӗрне уйесӗнҫисем) уйрӑм фракси туса вырӑссемпе ҫӗре пӗтӗм кӗпӗрнере пӗр тикӗс тӑвас пулаҫ, улпутпа хыҫна ҫӗрӗ нумай уйессенҫен ытлашши ҫӗре касса илсе ҫӑваш уйесӗсене те, ҫӗрсӗр ҫӑваш хресҫенӗсене те парас пулаҫ тесе питӗ хӗрӳленсе тапӑҫрӗҫ, анҫах сотсиалисатси ҫав йӗркепе пулмарӗ, ҫавӑнпа ҫӑвашсен ана-ҫаран пӗр шит те ӳсмерӗ; тепӗр йенҫен ҫак историлӗ принсип анатри ҫӑвашсен хушшинҫе вырӑнаҫса вӗсене нумай сийен кӑтартрӗ, халӗ те кӑтартаҫ: Ҫӗмпӗр, Самар, Ӗпхӳ кӗпӗрнисенҫе нумай тӗлте ҫӑвашсем йулашки 30—40 ҫул тӑршшӗпе хысна, утил йе улпутсен ҫӗрӗсем ҫине куҫса ларнӑҫҫӗ, унтан пайтах ҫӑваш йалӗсем укҫалла анасем, ҫарансем, вӑрмансем туйаннӑҫӗ (ҫак ӗҫре Иван Йаккӑлҫӑ питӗ тӑрӑшса ӗҫлерӗ), халӗ ҫав ҫӗршывсем пур те тенӗ пекех вырӑс хресҫенӗсен аллине куҫрӗ, мӗншӗн тесен, вӗсен ҫӗр ҫӑнахах та ҫӑвашсенҫен те сахал пулнӑ, унтан ҫав ҫӗрсене крепӑҫлӑ самапара вӗсем асапланса ӗҫлесе пурӑннӑ, ҫавӑнпа вӗсем ҫав ҫӗрсене ҫӑвашсенҫен туртса илҫӗҫ, ҫӗнӗрен ҫӑмӑртанса ларнӑ йалсене хӑваларӗҫ, хӑшне ҫунтарса йарса турӗҫ. Ҫак историлӗ принтсипах Пушкӑрт респупликкинҫи, унтан Ҫӗпӗрти ҫӑвашсене халӗ питӗ лӑскаҫ: пушкӑртсемпе ҫипирексем ҫӑвашсем кайарах куҫса ларнӑ ҫӗрсене кайалла туртса

илеççĕ, çак тĕлĕшӳпе йунлă кĕрешӳ пыраҫ. Çапла ҫăваш хресҫенĕ хушшинҫех çĕр тĕлĕшĕпе икĕ пĕтĕмпех пĕр пĕрне хирĕç сулăнăç палăрнă: вирйалсемпе вирйал таврашĕнҫи ҫăвашсем çĕршыва колонисаттăрсенҫен кайалла тавăрма ыйтаççĕ, анатрисем нумайĕшĕ хăйсем колонисаттăрсем пулса çавăн пек çĕрсене кайалла парасшăн мар кĕрешеççĕ. Унтан çĕр тĕлĕшĕпе 1905-мĕш çулта ҫăвашсем патшалăха хресҫене çĕнĕ çĕре куçарас ĕçе хăй çине илме, ҫи малтан çĕрсĕр ҫăвашсене Çĕпĕре, Туркестана куçарма, вĕсене унта нумай йалсемпе пĕрлештерсе куçарса çĕнĕ çĕрсенҫе уйрăм ҫăваш вулăсĕсем, уйесĕсем тума ыйтаççĕ.

Политтикка тĕлĕшĕпе 1905-мĕш çул ҫăвашсен хушшинҫе уйрăм натсионаллă прокрамма пуçтарăннине те кăтартрĕ. Ҫăвашсен хушшинҫе хăпарнă револҭутсиллĕ çĕкленĕве епир вăл пуршуаслă-темократтилĕ çĕкленӳ пулнă терĕмĕр, тата ăна натсионаллă-темократтилĕ çĕкленӳ пулнă тес пулаҫ. Пусмăрлă ҫăвашсен хушшинҫе натсионаллă вопроссем йалан вĕрсе тăраҫҫĕç: катни ҫăваш револҭутсионерĕ вĕсем çинҫен çырнă литтература: Отто-Пауер, Шпринкĕр çырнă кĕнекесене, унтан еврейсен нумай писсатĕлсем çав вопрос çинҫен çырнă кĕнекесене туйаннăҫҫĕ, вĕсене вуласа ăнланнăҫҫĕ. Анҫах пирĕн натсионаллă прокраммă питĕ имшеркеҫҫĕ, ăна епир питĕ сыхланса хăравçăлă кăмăлпа çеç йышăнаттăмăр. Ăна епир пирĕн историйе, пирĕн пурлăха, економикка ҫухласа, халăх халне ҫухласа çеç йышăнатпăр. Вăл вăхăтра нумай халăхсем: украинсем, палексем, Палти халăхĕсем, Капкас халăхĕсем, пире тăван кăркăссем, пушкăртсем, тутарсем пур те тенĕ пекех Раççейре фетераттивлă респупликкă тума, çав халăхсене оплăçлă—территорилĕ автономи пама ыйтаҫҫĕç. Кăркăссемпе пушкăртсен хушшинҫе 1905-мĕш çулта сотсалиссем çукпа пĕрехҫĕ, анҫах револҭутсионерсем фетералистсем йышлăҫҫĕ: вĕсен пуршуаслă парттийĕсемпе ушкăнĕсем те территорилĕ автономи ыйтаҫҫĕç. Мĕншĕн вĕсем çак тĕлĕшпе пур вырăс парттисенҫен сулахайарах пулнă, маларах тăнă? Вĕсене çапла пулма економиккĕ йĕрки хушнă: вĕсен ирĕклĕ çĕршыв, тĕрлĕ пуйанлăхпа тулли çĕршыв пулнă, автономи туйанса вĕсем çав çĕршыва, пур çутçанталăк пурлăхне хăйсен аллине илес тесе ĕмĕтленнĕ, çав пурлăха колонисатси пусмăрĕнҫен хăтарас тесе ĕмĕтленнĕ. Анҫах капиталисăм саманинҫе автономи туйанса мĕн çине шанса, мĕн ĕмĕтленмелле пулнă? Нимĕн çине те шанма, нимĕн ĕмĕтленме те

пулман (каллех калатпăр—кăпиталисăм саманинҫе, пуршуаслă йĕркелĕ пурăнăçра). Ҫăваш халăхĕ çак тĕлĕшпе пур Раççейри вырăсмар халăхсен хушшинҫе те пĕҫҫен тенĕ пекех ҫи телейсĕр вырăн йышăнса тăрať: ҫăваш çĕршывĕ калама çук тăвăрланса çитнĕ, вăл аваларан пусмăрпа таптанса çука йернĕ, ăна епир хамăр алла çеç илсен те унпа хамăр тĕлĕн кăна пурăнса малалла кайма пултараймалла пулман. Пирĕн аваларан ларса йулнă пурлăх йĕрки пире нумайĕшне хамăр çĕршыва пăрахса кайса ирĕклĕ çĕнĕ çĕрсене куçма, вĕсене колонисатсилеме хушať, çав пурлăх йĕркийех пире нумайĕшне çĕр ĕçĕнҫен хăпса, унтан уйăрăлса промышлĕнăç пур çĕре ҫикĕнме хушať, çав пурлăх йĕркийех хамăр хуçалăх вăйĕ çине çеç, хамăр пурлăх çине çеç шанма хушмасť, вăл пире патшалăхран пулăшу илсе тăма хушať, çав пулăшăва патшалăх пур пурлăха та хăй аллинҫе çеç тытса тăрсан çеç пама пултарať. Ак мĕншĕн ҫăваш револуцутсионерсем пур те тенĕ пекех Раççейре темократтилĕ респупликкă пулмалла, анҫах вăл фетераттивлă пулмалла мар, вăл пĕр ҫентăртан тытăмланса тăмалла теҫҫĕç; револуцутсионерсен хушшинҫе кайра пĕрре фетераттивлă йĕрке йенне сулăнакансем те епир çĕршыва, çĕр айĕнҫи пурлăхсене патшалăх хăй аллинҫен ĕçермелле мар, вĕсене автономлă оплăçсене памалла мар теттĕмĕр. Ҫăвашсен хушшинҫе те ун ҫухнех тĕрлĕ проектсем çӳреҫҫĕç: Йурка Иванĕ ҫăваш патшалăхĕ тăвас тесе хайласа çунатланса çӳреҫҫĕ, поет К. Кореҫков Атăл çинҫе çын ури пусман çĕрте çĕнĕрен таса ҫăваш хули тăвас, çав хулана пĕтĕм маттур ҫăвашсене пухса унта кулцтурă ĕçне хăватлăлатса йарас тесе килĕнҫе куçĕсене пĕлĕт çине тирĕнтерсе шухăшласа выртаҫҫĕ, Микулай Тимахвийĕ револуцутси çĕнтерсен пирĕн çĕнĕ самана тытăнať, ҫăваш респупликĕ йевĕрлĕ йапала тăватпăр, Шăхрана ҫăвашсен пуçхулине çавăратпăр тесе сĕмленеҫҫĕ. Анҫах çак ĕç çине епир нумайĕшĕ тĕлĕкпе халлап çине пăхнă пек, опываттĕл ĕмĕҫĕ çине пăхнă пек çеç пăхаттăмăр. Микулай Çимунĕ çак тĕлĕшĕпе тӳрех калаҫҫĕ: ăçта пирĕн кăркăссемпе круçинсем пек автономи çинҫен тĕлленме: пирĕн çĕршыв вĕтĕннĕ, пăнҫăхнă, пирĕн йеврейсем Палестинăра тарса саланнă пек хамăр çĕршыва хамăрах пăрахса Раççей тăрăх саланма çеç йулať, теҫҫĕ. Çавăнпа епĕ 1920-мĕш çулта Çĕпĕрти хаçатсенҫе ҫăваш автономи пулса тăни çинҫен кĕтмен çĕртен вуласа илсен—хăраса ҫĕтĕрессе кайрăм: ман пуçра ҫи

малтан „ырлăха мар пулĕ ку“ тенĕ шухăш сиксе тухрĕ. Çак шухăш епĕ ун ҫухне автономи çинҫен кăпиталисăм саманинҫи пек ҫухласа шухăшланинҫен, комунисăм саманине йе унăн халҫхи вăхăтлăх саманине ҫухласа çитерейменнинҫен ман пуçра пулнă пулас. Çавăнпа 1905-мĕш çулта пирĕн натсионаллă прокраммă çакна çеç пĕлтереҫҫĕ: 1) ҫăвашсем Раççей респупликки, пĕтĕм патшалăх ĕçĕсене те ытти халăхсемпе пĕр танах ĕретлесе тăма парламента хăйсен ҫĕленĕсене йарса тараççĕ, вĕсене ытти халăхсенҫен уйрăм суйлаççĕ (нацональная курия), ҫăвашсем Раççейре миçе проҫҫăн—парламентра та çавăн ҫухлĕ ҫăваш пулаҭ, вĕсем парламентра уйрăм ҫăваш фраксийĕ тăваççĕ; 2) вырăнта пĕтĕм влаç пĕтĕм халăх суйланă çемствă аллине куçаҭ, пĕр тăтăш ҫăвашсем пурăнакан уйĕссенҫе ҫăваш çемствисем пулса тăраççĕ; сапаланса пурăнакан ҫăвашсем майĕ пулсан ҫăваш вулăсĕсене ҫăмăртанса вулăс çемствине пулин те хăйсен аллине илеççĕ; 3) ҫăваш çемствисем хăйсен ĕçĕсене пĕрлешсе тума, ҫăваш халăхĕн интересĕсне хÿтĕлесе тăма Хусанта ҫăваш çемствисен сойуçĕ тăваççĕ; 4) ҫăваш çĕрĕнҫе копператсн тавраш аталанас пулсан ҫăваш копператсисем те уйрăм сойуса ҫăмăртанаççĕ; 5) куҫтурă тĕлĕшĕпе ҫăваш халăхĕ пĕтĕмпех хăй ирĕкĕпе пурăнаҭ: шкул ĕçĕ унăн хăй аллинҫе çеç пулаҭ, шкул ĕçне туса тăма пĕтĕм ҫăваш халăхĕн пухăвĕсем йе ҫăваш çемстви сойусĕ уйрăм уҫрештенисем суйласа хураҭ. Çак асăннă ыйтусенҫен тата нумай вак натсионаллă сунавсем тухса палăрса тараҫҫĕç, анҫах вĕсем çинҫен каламасан та йураҭ,

Ман сăмах пĕтрĕ, асăну вĕçне çитрĕ. Йулашкинҫен вулакана çак васкакаласа çырнă çырăва тишкерсе пăхса тухма, ун тăрăх пусмăрлă ҫăваш халăхĕ йапле ĕлĕкрен аталанса пырса халҫхи хала туйаннине, вăл ĕлĕк йепле йăнăшсем тунине ҫухласа илме сунатăп. Сăмах вĕçĕнҫе каллех асăнатăп: епĕ кунта 20 çул кайа пулнă йапаласемпе çынсене асăнтăм, вĕсем çинҫен мĕнле ĕлĕк пулнă çаплах кăтартма тăрăшрăм, çапла епĕ ÿлмĕрен пулас ҫăваш историçĕсене материал çеç патăм: вĕсем епĕ асăннă ĕçсене тĕрлĕ йенҫен сÿтсе пăхĕç, вĕсене критĕклĕç, вĕсен айăпĕсене тупса кăтартĕç. Çапла тусан çеç пирĕн хура халăхăн, хресҫенпе ĕçхалăхĕн, класлă тăнпа натсионаллă пусмăртан хăтăлма тертлентерекен тăн çитеĕклĕ сĕткен илсе хăватлăланса кайĕ.

---

14068

# Тупмалли.

Стр.

Çыраканран . . . . . . . . . . . . . . . . . 3

## I. Пĕр-ик сăмах авалхи халăх хумханăвĕсем çинҫен.

1. Ҫăваш йăхĕ хăй ирĕклĕхĕшĕн кĕрешни . . . . . 7
2. Ҫăвашсем колонисатси пусмăрĕпе кĕрешни . . . 12
3. Ҫăвашсем патшасемпе улпутсен крепăçлă пусмăрĕпе кĕрешни . . . . . . . . . . . . . . . . . 21

## II. 1905-мĕш çул умĕн.

1 Ҫăваш пурăнăçĕ çĕнĕ йĕркене йерипен йышăнса пыни . . . . . . . . . . . . . . . . . . . 25
2. Çĕр ĕçĕ капиталисăма пула йепле улшăнса кайни. 28
3. Ҫăваш çĕршывĕнҫе промышлĕнăç пĕрҫисем шăтса тухни . . . . . . . . . . . . . . . . . . . 30
4. Ҫăваш халăхĕ йепле уйрăм классемпе сийсене уйрăлса пыни. . . . . . . . . . . . . . . . . 32
5. Ҫăвашсен хушшинҫе мĕнле револҫутсиллĕ сулăнăçсемпе йухăмсем палăрни . . . . . . . . . . . 37

## III. Револҫутси пуçламăшĕ.

1. Раççейре пулас револҫутси ҫăвашсене те малтанах сисĕнни . . . . . . . . . . . . . . . . 48
2. Ҫăваш револҫутсионерсем çитĕнни револҫутсиллĕ ушкăнсем ҫăмăртанни . . . . . . . . . . . . 51

## IV. 1905—1907-мĕш çулсем.

1. Хуласенҫе çĕкленĕ револҫутси хумĕсем ҫăваш йалне çитсе перĕне пуçланни . . . . . . . . . . . 61
2. Хресҫен пухăвĕсемпе хресҫен приковорсен кампанийĕ . . . . . . . . . . . . . . . . 63
3. Ҫăваш хресҫенне пусаракан асатте . . . . . . . 65

Стр.

4. Хресҫен орканисатсиленме тытӑнни . . . . 67
5. Хресҫен револютсишӗн вӑйпа ҫапӑҫни . . . . . 69
6. Ҫӑваш вӗрентекенсем прохвеҫҫиллӗ ушкӑнсене ҫӑмӑртанни . . . . . . . . . . . . . . . . . . 74
7. Халӑх ушкӑнӗ (натсионаллӑ сойус) пулса тӑни . 78
8. Ҫӑваш эссерсем орканисатсиленни . . . . . . . 81
9. Ытти парттисемпе правиттӗлства хирӗҫ пыракан ушкӑнсенҫе ӗҫлекен ҫӑвашсем . . . . . . . . . . 86
10. Ҫамрӑксен револютсиллӗ ӗҫӗсем . . . . . . . . 89
11. Патшалӑх тумисене суйланӑ кампанисем . . . . 97
12. Револютсиллӗ хаҫатпа кӗнекесем кӑларни . . . . 99
13. Вӑрттӑн ҫӑваш типокрафи тума пуҫлани . . . . 101
14. Ҫӑваш террорисӗсемпе террор ушкӑнӗсем . . . 103
15. Ҫӑваш револютсионерсемпе револютсийе хирӗҫ пыракансем пӗр пӗринпе кӗрешни, револютсионерсен хушшинҫен провокаттӑр сиксе тухни . . . . . . . 106

V. Ҫӑвашсен хушшинҫе револютси мӗн шыраса ҫӗкленни ҫинҫен.